С 89
Ч-43555

МИХАИЛ СУНТАЛ

# КĔЗĔЛЛĔ УÇĂ

Шупашкар 2011

Национальная библиотека ЧР
4-043755

К К84.09(=Чув) С89

**Михаил Сунтал**

# *Кĕвĕллĕ уçă*

Шупашкар – 2011

ББК К84.09(Чув)6-51
С90

Сунтал М.
ДАРСТВЕН... ЭКЗ.

Михаил Сунтал
**Кĕвĕллĕ уçă**. – Шупашкар, 2011. – 374 с.

Кĕнкене кун-çул тăрăшшинче çырнă сăвăсене кĕртнĕ. Пĕр пĕтĕмĕшле илсен, кĕнеке пиллĕк пайран тăрать. «Ачалăх сукмакĕсем» сыпăкра ача чухнехи кунсене аса илнĕ, «Çугă çанталăк» сыпăка – автора мĕн тĕлĕнтерни кĕнĕ, «Юрату тăхрисем» – юрату мĕнле аталанса пынине кĕртнĕ, «Чăваш пурнăçĕ» – чăваш çынни тата халăхĕ мĕнле пурăннине сăнланă, «Эпĕ – кам?» – автор хăй кам пулни пирки шутланă, «Пил панисем» вара чăвашсене пил паракансене сăмах панă.

Проверено 1 СЕН 2017

Ч-43766

ББК84.09(Чув)6-51

Кĕвĕллĕ уçă шыратăп
Çак тĕнчене уçма.
Хам та ача пек пыратăп,
Пĕр мечĕк çапса урампа...

Анчах та тĕнче вăйă мар-тăр,
Пурнăçăм сцена мар.
Такам ахалех каланă –
Эпĕ артист мар!

Пĕрех темĕскер шыратăп,
Çак пурнăçра куç тулли.
Çак кĕвĕре, тен, тупатăп
Чун уççине хам валли.

Чуна хамăнне уçсассăн,
Тĕнче те вара уçăлать.
Эпир те кунтан кайсассăн,
Сире валли вырăн юлать...

Кĕвĕллĕ уçă шыратăп,
Çынпа уçăрах пулса...
Тен, эпĕ телей куратăп,
Çакă юрра юрласа?

## АЧАЛĂХ СУКМАКĔСЕМ

* * *

Пулать тепĕр чух тĕл пулу пурнăçра
Çурхи аслатиллĕ ăш çумăр пекех...
Çырма тĕпĕнче пĕрле усĕ йăмра
Пыллă пулас ĕмрипех!

Шăнкăр! та шăнкăр! пĕве пусĕнче
Шыв тăкăнать чул çине.
Анăп каллех шак чул пуçтарма
Тăмлă çыран хĕррине...

Вата йăмра пуç тайса авăнать,
Çил вĕрнĕçем, шыв çине.
Халĕ те пулĕ тăри ас тăвать
Катăк шăхлич сассине...

Иртрĕç кунсем, иртрĕç çулсем,
Юхрĕ çут шыв çырмара.
Икĕ ачан, тĕл пулсан, чунĕсем
Шак вылямалăх пурах!

* * *

Пĕр пĕчĕк кăна хĕшĕ тума тивет пулĕ.
Çумăр килсе çапать хумлă-хумлă.
Хамăр та эпир халĕ пулă!..
Çакаттăр тĕмĕ çине атма,
Вара пуллисене те тытма пулать...
Атма тени, чăн та, шăтăк.
Тумлам тумлать кăна...
Эх, апăршасем, пулă тытма каяттăр терĕмĕр.
Хамăрах пулăсем пек лекрĕмĕр.
Çумăр чарăнать пулĕ-ха тесе,
Ахалех хĕпĕртеткелерĕмĕр...
Çумăр чарăнмарĕ.
Чунăм та лăпланмарĕ.
Пĕрре çак серепене сирсе ярса

Хӳшӗрен чупса тухасчӗ,
Ҫумӑр айӗнче пӗчӗк ача пек
Ҫара пакка ташласчӗ!
Тумлам ман ӳте параппан патакки пек ҫаптӑр!
Унтан кайса ӳкесчӗ кӑптӑр-каптӑр...
Вара хӑрӑк турат пулса
Шарла шывпа юхса каясчӗ те
Уру ҫумне пырса ҫапӑнасчӗ...
Эсӗ калӑн: «Мӗнле параппан патакки ку,
Кун пек те килсе тухать-и ку, якку?
Ку патакпа эпӗ хӳшше те тӗреклеме пултаратӑп.
Кирлӗ пулсан, юпа ҫапса кӗвӗ калатӑп.
Ку япалапа тем те тума пулать,
Пӗрех мӗн те пулин юлать»...
Параппан пек танкӑртатать пирӗн шӑналӑк.
Тухса тарма ҫуккӑ-ши вара алӑк?
Тӑрри те шӑтӑк.
Эпир йӗпентӗмӗр.
Ҫумӑр витӗр киле кайрӑмӑр.
Вӑхӑт чылай иртрӗ.
Анчах ҫав параппан сассиллӗ хӳшше пӗрех манаймарӑм.
Вӑл пире халӗ те кӗтет.
Хай хӳтлӗхне чӗнет.

* * *

Ача чух анчах ҫав пуринчен аванччӗ.
Пурнӑҫра мӗн пурччӗ – пурте ман алраччӗ...
Вӗҫтӗрех-и, терӗм, тытнӑ кайӑка
Ывӑҫа уҫса та ятӑм кӑларса.
Халӗ вӑл вӗҫет-тӗр тӗнчере хӑй тӗллӗн.
Ҫуркунне килсен те юрласа пырать-тӗр.
Вӗҫтӗр ӗнтӗ, мӗн вӑл, алӑри телей –
Юрӑра, илтсессӗн, юрату пулать-тӗр!

* * *

Ытарлӑ уг уйӑхӗн кунӗ
Парсамччӗ мана ырлӑхна!
Ирпе ман ҫине халӗ ҫурӗ
Ӑш ҫумӑр, телей пек юхса.
Ҫӑвах эсӗ, ҫумӑр, хӗвеллӗн.
Ӑш ҫилӗ те тухтӑр чупса!
Эп утӑп вара ҫӗнелнӗн,
Пӗр пӗчӗк ача пек кулса!

* * *

Чĕкеç пекех пулас тесе,
Чупма пуçларăм ир çинче.
Чĕкеç çÿлте, çÿлте вĕçет...
Мана, паллах, вăл халь пĕлет!

Мĕнле пĕлмесĕр тăтăр-ха?
Чĕкеç пекех эп ир çинче,
Унпа пĕрлех ура çинче –
Чĕкеç пекех вĕçетĕп-çке!

Ура йĕрри тусан çинче,
Пичет пекех çĕр питĕнче...
Çĕр çийĕпе вĕçсен-вĕçсен..
Эп вĕçсе кайăп пит инçе.

Пĕрле, тен, вĕçĕпĕр инçе?
Чĕкеç чĕппи пек ир çинче
Пĕрле пĕр çул тăватпăр та,
Пĕр пĕчĕк сас паратпăр та...

* * *

Çакă тĕнчен чăн палли пур.
Тупса палăртсан эс ăна,
Эс хăв та чăн турă пулăн –
Ача пек ÿксен кăна.
Эс ÿкнĕ çĕртен, ак, çĕкленĕн
Çÿлтен те çÿле кайăк пек.
Вара ун чухне эс ĕненĕн –
Тĕнчен чăн палли те пур!
Эс хăв çак тĕнчен кăвапиĕ,
Курмастăн-им эсĕ хăвна?
Çитет шыраса Çĕр çавриййĕн,
Эс çит-ха чупса хăв патна.
Чăнах та, иппе, чун тапписĕ
Мĕн ĕмĕр санра çеç тапать.'
Ун чух чăнласа чун паллийĕ
Тĕнчен чăн паллийĕ пулать.

* * *

Мĕн çинчен çырман-ха эпĕ,

Тен, калана та нумай?
Пурпĕрех шур хут çине
Эп çырман мĕн пулнине.
Эп ун чух ача пек çеçчĕ,
Çĕн çул умĕн – кукăль пекчĕ.
Пĕçеретчĕ ман анне
Кăшманпа палан кукли...
Кăшманне кăштах сарать те
Ун çине хурать палан.
Чустапа йăлтах хуплать те –
Акă, пулчĕ те уяв!
Кăмака вĕри пулса çав,
Кукăль мар çеç илĕртет!
Кукăле алла илсессĕн,
Халь те пулĕ пĕçертет!
Пĕр пылак та çĕр хут йÿçĕ,
Çинĕçемĕн, туйăнать.
Халь ăçта-ши çавă кукăль –
Халь те пур пек туйăнать!

* * *

Пĕр тĕпте юр çунă пулĕ...
Шап-шурах асфальт.
Утă уйăхĕн чăн кунĕ
Пĕлĕтрен анать.
Пĕлĕтрен-и, йывăçран-и, –
Тăкăнать шур мамăк.
Ун çине пусса пырсан,
Хăвна туйăн çамрăк.
Ача пек, аса илсен,
Çывăрмалăх ту тÿшек!
Шурă мамăкран вăл тутлă.
Выртса çывăр вилнĕ пек...
Мамăк куртăм та йăлл! култăм,
Иртсе кайрăм топольрен.
Эсĕ, тополь, канлĕ çывăр,
Шурă юр çăвать пулсан!

* * *

Тăри сассиллĕ уй тăрăшши –
Шур юр кайса пĕтмен-ха,
Сăрт çамкисем хуралнă та
Çĕр сас парать тăрăлтатса.

Тӳпе таран вӗт хӑпарать,
Тӑри ҫавна вӗт пултарать.
Ара, пуль турӑ хӑй ярать.
Хӑйне ҫӗрпе ҫыхӑнтарать.

* * *

Эп ҫыратӑп пӗчӗк сӑвӑ
Сут ҫанталӑкӑм ҫинчен.
Тен, пулса чунра ман тӑвӑл,
Пӗлӗт ӑмӑрлӑ чухне.
Эх, ҫанталӑк, мӗншӗн халӗ
Эс тӑмастӑн ҫуталса?
Ак, паян та килсе пачӗ
Пысӑк ҫумӑр шавласа.
Ӗнертен вӗт кӑмӑл тарчӗ.
Паян килӗ терӗм-ши?
Сут ҫанталӑкӑм ман – сӑвӑ
Шӑрҫаланчӗ тумламран.
Ман ҫанталӑк та халь ырӑ
Чуна сумӑр ҫырнӑран.

* * *

Паян ҫӑвать вӗт ҫумӑр.
Хӑймаланать тӳпе.
Ун айӗнче эп пултӑм
Пӗр пӗчӗк тумлам пек.
Ҫак тӳперен эп ӳкрӗм,
Шуратрӑм ҫак ҫӗре.
Кӳлленчӗкре те путрӑм,
Шыв пултӑр-ха тесе.
Халь ӗнтӗ пысӑк туйӑм
Чунра хуҫаланать.
Эп ҫумӑр евӗр ҫурӑм.
Апла, эп пурӑнап!

* * *

Ҫу иртнӗҫем ҫутӑ ҫухалчӗ,
Кӗрхи каҫ хӑй хуҫаланать.
Пӳртри чӳречерен пӑхсассӑн,
Тӗнче хускалнӑн туйӑнать.
Кӗрхи ҫил вӗрчӗ хӑлтӑр-халтӑр,
Кивӗ хапха кӑшт! сас парать..

Çут умĕнчи ача пĕр сассăр
Юмах кĕнекине вулать..
Унта тата хăватлă пулăм
Илсе каять тĕнче тавра.
Такам çырса хăварнă çутă
Тата асамлăн курăнать...
Ача çурет унта хăватлă
Лаша çине те утланса.
Çут хĕçĕпе сулса ярать те
Тĕнче каять ырăланса.
Анчах çавна тĕнче пĕлмест-тĕр,
Вĕрет кĕрхи çил вăйлăрах.
Çил ачисем те тăм писмен пек
Асса çÿреççĕ урамрах...

* * *

Утма çулăм çăмăл.
Тупăнчĕ пĕр кăмăл.
Алăра пĕр чăмăр
Шурă-шурă юр.

Пур ман вăрттăн вырăн.
Чĕрере вăл ыррăн,
Ăнсăртран тем тупнăн,
Халь те курăнать.

Айлăмра ем-ешĕл..
Çавăнта çăп-çăмăл
Шурă юр пек шурă
Шур путек сиккет.

Шур путек сиккет те
Сар чечек ÿсет.
Алăри шур юр та
Ирĕлсе пĕтет.

* * *

Мĕнле пулĕ вăхăт чунĕ,
Хамăртан кăна килет.
Пĕр кана вăл хăвăрт чупĕ,
Кĕтнĕ чух вара вилет.
Сăнĕ ун, чăнах, ик енлĕ.
Пĕрре пăхĕ сивĕ куçлăн,

Тепринче сап-сар хĕвелĕн
Чарăнусăр ир те каç.
Вăхăт вăл темле пĕр касă.
Çурхи шыв ун айĕнче.
Пĕринче шуса эп касрăм
Пĕр енчен тепĕр енне.
Леш енче унта типсеччĕ,
Тапса тухнăччĕ çерем.
Çавăнта эпир килсеччĕ
Ушкăнпа çăмха пеме.
Эх, выляттăр та çапаттăр.
Çапнăçем çав вăхăт та
Çăмха пулса тăчĕ те
Вĕçсе кайрĕ çырмана,
Юхса кайрĕ шывпала.
Халь шыратăп эп ăна.
Вăхăт чунĕ вĕт манра!
Хăй вара таçта сухалчĕ,
Те пит хăвăрттăн кустарчĕ,
Те вăл вилнĕ те выртать,
Эпĕр касасса кĕтет.
Ак, касаттăр та шуса,
Тытăнаттăр выляма...
Çапнăçем вăхăт тухать,
Çăмха евĕр çаврăнать...

* * *

Шăнса вилетпĕр пуль, ача?
Çўл ту çинчи çил ачисем пек
Чупса çўретпĕр урамра.
Чупса çўретпĕр те, мĕн çиттĕр?
Кўтсе çитсессĕн сивĕ алă
Сивĕ тута çине ўксен,
Тĕнче тăрать каллех асамлă.
Сивви те ăшăтать иккен!

* * *

Кăвак-кĕрен, сап-сарă та сип-симĕс
Чечек тапса тухсассăн вăрманта
Ĕне çимелĕх пур-ха чаплă çимĕç
Текелесе утаттăр... Катара
Телей тупмалăх пурчĕ хуплăх.
Ват шĕшкĕ айĕнчи çулçăсене сирсен,

Темле ахах пĕрчи пекех эс тупнăн
Хăвна туйса тăратăн... Тепререн
Татах, татах сиксе тухать сар мăйăр.
Ăна вăрман патши пакша та тупайман!
Вăрман патши пекех эпир те хамăр
Çÿрессĕр савăнса... Ĕне сиет пĕр тапхăр
Унтан выртса канать. Эпир вара
Выляттăр çĕçĕлле пĕр картана ларса,
Çиеттĕр мăйăр. Кам мĕн тупнă ĕнтĕ.
Çав авалхи сар мăйăр тупине
Туйса илетĕп тепĕр хут та тупнăн,
Кăвак-кĕрен, сап-сарă та симĕс
Чечек татма кĕрсессĕн вăрмана.

* * *

Килчĕ тĕтреллĕ тĕнче.
Пĕлĕт анать тÿперен.
Шурă тĕтре ăшĕнче
Тополь тăрать пĕччен.

Тополь тĕревĕ пур.
Вăл тĕреклет тĕнчене.
Симĕс çулçийĕ, кур,
Халь кăтăклать тÿпене.

Тăтăм пăхса тополе,
Тултăм çулçи шăршипе.
Тухрăн пулать ирĕке
Çакă кун-çул еккипе?

Кайрăм эп халь çуталса
Йывăçăн чăн çутипе.
Тополь юлать шутласа,
Çулçă мĕн чуль тухнине...

* * *

Телей çуначĕ пулчĕ пулĕ?
Чун варкăш çил туять.
Атте пахчийĕн панулмийĕ
Çĕре пăт-пат! тăвать.

Ĕмĕрлĕхе пуль вăл – ачалăх?

Иртсен те асăмрах юлать.
Чи туплине чун ас тумалăх
Татах çыртса пăхать.

***

Хурăнăн шурă хуппи,
Çанталăкăн кĕнеки –
Тăвататăп вулам пекки!
Чи çиелти чĕлтĕрти,
Шăпчăкăн тути.
Чăп-чăп! та ши-ши!
Шăхăрать пĕр ачи.
Турат тĕлĕпе пата –
Асаплă, тупата!
Такам çырса хунă тата,
«Эп сана юрататп».
Туна тăрăшшипех йĕр,
Кунта хăть вырса йĕр.
Питĕ хăрушă иккен,
Хурăн хуппи пулма.

***

Ирпе йăлт шăнтса пăрахрĕ.
Ирпе пĕр ача чупкаларĕ.
Вăл пулчĕ-ши сарă хĕвел,
Е пулчĕ пите савакан сивĕ çил?..
Таçтан аса килчĕ таçти ăшă кил,
Унтан çаврăнса тепĕр хут зсĕ кил.

***

Нимле хуйхă та çук.
Ним те çук. Шурă тополь кăна.
Месерле çĕр çинче выртакан ачана
Вăл кĕтсе пăхса тăчĕ.
Вăл вара тăпере
Пулса курчĕ.

***

Чăнкă çыран хĕррипче çĕр ишетпĕр.
Ухлатса, тусан кăларса ўкет çĕр татки аяла.
Эпир савăнатпăр, татах пысăкрах çĕр татки
Тĕртсе яратпăр.

Тата хытăрах ухлатса, тусан кăларса
Ӳкет çĕр татки аяла...
Эпир тата хытăрах савăнатпăр.
Çара урасемпе кăна ем-ешĕл çереме
Хиретпĕр-хиретпĕр те аяла тĕртсе яратпăр.
Тепĕр чух хамăрăн та çав çерем çĕр çине
Ларса анса каяс килет пулмалла.
Ах, ахăратпăр. Эпир çырана ишетпĕр!
Эпир вăйлă, эпир чаплă, эпир вĕт çӳлте тăратпăр.
Çĕр вара аялта...

* * *

Çу çитрĕ. Çитрĕ сулллă вăхăт.
Шыва кĕме чĕнет хăяхлă Сăхăт.
Çӳрет шывра вылявлă çутă пулă,
Пулă тытма пуçлатăп пулĕ...
Вăлта та пур, хулкки, ак, путрĕ,
Ку ăмана та пулă хыпрĕ.
Эп ача евĕр хыпăнса ӳкетĕп,
Çут пул тытма эп халĕ те пĕлетĕп.
Ку чух хулкки пит хытă ярăнсан та
Туртса пăхмашкăн эсĕ ан васка!
Пулли вăл пит чее. Хыпать кăштах кăна.
Кăштах тăрсан, çăтсах ярсан вара карт! турт...
Çиçет хĕвел çинче çупкам,
Çерем çинче авкаланать çăрттан!

* * *

Ирпе çапла пĕр юлташпа
Кĕтеттĕмĕр пĕтĕм чунпа
Хĕвел ирпе кăшт тухасса...
Пит сивĕччĕ çавăн чухне,
Ёнтĕркесе пыраттăмăр...
Сасартăк, пĕр кĕтмен çĕртен
Хĕвел тухать çур пĕлĕт пек.
Çути ун хĕрлĕ мар, кăвак!
Тавралăхра темле сăвап.
Тен, калăн, темĕнле кăвайт
Чĕртсе пăрахнă çĕр хĕрне.
Унтан çунса килет тĕнче!
Пĕтетпĕр пулĕ тенĕччĕ,
Телей ыйтма та тăначчĕ...
Пĕр самантран хĕвел каллех

Хай сăнĕпех, пĕчĕк пекех...
Ăçта вара кăвак хуппи,
Ăçта ыйтни, ăçта телей?
Ыйтсан парать, тет, лав тулли!
Эпир вара икĕ айван
Тăраттăр унсăр та аван...
Кам курнă, тет, кăвак хуппи,
Телейлĕ, тет, вĕсен шăпи!

* * *

Эсĕ, çумăр, ăшă çумăр,
Çусан çу-ха вăйлăрах.
Çумăр айĕн чупса пытăм
Эп пуласшăн пысăкрах.
Ирпеле пăхса пыраттăм –
Хура пĕлĕт явăнать.
Çумăра эп кĕл тăватăп.
Эс пулсассăн, тыр ăнать!
Типсе çитрĕ тарăн Сăхăт,
Йывăç та вĕт сарăхать.
Çумăр чӳкĕ тунă вăхăт
Çитнĕ пекех туйăнать.
Çĕр шăрши çапать пит туллă,
Урам тăрăх шыв юхать.
Хура пĕлĕт çичĕ хутлă,
Çавăнтан пуль шыв тухать?

* * *

Ирпе тăтăм та куратăп...
Асаннен пӳрт тăрринче
Качака çӳрет çӳлте.
Сиксе анчĕ якăлт! çеç.
Майраки ун питĕ авăк!
Пичĕ-куçĕ питĕ савăк!
Шур çăмне силлет-силлет те
Шурă юр ӳкет çӳлтен.
Шурă урипе тапать те
Пăрлă йĕр юлать çĕрте.
Эп ăна пит юрататăп.
Пĕр ытам тип курăка
Аслăкран илсе паратăп.
Мĕншĕн-ха пăхса тăратăн?

Курăка та вăл çимест,
Мекекек! теме пĕлмест.

***

Ура тĕпне шуç çапнă пуль –
Шуçтарса çÿрерĕмĕр...
Кирлĕ мар пире тумхахлăх,
Кирлĕ мар чăнни!
Шуçтарма кăна пĕлесчĕ –
Урăх мĕн усси?

***

Лапка-лапка юр çăвать,
Мулкач сикет йĕр тăвать.
Аса килчĕ çак юмах,
Чÿречерен пăхсанах.
Кĕркунне çул кукăр-макăр,
Урамра чупать вĕт-шакăр.
Шурă юрĕ çунă май
Курăнать тĕнче самай.
Кун пек шурă-шурă тĕк
Нихăçан та çуман пек.

***

Ирпе пуçланать чĕкеç карусель.
Унпа ярăнма çăмăлрах-мĕн!
Хăех илсе кайĕ сана çÿлелле,
Çĕре çеç ÿкетĕн ху тĕллĕн...
Чир-ик! тет асам карусель,
Теме ас илтерчĕ...
Эп пĕчĕккĕ пек, темле ярмăркка!
Шăхлич сассипе ман тулчĕ хăлха.
Круççель çавăратăп эп юлташпа.
Чăнкăр та чăнкăр! тăнк та тăнк!
Вĕçеççĕ çынсем çĕр çийĕн таçта.
Эпир те вĕçетпĕр пулас çавăнта.
Эпир ярăнаттăр чĕкеç майлăрах.
Чĕр-ик! çеç тăвать каруççель çаврăнса,
Чăнкăр та чăнкăр! ванать пек тĕнче,
Тунк-тунк! параппан çапать чĕререн.
Шăхлич шăхăрать тата хытăрах...
Хуçи тăсса ячĕ, хут кулăс калать,

Тěнче чěкеçле калаçать...
Çўле те çěклет, çěре пăрахать...

***

Мамăк вěçет...
Тирек айěнче шурă вырăн.
Эпир, ачасем, çавăнта
Пуçелěк тăватпăр.
Пит чаплă çынсем пек выртатпăр,
Вěçетпěр.
Шур пěлěт пек эсě ху та!
Таçта аякра пěр вăрман.
Нихçан та пулман!
Таçта аякра эп вуланă юмах.
Выртать пěр ача.
Тирекě шавлать,
Мамăк вěçет.

***

Ачаш акаци пěр сăмахсăр
Сип-симěс çепěç чěлхипе
Тем систерсе мана каларě:
«Килсем татах, килсем ирпе...
Ун чух сана эпě кăтартăп
Чи хўхěм ырă сăнсене.
Эпě сана кěтме пуçларăм
Юрсем кайса пěтсессěнех.
Эсě вара нумай кěттертěн...
Паян кăна утса кěретěн
Тахçан çўренě сукмакпа»
Ачаш акаци, эпě сансăр
Тăрса юлса-çке, чăн та, сансăр.
Сăвапллă сăмахна тăнлатăп,
Сан умăнта чěркуçленетěп,
Мěн пулнине аса илетěп.
Сар чечеке ларсан çўренě
Пыл хурчě евěр пыл ěмсе.
Акаци хутаçне шутланă,
Пěр-иккě мар, виç-тваттă хыпнă
Кутăс каланă пек туса.
Шăхлич каланăшăн вăрçатчěç,
Илтесшěн марччě ватăсем.
Эпир вара, ача темерěн,

Купăс калаттăмăр темччен.
Çапла шăхлич пек шăхăрса
Теллейĕм иртрĕ пулмалла.
Пĕрех мана акаци патăн
Çурхи кунхи юратăвна.
Тен, çавăнпа пĕрмай килетĕп
Кун таврăнсан эп сан пата.
Каллех пулать санран кĕтетĕп
Шăхлич пек сасă паrасса.
Анчах эс темшĕн шарламастăн
Сип-симĕс çепĕç чĕлхепе.
Пĕр-ик сăмах кăна илтесчĕ,
Килсе ларсамччĕ ман çума...
Эпир пĕр-пĕринпе часах
Пуçлаттăр пулĕ пурăнма.
Халь ваталса çитсен кăна
Ăнлантăм пулĕ сан чунна.
Çавна каларăн пулĕ эсĕ,
Çавна эп илтрĕм пулмалла.
Апла пулсан, тавах, ир кӳлĕм
Килсе çӳретĕп пуль-ха үлĕм.
Акаци чечеке ларсан,
Акаци шăхăрса ярсан...

* * *

Чăмăркка чечек эс татса килтĕн –
Тем чухлех иккен вĕсем сан аллунта!
Чечеке те, панăçем, эс илтĕн
Манăн канлĕхе ялан тăха...
Аса илтĕм эп те... Ача чух вĕт
Пит нумай татса кун пек чечек.
Вăрман тăрăх ун чухне эп чупнă,
Чечек курнă та... Чуна çапса пичет.
Ун чухне чечек чылай курнатчĕ,
Ывçăн-ывçăн татнăçем вара,
Вăрмантан таçта кайса çухалчĕç...
Халĕ çуккă вăрманта чечек,
Çуккă чĕрере те çав пичет.
Çавăнпа пуль чунăмпа хурлантăм,
Куртăм та алра... Чĕре темле
Талса ӳкнĕн туйăнчĕ турех.
Тепĕр хут çав вăрмантах çӳренĕн
Чупса кайрăм пулĕ çав тĕлех.

И-43755

Çавăнтах иккен ман чун çӳрет,
Çавăнтах, çав вăрманах чĕнет.
Эс кăтартнă ĕлĕкхи кĕтретлĕх
Пурăнать манра-мĕн чиперех!
Эх-эх-эх! тесе калас килет те
Юрĕ-çке, каламăп... Сан аллу,
Сан аллу вĕт пулчĕ юратулăх,
Çавăнпа туятăп уйрăлу.
Ĕнтĕ çитрĕ пулĕ кĕтнĕ кунăм,
Пичет çапнă чĕрене тин тупрăм.

***

Тĕлĕнмелле пĕр пĕчĕк тупсăм
Ман чунăмра хуçаланать.
Ача чухне кунта эп утнă,
Вĕреннĕ пулĕ, тен, кăштах.
Эп ас тăвап... Кунта уй-хирччĕ...
Лартсаччĕ эпĕр йăмрасем...
Халь çав йăмра çиле пуль хирчĕ
Çут уçлăха мĕн ӳкиччен...
Çаппа, çаппа вăл вăхăт иртрĕ,
Халь ватăлчĕç çав йăмрасем.
Эпир вĕт хамăр та... шур витрĕ
Тăнлавсене çав кунсенчен.
Çапах та эпĕ тĕлĕнетĕп.
Еппе-ха эпĕ çакăнтах,
Эп çакăнтах утса çӳретĕп,
Эп пурăнатăп çак тĕлтех...

***

Ĕлĕкхи пек каллех пиçеççĕ
Куç умне ӳкнĕ çупкамсем...
Кун иртнĕçемĕн хĕрелеççĕ
Сип-симĕс пулнă çырласем.
Ача чухне ăна татсаччĕ
Çупкам-çупкамăн хам валли.
Мачча тăрне çакса хурсаччĕ –
Кайран сисе çăвар тулли!
Çаплаччĕ çав ачалăх кунĕ –
Эпир ӳсе çырла çисе!..
Мана каллех пилешĕн хумĕ
Пырса çапать те тĕсесе
Пăхса тăратăп, тем тăваслăн...

Халь тин çиместĕп эп пилеш!
Анчах та тахçанхи хаваслăх
Çĕклерĕ чĕрене хуллен.
Халь ĕнтĕ эп те пурăнатăп...
Пилешĕм пур ман... Мĕн вара?
Çав пилеше çисе пăхатăп,
Вара пулатăп пĕр ача!

* * *

Сиренлĕ çул. Ача чухнех
Таçта иртсе каятăн мар-и?
Мĕн чухлĕ пуль сана татса.
Эс татнăçем ÿсеттĕн мар-и?
Мĕн чухлĕ пуль хĕрачине
Сирень хуçса паман-ши эпĕр?
Тепĕр чухне вил тăприне
Сиреньпеле витсе те курнă...
Сирень, сирень, эс тухнă чух
Мĕн-ма пулать-ха питĕ шух?
Таçта санра пур пысăк вăй,
Таçта шалтан çутатрĕ те,
Çул хĕррипе уттарчĕ те
Асра хăварчĕ... Çакă кун
Хăйне пĕлсе килет пуль те.
Сирень пекех хĕвелĕ те,
Сирень пекех халь хĕрачи! –
Халь йăлт чечек пек, пĕлтĕр-и?
Сирень тени халь хăй тĕнче.
Сирень тени сан чĕрере...
Сирень пулса каятăр та,
Сирень пулса килетпĕр те –
Сирень пекрех халь эпĕр те!

* * *

Çĕлен çырми çĕлен пек
Выртать авкаланса.
Йăлăмкасри ача пек
Ларатăп шăхăрса.
Ман алăра пĕр хулă.
Пĕр симĕс хулă çеç.
Çав хулăран тем чухлĕ
Шăхлич тăвататăп кĕç.

Çырма сасси пек шавлăн
Тĕнче ман вăранать.
Шăхлич сасси хаваслăн
Хăй сассине хушать.
Çурхи сас пит хăватлă –
Вăрман тăрри шавлать.
Апла пулсан сипетлĕ
Çумăр тени пулать.
Çырма хĕрри асамлă.
Унта халь тем те пур.
Пĕр пĕчĕк çĕлен майлă
Унта эс шуса пыр.
Унтах сип-стмĕс курăк,
Пĕр сиплĕ çеç серте.
Йўç паранки те, курăн,
Ўсет ăшă çĕрте.
Эс тат апат çимелĕх
Кĕсье тулли серте.
Сан алăра çиçмелĕх
Чечек те пулчĕ-çке.
Апла, çурхи кун пачĕ
Хăй илемне сана.
Çапла ман кун пуçланчĕ
Çĕленĕн çырминче.

***

Çырлаллă çанталăк. Хĕвеллĕ...
Ĕшне ăшĕнче ик ача.
Тăрать симĕс курăк чĕвенĕн,
Хитре çырлана упраса...

Çырла тесенех хускалнă
Ача чĕрисем ялта.
Ик йĕр курăк тăрăх хăварнă
Вăрман хĕрринчи пĕр çулпа.

Çырла питĕ пысăк, хĕп-хĕрлĕ...
Ăна халь татма çăмăл мар.
Çырла тенисем те тем тĕрлĕ –
Чечек тунипе çыхланать...

Пĕрех икĕ алă пĕлеççĕ
Хитре çырлана та татма.

Часах пуракссем тулаҫҫӗ,
Тухатпӑр киле те кайма.

Киле кайнӑ чух асамлӑн
Юлать пек ҫырла ӗшни.
Ача чунӗнче савӑнмалӑх
Юлать ҫак ҫырла ӗмрипех!

***

Ҫара ура кӗлли ыратрӗ
Ҫул варрипе те чупнӑ май.
Тен, ҫав кӑштах чуна хӑратрӗ –
Ыраттаратчӗ вӗт самай!
Ҫапах ача ниме пӑхмасӑр
Вӗлтӗртеттерчӗ саруран.
Ял ҫӗрӗпе ҫапла чупмасӑр
Епле халь ӗнтӗ пурӑнан?
Ҫӑра та сывлӑш ҫатнӑҫсемӗн,
Тата аван пек туйӑнать.
Тӑри ҫӳлтен те ӳкнӗҫсемӗн,
Чӗре те талнӑ пек пулать.
Чупах, ача, чупах эс вӑртӑн
Ҫак ҫӗр кӑшт панӑ вӑйпала.
Вара уру та питӗ хӑвӑрт
Ирттерӗ ҫакӑ вӑхӑта!

***

Шутлама пӗлмерӗм ним те.
Шутлама та кирлӗ мар.
Хӑш чухне сим-сим! теен те
Мул тухать, тет, сӑмах май.
Эс вара ӑна ытарлӑн
Хӑвна майлӑ ытамла...
Курӑнать пек мул чӑпаррӑн,
Тытса пӑхнӑ чух алра...
Мӗн-ха ӗнтӗ вӗт вӑл хӑй те
Шутламан алла лекме...
Пиншер ҫул шап-шур чул айӗ
Пулнӑ вырӑнӗ кӗтме...
Халӗ ак, сим-сим! ҫеҫ терӗм,
Тухрӗ выртрӗ ман ума.
Эс ӑна, апла, ҫӗнтертӗн,
Е ҫӗнтерчӗ вӑл сана?

Куҫ илмесӗр, ак, сӑнатӑп:
Пур ун ҫепӗҫ аллисем,
Пур ун куҫӗ, пур сӑнарӗ
Хӑйне май ӳкерчисем...
Тен, вӑл выртнӑ курӑнсах пуль,
Ҫын тӗлне пулман кӑна.
Тӗл пулсан та, тен, курман пуль,
Иртсе кайнӑ куҫ хупса?..
Эп вара ухмах пек пултӑм,
Куртӑм пулӗ чӑннине
Пуҫ тайса сим-сим! эп турӑм –
Турӑ пачӗ чӑн мулне!

***

Пӗр самант пек туйрӑм иртнӗ пурнӑҫа.
Пӗр самант кӑна ак эп тӑрап пӑхса,
Ҫавӑ самантра та кӑшт пулап хуҫа…
Ак, эп, пӗчӗк ҫеҫ пек, урамра ҫӳреп,
Пӗччен юлнӑран-ши питӗ хыт йӗреп…
Ак шыва кӗретӗп шыв чӑххи пекрех,
Ҫыранра ларатӑп ҫӳҫ типиччен ҫех…
Хырӑмсем выҫсассӑн, пӗр кӗтӳ ача
Кашличӗ ҫимешкӗн кайрӗ вӑрмана…
Ҫавӑнпа пуль эп те ӳсрӗм курӑк пек,–
Ӳссе ҫитнине те ман ӑҫтан пӗлес?
Пӗр самант ҫеҫ иртнӗ эп ҫуралсанах,
Ҫавӑ самантра та эп ача анчах!

***

Пырса кӗрсе тет манӑн чун
Сип-сивӗ те ҫап-ҫутӑ кун.
Халь ҫав кунрах пулас килет.
Ман чунӑм пуль унтах ҫӳрет…
Арапуҫри чи ҫӳл ҫӗрте
Больница ҫурчӗ пӗр тӗлте
Тахҫантанпах-ха вырнаҫса,
Паян унта ман чӑнласах
Ӗлӗкхи пек пуласчӗ-ха,
Ҫав ача пек ҫухрасчӗ-ха…
Ҫуралнӑ ҫуртӑм тӗлӗнче
Тӗнче халь чисти кӗленче!…

Пĕр ял, ак, куранать çумра
Кунтан пĕр вунă çухрăмра, -
Эп ӳснĕ ял вăл пулмалла!
Вăт çав ялтан, эп çуралсан,
Атте пырса тет лашапа...
Ача çуралнă япала
Кăштах вăл сыпнă пулмалла.
Çулсем те пулнă пулĕ япăх...
Атте калатчĕ: «Эп сана
Илсе тухсан больницăран,
Аннӳ тытса пырайманран,
Тухса ӳкеттĕн çунаран...»
Эп юлнă пулĕ çавăнтах!
Сип-сивĕ те тăп-тăрă кун.
Ман пурнăç халь те япăхрах,
Тен çавăнпа эп кăшкăрап
Тухса ӳкессĕн пурнăçран?

***

Эп сукмакпа чупса анап,
Сукмак çинчех пĕр панулми курап:
Шап-шуррăн çеç хура тăпра çинче
Пĕртен-пĕрех пулать хăех тĕнче.
Вăл ман пекех кусса анать
Çак сукмакпа сырма тĕпне...
Тахçан вăл ман пекех симĕс ача пулса,
Турат çинче чуччу кăшт ярăнса...
Халь ӳкнĕ те пуслать çĕрме,
Эп илтĕм те... Ун, чăн та, пур
Пĕр-ик енчен шăтарнă хурт палли.
Апла пулать, шутлап, тута валли.
Çыртса пăхап та... пур эмел тути.
Тĕнчен те çавăн пек вĕт пур йӳççи!
Мĕн чухлĕ суярах, вăл çавăн чухлĕ чăн пек.
Мĕн чухлĕ хуртлăрах, улма пек, курнарах...
Чупса тенĕ пекех сырма тĕпне анап, –
Тĕнче улма тути калать.

***

Чун, тĕлĕкри пек, пĕр кĕтмен çĕртен
Телейлĕ пек туять хăйне. Ак ерипен,

Уяр пек, хăпарать пӳрне вĕçне,
Унтан пуçлать хăй çулĕпе вĕçме…
Чĕкеç пекех шыв çийĕпе вĕçет,
Çуначĕпе чĕрсе шыва кĕрет.
Çак тĕнчене йăлтах курас тесе,
Тăри пекех хăйне çӳле çĕклет…
Ун умĕнчех юхать пĕр юханшыв,
Выртать пĕр ял ун çумĕн лаптăкса…
Вăрман та пур… Анчах мĕн чуль куççуль
Ăна кăларнă чух эпир çĕре тăкса.
Ак вăрмантан сукмак тухать чупса,
Унпа каяттăмăр çулла çырла татма…
Вăрманăм! Эп сана сума суса,
Эс патăн кĕрĕкна хывса мана!
Сана та юханшыв! Эс панă çул
Илсе каятчĕ шур Кĕтне патнех.
Ах, иртрĕ-çке сан, Сахăтăм, кунçул.
Сана аса илсе тăвас ятпе…
Ак ялăн хĕррипе пур Йăлăмкас.
Пăхма вăл пĕтĕмпех сад ăшĕнче.
Урамĕпе еппе çарран чупас,
Кĕтет пекех анне кил умĕнче…
Халь ĕнтĕ çак тĕнче çапла çиçсе илсен,
Телейлĕ тĕлĕкпе вăл пĕр килсен,
Еппе пуль чунăм савăнса тăмасть…
Анчах телей тени вăл нумая пымасть!

***

Пахча варринче чие
Сухăрлă пулакан…
Еппе-ха кайса çиес,
Шутлать пĕр ача, выççăн.

Çурхи кунсенче, чăн та,
Тем те çиес килет.
Çулне хĕлĕпех уçман та
Кĕрт тăрăх ашмах тивет.

Ирхи шăнпа хытнă кĕрт
Тĕреклĕ кĕпер пекех.
Анчах та пырса кĕрсен,

Пуҫатӑн тӗппипех!

Кӗрт тӑрӑх шуса пӑхап,–
Кӗрт-мӗн мана чӑтать!
Чие ҫумнерех тухсан,
Сухӑр ҫиме пулать.

Чие тунинчи сухӑр
Хура куҫ пекех вылять.
Ӑна ҫисенех тутӑ
Ӗнтӗ эп тин пулап…

Ӑна ҫисенех пек вӑй
Манӑн ӑшра пухӑнать.
Сухӑр ҫутиллӗ куҫӑм
Тӗнче вӑййине вылять.

* * *

Эпӗ кун курнӑ хуплӑх
Вуплӑха кӑна юрӑхлӑ.
«Сутас ӑна!» – терӗҫ.
Сутрӗҫ.
Ҫаврӑнчӗҫ те утрӗҫ.
Халӗ ӗнтӗ вӑл маншӑн ютӑ,
Эпӗ ҫуралнӑ ҫуртӑм.
Атте вӑрҫас ҫук тек хыттӑн,
Анне хӗрхенеймӗ тек вӑрттӑн…
Чупать-ха ачи чупать.
Пушмаксӑр та юрать.
Карта тӗлӗнче пӗр ырӑн…
Чун халь те чӗнет ыррӑн.
Унта эп ларатӑп пӗччен,
Нихҫан та пулман кичем.
Ирпе тепӗр чух сивӗ….
Тумтирӗ пуль пулнӑ кивӗ?
Хӗвел ҫав тӗле пӗлетчӗ,
Пӗрмай ман пата килетчӗ.
Пӑхать пулӗ халь те пӗр хушӑ?
Анчах унти ырӑн пушӑ…
Чупать-ха ачи чупать.
Выҫӑ та юрать.

Ӳсет пахчара кашличӗ.
Тепре тутансан юринччӗ!
Урам тăршшипех йывăç...
Пуçтар çулçине пĕр ывăç!
Акă вăл хут, укçалăх.
Акă вăл пĕчĕк хуçалăх.
Сĕтел тăршшипех тăм тирĕк,
Хуçи, курăнать, çирĕп.
Çăка лашине утланчӗ,
Урам тăрăх хăваларӗ.
Халь ĕнтĕ ăçта кайса кĕчĕç,
Кĕтсе илеймеспĕр пуль кĕçĕр.
Таçта пулчĕç пулĕ сутлăх,
Таçта пулĕ тепĕр хутлăх?
Килкартинче вара пушă,
Хĕвел те пăхать пĕр хушă...
Сутас текенсем – сутчĕр,
Укçашăн ухмах пек супчĕр!
Эпĕ вара çичĕ ютăн
Пĕр утăм та тек тумăп...
Хĕвел тухасса пĕлетĕп,
Çав вырăнтах кĕтетĕп.

* * *

Эпĕ хӳшĕре выртатăп,
Çăлтăрсен шутне шутлатăп:
Паянтан эпĕ хуралçă!
Пахчара та ак хуралчĕ –
Пурпĕрех шалт-шур тăраççĕ,
Çăлтăр евĕр курăнаççĕ
Пиçсе çитнĕ улмасем...
Ак, вĕсем те мĕн ӳкеççĕ
Çĕре çăлтăр евĕрех.
Пат! туса улма илет те
Шăп тăран тĕнче чĕтрет,
Темле чун каллех пĕтет, –
Чун çавна таçтан пĕлет!
Çав тĕнче ан пĕттĕр тет,
Çапăçма хатĕрленеп...
Вăрăсем ак час çитеççĕ,
Улмана татса çиеççĕ,
Вĕсенчен эп пит хăрап,

Пурпӗрех хастарланап.
Вӑрттӑн иглесе выртап,
Мӗн сас-чӗв, йӑлтах тӑнлап:
Ак, курак таҫта сас пачӗ,
Сар автан килте вӑранчӗ.
Кукареку! турӗ те
Пат! ҫеҫ ӳкрӗ панулми.
Илтӗнет ура сасси!
Вӑрӑсем шуса кӗреҫҫӗ,
Пахчана, тен, ҫӗмӗреҫҫӗ!
Эп хӑрап та, хӑрамас та –
Хӑрасан кунта выртмас та!
Ак таҫта каллех пӗр сас, –
Чӑн та вӑрӑсем пулас?
Эп илетӗп пысӑк чул,
Ывӑтатӑп хуп! та хуп!
Кӑшкӑратӑп кайӑкла,
Такама хӑратасла…
Тӗпӗр-тӗпӗр! тарса кайрӗҫ
Эп хӑратнӑ вӑрӑсем.
Улмасем те ларса юлчӗҫ
Чисти, калӑн, ҫӑлтӑрсем!

***

Анне ҫӗрулми кӑларатчӗ…
Выртатчӗ ана хуп-хура!
Кӗрхи тӳпери ҫӑлтӑр евӗр
Тухатчӗ паранк вара…
Анне ҫӗрулми кӑларатчӗ,
Эп ҫӑлтӑрла выляттӑм…
Вӗтти-мӗннине пӗр ҫӗре –
Пулать пӗр ҫӑлтӑр ушкӑнӗ!
Кӑштах шултрине витрене –
Вӑл тӑрӗ вара уйӑх тӗшне…
Ҫапла ҫӗрулми пуҫтарсан,
Лараттӑм пек ҫав тӳпере.
Шуглаттӑм: кунта эп хӗвел пек,
Ҫӑлтӑрӗсем те сӳнчӗҫ…
«Мишук! – тет анне,
Ан лар ҫӗр ҫине.
Кӗрхи ҫӗр ытла та сивӗ».
Выртатчӗ ана ун чухне хуп-хура,

Эп ҫӗрулми пуҫтараттӑм...
Ура вара, чӑн та, тӑпра ӑшӗнче –
Шутланӑ, таҫта, тӳпере!..
Ун чух эп ҫарран ҫӳренӗ,
Ана сиввине пӗлмен те...
Халь ӗнтӗ ана ҫав ҫук пахчара,
Унта ҫӑлтӑрсем тек тухмаҫҫӗ...
Тахҫан чупса тухнӑ пӗр ача
Хӗвел пек пӑхса лармас та...
Ҫапах эп ӑна астӑватӑп,
Тӑпра сиввине те туятӑп...
Киле тепӗр хут килсен,
Анне сассине те илтеп:
«Мишук! – тет анне,
Ан лар ҫӗр ҫине.
Кӗрхи ҫӗр ытла та сивӗ».
Хура тӳпе евӗр ана хыҫӗнче,
Ӑшӑ кунсем умӗнче
Тӑратӑп каллех ҫавӑнтах,
Ҫав ачах...
Анне ҫӗрулми кӑларать пек,
Эп ҫӑлтӑрла вылят пек...

***

Хаяр тӑрать кӗрхи ҫанталӑк.
Кӗр кунӗ сивӗ те хура...
Шӑнса кӳтет те ҫара алӑ,
Хытсах каять йӗпе ура...

Тӗм айӗнче пӗр пӗчӗк хутлӑх;
Хӳтӗ пулать вӑхӑтлӑха.
Кӗтсе ларап... Таҫта пӗр сурӑх
Ҫӳрет кичеммӗн макӑрса.

Сар ҫулҫӑ пек пӑхса ларатӑп.
Сурӑх сасси вӑрман таран.
Ытахальтен палан хыпатӑп...
Тухмасть ҫур кунӗ асӑмран.

Тӗттӗмленсех ҫитсессӗн кунӗ,
Сив ҫил ҫӗкленчӗ пӗр кана.

Сив çилпеле ун-кунăн хумлă
Пĕрремĕш юр пуçлать çума.

Çурхи пекех ак килсе тухрĕ.
Çуркуннехи пек пĕр ача
Сип-симĕс улăх тăрăх чупрĕ,
Ялт! сиккелерĕ мулкачла.

Шăнса кӳтмест тек çара алă,
Вĕри пекех йĕпе ура...
Йăлт улшăнать умри çанталăк
Шаг-шур юр çунине кура!

***

Лупас тăрринче нумайччĕ
Чĕкеç йăвисем ялта.
Ун чух эпĕ питĕ айванччĕ –
Çӳреттĕм пăхса аялтан...

Чĕкеç хăй çуртне тăватчĕ
Таçти çырмари тăмран.
Ун чух чăнласах аванччĕ
Чупса çӳреме çарран.

Çарран çут çырма тăрăх
Шыранă эпир çав тăма,
Чĕкеç тунине пăхса тăнă
Хăйне валли хăтлă йăва...

Ăна курса хам та тунă
Чĕкеç тăмĕнчен тетте.
Тахçан пуçтарса хунă
Пĕрне, аставап, пĕр тĕлте...

Халь çав теттене асилетĕп:
Куратăп, чĕкеç вĕçет.
Йăва çавăрмалăх, пĕлетĕп,
Вăл тăм шыраса çӳрет!

***

Шăкăрт! та шăкăрт! утмалăх
Çинçе кăна тӳр сукмакпа

Эп тахҫанах шухăшланă
Ҫул ҫӳресе курма…
Инҫет вăрмана ҫитес те
Юр чечекне татас.
Сив тивнĕ ҫеҫке пек пĕтес те
Юр айĕн тепре шăтас.
Тен сертине тататăн
Шӳрпе пĕҫермелĕх кăштах?
Е кайăк пекех юрлатăн,
Кайăк пулатăн татах…
Ҫак ҫул ҫинче пур пуль тем те.
Кĕтет, тен, телей пире?
Ҫил варкăшăн, шăпăн ҫӳрет те
Ҫĕре ҫавăрса ӳкерет…
Пĕрех хăрамасть-ха чун, –
Ҫурхи илĕртет-и-ха кун?
Сукмак типсе ҫитнĕ чух
Ҫула пурпĕрех эс тух.
Тĕл пулнă чечек ҫухалмĕ,
Пĕрмай сан ҫулна ҫутатĕ!

***

Самать вăрманĕ аслă –
Унта ҫырла нумай!
Тен ҫавăнпа хаваслăн
Утатпăр ҫиле май…

Акă ҫап-ҫут уҫланкă,
Хĕп-хĕрлĕеех ҫырла…
Ки-ак! тăвать шаланкă
Пĕр типĕ ҫырмара.

Утса пырсан, асамлă
Тĕнче те уҫăлать.
Ҫырла та пур татмалăх –
Татсан пурак тулать!

Самать вăрманĕ аслă,
Темтепĕр тупăнать.
Кашнин хăйĕн уҫланкă,
Кашни хăй савăнать.

***

Чак-чак! тăватчĕ кайăк,
Ларатчĕ сырла çисе.
Эп хам та çапла тăвас пек
Пăхаттăм çырла çине.
Ăçта-ха çўлте хĕрли пур,
Е кайăк кăштах çини?
Унтан тупăраххине
Эсир çисе курнă-и?
Çавна шыраса хăпартăм,-
Çўле-мĕн каять чие!
Чие вуллипе суллантăм,
Халь ĕнтĕ вĕçеп пек инçе...
Куçпа халь йăлтах вичетĕп:
Кунтан курăнать пур тĕнче!
Ял çумĕнче, ак, чўхеннĕн
Пăртак курăнать униче...
Таçта аякра вăрман пур,
Унтан çывăхрах çырма –
Ак эпĕ те вăйлă çунатлăн
Вĕçеп те каяп çавăнта...
Çапла кайăк пек ларатăм
Чи пыскăк чие çинче.
Унччен те пулмарĕ – выртатăп
Чие йывăççи кутĕнче...
Вĕçеп пуль тесе хăтланнă
Ура кайнă чух майĕпен.
Суран миçине шутланă,
Кайăк чак-чак! тунăçем.
Çўлте çырли пурччĕ хĕрли те –
Татах та çиме кăмăл пур!
Эй, юлтăр кайăк валли те –
Ман хамăн халь юррăм пур!

***

Йăлăм урамĕ таса...
Унта эс пĕр çўп те тупаймăн!
Пыратăп çул тăрăх чупса,
Çак пурнăç йĕрне те тупаслăн...
Тахçан ванса пĕтнĕ пĕр плуг...
Ун урапи тимĕр утăн
Мана туйăнать тепĕр хут

Тĕнче тăрăшшипе кусса пынăн...
Пĕр тимĕр пралук алăра...
Чăн-чăн! çеç тăвать урапийĕ!
Хитре хĕпĕртӳ! Мухтанатăп вара
Лаша чуптарма пултарнишĕн...
Чăн-чăнн! çеç тăвать урапа...
Вăл пурнăç пекех пăркаланчăк.
Тĕртсе тӳрлетеп пралукпа,
Ун чуппине те ăнланнăн...
Пĕлместĕп-ха эп, пурнăçра
Пурте килмест хавасლă.
Чăн-чăн! тăвакан Йăлăмра
Чупатăп темтепĕр тăваслăн...
Чупса та иртетĕп кил çумĕпе...
Сисместĕп, пӳрт икĕ куçлăн
Пĕр сассăр пăхса юлнине те...
Эп вĕт урапа тупнă!
Çавна кустарап урамра...
Çĕр чăмăрĕ те ун майлă
Пĕрле çаврăнать пек вара...

***

Килте никам та çук чухне,
Пĕрре хĕвеллĕ кун,
Хăпартăм эп мачча тăрне –
Унта-мĕн тем те пур!

Ик айккипе тăпра çинче
Тем чухлĕ кĕнеке.
Темле пĕр çĕтĕк ăшĕнче
Тупап пĕр çĕлĕке...

Ăна эп тăхăннă тахçан
Пĕр пиллĕкре чухне.
Ак халь те тăхăнса ярсан,
Пĕлен ача чунне...

Урам енче пĕр хушăк пур.
Пĕр пĕчĕк хушăк çеç!
Çав хушăкран кĕрет шап-шур
Пĕр пĕчĕк сутă кĕç...

Эп ун патне утса пырап,
Пăхап урам енне…
Эп урама çўлтен курап,
Курап урам сăнне…

Çўлтен пăхсан-мĕн вăл пачах
Курнать-çке урăхла.
Чупса пырать ак пĕр ача
Ытла та кулăшла…

Вăл питĕ пĕчĕк курăнать,
Ури те ун кĕске.
Урамĕ вăрăм тăсăлать,
Ак пайланать икке…

Пĕри уя илсе каять –
Унта эп тыр акман.
Тепри ак çырмана анать –
Унта та пул тытман…

Çўлтен-мĕн эп пĕлмен тĕнче
Пит лайăх курăнать.
Тани Настаçĕ тĕлĕнче
Пĕр сурăх çывăрать…

Кĕтсе выртать ман Йăлăмкас,
Мĕнпур çынсем ĕçре.
Эп çеç ларап пăхса пĕр кас –
Эп халĕ пиллĕкре!

* * *

Урамра выртсаччĕ пĕр юман каска,
Ун çинче ларсаччĕ эп апат туса…
Аллăмра ман пурччĕ яка чул татки,
Ик кĕсье тулличчĕ мăйăр сап-сарри.
Кунĕпе лараттăм мăйăра катса,
Тарăн йĕр юлсаччĕ çавă выртăнта…
Эп çавна шыратăп çав каска çинчех, –
Пулас марччĕ тепĕр çав ача кулли,
Мăйăрĕ те пур ман ик кĕсье тулли…
Тепĕр хут катмашкăн пур-ха чул пекки.
Ах, анчах, куратăп, çуккă-çке каски.

Ӗнтӗ ҫук ачи те, ӗнтӗ ҫук сасси...
Чулӗ те ҫухалнӑ... Ҫук Йӑлӑмкасси!
Пурпӗрех пӑхалҫха, майӗпен шутлап:
Ҫав каска пулсассӑн, эп те пурӑнап...
Шыраса тупатӑп пӗчӗк чул пекки,
Ҫав тӗлех хуратӑп пӗр хӑма татки...
Шалт! катса пӑхатӑп сарӑ мӑйӑра –
Эп хама туятӑп иртнӗ вӑхӑтра!

***

Тимӗр витнӗ пӗр пӗчӗк пӳртре
Сывӑрать пӗр ача пит хитре...
Урамра ӑшӑ ҫумӑр ҫӑвать,
Тимӗр витнӗ тӑрри сас парать.

Ҫӳлте, калӑн, ҫӳрет кулюкка,
Кӑлтӑр-кӑлтӑр! тӑвать пӗр кана.
Кӑлтӑр-кӑлтӑр! тӑвать те таккать,
Апат тупнӑшӑн хыт савӑнать...

Пӗр ача пит хитре сывӑрать.
Тӗлӗкре те – йӑлтах курӑнать:
Урамра ӑшӑ ҫумӑр ҫӑвать,
Тимӗртен ҫемҫе нимӗр тӑвать...

Пӗр кана чарӑнать те тӑкать,
Тимӗре чӑнласах та сӑхать.
Ыйӑхланӑ ача шутлать:
Ирхи ҫумӑр апат тӑвать!

***

Ҫанҫутӑ таса уҫланкӑ,
Ем-ешӗл сырма Кӗтӗквар,
Пӗрле пулайманшӑн каҫарӑр,
Пӗччен вӗт пулма ҫӑмӑл мар...
Эп вӗт унта ҫӳренӗ
Мӗн ҫуралнӑранпах,
Ӗне-вылькӑха ҫитерне
Куракӑ шӑтса тухсанах...
Унтах сырлине те пуҫтарнӑ,
Савӑннӑ та пуль ҫавӑнпа...

Çĕмĕрт тăррине хăпарнă
Çырли кăшт хуралсанах…
Вар пуçĕнче тахçан пурчĕ
Тачка качака кĕпçи.
Ăна кам çисе курнă,
Вăл тупнă апат уççи.
Анне чĕрçине таптанăн
Ак халь те утса пырап.
Вар тĕпĕнче пытаннăн,
Ачалăхăм, туйăнать…
Каллех ак выртса пăхатăп
Ем-ешĕл çерем çине,
Сап-сар чечексем пухатăп,
Тиретĕп картус тăррине…
Эй, пултăр ача чухнехи пек,
Çӳрер-и-ха çĕр çавăрса…
Таçта çавăрса çӳресен те
Çӳрен Кĕтĕквар тавра!

***

Чул сăртран чупса анатпăр Сăхăта,
Мерчен çăлкуç тапса тăрать унта.
Ĕçетпĕр те пĕр сыпкăм хăвăртрах
Утатпăр вăрмана пĕр шухăшпах…
Курăк татас пулать пĕр пысăк мих,
Вăрман тăрать пек питĕ сых.
Эпир хăратпăр курăка татма,
Лесник те пултарать пире тытма…
Çапах тататпăр пĕрер мих шурă утi,
Киле кайма тухатпăр каç пултти...
Тем пысăкăш пĕр мих ĕнсе çинче –
Пĕкĕрĕлсех ларать пуль çут тĕнче?
Ача та мар – пырать, тен, кĕвенте?
Пĕр вĕçĕнче ун питĕ йывăр мих,
Ура пуçне вара тытса тăрать çĕр çех!
Утса çитетпĕр Сăхăта аран-аран,
Ăш хыпнă пек туятаăр хамăра,
Пĕрпĕтĕм шухăш çаврăнать çăлкуç тавра!
Унта, сип-симĕс витнĕ курăк айлăмра,
Канса выртма ытла та пит аван вара!
Ĕçетпĕр çăлкуçран пĕр сыпкăм сивĕ шыв,
Шыв ĕçнĕ хыççăн ĕнтĕ илтĕм вăй...

Халь ним те мар пире Сăхăт çырми,
Унтан тухатпăр та тăратпăр çавранса,
Вăрман енне пăхатпăр савăнса...
Вăрман тaçта выртать-ха хуп-хура –
Ăçтан йăтса килетпĕр-ха, апла, çак курăка?

***

Гришша, Çтаппан, Мишук –
Ача чух намăс çук.
Хуçатпăр турата,
Илетпĕр çăмарта...
Пăхса ларать йăмра,
Курак та кăшкăрать...
Çÿлех эп хăпарап,
Йăва тĕлне тупап.
Унта виç çăмарта –
Ярап вĕт хам ята!
Пурне те ывăтап...
Гришша, Çтаппан тăрать,
Кĕпе сине тытать.
Карк! кăшкăрать курак,
Йăвашăн пит хăрать, –
Эп вĕт ăна ватап...
Çат! турĕ ак пĕри –
Пĕтет курак чĕппи!
Эпир вара татах
Кулатпăр хытăрах.
Шарт! турĕ пĕр турат –
Курак, тен, тавăрать?..

***

Эп мунча кĕретĕп,
Куççÿльпех йĕретĕп.
Эп мунча кĕресшĕн мар,–
Эп пĕрре те чирлĕ мар!
Мунча мĕн вăл? Çу та çу…
Пĕвере те пур вĕт шу!
Пĕвере эпир çÿретпĕр,
Шыв чăххи пекех ишетпĕр
Кунĕпе çав пĕвере –
Курăнмастпăр та килте!
Кирĕк пур пуль çав ÿтре,

Лапка ҫине хучӗҫ те
Хурӑн милӗк ӑшшипе
Ҫуса ячӗҫ пӗтӗмпе...
Эп выртап лапка ҫинче,
Вӑй юлмарӗ алсенче.
Алкумне тухса ларсассӑн.
Сывласа ярап хаваслӑн...
Мунчаран тухап таса.
Халь каяп – шыва кӗме!

* * *

Аштаратӑп, ас тӑватӑп,
Лашапа сип-сив тӑма.
Ун пекки эсир курман та
Каласа парам вара...
Ман атте килтех ҫапатчӗ
Питӗ ҫирӗп кирпӗчсем.
Ҫуртсене те купалатчӗ,
Кирпӗчӗ пулса ситсен...
Унтанпа ҫулсем иртсеччӗ, –
Халь те ҫирӗп ҫав ҫуртсем!
Ун чухне пит хыт ӗҫлетчӗҫ -
Эпӗ те яман ята!
Эпӗ, пӗчӗккӗ пулсан та,
Чупкаланӑ ҫавӑнта.
Ак, мана йӗвен тыттарнӑ,
Лашапа пӗрле утап.
Ҫилӗм евӗр пулса кайнӑ
Ҫав тӑма атте ҫапать...
Тӑмӗ сивӗ, эпӗ пӗчӗк...
Тӑм ҫӑрса чӗппи те пулчӗ...
Халь те, ак, ҫулсем иртсен,
Эпӗ пӗчӗк пек пулатӑп,
Урара чӗппи шыратӑп...
Ҫав тӑма каллех ҫӑратӑп,
Ҫав тӑмран хама тӑватӑп...

* * *

Эп тахҫан вуланӑ пулӗ
Ылттӑн шыракан ҫинчен,
Е тытасшӑн пулнӑ пулӑ
Нишер шывӗ тӗпӗнчен.

Пĕринче, шыв пит начар та,
Илтĕм пĕчĕк кĕреçĕ.
Шыв çулне уçса ярам та,
Шывне ĕçĕп ӳпĕнсе...
Ӳпĕнсех, чăн та, ĕçетĕп,
Чăлт! куратăп тĕпĕнче
Пулă майлă пĕр çиçенчĕк
Йăлтăрать хăйăр çинче.
Йăл-йăл-йăлт! туса выртать вăл.
Пулă мар вăл, темĕскер.
Ман куçа хытах туртать те,
Илсе пăхрăм – пит чипер.
Пулă мар-мĕн – пĕчĕк кантăк,
Ылттăн мар-мĕн – çутă кварц.
Çав çутта курса шутларăм,
Эп те ылттăн шыракан.
Эп илтсеччĕ: çакăнта
Мерчен çăлĕ тет тапса...
Акă мĕн вăл! Çут ахах пек
Тапса тухрĕ те шалтан,
Хальхи вăхăтри юмах пек
Илсе кайрĕ пĕр çулпа...
Халĕ эп çăлсем чаватăп,
Шав уçатăп шыв çулне.
Ылттăн евĕрех шыратăп,
Мерчен, тенĕ çăлкуçне.

* * *

Микки сăрчĕ çинче таçта
Пурччĕ пирĕн тыр акнă ана...
Хырăм выçнă та кăнтăр апачĕ
Ман аппа хутаçран кăларчĕ.
Мĕн апачĕ унта? Пĕр çăмах.
Кăшт сыпмалăх йӳç сĕт анчах...
Тухнă хамăр вара тыр вырма!
Тухнă пуль вырма мар – хур курма!
Кунĕпе пилĕке авсан та
Хамăра тăранмалăх туман-ха!
Ман аппа, кăшт çисен, калать:
Выçă-тутăллă пулсан та
Çак касалăка тухмаллах!
Ман вара, астăвап, вăй юлман, –

Пурпӗрех ҫавӑнтан эп тарман!
Пуҫ тайсах кунӗпе вырнӑ,
Каҫ енне вилесле ырнӑ…
Каҫ енне пӗр кӗлте йӑтса,
Ҫав сӑртран хӗвелпе анса,
Ҫитсе ӳкрӗмӗр пек киле.
Эп ларатӑп пӑхса тӗттӗмре…
Ман аппа ҫӗн апат хатӗрлет,
Яшкара шур ҫӑмах пиҫет…
Ҫитрӗ, калӑн, киле те ҫӑтмах.
Ҫав анчах халь мана илӗртет…
Ах, анчах кашӑка ӳкереп,
Эп сӗтел хушшинчех тӗлӗреп –
Тӗлӗкре эп ҫӑмах ҫиеп!

***

Пахчара та пӗр ҫӑлкуҫ
Чӗрӗ пек сывлать пӗр хуш.
Эп ӗҫме пыратӑп та,
Тутана тӑсатӑп та,
Хирӗҫ хӑй те тем тӑвать,
Тутиме тӑсса парать.
Тути ун сар хӑйӑртан.
Эп шутланӑ – ылттӑнран!
Чӑлтӑр-чӑлтӑр! ҫутӑ ӗнчӗ
Пӗринче мана вӑл сӗнчӗ.
Эп шутларӑм – кӗмӗл ку!…
Пахчара выртать ҫӑлкуҫ,
Чӗрӗ пек сывлать пӗр хуш.
Кам ӑна ӗҫме тӑрать,
Кашнинех тута тӑвать!

***

Сахӑт хӗррипче ларатпӑр…
Кӗтӳ кӗтнӗ вӑхӑтрах
Ҫӗҫӗлле хӗрсе выляттӑр…
Пӗр выляттӑр та чупаттӑр,
Сӑхӑтра ҫут пул тытаттӑр…
Хырӑм выҫнӑ, мӗн тӑван?
Майкӑна чаҫрах хыван та,
Пӗр вӗсне ҫыхса хуран та,

Атма евĕр майкăпа
Çут пулла сĕрен кăна...
Шăпăл-шăпăл пул тăвать, –
Атма тĕпĕ пул тытать!
Чĕртсе яр та халь кăвайт,
Пулăран шашлык пулать...
Хырăм тутă, мĕн тăван?
Çĕçĕлле каллех вылян!

***

Курнавăшра хăвалăх,
Курнавăшра аван.
Кӳль хĕррипе пыран та
Сар чечексем татан...

Хур-кайăк та çĕкленчĕ
Таçтан шур вĕтлĕхрен.
Унта кĕме пĕлеймĕн –
Унта пур вĕлтĕрен!

Çыран хĕрне ларатпăр,
Чĕртетпĕр вут-кăвайт.
Çут пулăсем тытатпăр, –
Çут пулă чăп! тăвать.

Ӳкет кăвайт çутиĕ
Хуранчăк шыв çине.
Çут пулăсен куллиĕ
Пулатпăр ку чухне.

Çут пулăсем юлхавлă,
Пĕрре те выçă мар.
Ун вырăнне вылявлăн
Тритон хыпать пĕрмай.

Тритон та питĕ лайăх,
Анчах вăл кирлĕ мар.
Пулă тытма шуглатпăр, –
Эпир вĕт ухмах мар!

Кăвайт çунать çунатлă,
Кăварĕ шарт! тăвать.

Кӳлӗ тавра хаваслă
Çĕн юрă янăрать…

***

Микки сăрчĕ ас тутарчĕ
Манса кайнă вăхăта.
Çак сăртран вăл карăнтарчĕ
Ухă евĕр Сăхăта…
Сăрт çинчен пăхса тăратăп:
Нишер тăрăх Сăхăтпуç…
Аякра Канаш хуранкăн, –
Йăмăхать, пăхсассăн, куç.
Эп пăхатăп та куратăп…
Пĕчĕк чух та, ак, ӳссен,
Тепĕр хут утса тухатăп, –
Çук, пĕтмен-мĕн ман çулсем!
Вĕсем тăрăх эп турттарнă
Хам çумланă курăка.
Çавăнтах мана тыттарнă
Сухапуç суха тума…
Лашине те çӳреттернĕ
Нар сырми патне çити,
Ăшă çил çилхе вĕçтернĕ
Сиккипе вĕçтернипе.
Тыр та вырнă, утă çулнă, –
Ас тăвап мĕн тунине!
Ак, каллех выртсах тăнлатăп
Микки сăрчĕн сассине…

***

Шăл катми пуличчен кататпăр
Тин çеç татнă сап-сар мăйăра.
Шыв ĕçетпĕр те канлĕн выртатпăр –
Аннă, калăн, кĕтӳ тапăра?

А, тен, чăн та, çапла çӳретпĕр,
Пĕр кĕтӳ выльăх пек вăрманта?
Мĕн тĕл пулнă, çавна çиетпĕр –
Çавăнпа тен ӳсетпĕр патвар?

Çимелли вĕт ун чух ним те çукчĕ, –
Çăкăрне те çимелĕх паман!

Анчах пирĕн, анне пек, пурччĕ
Чуна çывăх çырма та вăрман...

Çулла çитрĕ те пулă тытаттăр,
Çулла çитрĕ те – пур çырла!
Халĕ, ак, сар мăйăр кататтăр,–
Пурăнаттăр, куран, уллутла!

Тен, çапла шуглама та пĕлмен-тĕр.
Анчах пулнă чылай чее.
Паянах ак яла килсен те
Аса илтĕм çавна телее...

Вĕт паян та çапла питĕ йывăр.
Çимелли вĕт паян та çук.
Çав ача евĕр сарă мăйăр
Эп кататăп пулать тепĕр хут?..

***

Килĕрен киле сухаллă
Сивĕ хĕл çӳрет.
Аслăкăн айне те халĕ
Юр вĕçсе кĕрет.

Ĕнесем выçса тăраççĕ,
Сурăх мекеклет.
Выльăхсем хĕлле ыйтаççĕ
Утă, эп пĕлеп.

Йăпăрт хăпарса эп кайрăм
Аслăк тăррине.
Пĕр ытам çĕре пăрахрăм
Вăрман уттине.

Çаранри пек симĕс утă
Юр çинче выртать.
Сурăх халь унти чи тутлă
Чечеке шырать.

Савăнса пăхса тăратăп
Сурăх çинине.
Тăруках темле куратăп

Утă çуннине.

Мĕн-ха, мĕн çапла пит хĕрлĕ
Шалта ялтăрать?
Тен, унта темле пĕр йĕрĕх
Халь те пурăнать?

Тĕлĕнсе пăхса тăратăп
Ут купи çине.
Майĕпен çеç ăнкаратăп
Çырла çаплине.

Вăрманта вĕт утă çулнă
Ăшă кунсенче.
Ун чухне çырла та пулнă
Курăк ăшĕнче...

Халĕ, ак, пăхсан, куратăп:
Ахах пĕрчисем!
Çуллахи пек пуçтаратăп
Хĕрлĕ çырласем!

Çырли кăштă типсе кайнă.
Ту-утлă пурпĕрех!
Аслăк айĕнче те халĕ
Вăрманти пекех!

* * *

Каç енне, пĕччен, ача чух
Арман авăртса курнă-и?
Арман тесенех, пуçа
Темтепĕр кĕрет:
Унтах мĕн шуйттан
Тата сарă хĕр...
Тытаççĕ пулать усал-тĕселсем...
Арманĕ те вăл
Масар çумĕнчех...
Çĕр тĕрлĕ пĕр шиклĕх.
Тата михсене çĕклесе кĕмелле...
Унта та пур иккĕленӳлĕх.
Тата хам тĕллĕн арман авăртса та курман...
Ак çитрĕ черет.

Яратăп пĕр мих пĕрмене,
Таратăп пăхса, хăратăп тата –
Арманçă вăрлать тет çăнăх!
Каймастăп ниçта та, пăхатăп, шур çăнăх
Темле çўхе шыв пек юхать.
Вăхăт иртет...
Халь ĕнтĕ, çăнăхпа танлаштарсан,
Шуйттан та тем мар,
Пĕве айĕнчи хĕр те...
Масар та...
Унта ватăсем вĕт, ман тăвансаем.
Пил пачĕç те
Çăкăрлă пултăм!

* * *

Урамра ăшă çумăр çăвать:
Çут тĕнче урăхла курăнать.
Эп утатăп пăхса çўлелле,
Эп пыратăп теме тĕллесе...
Эп шухлатăп: кунта кăна мар,
Аякра та çăвать пуль çак çумăр?
Аякра унта пур пысăк ял,
Хĕрринче пĕчĕк пўрт те ларать...
Кунĕпе çапла çумăр çусан ак
Маччинчен те хура шыв каять...
Шапшур чуллă плита та тăрăх
Урайне те юхса анать...
Астăвап-ха, тахçан, кайсассăн,
Çав хура йĕрсене асăрхарăм:
Тăрри шăтнă ĕнтĕ кун, терĕм.
Хăпарса та пăхас темерĕм...
Халĕ акă ăш çумăр çăвать,
Урай тăрăх пуль шыв юхать?
Вĕт çавна ман атте те курать,
Тен, анне те таçтан юнать?
Вăхăт иртрĕ, пĕрех эп çавна
Тем тусан та тумарăм пулать.
Урамра ăшă çумăр çăвать,
Пўрт вăра шăннă пек курăнать.
Йĕпенсе хуралса-хуралса кайнă пўрт,
Эс мана тепĕр хут чĕнсе кĕрт.
Хĕвел пăхнă чухне кантăкран

Ман тăрасчĕ урай варрине.
Ман туясчĕ кив пÿрт ăшшине
Хулара çумăр çунă чухне!

* * *

Акă çитрĕ те ылтăн Сăпас:
Тепĕр хут ача евĕр чупас!
Çук, кунçулăм чупма памасть –
Каймалла, тет, авăн çапма...
Кĕрр! кĕрлет молотилка таçта.
Пĕчĕкех те мар пек, пурпĕрех
Курăнасчĕ-ха, теп, кĕререх.
Аялтан кĕлтесем ывăтап,
Ывăтап та... йăлтах ывăнап.
Молотилка вара çухărать,
Ун çăварĕ «апат» ыйтать.
Вĕлтлетеççĕ кăна кĕлтесем...
Çÿлерех, çăмăлрах та, хĕрсем
Астараççĕ пире шÿтсемпе...
Ывăнсан, ак, лараппăр канса...
Çитрĕ вăхăт апатланма...
Пурччĕ-ха хутаçра улмасем,
Пурччĕ çăкăр пĕр татăк тата...
Ак пулать те Сăпас тума!
Салтса ярăп та эп çыххине
Куçса тухĕç вĕсем ал çинех!
Ах, анчах ман хутаç пуш-пушах,
Куççульсем те тухатчĕç чутах.
Питĕ выçă пулсан та чĕнмес,
Никама та вăрçас килмест.
Сăпас, терĕç пуль çав. «Улма
Пулма кирлĕ Мишукăн нумай».
Çаппа пулнă, чăн та, пĕрмай, –
Улмаран эпир катăк тăман.
Халь вара Сăпас кун выç юлап,
Молотилка пекех «кăшкăрап».

* * *

Ман кача пÿрни çинчи пĕр пысăк çĕвĕ
Тырă вырнине аса илтерчĕ...
Тĕтрери пек пĕр ÿкерчĕк: эпĕ пĕчĕк,
Аннепе кăна-ха эп çÿретĕп.
Аннепе-ха тухнă вырмана, –

Ман каяс килетчĕ вăрмана
Сарă мăйăр тутанма...
Е шыва кĕме, çырма хĕрне...
Çук, пулмарĕ, каяймарăм,
Урамра та чупаймарăм...
Сарă мăйăр вырăнне эп çиетĕп тыррине...
Пĕвери пехех ишетĕп çĕн кaçалăк умĕнче...
Уйăрса-çке ăна панă аннепе икоĕмĕре!
Анне манăн, астăватăп, питĕ ывăннă пулас...
Эп ларса канам-ха, терĕ. Эс вара, татах, вырах!..
Мĕн тăвас-ха, ывăнсан та ман каçалăк тухмалла.
Эп пĕлетĕп-ха вырма!
Алă тытайми пулсан та пĕр çĕмел тăвасчĕ-ха!
Чиперех çапла выраттăм, астумастăп, тем тусан,
Чăтма çук хыт кăшкăраслăн ярса илтĕм аллăмран.
Эп пăхап та, пӳрне вĕçĕ çакăнса кăна тăрать...
Тарпала пĕрле ак хутăш çĕре юнăм тăканать...
Ăт, çапла вăт аса килчĕ. Тахçан тырă вырнă чух
Пысăк йĕр туса хăварчĕ вăхăт хăй те йывăр чух.

***

Симĕс çулçă витнĕ
Пахчари пĕр хурăн
Пуçа аса килчĕ...
Чĕрĕ пек çав хурăн!
Унăн çумĕнче те
Хурăн шыв ĕçетĕп,
Çурхи пăрлă шывăн
Сиплĕхне илетĕп.
Туни тăршшипе те
Вĕллесем çакатăп,
Хурăн тăррине те
Хам та кайăк евĕр
Шăхăрса ларатăп.
Кăмăлсем килсессĕн,
Инçене вĕçессĕн
Хама хам туятăп...
Çын кӳрентерсессĕн,
Симĕс витнĕ çулçă
Ăшне вĕлт! пытанăп...
Иртрĕ пурнăç хăвăрт,
Пултăм эп те шăпăрт!
Кайăк евĕр урăх

Шăхăрса лармастăп.
Тепĕр чух, пĕрех-ха,
Çавăнтах çӳреп-ха...
Пурнăç хăратсассăн,
Симĕс витнĕ çулçă
Ăшне вĕлт! пытанăп...

***

Хапха умĕнчи канав урлă
Эпĕ сиксе каçатăп.
Ура айĕнчи шыв-шурлă
Юра пăлхаштаратăп...
Эпĕ карап яратăп
Ватă йăмра тĕлне,
Хыççăн чупса анатăп
Шавлă çырма тĕпне...
Йăмра тăрринче, куратăп...
Пулатăп курак пекех!
Эпĕ йăва тăватăп
Шывлă çав юр çинчех.
Çат! тутарса ача пек
Хĕвел ак чăпăлтатать.
Ăшă алсишлĕ çил те
Ăна питĕнчен лăпкать...
Эпĕ карап яратăп
Çутă хĕвел патнех,
Хама та шывра курăнатăп
Пĕр космонавт пекрех...
Иртрĕç йĕпе уралă
Çутă хĕвеллĕ кунсем...
Халĕ темле пулсан та,
Килĕр çав кил умнех!..
Сире килме шыв та уçăп,
Ярăп карап шыв çине...
Чупса та пырассăн хыççăн,
Курак пекех питĕ выççăн
Кăшкăрăп тем тăвас пек,
Ним тăвайман енне!

***

Çаппан манăн антипод.
Иксĕмĕр те ик пилот.
Ухса кайнă та çуле,

Ҫўллӗ ҫӗмӗрт тӑррине,
Авӑнатпӑр та тататпӑр
Хура ҫӗмӗрт ҫырлине.
Ыйтларах та авӑнатпӑр
Ал ҫитмен чухне ҫапла.
Те шутланӑ ик пилот
Ҫӗмӗрт пирӗн самолет?
Ҫатӑр-ҫатӑр! Кӗмсӗрт-сӗрт!
Ай-я-яй! та ых-ых-ых!
Илтӗнет ҫӗмӗрт тавра.
Ҫтаппан хытӑ тарӑхать,
Пурпӗрех вӑрҫма хӑрать.
Пур ҫӗртен те ыраттарнӑ
Юнашар выртать турат, –
Самолет пек курӑнать!

* * *

Виҫӗ-тӑватӑ ача
Йӗри-тавра
Тӑваҫҫӗ пӗр карта.
Карта варри –
Пӑрҫа аври!
Сикеҫҫӗ пӑрҫасем таҫта, –
Тарса ӳкесшӗн пулмалла...
Анчах та ҫулӑм хӗрхенӳсӗр
Хӗртсе ярать те самантрах,
Пиҫсе ҫитет вӑл хутаҫрах.
Епле вӑл тутлӑ ӑшаланнӑ!
Унпа эс халь
Тутӑ пулсан та апатланӑн...
Анчах та ҫав
Ушкӑн ача
Пӗр-пӗринчен те аякра.
Ҫав уй та ҫав пӑрҫа
Текех выртмаҫҫӗ картара...
Ҫапах та
Вӑхӑт пурпӗрех
Сехет пекех ӗҫлет,
Ҫав пӑрҫана
Ҫав уй тӗлнех
Каллех ак ӳстерет.

Каллех пĕр-ик ача
Йĕри-тавра
Тăваççĕ пуль карта,
Чĕртеççĕ пĕр кăвайт?..
Çĕр кăвапи пуль çавăнта,
Вут чĕртнĕ вырăнта?

* * *

Çут уйра тăр пĕччен йывăç пурччĕ.
Ячĕ ун темĕнле хăрушлаччĕ...
Унран пурте темрен пек хăратчĕç,
Парнесем те, тен, вăрттăн паратчĕç...
Шăрăхра тепĕр чух пурпĕрех
Апата ун патнех вĕт ларатчĕç...
Питĕ лайăхчĕ ун айĕнче
Сивĕнсе те ларма сулхăнра.
Кăшт шикленнĕ пулсан та ăшра
Вăштăр-вăштăр çилпе те тулса,
Хăпартланнă кĕпе пек выртаттăм,
Çӳлерен те çӳле ĕмĕтпе
Хурама çумĕпе çĕкленеттĕм.
Ун çулçи ăшĕнче, кайиччен,
Кайăксем те тем чуль пытанатчĕç.
Туратсем те вĕрен явнă пек
Пĕр-пĕрин вуллипе çыхланатчĕç...
Çыхăнтарнă пулех çав пире
Хурама тӳпери тĕнчепе?
Çавăнпа пырса ларнă унта
Хура халăх юлхав апата...
Васкамасăр ларсассăн çапла,
Вăй илессĕн çемçе сулхăнта
Ĕçе тухнă та çутă уя...
Пулнă пуль вăл чăнах та уяв?
Анчах вăл халь çав чăнлăх ăçта?–
Курăнмасть çут уйра хурама та!

* * *

Пахчара пурччĕ пĕр хĕвелçаврăнăш.
Вăл пиçсе çитессе питĕ кĕтнĕччĕ...
Акă çитрĕ те сар кĕркуннe
Пиçсе çитнĕ хура вăррине
Пĕр кĕсье пуçтарап çаврипе...

Авринчен автомат ӑсталап,
Пуҫӗнчен лайӑх диск пулать...
Кунӗпе шӑп выртан Йӑлӑмкас
Шатӑр-шатӑр! тӑвать пӗр кас.
Авӑкран эп вӑрҫса ывӑнап,
Хӗвелҫаврӑнӑш пек шӑп выртап.
Аллӑмра ман хура вӑрри,
Эп шутлатӑп, пулать пульли...
Ак вӑрҫас вӑхӑт тепӗр ҫитет,
Ах, анчах кӑшт ҫиес те килет.
Ҫаварта пульлине хатӗрлеп,
Тӑшмана хуппипе ҫеҫ переп...

***

Урамра симӗс курӑк.
Курӑк пек эпир пӗчӗк.
Курӑка та ҫулма
Ҫамӑл мар пулмалла?
Пӗчӗк ҫеҫ урапи –
Вӑл та пысӑк пекех!
Турттаран ут купи
Курӑнать лав пекех.
Ҫул ҫинчи ланкашки
Тинӗс пек туйӑнать.
Тайӑлать те ӳкет –
Тиеме халь тивет!?
Качака путекки
Килте питӗ кӗтет...
Урамри симӗс курӑк
Май таран ӳснӗ пек.
Кам ӑна халь татать,
Питӗ пысӑк пулать.

***

Ача чухне эпӗ шутлаттӑм:
«Ҫумӑр ҫӑвать тӗнче тавра!».
Ял хӗррине чупса тухаттӑм...
Чупса тухаттӑм та куратӑм
Тусан ҫӗкленнине кӑна...
Ун чух тусанлӑрах таратчӗ,
Ҫумри те хытӑрах ҫӑватчӗ
Ҫӗре ҫапса мӗн пур вӑйран.

Кайран юхатчӗ ҫаврӑнса,
Канавсенчен тулса тухса...
Ун чух нимрен те хӑрамасӑр
Тухаттӑмӑр шыв ҫул уҫма...
Ак вӑйлӑ шыв юхса анать,
Анкартине те час ҫурать!..
Юлаттӑр вӗт паранксӑрах!
Ун чух ҫав пӗчӗккӗ пулса!
Тухса чупаттӑмӑр суртран,
Ӳсесчӗ-ха тесе, ҫарран.
«Ҫу, ҫумӑр!» – каласа такмак
Парасшӑн пулнӑ ҫу пӑртак.
Ача чухне ҫапла шутланӑ:
«Ҫумӑр ҫӑвать тӗнче тавра!»
Тӗнче хӗрне те утса тухрӑм.
Тӗнче хӗрне ҫитсен вӗт халь те
Вӗри кӗл выртнине курсан:
«Кунта мӗн ҫумӑр тӑкӑнман та!
Мӗн-ма?–тесе пӑхса тӑрап, –
Ик тӗнчерен пӗри – тусан?».

***

Тӗтреллӗ уй тӑрӑх ҫӳренӗ чухне
Темле мӗлкерен те хӑратӑн.
Юпа ларса юлнӑ та уй варрине
Куҫа курӑнать вӑр-хурахӑн!
Унччен те пулмарӗ – тапранчӗ капан, –
Ӑна вӗт хывсаччӗ хамӑр!
Унпа тӗл пулсассӑн сехре те хӑпать –
Пырать пек темле динозавр!
Пӗр тӗмеске... Вилтӑприччӗ унта, –
Вӑл пуррине те вӗт маннӑ!
Ҫӗр тӗрлӗ темле майракалӑ шуйттан
Ҫула пӳлсе лартрӗ кӗрт майлӑ...
Тем тӗрлӗ чӗрчун тӗтреллӗ уйра
Ман таврарах ҫӳрерӗҫ.
Эс вӗсенчен пурпӗрех ан хӑра,
Вӗсем никама та тивмерӗҫ.
Тӗтре сирӗлсен акӑ тухрӗҫ ума
Шуталвҫӑ юпа та, сурт евӗр капан та...
Вӗсем мӗнлине тимлесе эс сӑна –
Вара, тен, куратӑн хӑвна та!

* * *

Пăрлă кантăк витĕр
Сар хĕвел кĕрет.
Сар çу пек, шур илнĕ
Кантăк ирĕлет.

Эп пăхса ларатăп
Сивĕ пӳлĕмре.
Чӳрече, шутлатăп,
Ăшă кăмака.

Ун пекех шап-шурă,
Ун пекех вутра.
Ăшăнма тесессĕн,
Чĕпĕтет вара!

Пуриĕрех аван пек.
Ача пек ларап.
Шутласа ларсан та
Тем те курăнать!..

Сивĕ пӳлĕм урлă
Кун шуса иртет.
Кантăкри çак пурнăç
Ĕнтĕ те килет?

* * *

Ача чухне çисе ларатăм
Çăкан та çуллă майăрне.
Хама эп кайăк пек куратăм
Турат çинчен те вĕçнине.
Çисе тăранăп та, ак, ыррăн,
Çунат пек, сарăп алсене.
Унччен ӳкес килмест те хытăн
Тытса пăхап туратсене...
Эп çирĕпех тытса ларатăп,
Çăка майрин те хуппине
Чĕрнепеле сӳсе пăхатăп.
Унта, шалта мĕн пуррине,
Сар хуппине сирсен, куратăп...
Пит выçă пулнă, çавăнпа та
Апат эп тупнă тĕшшинче.

Тута ҫинчен кайман тупа та
Юлса пуль ҫав туратсенче.
Вĕсем халь ўснĕ питĕ пысăк,
Пўртлĕх касма та пуль юрать.
Эпĕ вара пуҫа-ши усрăм,
Ун умĕнче пăхса тăрап.
Ҫăка, тепре мана хăпарт-ха
Тĕнчен чи ҫўллĕ тăррине,
Ху мăйăрна татма май пар-ха –
Ытла пĕлмерĕм туллине.
Тем чухлĕ пуль апат эп ҫинĕ,
Таҫта ҫўренĕ аташса.
Кунтах пĕрех эп утса ҫитнĕ,
Тăрап ача пек савăнса.
Халь ĕнтĕ ак ҫисе ларатăп
Ҫăкан та ҫуллă мăйăрне.
Хама та кайăк пек куратăп
Турат ҫинчен те вĕҫнине!

***

Халь ăҫта-ши ҫав кăкшăм,
Туллиех сивĕ шыв.
Тăкасран питĕ шăппăн
Эс ăна йăтса пыр...
Питĕ шăрăх тăратчĕ...
Шывсăр ҫĕр те ҫунать!
Анне тырă выратчĕ,
Вăл мĕнле-ши чăтать?
Уйри ҫул кĕл пекехчĕ,
Кăшт пуссан та юхать.
Хăмăл хытă чикетчĕ –
Ман ура астăвать!
Халь ăҫта-ши ҫав кăкшăм
Тăкрĕ сулхăн шывне?
Ăна ĕҫнĕ чух ăшшăн
Йăлл кулатчĕ анне.
Йăл илеттĕм эп хам та
Ăна ĕҫнĕ чухне.
Шалта кăшт курăнатчĕ
Эпĕ йăтнă тĕнче...
Халь ăҫта-ши ҫав кăкшăм,
Ванса кайрĕ-ши чанк?

Уйра чавнӑ чух ваккӑн
Тӑм татки тупӑнать...
Ҫавна шӑпӑн ҫӗклетӗп:
Кӑкшӑм пек туйӑнать.
Тепӗр хут пек ӗҫетӗп –
Анчах ӑшӑм канмасть!

***

Ача чухне хӑйне пӗр ушкӑн
Ҫӳреттӗмӗр ҫӗр ҫавӑрса,
Каҫаттӑмӑр ҫич ҫырма урлӑ,
Тухаттӑмӑр ҫап-ҫут уя..
Миҫе хутчен ҫапла ир-каҫӑн
Танкканӑ-ши эпир шкула?
Ҫав ҫул ҫинчех эпир шуйланӑ
Пысӑк ҫынсем пулса тухма.
Ирпе-ирех сӗм тӗттӗмпе
Эпир утаттӑмӑр пӗрле.
Темле хут-картонран туса,
Ҫутса яраттӑмӑр ҫурта.
Кӑштах сапсан керосинпа
Ҫунса каятӑн ху та!
Пыраттӑмӑр вара кулса,
Кашкӑрсенчен кӑшт хӑраса...
Тӗнче варне хунӑ пекех,
Шӑнса кӳтсен, Тӑвай катин
Ҫунатчӗ ҫумӗнче кӑвайт...
Тавра ларса тухаттӑмӑр,
Алӑсене тӑсаттӑмӑр...
Ҫавна манмастпӑр нихҫан та.
Ҫав кӑвайт тӗпӗ халь те пур:
Ман чӗрере вӑл е уйра?–
Ӑна тупсан, пурнатӑп-ха!

***

Ҫурхи питӗ лӑпкӑ ир
Хӗвел сапса тухрӗ сар вир.
Вир сапнӑ сарай тӑррине
Ҫӳрет кӑвакарчӑн... ҫисе.
Пӗр-иккӗ сӑхать те пӑхать,
Хӑй мӑшӑрне йыхӑрать...
«Мӗн чухлӗ тет вир кунта

Такам сăварса çĕр хута!».
Каллех ак пăхать те сăхать,
Тĕнче майĕпен вăранать...
Эх, ман та çав кайăк пекрех
Çÿресчĕ вир сапнă çĕртех!..
Анчах эпĕ кайăк мар.
Ун пек эпĕ выçă та мар!
Çапах та, курап, лăпкă ир
Хĕвел сапса тухрĕ сар вир.
Çÿлте кăвакарчăн çÿрет,
Çав сарă вире çиет...

***

Пĕчĕккĕ те, пĕчĕк мар та
Çÿретĕп чупса урамра.
Пушмакĕ тавраш кирлĕ мар та
Чупма питĕ лайăх вара.
Ак эпĕ чупса анса кайрăм
Пĕр пĕчĕк çырма хĕррине,
Шур чул айĕнчен кăлартăм
Çап-çутă çырма пуллине...
Пулли питĕ лайăх та ятăм, –
Çÿретĕр ишсе шыврах!
Чĕр курăк та татса паттăм –
Çиссен вăл ÿсет хăвăртрах!
Кайран ак кунсем иртсе кайрĕç,
Хĕл ларчĕ шап-шур айлăма...
Çырма тĕпĕпе пăр карнă,
Пит лайăх шуçкалама...
Шуса та пырсассăн ÿкетĕн,
Куратăн шывра, аялта,
Аквариум пек ÿкерчĕк –
Ман пулă çÿрет çавăнта!
Юрать эп ăна тытмарăм!
Çÿренĕ те вăл шывра
Пÿ хушнă тепре курăнмалăх –
Мана та вăл халь курать!
Курать пуль-ха – эп выртатăп.
Курать пуль-ха – эп сăнап.
Курать пуль-ха – эп чупатăп,
Çырма хĕррине анап...

***

Аслати килсе шаккарĕ
Хупă кантăкран.
Урама тухма васкарăм
Ача пек, çарран.

Кĕмсĕрт-кĕмсĕрт вăл çÿрерĕ
Пĕлĕт хушшипе.
Урамри çĕре йĕпетрĕ
Хай куççулĕпе.

Урине-ши вăл амантнă,
Питĕ уксахлать.
Çиллине шывпа шăварнăн,
Кăшт мăкăртатать.

Куçне чăрр! уçса илет те
Çиçĕм ялт! çиçет.
Çумăрпа тепей килет те
Çумăрпах пĕтет.

***

Ванса пĕтнĕ шкул çуртне
Куç умне тухса тăчĕ.
Ĕлĕкхи пек ик хутлă,
Вăл темле суккăр куçлă...
Ун тавра йывăçсем те
Эпирех лартнисем пек...
Ах, анчах та хăрарăм,
Улăхса пăхаймарăм...
Эп вĕреннĕ шкул çурчĕн
Чÿречи ванса пĕтнĕ,
Илтĕнмест тек сасси те...
Илĕрмест тек тетте пек
Шкул ачин кĕнеки те...
Унта ларнă пĕр парта
Пулнă ман хушаматлă...
Çуннă пуль тен вăл вутлăн,
Е таçта ванса выртнă...
Халь шалта ним те çук...
Ванса пĕтнĕ шкул çурчĕ
Чунăма хускатмарĕ.

Эп унпа пулнă чух
Вăхăт тек васкатмарĕ...
Суккăр куçлă та чунлă
Юр çутиллĕ çул урлă
Пушă çурт эпĕ куртăм...

***

Кашни çулах, яла канма килессĕн,
Анатăп эп кил хыçĕнчи çăлкуç патне.
Çав çăлкуçран, пуçа тайса сив шыв ĕçессĕн,
Туятăп пек Нишер сырми чунне...
Вăл чăн анне пекех мана вĕт супăрланă,
Çитернĕ кашличне те, панă пуллине.
Çуркуннепе йăмра тăрне хăпартнă
Ĕмсе лармашкăн туглă çеçкине...
Е шăхличне пĕр тураттран касса кăларнă –
Çĕр тĕрлĕ кĕвĕ те каланă пуль, ара.
Пит вăйлă çумăрта пĕве сыхланă –
Шыв юхнă вăхăтра хăранă таласран...
Çапла сырма тĕпне çăлкуç патне анатăп,
Туятăп тепĕр хут хама ача пекрех.
Çак сырмаран каймас тесе тупа тăватăп –
Çырма тăвать чуна чипертерех!

***

Юр хĕвсе лартнă февраль
Темĕскер ĕнтĕ халь кăтартать.
Çанталăк пит сивĕ тăрать,
Çĕр пичĕ пуль питĕ шăнать...
Çапах та юр çунă чухне
Кăштах урăхла та пулать.
Юр çунă чухне пĕр ача
Юртан йăвалать Юрача!
Юр уншăн халь ним те мар.
Ăна вăл ун-кун уналать, –
Вăл хăй те темле курăнать!
Вăл Турă пек ак айванла
Туса тупарать те ача...
Чăлпарр! саланаççĕ вара
Юртан йăваланă сынсем...
Ытла та пит сивĕ тăрать –
Кам халĕ çапла хăтланать?
Юр хĕвсе лартнă февраль

Пачах урăхла пуранать!
Вăл халь хăй çине илет те
Сивве тепĕр май çавăрать.
Хĕл сивĕ тăрсан, çулла тет,
Çулла вара ăшă пулать.
Тен, паянтан сив февраль
Çавăншăн çеç тăрăшать?

* * *

Пĕр ывăç пулсан кашличĕ
Ирхи апат пулчĕ те...
Шик! турĕ кайăк-шăхличĕ,
Апат тунине курчĕ те
Пычĕ те ларчĕ...
Çӳрет-ха утса сукмак тăрăх,
Пĕрре те хăрамасть.
Кашлич пиг ыйтать пулсан та
Пĕрех эп ăна памас.
Эп хам та паян пиĕ выçă.
Тен эп эрнипех çимен?
Çак кайăк пек каллĕ-маллĕ
Кунта та утса çӳремен!..
Ăна мĕн? Вăл вĕçнĕ те кайнă...
Хăйне валли вăл тупать!..
А, эп вара пĕчĕк ача пек
Юлап çав сукмак çинчех...
Кашлич тутанса пăхсан ак
Чупса, тен, анап та сăртран,
Çырма хĕрринех тухатăп,
Çав кайăка та шуйхатăп...
Пĕр ывăç кăначчĕ кашличĕ –
Ирхи апат пулчĕ те!
Ши! турĕ кайăк-шăхличĕ,
Апат пĕтнине курчĕ те
Вĕçрĕ те кайрĕ...

* * *

Пурчĕ пек пахчара пĕр чечек.
Çав чечек асăма килет.
Сар куçне хĕвелпе чăлт уçатчĕ,
Хĕвелпе каçхине шăп хупатчĕ...
Эп вара çавăнтан тĕлĕнеттĕм,

Чечек пек пулнине те пĕлместĕм...
Халь тин ĕнтĕ эп хам та чечек,
Куç хупма манăн вăхăт çитет...
Пурпĕрех, куç курать, пĕр чечек
Пахчара çеçке çурчĕ пек...

* * *

Çутă кĕтме тытăнатăп
Эпĕ Çĕн çул çитесле...
Пĕчĕк пĕр елка лартатăп –
Чăрăш çути килтĕрех!

Килтĕр-ха, тетĕп, çав чăрăш,
Кĕтĕр-ха, тетĕп, шăрши.
Эпĕ пулса пуль, тен, чăркăш?
Халь, ак, пулам Хĕл Мучи!

Пулăп та – чăрăш та ларĕ
Хăй куççульне кăларса.
Кам-ха мана халь каларĕ –
«Чăрăш пек зоĕ таса!»

Чăрăш пек, чăн та, ларатăп.
Чăрăш пек, чăн та, пĕтеп...
Пĕчĕк хунар çутса ярăп –
Эпĕ сана вĕт кĕтеп!

Эпĕ сана вĕт кĕтетĕп.
Пулăн-ха, тен, кун çути?
Тен, çавăнпа та пĕлетĕп
Чăрăш лартма каç пулгти.

* * *

Таçтан ачалăхран пĕр туйăм
Вĕçсе хăпарчĕ çăлтăрсем таран.
Часах Çĕн çул çитет те, курăн,
Мĕнле хальтаранччен зоĕ айван.
Каллех кĕтетĕн, Хĕл Мучи килет те
Парне парать сана телейлĕ пек пулма.
Пĕр канихвет пулсан вара тивлет те
Çума пуçлать сан пуç çине тата...
Пĕр канихвет-и, тен, телей хăй тĕллĕн

Сан ăш-чике çурса кĕрет паян?
Килех, апла, Çĕн çул тĕлленнĕн,
Ача пулса кĕтсе илем сана тата.
Халь тин шăла çыртса эп тăмăп урăх.
Йăлтăрр! кулса ялтăп çăлтăр пек.
Халь тин каллех шур çырма тăрăх
Шуса иртетĕп йĕлтĕрпе ирпе...
Тăвайккисем тахçанхи пек яка-мĕн!
Мĕн чухлĕ ярăннă кунта ача чухне!
Мĕн-ма халь ярăнмаççĕ, эп пĕлместĕп.
Эп тухрăм-çке каллех çак йĕр çине!
Çапла пуль килчĕ Çĕнĕ çул саламĕ.
Эп тухрăм ярăнма çырма тĕпне.
Ай, шартарса куçа йăлтах пĕтерчĕ
Çĕн çул саламĕ юр çутипеле!

## ÇУТĂ ÇАНТАЛĂК

***

Халь-халь качча каяслăн
Хĕл хăй те вăтанать.
Халь-халь йĕрсе яраслăн
Çур кунĕ пуçланать.
Кĕтсе илме тухсассăн,
Кĕтме пит йывăр çав.
Çурхи кунра пĕр сассăр
Пĕр юрă янăрать.
Ăна никам та халĕ
Илтмест те пуль чăнах.
Янрать, янрать çĕр саслăн,
Савни юрри пекрех.
Кам юратма пĕлет-тĕк,
Çавна вĕт илтетех.
Халь-халь качча каяслăн
Хĕл хĕр пекех ларать.
Тен, çавăнпа хаваслăн
Тĕнче те халь тăрать?
Каях, каях хĕр пуçăн
Мĕн-ма тет лармалла?

Пулать чуну та пурҫӑн
Качча кайсан кӑна!

***

Юр таса мар та, пӑхма та унта...
Утма та хӑратӑп ҫул тӑрӑх.
Юр шывӗ пурах пулӗ ҫав ман юнра
Пите ҫил касать. Мана вара шӑрӑх.
Ҫурт тӑррисем те, авӑ, тарланӑ.
Кӗрле ҫисе ячӗ ӑш ҫил.
Пӗр авӑк кӑна хӗлшӗн хурлантӑм.
Ҫур кунӗ килесмччӗ, кил!

***

Вӑрттӑн ҫеҫ кӗтесри пӗр чечек
Кӗтсе илчӗ пире ирпе.
Тен, хӗвел тухасса вӑл пӗлмен те,
Куҫне хупнӑ йӑлтах пӗтесле...
Ан хӑра тӗл пулу пӗтесрен,
Чун пӗтмест нихӑҫан, кӗтнӗҫем
Вӑл татах та ӳсет ӳснӗҫем.
Ак, хӗвелӗ килсен, уҫса ярӑн куҫна...
Тен, туна те тӳрленӗ кӑштах?
Каҫхине хупласа шур чечек хӑй питне –
Халь тинех хӗвел пек савӑнать!

***

Темле пӗр хӳхӗмлӗх, тасалӑх...
Мӗн ӗлӗкрен килен пӗр сас
Ман чӗрене хып кӑтӑкларӗ:
Ҫурхи куккук пек мӗн калас?

Тепре чухне ҫурхи кун майлӑ
Чунра хӗвел хуҫаланать.
Тахҫан-тахҫан манса хӑварнӑ
Телей тени те тупӑнать!

Ем-ешӗл тумлӑ ҫут ҫанталӑк.
Туррӑн пекех... куккук сасси.
Каллех тепре те таврӑнас-тӑк, –
Пулатӑп хам та хур аҫи!

***

Çапçута уйăх тĕлеречĕ,
Шаншур çеçке çерем çинче.
Çыр тĕпĕнчи шыв иптĕнетчĕ
Кулăс сасси пек пит инçе...
Кĕтмен çĕртен ак çумăр иртрĕ
Хуралтăсенĕн çийĕпе.
Пĕрле тăмалăх вăхăт çитрĕ
Шыв юхнăçем хăй çулĕпе...
Унтан каллех ак уйăх тухрĕ,
Унпа пĕрле çут çăлтăрсем...
Çырма каллех пĕр майăн юхрĕ
Кайма та вăхăт çитнĕçем...
Сыв пул, апла, тулли çырмаçăм!
Сыв пул, шапшурă улмуççи!
Çыр хĕррине тухса лармасăр
Çеçке тăкаймăп терĕнши?

***

Тахçанах эпĕ çырманччĕ
Сар хĕвел çинчен.
Уйăх тăршшипех кайманччĕ
Пĕлĕт питĕнчен.
Акă халĕ питĕ лайăх
Сар хĕвел пăхать.
Сар хĕвел пăхсан çанталăк
Кăштă вăранать.
Манăн чун та кăшт вăранчĕ
Пурнăç ыйхинчен.
Çут тумла пулса тумларĕ
Шур пӳрт тăррипчен.

***

Çутă çанталăкăм манăн,
Юр айĕнчи сивĕ çĕр!
Мансăр епле пурăнатăн,
Çу килессе кĕтнĕçем.
Çитĕ ак санăн та вăхăт,
Кайĕ шур юр сан çинчен.
Сывлăн вара эсĕ тутлăн
Тепĕр сив хĕл лариччен.
Час ак килсе эсĕ тапăн
Уçă хура кăкăра...

Ăшă сăмах та калăн,
Ирпе сар хĕвел пек пулса.
Тухĕ ҫие ҫĕн ҫĕр йышĕ,
Пулĕ апат – тупата.
Эсĕ ҫĕре те кышлăн,
Хырăм выҫсан – мĕн тата?
Ҫĕр вăл анне пек туллă,
Ҫийĕр тăраничченl
Ҫавна курса тăнă турă
Савĕ пире – кайиччен.

***

Ҫăва кĕретпĕр пулинех...
Кĕтретлĕ пек юр кĕрчĕсем:
Юлашкисем ҫеҫ ҫырмара,
Шыв юхтараҫҫĕ пĕтнĕҫем.
Пул шыв пек эс таса та сутă,
Пуҫа тайса эс ут ҫил пек.
Хĕвел пекех кĕтретлĕ ҫу та
Вара килет пуль папка пек.

***

Куртăм-ха, куртăм... Хăва ҫеҫкере.
Анчах та пымарăм, пăхмарăм...
Хама эпĕ туйрăм, паллах, чиперех.
Анчах та, шутлатăп, ҫухатрăм.
Пырасчĕ теп-ха, ҫеҫке, сан пата.
Эс кăпăшка, шаппшурă, таса...
Санпа та пулсассăн, кăштă кăна
Пил парĕ мана хăван пĕр турачĕ...
Ҫил майăн сулса мана та ăсатĕ.
Вара эпĕ кайăп чунпа савăнса.
Ара, ҫеҫке ҫурнă хăван сăн-сăпачĕ
Манра та пур пулĕ? Сăна эс ҫавна!
Ҫавна та курсассăн, туратăн хăвачĕ
Чăнах та упранĕ санра малашра.
Халь тин вара эсĕ мĕн-ма-ха айванлăн
Пăхса иртсе кайрăн унран?

***

Пĕтрĕ ҫеҫке ҫумăрпа тăкăнса.
Пĕтрĕ... Сарма кирлĕ марччĕ, аппа!

Эп пĕлнĕ ăна, çапла пуласса...
Сарнă çеçке пек çунат çунасса...
Хурт пырса ларĕ, шырĕ, тен, пыл?..
Анчах сивĕре мĕн ĕнтĕ пур?
Юхрĕ куççуль пек çумăр кăна.
Юхрĕ те юхрĕ... Ăçта çавăнта
Чăтăн-ха ĕнтĕ çапла пурнăçа?
Пĕтрĕ çеçке татăлса çумăрпа.
Пĕтнĕ тесе, вăл выртмасть хуралса!
Шуррăн та шуррăн, тен, тепĕр чух
Кама та пулин илĕртет тепĕр хут?
Пĕтмен-ха, теме те, чăн та, пулать –
Çĕмĕрт çеçкиллĕ çул вăрттăн выртать.

***

Пĕрре çуркунне систерчĕ темскер...
Килтерчĕ куçа хупахăн çеçки,
Таçтан тупăнать вĕт çавăн пекки!
Вăл тухнă тапса çак ăшă ирпе
Пуçне сулса илчĕ... Акă тĕнче!
Апла, пурăнатпăр-ха эпĕр тепре!

***

Йăмра симĕсленнĕ, атьсем!
Хурăн та кăшт кăчкăланнă...
Тен, çавăнпа тĕксĕмленнĕ куçсем
Çĕн ĕмĕтпе кăварланнă?
Çисрĕç те çисрĕç... Кулă тата!
Кулă таçтан сиксе тухрĕ.
Тополь çулçи пуль ман куç, тупата!
Кулă вара – лĕпĕш вĕçевĕ!
Пурте пур пулĕ... Ку çуркунне
Ман кăмăла тивĕçтерчĕ.
Атьăр, атьсем, тухар ун умне!
Пире вăл кашлича çитертĕр!
Ас тăвăр, эпĕр ерпе ирпеле
Кĕтӳ пек уя та тухаттăмăр!
Унта тĕрлĕ тĕслĕ кăшкар усетех.
Эпир çавăнпа тăранаттăмăр...
Халь те çавнах вĕт кĕтетпĕр!
Атьăр, шăхличĕ туса пĕр кана
Шăхлич каласа вĕçетпĕр.

Илтчĕр мĕн пур кайăксем таврара –
Килнĕ «шăхлич» ку, тетчĕр.

***

Çулçă татрăм, тытса пăхрăм
Çут хĕвел çине.
Тĕнчесем тапса тухаççĕ
Симĕс авăртан.
Вĕлтĕр-вĕлтĕр симĕс çулçă
Куçлăхран аван.
Çулçă витĕр куртăм пурнăç. –
Курăнать таса.
Аякран таçтан хăпарчĕ
Сар хĕвел тата.
Ак, тата кунта тем сырнă,
Шăпана пĕлсе.
Пĕр çулпа утса пăхасчĕ,
Чăн çăтмах тесе...
Пăхрăм-пăхрăм çулçă витĕр,
Куртăм чăн тĕнче.
Пурăнатăп эпĕ халĕ
Çулçă ăшĕнче.

***

Сывă-и, ешĕллĕ суртăм,
Килтĕм санпа тĕл пулма.
Пултăн эс маншăн чăн турă
Манăн чуна çутатма.
Юр выртнă чух эс пушшех те
Симĕсчĕ, чăн та, ытла.
Халĕ вара, кĕçех, тен,
Пуçлăн турат хушма?
Сан айăнта питĕ хăтлă –
Çурĕ тăрри йĕкелсем.
Пулчĕç пакшашăн туплă
Хĕл тăршшипе çимĕçсем.
Пулчĕ вăл маншăн та чаплă.
Елка пекех халь ларан...
Саншăн çак çурт темĕнле те,
Маншăн вара – пĕр тĕнче!

***

Пĕр вăхăт çу уйăхĕ чаплă.

Садлă пахча çеçкере.
Пыл хурчĕ сĕрлет хаваслăн.
Çав сасă халь – чĕрере.
Тепре тем, мĕнне пĕлместĕн,
Çурçĕр килсе амантать.
Çурçĕр енчен çил вĕресессĕн,
Сад ман шăнсах ларать...
Пыл хурчĕ те сас памарĕ,
Çеçке тăкăнать çĕре...
Апла та, мĕн-ма хаваслăн
Тапать ман чĕре тепре?
Ку паллă, тен, эс те пĕлетĕн?
Килет ку çу кунĕ ирпе.
Çавна халĕ эп кĕтетĕп –
Çу кунĕн ун хăйĕн ташши!

* * *

Çакă тĕнчен сив куççулĕ
Хĕл тăршшĕнче пухăнать.
Çутă та ăшă çуркунĕн
Пÿрт тăрринчен тумлать.

Çав ĕнтĕ хитре хĕл куççулĕ,
Юхсассăн, чĕре тулать.
Калăн, темле ăслă юмăç
Хăй шухăшне шутлать.

Эпĕ те ăслă пулас пек
Çав çут шыва ĕçеп,
Тĕнче пĕтнине курман пек
Çÿлте вăртгăн çех вĕçеп.

Тĕнче пĕтнĕ чух асамлă
Çурхи сутăпа тулать.
Куççуль юхнă чух, паллă,
Чун тасалсах пырать!

* * *

Хĕвел сив хĕле тĕрĕслерĕ:
Хĕл-мĕн хытах та мар!
Çил те ача пек çÿрерĕ –

Ăна та халь хĕл кирлĕ мар!
Шăпăр! та шăпăр! тумларĕ
Пӳрт тăрринчен тумла.
Ваштăр! та ваштăр! сулларĕ
Хура тăрриие хăва...
Мĕн кирлĕ, халь пурте хатĕр
Çурхи пĕр йăва çаварма.
Хĕвел те, çил те çавхатĕр
Килеç-тĕр ниме тума...
Ачашшăн сив çил килет те
Ăшшăн пăхать хĕвел.
Чĕре тиха пек ĕрĕхет те
Тăрать кăкăрта чĕвен...

***

Тумлам тумлать асăрханулллăн:
Кĕтсе тăрать те пат! тăвать.
Пат! тусанах темле хăрушшăн
Тĕнче кисренсĕн туйăнать.
Çĕре çав ӳкнĕ çут тумламăн
Ванса каять пуль ман чĕре те?
Ха-ха! кулса тăрать тĕнче.
Вăл кулнăçем, пӳрт тăрринчен,
Пĕр вăхăт шăп тăрсан-тăрсан,
Шăпăрр! тусах пăр тăкăнать...
Чĕре вара, тем, савăна-а-ать!

***

Ем-ешĕл йывăç сырмара
Шуглать пуль çулçине сарса...
Мĕн-ма, тет, сивĕ çырмара
Юрсем выртаççĕ, шыв юхать...
Пулмасть-им сăрталла туха,
Çĕн пурнăçа та пуçлама?
Пĕлмест-ха вăл айван пуçпа
Сăртра хуçаланан вăя.
Шуглать-ши, ку çырма суя!
Çук, суя мар. Ку чăн çырма!
Чăн пурнăç никĕсĕ кунта!
Пуçла эс пурнăç çырмара.
Çак çырмаран тухан сăрта!

* * *

Юман йӑраланать аран-аран...
Вӑл васкамасть. Вӑл пиҫлӗх ҫуллӑх.
Ҫулсем иртсен кайран-кайран...
Тимӗрленсе ҫитет тӑпраллӑн,
Чӑн пурнӑҫлӑ пулса тӑрать.
Тен, эпӗр те ҫаплах пуль пулнӑ,
Ҫӗр ӗҫӗпе те ӳснӗҫем.
Юман пекех эпир те ӗмнӗ
Хура тӑпра сипетлӗхне...
Тӑпра ҫисе юман пек пулнӑ
Пинсем ҫулсем те тӑршшӗпе.
Юман пекех эпир те халӗ
Йӑралантӑр ҫӗр ҫинче.
Турат ҫумне турат хушаттӑр
Тӗнче юманланать тесе!

* * *

Хурама ҫеҫки ҫинчен ҫырман эп.
Эп ӑна курман та халиччен.
Курсанах вара тем пек килентӗм,
Пуянлантӑм эп те йывӑҫ пек.
Ун ҫеҫки, пӑхсан, пӗр ҫӑлтӑр майлӑ
Ҫавракша ҫеҫ пӗчӗк куҫ кӗски.
Ун ҫине пӑхса хӑвна тупсассӑн,
Эсӗ пулӑн ху та ҫын тӗнчи.

* * *

Тӳпере темле йывӑҫ пур.
Ларать тепӗр чух ҫеҫкере.
Шӑнтса пӑрахсан тепӗр чух
Тӑкать ҫеҫкине ҫӗр ҫине.

* * *

Ку сивӗ ҫумӑр кӗрхи пек
Ҫӑвать эрнипелех.
Пырса пӑхсассӑн, чиперех
Ларать-ха ман чие.
Ҫапах та йывӑр пуль ӑна
Ҫак сивӗре ҫеҫке ҫурма?
Унпа пӗрле пӑшӑрханса
Тӑратӑп чунӑма ҫурса...

Мĕн тăвăттăм эп халь сана,
Сана çеç хӳтĕлес тесе?
Çумăр çăвать çеçке çурсан.
Пулас-и хам çеçке?
Ах, тур! Ах, сивĕ те иккен
Ку сивĕре ларма.
Ку тĕнчере эп сĕм пĕччен
Пĕлейĕтнши çурма.
Вĕт халĕ чие пек ларса
Çеçке çурни çеç мар.
Çак сивĕ çумăра чăтса
Кăштах чăмăртанар!
Кайран кăштах чăн çу çитсен,
Хĕрлĕ çырла пекрех
Хĕвел çинче пиçсе çитсен –
Чĕре патнех çитер!

***

Канăçлă пурнăçăм манăн
Пур пек тасча çакăнта.
Пултăм тин çеç вĕçсе аннăн
Юр пек çемçе те таса.
Ӳкрĕм ак вăрттăн пĕр сассăр,
Час çухалатăп пулас.
Сарă чечек çакна кĕтнĕн
Кăшт сарăлать татах.

***

Хитрелĕх пур çав тĕнчере,
Эс ху хитре килсессĕн.
Тĕнче усать хăйĕн чунне
Хăйне те парнелеспĕн.
Йăлл! кулса пăх та, тĕкĕр пек
Хăвна эс кăтартатăн
Çак çӳллĕ йăрăс хурăнра...
Таçта тарса пытанасла
Кăлтăртатса кулан тата!
Ыр ĕç тăвас пек шухăшлатăн...
Çавăн чухне тĕнче хаваслăн
Ырăланать хăй чĕрипе...
Тĕнче сан пек лайăхланать-тĕк,
Эс ху та лайăхрах пулан.
Кулах, тăван, эс ырăланă

Тӗнче ҫуралнине курап!

* * *

Тӗнче сӗмӗ хӑвӑнра-мӗн...
Мӗн санра, ӑт, ҫавӑ пур!
Ҫак чӑна эпир пӗлместпӗр,
Тем шыраттпӑр ютӑра...
Тухсан тух эс, хӑватланнӑ
Ӑш-чикри пӗр тӗнчепе.
Вара курӑн, тӗнче, чӑн та,
Уялать сан чӗрене!

* * *

Хӗвел пӑхса тӑчӗ вӑрттӑн.
Алли унӑн питӗ вӑрӑм.
Юман ҫулҫине ачашларӗ...
Юман чылайччен шарламарӗ.
Юман айӗнче питӗ сулхӑн.
Туни ҫумнерех эсӗ сулӑн!
Тӑрать вӗрене питӗ тӑп,
Вӑрман калаҫать питӗ шӑп.
Нихҫан та пулман кун пек лӑпкӑ.
Усалӗ пиртен йӑлтах хӑпрӗ.
Халь ӗнтӗ эпир те вӑйлӑ,
Вӑрман пекех ырӑ сайлӑ.
Епле вӗрене йӑрӑс пӳллӗ,
Унпа юнашар эс те ҫӳллӗ.
Ҫук теҫҫӗ хӗвелӗн ӑс-тӑнӗ –
Епле вӑл пире пӑхса тӑчӗ!
Алли унӑн халь питӗ вӑрӑм.
Пире тытас пек хыпашларӗ.
Эпир халӗ пултӑмӑр вӑрӑ.
Вӑрман пурпӗрех шарламарӗ.
Пире хӗвелтен вӑл пытарчӗ.
Хӗвелӗ те ӗнтӗ кӑшт тарчӗ.
Эпир те иртетпӗр ҫумӗн.
Юман тӑрса юлчӗ сумлӑн.

* * *

Ҫӳлте шур кутсем вӗҫеҫҫӗ,
Хӗвел анасса кӗтеҫҫӗ.
Кун кӑшт ывӑнса ҫитнӗ –
Ҫӗре сутӑпа витнӗ.

Çав сутă пекех çунатлă
Вĕçесчĕ çĕр çийĕн ынатлă.
Çÿлте пуль унта çул аслă.
Хĕвел те пăхать хаваслă.

Хĕвел кунĕпех пăхса ларчĕ.
Пĕр чĕпĕ пусса кăларчĕ.
Çав чĕпĕ ман чун-ши пулать –
Чĕкеç çавăнпа савăнать!

Сар чĕпĕ пекех ман пуласчĕ,
Шур кут пек çÿлте явăнасчĕ.
Чĕкеç çавăнта пурăнать,
Çÿлте сутăпа çăвăнать.

* * *

Сар вĕрене хĕлĕпех вăраллă ларчĕ.
Хĕл кунĕ хăйне пĕр пасар.
Юр çийĕпе вăрă сарчĕ,
Çил те çÿретчĕ пит ясар.

Çур кунĕ те килчĕ пит хăвăрт
Выртрĕ хура çĕр тавра.
Çил ачисем пулчĕç кăшт шăпăрт.
Пуçларĕç унтан çавăрма...

Эпĕ те кĕтĕм çав çаврана.
Пĕр вăррине сыртса пăхрăм.
Йÿçĕ-пылак çак пурнăçа
Сар вĕрене пек сыртăм.

* * *

Каçарсам, аякра та пулсан,
Сасă пулчĕ таçтан.
Хĕлĕпех хуçаланчĕ тăман...
Шурă кăчкă паян.
Асăрхарăм аран.
Хуралса хыпса ларнă хуппи –
Çав тĕлте пулчĕ пуль çул юппи!
Аса илтĕм сана, чун уççи.
Эпĕ хам та халь вут пуççи!
Кăмрăкланнă тĕлте шур папка.

Хупӑланнӑ тӗлте симӗс тӗс.
Каҫарсам, аякра та пулсан,
Хӗлӗпех куҫ курман...
Эп сана уяман.
Асӑрхарӑм аран.

* * *

Утрӑм та утрӑм утма ҫулпала,
Ҫатрӑм та ҫатрӑм ҫурхи сывлӑша.
Шыв пек капланнӑ ҫурхи шухӑша
Ҫил вӗҫтерет касҳи уҫлӑха.

Хурӑн пуҫ тайрӗ пӳрт умӗнче.
Кӗтӗм те ӳкрӗм урам ытамне.
Инҫет сиҫсе илчӗ ҫул вӗҫӗнче.
Пӗлеттӗм-ха эпӗ телейӗм тӗлне!

Ҫап-ҫутӑ пӗр ҫӑлтӑр тӗнче варринче.
Тем пек йыхӑрсан та ямасть яхӑнне.
Ҫӗр тӗрлӗ пӗр шухӑш тытап касҫенче.
Пӗлеттӗм-ха эпӗ телейӗм тӗлне!

Тулли шурӑ уйӑх шӑвать тӳпере.
Ҫурхи уҫӑ сывлӑш лӑпкать чӗрене.
Пыл хурчӗ пит туллӑн сӑхать чечеке.
Пӗлеттӗм-ха эпӗ телейӗм тӗлне!

* * *

Хӗл кунӗпе тӗл пулчӗ ҫур кунӗ.
Юр килсе пачӗ шап-шур.
Шурӑ хурӑнӑн симӗс юнӗ
Ҫулҫӑ пекрех темле симӗс пӑр.
Хурӑн ҫӳлте те, сыхланма пӗлмерӗ.
Турачӗсем тулли шурӑ юр.
Аяла вара пӗр юр та ӳкмерӗ.
Хурӑн тавра симӗс ҫерем пур.
Юр та, тӗрӗссипе, хурӑна упрарӗ.
Шупӑр пекех хурӑна хуплать.
Сивӗ пулсан та шӑнма памарӗ.
Апла, халь пурӑнма пулать.
Хӗл иртӗ те каллех ҫур кунӗ
Вӑратӗ шӑннӑ хурӑна.
Ун ҫиййӗнчи сип-симӗс тумӗ

Каллех хускатӗ ман чуна.

***

Хӗвел шӑтса тухрӗ куракӑ пулса.
Тӑстан тапса тухрӗҫ сӑртсем!
Пӗр айлӑм питех те асамлӑ вырӑтса,
Унта халь юхаҫҫӗ юр шывсем...
Хӗвел хӑйне курчӗ тӗнче питӗнче,
Ачашшӑн чуп турӗ ҫӗр кӑкӑрне.
Самант тапса тухрӗҫ кӑтра хурӑнсем,
Хӗвел пекех ҫунчӗҫ ҫап-ҫут пӗвесем.
Хӗвел хытӑрах, хытӑрах юрататӑ,
Ҫӗр тӑрӑх юр шывӗ юхать те юхать,
Тӳпе тӑрринчен сар хӗвелӗ ҫӑвать.
Халь ӗнтӗ кун пулчӗ, тӗнче халь пулать,
Хура ҫӗр халь хӑй те ача ҫуратать!

***

Ҫакӑ тӗнчен сив куҫҫулӗ
Хӗл кунӗнче пухӑнать.
Ҫутӑ та ӑшӑ ҫур кунӗ
Пӳрт тӑрринчен тумлать.
Ҫав ӗнтӗ хӗл кунӗн куҫҫулӗ...
Ӗҫсессӗн вилме пулать!
Чӗр шыв пек таҫта пулӗ...
Шӑнтсассӑн вӑл пӑр пулать.
Анчах эп пӗрре хӑрамасӑр
Ҫав ҫут пӑрлака ӗмеп.
Ҫынна пӗр сӑмах каламасӑр
Чунпа вӑрттӑн ҫех вӗҫеп.
Пӑр кайнӑ чухне пӑлтӑр-палтӑр!
Шыв ҫаврӑнкалать.
Хӗл кайнӑ чухне, паллӑ,
Тӗнче чӗр шывпа тулать.

***

Пӗр шыв тӗлӗнче ҫутӑ,
Пӗр хум ҫийӗнче тӗнче.
Пултӑм унта эпӗ пулӑ,
Ҫунтӑм пӗр ҫут хуппинче.
Пулли вӑл тытмалӑх ҫукчӗ,
Пӗр йӑпӑлкка анчах.
Пӗр чул айӗнче пурчӗ...

Халь курăнмасть пачах!
Ăна халь тытса пĕтернĕ.
Ăна халь шырас пулать!
Акă, вăл чаплă тĕрленчĕк!
Тăрă шывра выртать...
Тып-ха ăна кăшт савмалăх.
Хуппи майлă кăшт ачашла.
Тĕнче те вара пурăнмалăх
Туять пуль хăйне урăхла.

* * *

Таçти уçлăхри çăлтăр ушкăнĕ евĕр
Шăлан çеçкере.
Пыл хурчĕ темле хăйне евĕр ракетăн
Вĕçет ун çине.
Никам та унта пур тесе шутламасть пуль
Хăйне пĕр тĕнче.
Çеçки çул хĕрне тăкăнсан та курмасть пек
Тĕнче пĕтнине.
Пĕрне, ÿксенех, çĕклесе те пăхан та
Темле туйăнать...
Таçти уçлăхри çăлтăр ушкăнĕ евĕр
Шăлан пурăнать.

* * *

Çеçке сарнă çулпа
Чĕвен тăрса утрăм пулать –
Ан тивĕр мана, çеçкесем!

* * *

Шăлан çак тĕпте ÿсетчĕ,
Тем чухлĕ телей кÿретчĕ.
Эпĕ те çав çÿреттĕм,
Шăлан ăçтине пĕлеттĕм.
Пĕчĕк ача пек кулаттăм,
Сикеттĕм те тухаттăм
Хамăр енчи урама
Çав шăлана курма.
Çеçки унăн питĕ кĕренччĕ,
Çулçи пурçăн пек çемçетчĕ.
Шăрши те, шăршийĕ – Туррăн,
Тĕнче çав шăршпа тулнăн...
Халь ун патне пымалли

Ҫӗр ҫул та пулӗ иртрӗ...
Чун та йӑлтах кӳтсе ҫитрӗ...
Якӑлт! кӑна сиксе тухрӑм
Эп тепӗр хут ҫав тӗле...
Шӑлан ман, мана пӗлмен пек,
Пӑхрӗ тата тӗлӗнсе...

***

Пӗр сад ҫумӗпе сукмак.
Пырса та кӗме май ҫук.
Пур пек ҫавӑнта ҫӑтмах,
Шала кӗрсе пынӑ чух.
Шалта-мӗн, чӑнах, пысӑк ҫул.
Унта кайӑксем тем чул
Вӗҫес пек лараҫҫӗ кӗҫех –
Унта юмахри пек чӑнах!
Ҫӳлтен майӗпен ҫумӑр пек
Ҫӑвать ахах евӗр чечек.
Ахах ҫул ҫинче, тум ҫинче
Чечек ҫӑлтӑр пек ҫиҫет.
Ал ик айккинчен ҫупӑрлаҫҫӗ
Тем ҫӳллӗш вӗренесем...
Ак ӗнтӗ пӗр ҫил чуптарчӗ,
Ҫӗклерӗ ҫеҫке темӗн чул.
Ҫак ҫил юмах пек каларӗ:
Кунтах эсӗ тӑр та юл!
Кунтах эсӗ тупӑн ҫӑтмах!
Анчах та кунтан тухсан
Ҫухалӗ ҫӑтмах ҫавӑнтах...
Чӑнах та, пӗр утӑм ҫеҫ турӑм,
Тухса та ӳкетӗп таҫта.
Эп сад хӗррипе пыратӑп,
Шыратӑп темле сукмака...
Анчах нимӗнле пӗр сукмак та
Нимле сад хӗрри те ҫукрах.
Апла, тет, вара эп ӑҫта?

***

Тин ҫеҫ-ха шур юр выртатчӗ...
Ҫӗркаҫ ҫумӑр ҫунӑ пулас та
Хуралнӑ газон та ҫуталчӗ.
Ытти пит нимех те курмарӑм,
Пӗр майлӑ кӑна шутларӑм:

Юрать çак çумăр пур,
Юхать-ха кăштах шыв-шур.
Тÿпе те газон пек шăтрĕ,
Мана та çак курăк йăтрĕ...

* * *

Инçет вăрмана çитесчĕ,
Юр чечекне татасчĕ.
Çулсем хыпса çитрĕç тинех.
Пулат-и-ха мăйăр тесе,
Шыратăп кĕрен çеçкине...
Çак çул çинче пур вĕт тем те,
Кĕтет пуль пĕр пĕчĕк телей те!
Çил варкăшăн, шăппăн çурет,
Е çавăрса ÿкерет...

* * *

Эп кĕтнĕччĕ – сивĕ пулать.
Куратăп та – ăшă тăрать!
Утатăп пĕччен, майĕпен,
Туятăп хама ĕлккен...
Тĕтреллĕ инçет хуралать,
Çурхи кун паян васкамасть.
Тумламлă турат авăнать,
Шăпăр кăна тăкăнать.
Кÿлленчĕк тÿпе пек аван,
Мĕн пуррине кăтартать...

* * *

Тĕтре ăшĕнче çур тĕнче пуль?
Тĕтре ăшĕнче тем те пур.
Çавна курнăçем эп тĕллентĕм...
Эс çу, тĕтре, çу та çĕклен,
Çÿле кайнăçем, пул çăмăл!
Çак çĕр çине килнĕ çĕклем
Çунат хуша вĕçтĕр, терĕм.
Турат çакса хунă тĕлте
Çÿлтен çакланса тăкăн шăпăрр!
Вара шур турат та çăмăллăн
Вăшт! çеç çĕкленсе каять...

***

Тĕксĕм те çумăрлă кун ăшĕнче
Йываç чечек пек çурнă
Çак кĕçнерникун.
Чăваш пек таса куçлăн
Çулçă йăлтăртататъ...

***

Кунта пĕтĕмпех урăх хутлăх,
Вăрман тăршшипех темле çутлăх.
Пĕр пысăк уçланкă, çурт...
Унта зоё кĕр те вырт!
Анчах эп кĕмерĕм, выртмарăм,
Хăна пек пулса курмарăм.
Пачах урăх çут тĕсесе,
Çÿретĕп халь ас илсе...
Ăçта-ши вăрман, ăçта-ши çав çурт,
Пырса кĕреймес тепĕр хут.

***

Хурăн мĕнне пĕлетĕп,
Ăçта çÿресен те килетĕп,
Шурă вăйне илме...
Ун пек тасан та вăйлăн
Манăн утасчĕ татах!
Çуттăн утасчĕ уй урлă,
Ун çутине курсах!
Атте пек мана сăнатăр
Çÿлтен кăн-кăвак тÿпе!
Тен, пултăр кăвак хуппи пек
Шур хурăнăн çулçи?
Эпĕ кунта тÿсни
Юлтăр манра кун тăршши...

***

Урамра хальлĕхе тĕттĕм...
Утнăçем, темĕскер кĕтрĕм...
Утас çул курăнать тĕтреллĕ –
Пурпĕрех темĕнле чĕреллĕ!..
Пĕр тĕлте тĕттĕмре те куртăм:
Пур пек темĕнле çулăм...
Ӳсет-мĕн унта ешĕл курăк –

Пачĕ мана çавă пурнăç!
Темле вăл ытла асамлăн
Ман чĕрене чăмăртарĕ.
Çакă тĕнче питĕ анлă –
Çапах кун пекки курманччĕ.
Тĕтреллĕ ку çул та кĕтретлĕ,
Ку çулăм та пĕтерет-тĕр!
Выртать-ха шур юрĕ хулăн –
Ун хĕррипе симĕс çулăм...

***

Çеçпĕлçĕсем, çеçпĕлçĕсем,
Черчен те çепĕç çеçкесем...
Пĕри кăвак, тепри хĕп-хĕрлĕ.
Мĕн-ма эсир мана пит кирлĕ?
Ыттараймасăр тепĕр чух
Чьлай пăхса тăратăп эпĕ...
Çеçпĕл тесен, çеçпĕл тесен
Такамăн та чĕри хускалĕ...
Çеçпĕлпеле эпир пуçланă
Çурхи кунсем пек пурăнма...
Мĕн чухлĕ пулĕ, тен, ăмсанни
Пьл хурчĕ пек пулма тата...
Çеçпĕлчи пек куратăп эпĕ
Чăваш хĕрне сăнланă чух.
Епле черчен те çепĕç чунлă–
Вĕсем килеççĕ тепĕр чух!..
Анчах тĕнче ытла хăрушă...
Ярса илет те вĕсене –
Çеçкен-çеçкен татса та тухрĕ
Пĕр хĕрхенмесĕр ку чухне...
Çапах та хальлĕхе пĕтмен-ха
Çурхи чечекĕн иленки.
Мĕнле ăна пăхса илмесĕр
Эс вăй тупатăп терĕн-и?

***

Нимпех те паллă мар тĕнче
Куç умĕнчех тăрать.
Çапах паян та ир çинче
Хĕвел пĕрех тухать.

Çапах, çапах та ним те çук –

Халь курăк та тухман!
Йăри-тавра пăхсан та ху,
Ху çеç пуль курăнан...

Чечек çинче хурт сĕрлемест –
Чечек те çуккă вĕт!
Çур кунĕ халĕ те килмест.
Тен, вăл тĕлне пĕлмест?

Йĕри-тавра халь ним те çук.
Эп хам та çуккă пуль?
Пĕрех паян та ир çинче
Çавах, çав çут тĕнчех!

* * *

Пулать-ха майăр. Çуккă мар,
Халь курăнмасть пулсан та.
Ак, кĕркунне çитсен куран –
Вăл сан куçран кайман та!
Хĕвел çине вăл çакăнать
Хĕп-хĕрлĕ мăкăнь евĕр.
Анчах пăхсан та курăнмасть.
Патне пырсан, тен, тепĕр,
Тен, тепĕр хут çиçет çут пек –
Чечекĕ вăл пит пĕчĕк...
Тен, çавăнпа килме пĕлет
Çак тĕнчене пит хăвăрт?
Пит хăвăрт çав иртсе каять
Çакă тĕнчен асамĕ.
Паян та, акă, вăл çунать
Кăвак хуппийĕ майлă.

* * *

Юр çыранлă çап-çут кӳлленчĕк
Ас илтерчĕ кăвак пĕлĕте.
Тахçанах вĕт çапла пĕркенчĕк
Эпĕ курнăччĕ çак тĕкĕрте...
Сар хĕвел те кунтах пул тытаслăн
Çиппеле сĕркелет хумсене.
Тытнă пĕр шур пулли çут çунатлăн
Выртса тухрĕ юр кĕрчĕ çине.

* * *

Шур хурăн сутипе çӳретĕп,
Хăпартланса та çуталса.
Çуркуннепе, эпĕ пĕлетĕп,
Пĕрремĕш хут çулçăланса...

Унтанпала та вăхăт иртрĕ.
Ак, çитрĕ кĕркунне татах.
Ман йывăçăн та вăхăт çитрĕ –
Вăл халь, чăнах, çурта майлах!

Вăл ирĕн-каçăн хăварт çунчĕ –
Çунса та кайрĕ самантрах!
Çавăнтанпа ман ĕмĕт çӳнчĕ –
Пĕрех эп пур çав суртарах!

* * *

Чечексем ӳсе ларнă чылай...
Пит хитре те, татассăм килет!
Ах, анчах та татсассăн каллех
Хăвна татнă пекех туйăнать.
Мĕн, сахал-им татса та сана,
Пăрахса çĕр çине курăк пек?
Нумай чух эпĕр кайнă пĕтсе –
Йĕр-палли те юлман çĕр çинче!
Халь тинех татас çук чечеке.
Чечекрен те черчен ним те çук!
Халь пĕтес пек тăрсан çул çинче,
Чечек пек эсĕ пул тепĕр хут.

* * *

Çап-çут ана... Утса килентĕм,
Пăхса тăратăп пĕр кана.
Эп савăнма кунта килетĕп –
Мĕн-ма тесен эп хам ана!
Эп çакăнта ӳсе çĕкленнĕ...
Ачарана çак çут ана
Мана чунран пырса тивегчĕ –
Эп çисе ӳсрĕм пуль ăна?
Чăнах та, акă, эп çиетĕп
Чие çырли те хурлăхан...
Ана çисен, эпĕ пĕлетĕп,

Эп хам та пулăп пиг таса!
Утса килентĕм... Ман ана
Пăхса выртать анне пек çуттăн...
Çав çутă пуль мана çĕклерĕ,
Çын пек кăтартрĕ такама.

***

Ытла та хăвăрт ÿснĕ
Утти ку çаранра.
Пĕри, ак, кур-ха, тÿснĕ
Сукмак хĕрри пулса.
Тем чухлĕ шур чечек те,
Тем чухлĕ пур сарри.
Çаран тени пĕлет çав,
Тупать хăйне валли.
Пыл хурчĕ те сĕрлет, ав,
Йăлтах пĕтĕçтерет.
Хăлха çавна илтет те –
Татах пурнас килет.

***

Тата мĕн куртăм-ха, тăванăм...
Пиçсе çитет акаци ман.
Кăшт туратне авса пăхать
Вĕçме те хатĕр вĕрене –
Сăмсаллă унăн вăррисем.
Вĕт кайăк юрлама пуçларĕ.
Аван, теет, пуль пурнăçне,
Е мăшăрне вăл йыхăрать...
Часах паян та пĕлĕтлет.
Вара, тен, çумăр ÿккелет.
Ĕнер те çапларах тăратчĕ
Нихçан сÿнми таса çанталăк.
Паян та, акă, ват юман
Кутне тăкать пек хĕрлĕ юм.
Ун айĕнче ăш кĕрĕк евĕр
Ларать-ха шĕшкĕ сарăлса.
Ун мăйăрĕ кăçал çукрах.
Пĕрех куçа вăл илĕртÿллĕ –
Час пуласса пек пĕлтерет.
Çапла кунта пĕр пĕчĕк хутлăх,
Пур тĕнчере кун пек те уçлăх.
Чăнах, эп курнă таврара

Ман чунӑм пурӑнать вара.

* * *

Ёнерхи тӑвӑла эс курмарӑн...
Вӑл хуппарӗ вӗт ҫак тӗнчене!
Ҫут ҫанталӑк пит сиввӗн сывларӗ,
Хӗрхенмерӗ мӗн пур тӗмсене.
Акӑ, чӑн та, ирпе эп пыратӑп.
Темӗн чухлӗ ҫӳп-ҫап ҫул ҫинче.
Йывӑҫа пӗрне, акӑ, куратӑп,
Ҫурса янӑ пулас ҫурмаран...
Ҫавӑн пек тепӗр чух ҫанталӑк
Кӑтартать-ха халь хӑйӗн вӑйне.
Тепӗр талӑк пек иртрӗ те – халӗ
Пурте пур ҫакӑ ҫут тӗнчере!

* * *

Пилеш палӑра пуҫларӗ...
Пилешӗн те пур ҫеҫки!
Халь мӗн вӑл мана каларӗ –
Эс мар-и-ха унӑн ҫеҫки?
Ҫӳлтен вӑл пӑхса сулларӗ
Ҫил майӑн кӑна тӑррине.
Ҫиле хирӗҫ тӑчӗ, памарӗ,
Памарӗ вӑл хӑй ҫеҫкине.
Ӑт, халь ун ҫырлийӗ тухнӑ.
Шиги-шип! текелет майӗпен.
Пилешӗн ҫеҫкийӗ хухнӑ –
Ҫырлийӗ тухать хӗвелрен.

* * *

Сар чечеклӗ ҫӗр.
Кӑчкӑллӑ тӳпе.
Хушшинче ӳкерчӗк
Пурнӑҫ пур тесе.
Ак, чечек тататпӑр...
Кирлӗ мар татма!
Хӑвана куҫатпӑр
Тем уявлама.
Ҫӗрне пӗлӗт пачӗҫ
Тем те пӗр пире.
Мӗншӗн-ха пӗлместпӗр –
Тӗнче пек пулма?

***

Ума чупса тухрĕ
Пĕр кăвак чечек.
Хайне татма ыйтрĕ:
«Тат-ха, тат-ха», – тет.
Çук вара, татмастăп.
Эп татма килмен.
Пит татас пулсассăн,
Мана татăн, тен?
Чечек мар та эпĕ –
Чечекрен хавас!
Çавăнпа килетĕп
Вăрмана час-час.

***

Ăçта чĕкеçсем, чĕкеçсем ăçта?
Ĕнер çеç вĕçетчĕç унта та кунта...
Темскер каласа кăтартасшăн пулса,
Çак çĕр ытамне калăплатчĕç кăна.
Халь тин вара шăп. Ăçта чĕкеçсем,
Ăçта чĕкеçсем çаваран карусель?
Хĕвел те тăрать çаврăнса майĕпен,
Вăл та курасшăн чĕкеç вĕçнине.
Тĕпе вара шăп. Пĕр сас илтĕнмест.
Тен, чун тăнлама ман пĕлмест?
Ĕнер çех чĕкеç пек вĕçетчĕ-ха вăл,
Чĕкеç пек чир-ик! çеç тăватчĕ ирпе.
Халь ĕнтĕ вăл пушă. Чĕкеç çуккăран
Урам та темле курăнать пушăрах.
Çапла утнăçем майĕпен урампа
Туятăп хама та темле уксах пек.
Тен, паянтан чун çунни – çавă сас
Пурнать чăнласа чĕрере пĕр кас?
Унта çаврăнать чĕкеçсен каруселĕ –
Килес кунăмсем ман чĕкеçсемлĕ!

***

Юр айĕнчен пек шăтса тухрĕ...
Пĕр пĕчĕк хĕрлĕ çеç чечек.
Тухсассăнах епле вăл хухрĕ,
Тин çеç çур кунĕ килнĕ пек.

Пуçна çĕкле суралнă çеçпĕл,
Çурхи аслати пек кĕрле!
Юр айĕнче эс чечек çеçнĕ,
Шăтса тухсан – ху пĕр тĕнче!

Юр кайрĕ майĕпен... Çĕр çийĕ
Халь тин симĕс кавир пекех.
Анчах мĕн-ма-ха çеçпĕл пичĕ
Каллех шăнса каять ирпе.

Пырса татасчĕ, теп, ир кӳлĕм
Чĕре пек шăннă чечеке.
Кăкăр патне тытсан, тен, ӳлĕм
Чечек тек шăнмĕ çил çинче.

Çапла çав, тĕнчери çил вăйлă
Шăнтать пурне те çул çинче.
Тен, çавăнпа чечек пек шăппăн
Тухса тăратăп çын умне.

Юр айĕнчен пек шăтса тухрĕ...
Кăвак хуппи пек пĕр чечек.
Тухсассăнах епле вăл çутрĕ
Çак тĕнчене парса тĕрек.

* * *

Вăрман шавлать...
Темскер каласшăн
Çĕр айĕнче тем хускалать.
Юман тĕлленĕ шурă пĕлĕт
Шур чечеке ас илтерет.
Юр вĕçкелет.
Тăвайккинчи сарă чечек
Юман пекех кăшт чĕтренет.

* * *

Кăчкă темччен кĕтсе ларчĕ:
«Килĕр-ха, хуçăр-ха, – тет.
Пĕчĕк чĕппи пек кăларчĕ
Шур мамăк... Вăл та пĕлет,
Çак тĕнчере мĕн илемлĕ,
Мĕн-ха тата илĕртет?

Тен, ҫавăнпа ача чунлă
Кăчкă уявĕ килет?..
Пытăм эп, чăн та, хуҫа пек
Тасрăм алла: «Ак, хуҫап!»
Ҫук ҫав, темле пĕтес пек
Туйрăм хамра тем асап.
Ҫук, эп хуҫмарăм, уяв вăл
Пĕррĕ килет те каять!
Кăчкă вара хăватлăн
Мĕн ĕмĕре юлать!

***

Хĕвел тени хăна пекрех-ши,
Йăлтăртатса куҫса тухать.
Кашни кунах пире кĕтсе-ши,
Ҫут анăҫ еннелле анать.
Анчах та, ак, паян пăхатăп,
Хĕвел тухать ана ҫинче.
Йăран тăршшипелех хăватлăн –
Пуҫне кăларчĕ сар чечек!

***

Юр ҫăвать, юр ҫăвать,
Сукмак юрпа ҫăвăнать.
Эп утатăп ҫиййĕпе, –
Эп те юрпа ҫăвăнап!..
Эп утакан сукмак вĕҫĕ
Пĕлĕт пекех туйăнать.

***

Ҫемҫе ҫанталăк ҫемҫетет ҫав,
«Ҫемҫе» тесе калаттарать.
Ку ҫут ҫанталăк хăй пĕр кĕвĕ,
Кĕвви чуна ыраттарать.
Тен, кам илтмест пуль,
Ним те мар, тен?
Мана вара ку пĕтерет!
Ун сассине илтсе вăрахăн
Ҫурхи ҫул ҫиййĕн йĕр хывап...
Ҫемҫе ҫанталăк ҫемҫетет ҫав –
Ман йĕр те халь ҫемҫен тухать.

***

Хӗвел пӑхать хаваслӑн.
Тӗнче хитреленет.
Татах, ак, тем тӑваслӑн
Шур юр вӗҫтеркелет.
Халь ҫавӑн пек ҫанталӑк –
Ун пур хӑйӗн йӗрки.
Часах, акӑ, хӑватлӑн
Хускалӗ юр пӗрчи.
Хӗвел пекех ҫап-ҫуттӑн
Шур кӗрт йӑлтӑртататъ.
Кӗрт айӗнче те туплӑн
Ҫурхи хӗвел ҫывратъ.

***

Хӗвел кӗрет хӑватлӑн,
Чуна уҫса ярать.
Мӗн-ма, шуплап, яваплӑн
Ҫут умӗнче тӑрап?

Хӗвел пурне те пачӗ
Ҫап-ҫут пайӑркине.
Таҫта та пуль хӑварчӗ
Чӑн пурнӑҫ ӑшшине.

Тавах сана, хӗвелӗм,
Вӑй патӑр ҫутатма!
Манӑн чунри кӗвелӗк
Халь пулчӗ пурӑнма.

Эс пултӑн ӑшӑнмашкӑн
Сӗм вӑрманта паян.
Эс пултӑн тасатмашкӑн
Ҫут ҫӑлкуҫа ялан.

Тавах сана, пӑхнишӗн,
Мана куҫран савса.
Ҫак тӗнчене килнишӗн,
Ҫынна кӑмӑл тума.

Кӗрсем ман пӳлӗме те.
Кӗтеп сана ирпе.

Эс пÿлĕме кĕросен те
Курнатăн Турă пек!

***

Симĕс курăк сырса илнĕ
Тĕмĕ çумне пытăм та
Уçса пăхрăм çулçине –
Çырла пур пек туйăнать!
Тĕмĕ çинче ним те çуккă,
Кăткă çеç кăшт чупкалать.
Шыракалать йăвине –
Çырла çук мар, туйăнать!
Çырли пур-и, çук-и те
Симĕс курăк ăшĕнче
Пурнăç пурри курăнать –
Куçа çав савăнтарать!

***

Тĕтреллĕ ир тĕтрелентерчĕ
Ман ăсăмпа сисĕмлĕхе.
Ирхи çанталăк тĕлĕнтерчĕ,
Кăтартрĕ хăйĕн сĕмлĕхне.
Ун мĕн шалта кĕтретлĕх вăйлă,
Туртса илет хăй ытамне.
Пăхса тăранайми хăватлăн
Пăхса тăраççĕ хурăнсем.
Уй-хир таçта тĕтреленет пек,
Юхса тăрать шап-шур кĕртсем.
Тавах, тăванлă çĕрĕм-шывăм,
Мана çапла та савнăçем,
Эс вĕт хăвна та халь манмарăн –
Сăн кĕртрĕн шурă тĕтрепе!..

***

Тепре пăхса илетĕп
Эп чăрăшсем çине.
Вара тухса килетĕп
Çак шур хула патне.
Епле ман чăрăш ларнă
Шур юр пек кăпăшка.
Ăна эпир вĕт лартнă
Çуркуннепе кăна!
Халь тин пĕччен пек эпĕ –

Ман чăрăш аякра...
Киле тепре килсен те
Пыратăп сан патна.

***

Эс килетĕн пек вăрттăн
Картишне сăн кĕртме.
Хĕвел пек питĕ çуттăн
Курăнан ир çинче.
Халĕ тин ĕнтĕ урăх
Çын çÿпленĕ тĕнче.
Эсĕ Турă пек турăн –
Эс тасатрăн пире!

***

Темле питĕ паллă сас
Çултен илтĕнет пĕр кас.
Пăхатăп та, мĕн, чĕкеç
Пуç çийĕн чуччу пек вĕçет,
Çурхи тÿпепе киленет.
Кăна эп пĕрре те кĕтмен!
Телей пекки пулчĕ те!
Халь ĕнтĕ чĕкеç пек чĕтревлĕ
Çурхи тÿпере çутă пур.
Халь ĕнтĕ ман чун та вĕçевлĕ –
Çÿлтен ÿкнĕ чух курса юл!
Çапла пуль, çулла та çитрĕ,
Апла, мĕн пулни те – иртрĕ!

***

Хура-шур пĕлĕтсен пĕр хумĕ
Каллех килет çавăрăнса.
Каллех çăвать хитре çеç çумăр
Пĕр чарăнса та вăйланса...
Çанталăк тăчĕ ку чух япăх,
Ăшă килмест пуль тепĕр хут.
Çуллахи пек пĕрех пит лайăх.
Чĕре те тапрĕ питĕ шух!
Йĕпеннĕ çулçă пек айванлăн
Выртас килмест ман çĕр çинче.
Çаралнă вулă пек хăватлăн
Чĕресчĕ тетĕп тÿпене...
Вĕçетĕп эп хур-кайăк евĕр

Тасти пӗлмен ҫут тӗнчене.
Унта, тен, кӗтӗп эпӗ тепӗр
Ҫурхи кунсем те килессе!

* * *

Сарӑлса ҫитеймен ҫулҫӑ
Сарӑхнӑ та ӳкнӗ. Куртӑм
Темле, калӑн, чулҫӑ
Ҫула тепӗр хут сарса тухнӑ.
Темле сарӑ-симӗс тӗслӗ
Мозаика евӗр пурнӑҫ
Кунта ҫӑвӗпе хуҫаланчӗ.

* * *

Хӗвел тухиччен пуҫлать те
Хӗвел кайиччен тимлет.
Иртсе пынӑ чух илемлӗн
Тин-тин! те тин-тин! текелет –
Темскер калама вӗт пӗлет!
Ӑна эс илтен те хаваслӑн
Ху та тин-тин! текелен.
Пурнӑҫ вара телейлӗн
Килнӗ пекех туйӑнать.
Анчах та ку вӑл пӗр авӑк –
Хӗвел кайсанах пӗтет!

* * *

Шур пӗвӗ хӗвӗме хупмалӑх.
Сар ҫӳҫӗ тӑвӑлпа тулмалӑх.
Ӳсет кунпа пӗр тан
Пӗр хурӑн – тӗлӗкре те ман!

Анчах та эп ун патӗнче
Нихҫан та хӑнара пулман.
Ҫӳрет вӑл кӳлӗ хӗрринче
Ҫил ачипе – тӑван!

Шыв ҫийӗн тайӑлса пӑхма
Турат хушсам тата!
Санпа пӗрле, пӗрле тӑма
Хал ҫук ман, тупата!

***

Пĕрле тиенĕ туйăм лавĕ
Тÿнсен ютçынлăх улăхне,
Пĕр шеллемесĕр чун хавалĕ
Таптарĕ ĕмĕт вучахне.

Кăшт ăшă сапнă кĕллĕ çийĕ
Халь – кăвакарнă кив суран.
Сурса вĕресСĕн шанчăк çилĕ
Тумланĕ çулăмлă сурпан...

Кив тымартан вучах турачĕ.
Çуралнă чунĕ – шĕл кăвар!
Иксĕличчен ăшри хăвачĕ
Çунтарĕ савăклă пушар.

***

Хам чĕрене сана парсаттăм...
Тапах, çăлкуç, эп виличчен!
Ывăçпала хĕвел тытсаттăм
Ача чухне шыв питтĕнчен.

Эп ĕçнĕ çаврăнса пăхмасăр,
Çăлкуç, ачалăх хĕвелне.
Кайран мĕн-ма манса хăвартăн
Шыв çийĕнчи хĕвел çулне?

Чĕлхе-çăвар типсе çимтсен,
Сана, çăлкуç, аса илетĕп.
Тăван киле тепре килсен,
Чĕр хĕлхемпе ăша пĕçертĕп...

Таса та сивĕ – шăрăх кун –
Çăлкуç, юхма эс чарăнмарăн.
Çемçе те ăшă – сивĕ чух –
Пăрпа эс хупланса выртмарăн.

Выртса ĕçме пăрахнăран,
Типсе пыратăн, тен, куçран?
Çăлкуç, тумлать ман аллăмран
Пĕр-ик тумлам...

***

Лапсăркка пĕр тополь
Тăр пĕччен ларать.
Кунсерен вăл шăппăн
Туратне сарать.

Çил тухсан та хытăн
Тайăлса пăхать.
Тытамак пек тытнăн
Хăвăрттăн сывлать.

Ах, епле пуль йывăр
Пурăнма сана?
Çил авсан, ак, вăйлăн
Хуçăлсах анан!

Ирĕклĕн çеç чăмрĕ
Тополь тĕпне.
Тĕпере вăл тупрĕ
Хăйĕн пурнăçне.

***

Шурă хурăн тăрать дирижер пек.
Малтан шухăшлавлăн кăшт алă сулать те
Пуçлать çакă çут тĕнчене хускатмашкăн...
Ак çил вăйлăрах килсе çапрĕ.
Шур хурăн юпа пек, пĕрех авăнать,
Халь хăй те оркестр пек сас кăларать!
Çапла çав вăл пурнăç, пĕр тикĕс тăмасть.
Малтан шăйлашуллă, кайран пăтранать...
Шур хурăн епле халь хăлаçланать!
Кампа-ши, кампа чарăнми çапăçать?
Е хăй дирижер çавăн пек кăтартать?
Турачĕ кĕсмен евĕрех авăсать...
Халь хурăн тĕсет пуль темле хĕн-асап?
Эй, çил, чăрсăр çил асать те асать.
Шур хурăн халь тин шыва путакан пек.
Халь эпĕ кăна ăна çăлакан пек.
Унпа пĕрле эпĕ тăрап çил çинче,
Ман алă-ура та турат çумĕнче!
Ак алă сулатăп, ак эпĕ юрлатăп,
Вăй пурчĕ пулсан та кăштах тайăлатăп,

Çиле хирĕç эпĕ темскер кăшкăратăп,
Тĕнче умĕнче дирижер-ши пулатăп?
Çил-тăвăл та иртрĕ, çанталăк шăпланчĕ.
Тепре алă султăм, халь ĕнтĕ лăпланчĕ...
Каллех çепĕç кĕвĕ, каллех сутă шанчăк
Шур хурăн тавра хуçаланчĕ...

***

Икĕмĕр эпĕр пыраттăмăр
Çул хĕррипе савăнса.
Çул хĕрринчех, кураттăр,
Ларать вĕрене хурланса...

Вĕлтĕр-вĕлтĕр! вĕçсе анчĕ
Вĕрене вăрри.
Вĕçсе анчĕ те çĕкленчĕ
Чун таçта çити...

Вăл мĕн типсех хăрса ларнă.
Хăй пĕтĕмпех вăрăра.
Çил çинче шăппăн кашларĕ, –
«Тат эсĕ манăн вăрра!»

Татрăм та хыт ывăçларăм,
Петĕм çÿле мĕн вăйран.
Пенĕçем, сăввăн каларăм, –
«Пултăр çапла пурнăçра!»

Пултăр вăл чăн фейерверк пек
Пĕр юратун чăн палли.
Сут вăрăсем вертолет пек
Вĕçрĕç кăна çил валли.

Вĕçрĕç те ÿкрĕç хаваслăн.
Çитрĕ вĕсен те кĕтни.
Пирĕн куçа пит асамлăн
Тухрĕ тасан мĕн иртни.

***

Кивĕ кил ман умра.
Пĕчĕк çеç чÿрече.
Лапсăркка пĕр йăмра
Аслă çул хĕрринче.

Ват йăмра тăрринче
Пурчĕ пĕчĕк вĕлле.
Шăнкăрчсен юррине
Эп итлетĕп ирпе...

Кивĕ кил ман умра...
Пĕчĕк çеç чÿречĕ...
Телĕрет ват йăмра
Аслă çул хĕрринче.

* * *

Нихçан та эпĕ шутламан
Кĕрхи чечек тути çинчен.
Çуркуннепе шутланă-ха
Чечек пылне ĕмсе пăхма.
Кĕркуннепе вара, мĕнле,
Кĕрхи чечекĕн пур-и-ха?
Хурт вĕçнине курман пĕрре те.
Тута патне тытса курман.
Тем пулчĕ кĕрхи кун çапла.
Пĕр чечеке татса, кăштах
Пыл хурчĕ евĕр хăтланса,
Тута патнех тытса пăхатăп.
Кăшт чуп туса та пăхрăм-и?
Телĕнмелле чечек хитре!
Шăрши те пур, тути тата!
Тути темрен те ирттерет,
Ĕмĕрлĕхе ас илтерет.

* * *

Карталанать ирпе тĕтре.
Сив çилĕ çурçĕртен...
Кĕрхи чечек пĕрех хитре.
Вăрманăн тумĕ – шур пиртен.

Хура вăрман тĕтреллĕн юхнăн
Кĕрхи урăхланать тĕнче.
Шалл! тăкăнать сар çулçă курттăм,
Чăлтăртатать турат çинче.

Епле хитре ку ăрăм пурнăç
Хуплать пурне те çиттипе.

Тепĕр чухне хăрушлăх курнăн
Тарса ӳкес пек сиккипе.

Эп утăп хăвăрт шурă хумăн,
Чӳхенĕп сарă çулçăлла.
Калаçăп тепĕр хут эп шуххăн.
Эп пурнăп халĕ урăхла!

* * *

Хитре çанталăк.
Çумăр сурĕ.
Çĕкленчĕ çил.
Пур-çук çулçа килсе тустарчĕ,
Сарса та хучĕ çул çине.
Халь тин утса пыма та çăмăл
Тĕнче те тĕрлĕ кавирпе.
Сап-сарă, хĕрлĕ, симĕс çулçă
Савăнтарать хăй тĕсĕпе.
Кĕрхи тĕнче халь хĕрупрасăн
Сарса хурать туй парнине.
Эпир санпа пĕрле сив çумăр
Пăхса тухатпăр сивлесе.
Епле аван, чăнах та, çумăр
Йăлт тухатать çак тĕнчене.
Сар çулçăсем халь çумăр витĕр
Пăхаççĕ пек куççуллĕнсе.
Тен, çавăнпа ытла хитре халь.
Куççулĕ витĕр пăхнă чух
Тĕнче хăй парнине курать пек,
Курать те савăнать тепре.

* * *

Тăраççĕ хурăнсем сурта пек.
Такам килсе çурта лартать.
Сывлать тĕнче вăраххăн, тарăн...
Вĕçеççĕ кайăксем хăраххăн,
Ӳкет сар çулçă... Асăрханулăн
Иртеççĕ çак кунсем тăстан.

* * *

Вĕтĕ-вĕтĕ хумлă сут çанталăк
Çил пекрех кĕресшĕн чăтлăха.
Пысăк йывăç пек ӳсе лармалăх

Çуккă-ха манра хăват...
Çавăнпа пуль чĕтренетĕп вĕттĕн,
Вĕтлĕхрен эп халĕ те тухман...
Эп унта кĕрсе кайса йăлт çĕтрĕм.
Тен, унтах хăвна халь эс тупан?
Лăпкă, чăн та, çут çанталăк лăпкăн
Мана çеç пуль вĕттĕн чуп тăвать.
Е хĕр евĕр вутлă чунлă вупкăн
Çырмана илсе кайса çапать?
Лăпкăлăх тени халь пур-ха чунăн,
Лăпкаса тăрсассăн, вăй килет.
Акă, кур-ха, çил çĕкленчĕ хумлăн,
Çил чуна çав хум пекех çĕклет.
Эсĕ кил-ха, кил, хăватлă туйăм,
Картса хур çак тĕнчене çĕр хут!
Çулçă хатĕрлет çӳлте вут-çулăм...
Вăл талса ӳксен тепре çунать!

***

Мĕн кĕтетĕп эпĕ чечекрен?
Ӳстĕрех вăл майĕпен пĕчченн...
Çутине кăлартăр вăрттăн
Чăваш евĕр майĕпен, хитрен...
Çав çутта эсĕ ăша илсен,
Ху та чечек евĕр уçăлан.
Чечек пек пулма тет-ха, айван!
Çутатасшăн тейĕн уçлăха?
Ай-ай-ай! вăю çитейĕ-ши,
Чечек пек пулма пултарăн-ши?
Эх, çапах та тĕл пулсан санпа
Эс, чечек, пуçна кăшт тай вара.
Майĕпен çеç, вăрттăн эс çутат.
Кам пырса пăхать – курать!

***

Çулçă тăкнă шурă хурăнăн
Тайăлтăм та – пăхрăм.
Çĕр çине сарса хунă çулçă
Тем тĕрлĕ тĕслĕн те питĕ канлĕн
Çĕр çумнех сыпçăнса выртнă.
Пĕрисем пылчăкпа хуралнă,
Теприсем çил çинче сухалнă...

Тайăлса-тайлса эпĕ пăхрăм,
Çулçă сарнă çав сарăм çинче
Тĕкĕрти пек хама та куртăм...
Пурчĕ вĕт-ха ман çутă сăнарăм,
Пурчĕ вăрăм çилхеллĕ туратăм!
Ешĕл тум çăвĕпех çийĕмречĕ...
Халь вара çĕтĕлсе пĕтрĕ!..
Тайăлса-тайăлса эпĕ пăхрăм,
Çав сăнра хама хам шырарăм...

* * *

Çу иртсе кайрĕ. Август çурри.
Çанталăк та халĕ анчăк çури.
Такам тытса пенĕ ăна çут кӳлле,
Типесшĕн пулех çăмне хыт силлет.
Тумламĕ вара таçта та ӳкет,
Чĕре çав йытта хĕрхенет.
Типтерчĕ вăл кăç пуличчен.
Кăçпа та çӳрет-ши çав йытă пĕччен?
Эп те тухатăп пĕччен çуреве.
Эп те вара пĕчĕк йытă çури.
Мана килĕшет çапла çумăр çуни.
Çул çинче, чăн та, пур йытă йĕрри.
Çăка айĕнче пур çап-çутă çулçи...
Çу иртсе кайрĕ. Килет кĕркунне.
Ах, тĕршĕнесчĕ çак йывăç çумне!
Мĕн чухлĕ çанталăк çумăрлăрах,
Чунра çавăн чухлĕ халь çутăрах!

* * *

Кĕр иртрĕ пулĕ, çитрĕ хĕл.
Кăçпа шăнтать... Утма та лайăх.
Тĕкĕр пекех кӳллен чĕкĕсем
Мана кураççĕ кайăк майлă.
Пуш урамра кăшт кичемрех.
Сайран-хутран юр вĕçкелет.
Пĕр ушкăн кайăк вăрă евĕр
Çырла такса хăварĕ кĕçĕр...

* * *

Çăлтăрсем кăтартрĕç ĕç тĕлне.
Çăлтăр ĕçĕ, паллă, тĕттĕм каçсенче

Çутатса тăрасшăн çын çулне...
Утрăм-утрăм... Çухрăмсен шутне
Утнăçем сухатрăм. Çулĕ пит инçе!
Çăлтăр курăнатчĕ пит хитре...
Уйăх тухса пăхрĕ ир енне...
Сар хĕвел тухасшăнччĕ – пулмарĕ,
Хĕвеле халь пĕлĕт хупăрларĕ.

* * *

Эпĕ питĕ хаваслăн
Çул çӳреп ир çинче.
Шуçăм шăппăн каласшăн:
Акă, санăн тĕнче!

Хĕвел тухрĕ те уйăм
Тӳпене перĕнет.
Эс пĕлетĕн-им, тусăм,
Ку мĕне пĕлтерет?

Эпĕ утрăм вăрахăн –
Кунçул тăршшĕ ман çул!
Çулăм пулчĕ пит вăрăм,
Хам та ӳсрĕм тем чуль.

* * *

Хура хурăнсем хăватлă.
Кĕрхи тумсене тăксанах
Çул хĕррине тухаççĕ,
Чунне çынсенне хăратаççĕ.
Çара вуллисем шăхăраççĕ,
Çӳлти пĕлĕте шăпăрлаççĕ,
Пĕрре çеç шăлса илеççĕ –
Шур юр çĕр çине тăкăнать.
Чĕре чĕтресе çеç тăрать,
Пире шартлама хăратать.
Ун сарă, хитре тумтирĕ
Хура çĕр çинче выртать.
Çав сарă тумтир пит тăванлăн
Çĕре сив хĕлтен упрать.

* * *

Çил-тăманлă, хурлăхлă

Кěрхи кун паян.
Утма çул та шурлăхлă
Йĕпе сунăран.
Урам тăрăх утрăм-утрăм –
Юлчĕ пĕчĕк йĕр.
Шурă юрĕ çурĕ-çурĕ –
Хăть выртса халь йĕр!

* * *

Пĕр троллейбус касхи хулара
Усăхри карап евĕр вĕçет.
Çумăр çурĕ пулать те вара
Хур чĕппи пек ларма тивет...
Кăшт ларма та кунта йĕпе...
Тăрринчен хура шыв-и тумлать?
Вараланчĕ пуль чаплă кĕпе?
Хитре хĕр те ларма, ак, тăхтать!
Эй. тăрса та пыма пулать-иç!
Пăхса пыр кантăкран сăнаса.
Йăлтăрать юмахри пек хула
Кантăк витĕр пачах урăхла...
Çакă пулăм ытла çăлтăрла
Чĕрене-ши хускатрĕ кăштах?
Пурăнма çумăрпа та пулать,
Хур чĕппи пек пулсан татах!

* * *

Шăтăр-шатăр! шатăртатрĕ
Шур юр витнĕ шур тĕнче.
Аслати пекех хăратрĕ
Çак пăр евĕр кĕленче.
Пусса пăхрăм та – путап вĕт,
Ку кÿлленчĕк йăлт хытман...
Çулĕ те ытла шусăлак пек,
Пĕр ÿксен ху та хытан!
Пурпĕрех утса пыратăп
Шатăртуллă тĕнчепе.
Темĕн чуль чун хăрасан та
Савăнап пăр ватнипе.

* * *

Шуплаттарчĕ кĕрхи тĕнче.

Шаплаттарчĕ çĕр саслă пулăм.
Эп пĕлмерĕм, ăçта, хăш енчен
Сăрлатса ыратать çан-çурăм?
Пĕрре пăрлă та юрлă çăвать,
Хушăран çил-тăман та вĕçтерчĕ.
Утнăçем çын ури те шăвать,
Пĕринче, акă, чăн та, ӳкерчĕ...
Мĕн каласшăн пире кĕрхи кун?
Асăрханăр кăштах тесшĕн мар-и?
Тепĕр чух чĕрери вĕри юн
Хуранри шыв пекех хăпармар-и?
Тарăхатăн чăнах хур пекех.
Эпĕ мар, урăххи йăнăш турĕ...
Ун пекех эсĕ ху та ӳксен,
Эсĕ мĕн каласа та хурăн?
Шутарать кĕрхи кун, çын шутлать,
Ӳкес марччĕ-ха, тет, пурнăç урлă.
Çул çинче пăрлакки тупăнать,
Пăр çинче хăвна йăлт курăн.

***

Эп айăплă çав. Уйăп кайăк
Вĕçсе те каять инçете.
Тăрать халь пилеш пит лайăх,
Çырли çиппеле ӳкесле...
Çав хĕрлĕ пилеш пит ытарлă
Çын чунĕ пекех туйăнать.
Юр ӳкнĕ чухне вăл кăварлă
Çав уйăп пекех курăнать.
Ун чух вĕсем пулĕç пĕр майлă,
Хĕп-хĕрлĕ пилеш те ман чун.
Килет пек вĕçсе пĕр кайăк
Тĕнче хитреленнĕ кун.

***

Кĕре ӳтлĕ кĕрхи çанталăк.
Кĕрен тĕслĕ чие çулçи.
Унтанпа иртрĕ шăп çулталăк,
Ун чухне те çаплаччĕ шыв çи.
Вăл тин çеç тăрăлса çитсеччĕ.
Тарă шыв юххине итлеп.
Çавă кун пĕрре çех килсеччĕ.

Тен, каллех, ак, тепре килет?
Шăнкăр-шăнкăр шур чуллă валакăн
Чăлтăр-чăлтăр сикет шыв сикки.
Шыв ҫи тăрăх, калăн, шур акăш
Юхса кайрĕ, шур кăпăк пекки.
Ҫырма тĕпĕ тӳпе майлă тарăн.
Тем те пур пуль унта, чăнах!
Акă, ҫил шыв питне хускатрĕ,
Пĕркеленчĕ шыв пичĕ кăштах.
Пĕркеленчĕ те ваталчĕ, тейĕн.
Ним те ҫук пек сухалчĕ тĕнчи.
Ҫилпеле килсе ӳкрĕ чиейĕн
Кĕрен тĕслĕ хитре ҫулҫи.
Шыв сикки тĕлĕнче капланчĕ.
Юхаймасăр тăрать ҫырма!
Пĕр кана вăл ҫапла асапланчĕ,
Асапланчĕ те кайрĕ юхса...
Кĕре ӳтлĕ кĕрхи ҫанталăк.
Кĕрен тĕслĕ чие ҫулҫи.
Унтанпа иртрĕ шăп ҫулталăк
Ун чухне те ҫаплаччĕ шыв ҫи.

***

Йĕри-тавра ҫĕр тĕрлĕ паллă:
Хĕрлĕ пилеш, сар вĕрене...
Вĕсем пире темскер каласшăн
Хăйсен пĕр вăрттăн чĕлхипе.
Ак, кайăк та килсе чĕвлетрĕ
Хĕп-хĕрлĕ пĕр пилеш ҫине.
Ҫырла ҫисе теме пĕлтерчĕ
Пуҫне кăшт тайнă пилеше.
Ак, ҫил ачи те ҫавăрттарчĕ
Сар вĕренен сар ҫулҫине.
Епле-ха вăл пĕлме пултарчĕ
Сар вĕренен чăн шухăшне.
Пĕр эпĕ ҫеҫ пăхса тăратăп
Ҫĕр тĕрлĕ паллă хушшинче.
Хăлхасăр-куҫсăр пек курнатăп
Чĕлхе каласшăн тĕнчере.

***

Ирпе шупка уйăх куртăм.
Уйăх пек ҫăмăллăн утрăм.

Утма çул çинче пӗр-ик çулçӑ
Ача тетти пек ванса юлчӗ.
Çӳлте халь йӑлтах çара хулӑ.
Ӑçта-ши вара сап-сар çулçӑ?
Çултан пӑрӑнса эпӗ кӗтӗм,
Вӑрман ӑшӗнче çӗтрӗм.
Унта эп тӑратӑп вӑрттӑн.
Такам чупса иртрӗ хӑвӑрттӑн.
Унта çулçӑ сарнӑ çул,
Чӗре сиплемелӗх пур.

***

Халь ӗнтӗ тӗнче саланать майӗпен.
Тупе те йӗпе тӑрать.
Пӗрех чунра пур тур панӑ килпет.
Çавӑ савӑнтарать!
Сӑлтавӗ мӗнре-ши тесе пӑхкалатӑп.
Тӗнче мӗне çавӑрӑнӑ йӑлт!
Кӗрхи кун çаврать – ӑнланатӑп.
Çав çаврӑсил çулçа купалать!

***

Кун килет те каять çарапусӑн.
Кунӗпех сар хӗвел пӑхать.
Хурӑнри çулçӑсем куçа-куçӑн
Каласса кӑварланчӗç пулать?
Сӑрт çинчен çырмана анмалӑх
Вӑрӑм-вӑрӑм çеç пӗчӗк пусма.
Ун вӗçне эп анса çитеймерӗм.
Çитеймерӗм те тӑтӑм пӑхса.
Ман умрах ялкӑшать пӗр хурӑн.
Çулçине ална тӑс та тат.
Талнӑ пӗр вӗçсе кайӗ хӑвӑрт.
Юнашар тӑнипех çырлахас!
Талнӑ çулçӑ вӗçет айӑн-çийӗн,
Çил çинче çаврӑнать хавас.
Çавӑнпа та тек пӗртте татмарӑм.
Çил хӑех килсе татӗ ак!
Пусмапа та тек пӗртте анмарӑм.
Аниччен эп сӑрта хӑпарам!
Сӑрт çинчен курӑнать пысӑк айлӑм.
Анса çитнӗ çынсем те нумай.
Унта пур хӑйне майлӑ талай.

Ах, анчах вӑл пире кирлӗ мар!

***

Ахалех эп хуҫрӑм йывӑҫ туратне.
Унӑн ӳсмеллеччӗ вӑрман хӳттинче.
Кӗркунне пуль терӗм, кирлӗ мар ӳсме,
Илемне кӑтарттӑр ваза ӑшӗнче.
Сарӑ тӗслӗ ҫулҫӑ тӗлкӗшет кӑна,
Унӑн ҫунмалла-ха, ун пурӑнмалла...
Хӑйӗн асапне те кӑтартмасть мана,
Вазӑра та халӗ тӳрӗ тӑмалла.
Кӗркунне ҫапла вӑл – хуҫӑлать турат.
Туратӑм пулсассӑн, пурӑнма пулать!

***

Ёнеркаҫ ҫеҫ тӳпере
Ҫӑлтӑрсем вылятчӗҫ.
Ҫӗрӗпе ҫӳре-ҫӳре
Юрату пиллетчӗҫ...
Ирпеле вара таҫтан
Ҫумӑр килсе ҫапрӗ.
Ҫул ҫинче, ҫӳлтен пӑхсан,
Ҫӑлтӑрсем выртатчӗҫ...
Сарӑ тӗслӗ те кӗтеслӗ
Самантрах ҫунса пӗтеслӗн
Каҫхи ҫӑлтӑр пек пулса
Ман ҫула ҫутатрӗҫ.

***

Кӗркунне шӑрши!..
Пур ҫӗлен ӑшши.
Сарӑ ҫул ҫинчи
Ҫил те йӑпӑлти.
Ҫулҫӑ лӑп! ӳкет,
Чӗрене тивет...
Кӗркунне ҫитсен,
Пурӑнас килет!

***

Чӗптӗртетсе тӑраҫҫӗ
Сап-сарӑ ҫулҫӑсем.
Халь-халь тапса ӳкеслӗн

Турат вӗҫӗнчисем...
Хӑш-пӗрӗ талнӑ ӳкнӗ –
Халь тин выртать ҫӗрте!
Сив ҫил килсе вӗрсен те
Вӗҫеҫҫӗ ман ҫине...
Вӗлтӗртетсе пурнаҫҫӗ
Сап-сарӑ ҫулҫӑсем.
Вӗсемпеле чӗтреҫҫӗ
Чунри ман хӗлӗхсем.

***

Хӗвел ӳкрӗ йывӑҫ витӗр...
Йывӑҫ суттӑн курӑнать.
Чиркӳре те кун пек ҫутӑ,
Кун пек ҫутӑ курӑнмасть.
Ҫутӑ халь хӑй пулчӗ йывӑҫ –
Ун ҫулҫи – хӗвел ҫути!
Ҫавӑнпа та сарӑ йывӑҫ
Чиркӳ евӗр пулчӗ-ши?
Эп унта пырса кӗретӗп,
Кӗл тӑватӑп майӗпен.
Мӗн тума, ҫавна пӗлен-тӗр,
Хӗвел ӳкрӗ ҫӗр ҫине!

***

Пур-ха, пур кӗркуннен пӗр тапхӑр –
Пиҫсе ҫитнӗ самант темелле.
Ҫӑкасем те тӑраҫҫӗ капӑр –
Ҫулҫине хӑть татса илмелле!..
Тепӗр чух ҫил татать те пулӗ,
Ҫавӑрать ҫул ҫинче пӗрмай.
Ҫул ҫинче вӗсем халь тем чухлӗ –
Йывӑҫҫи ҫинче ним те юлман!
Ӑт, ҫапла ҫав кӗр кунӗн тумӗ
Пӗрре пур та тепре ҫукрах...
Ах, ачам, сантпала тем пулчӗ –
Эс тӑратӑн ҫӑка майлӑрах!

***

Эп тухатӑп санпа тепӗр хут сунара.
Ҫуккӑ пирӗн пӑшал, ҫуккӑ йытӑ...
Пурпӗрех! Чӗрепе эп туятӑп хама хӑнара –
Хуҫисем халь мулкач та хур-кайӑк.

Халь мӗнпе сӑйласа савӑнтарӑн мана,
Нихҫан та тытман ман мулкачӑм?
Мӗн тесе каласа та хӑварӑн тата
Кулӗ ҫиййӗн вӗҫен хур-кайӑк?
Пур мулкачӑн йӗрри, пур хур-кайӑк сасси –
Ҫавсене те курса тӑранатӑп!
Тавтапуҫ, тӑвансем, сире пултӑр тавсси!
Эпӗ халӗ татах пурӑнатӑп!

* * *

Шухӑшламалӑх пур чухне
Пӗр шухӑш та килмест.
Ытла аван та, кӗркунне –
Чечекленме пӗлмест!
Тепре ҫех ҫуркунне пекрех
Пулса курасчӗ ман.
Ӑҫта, ҫак пӗтнӗ пек ҫӗрте
Шӑтса тухасчӗ шалт!
Ак, ку мӗн-ма-ха ҫак тӗлте,
Мӗн-ма шӑтать тесе,
Пӑхса та тӑрӗҫӗ сынсем
Ача пек тӗлӗнсе...
Анчах май ҫук ҫав, кӗркунне –
Курӑк пулсан та вӗт шӑтмасть!
Шӑтасчӗ манӑн кӗркунне
Ку, ҫуркунне тесех...

* * *

Тӗнче ҫути пуль таврӑнать?
Вӑрман каллех ҫунса тӑрать.
Тен, вӑл каяс чухнехи пек
Тупиййӗне ҫех йӑлт! кулать?
Ҫунать тавралӑх вут ҫинче:
Ҫунать пӗр тополь, вӗрене...
Ҫак ҫул ҫинчи ҫут чечексем
Кӗркуннехи пуль ҫутӑсем?
Мӗн-ма кӗрхи тӗнче ҫунать,
Мӗн-ма чуна савӑнтарать?..
Мӗн-ма тесен вӑрман аван –
Мӗн илнине вӑл халь парать!

* * *

Чечексем, юлашки чечексем
Юлашки пулнăран-ши хитре?
Пĕр хурт евĕр пĕччен майĕпен
Эп çӳретĕп вĕсен хушшипе.
Пит хитре те вĕсем, темĕскер
Эп тупатăп хурт евĕр апат.
Мĕн апачĕ – чуна çĕклени,
Чечек евĕр çутта иленни...
Çав туртать пулинех чунăма.
Чечек пек пулас килчĕ-и, тен?
Хурт тени, пултăрах, сăхтăрах!
Тен, халь манăн та тухĕ куççуль?
Сăхса илтĕр çавна сарă хурт,
Кăшт çутаттăр хĕвел хыттăрах!...
Ун чухне юлашки чечексен
Вăй тухать пурăнмалăх татах.

* * *

Тул çутăлать...
Тулать сын саслă
Çак ĕнпĕркенĕ шур тĕнче.
Таçта кулать пĕр хĕр хаваслăн,
Сасси килет çутăпала.
Ак, çын иртет...
Таçтаваскать хăй.
Пуçне пĕксех çулне уçать.
Тул çуталать хайне пĕлсех пуль –
Çынсен çулне те çутатать.

* * *

Ир çинчи хĕвел
Вăрттăн шухăшлă хĕр пек
Хĕрелсе пăхрĕ.
Шурă юра та хĕрлĕ тĕс çапрĕ...
Юнпа сĕт хутăш ĕçсе вăй пухнă паттăр пек
Хĕл хăйĕн вăйне ниçта кайса хураймасăр
Шурă шăлĕсемпе шатăртаттарса илчĕ...
Эпĕ чăтаймарăм, çĕлĕке пусарах лартрăм та,
Кукăр-макăр сукмакпа васкарах утрăм...

***

Сип-сивӗ ҫӳлӑхра чӑлтӑртатать тӗнче.
Хӗвел тухать. Ҫунать кӑвак тӳпе.
Ҫӗркаҫ шӑнса ҫитмен хура сукмак ҫинче
Куллен чӗкри пӑр чӑнкӑртатайрӗ ерипе...

Хӗлле ҫитет. Юр ӳкнӗ вырӑнта тӗл-тӗл
Хура тӗмескесем шутлаҫҫӗ хӗл каҫма.
Ҫурла ҫут уйӑх вырмара пек халӗ
Пӗр ҫӑлтӑр хӑвармарӗ шунӑ май.

Аван мана ҫапла утса пыма.
Сив ҫил те, ҫак хура вӑрман та
Мана халь саламлаҫҫӗ хӑйне май –
Кун пеккине чылайранпа курман.

Чӗре ман савӑнать сивӗ пулсан та.
Ман чунӑм ялтӑрать тӗнче пекех.
Ҫут кунӑм майӗпен иртсе пырсан та
Тӑрса юлать асра вӑрман пӗрех.

***

Хӗвел ури пуль талса ӳкрӗ
Ура айне ку вӑрманта?
Кӗркуннеччен вӑл шӑппӑн ӳснӗ...
Паянтанпа вара – кӑвар!
Кӑвар пекех выртать ҫап-ҫуттӑн
Пӗр вӗрене те ҫумӗнче...
Кӗркуннепе шӑнса ҫитсессӗн,
Хӗвел, тен, хутнӑ кӑмака?
Кӑмакине хутсан-хутсан
Кӑварӗ юлнӑ ҫакӑнта.
Ас ту, асӑрханса утсам!
Хӗвел тӑкать хӑй кӑварне
Утма ҫулпа ура айне...
Пӗр хӗрача пӑхса тӑрать-и,
Ку мӗн вара текелесе?..

***

Ҫумӑр ҫума пуҫларӗ...
Мӗн те пулин пулать.
Ҫил пӗлӗте хӑваларӗ –

Пӗлӗт ҫӑвать те ҫӑвать...
Ҫумӑр ҫусан, пӗлетӗр.
Халь пурӑнма пулать...
Эпӗ те ҫумӑр евӗр
Ӳкнӗ пекех тӑвап...
Манӑн та, ах, ӳкесчӗ
Ҫак типӗ ҫӗр ҫине.
Ӳксен те ӳкме пӗлесчӗ
Пӗр шур чечек ҫине.
Ҫав шур чечек, пӗлетӗр,
Питӗ кӗтсе ҫумӑра...
Ҫумӑр ҫусан килет-тӗр
Пурнӑҫ тени тата.

***

Ҫутатайрӗ мана кӗрхи кун.
Эп ҫуталтӑм пӗр сар вӗрене пек.
Халӗ тин вӑранать манӑн чун,
Халӗ тин ҫулҫӑ пек эп вӗҫетӗп...
Тахҫанах ҫурхи кун шевлипе
Вӑрансаччӗ ман чун пуҫласа.
Ун чухне кӑларсаччӗ ҫеҫке,
Ташласаччӗ ун чух вӗрене...
Ҫу та иртрӗ, эп ӳсрӗм кӑштах –
Манӑн вӑррӑм та пур пурӑнма!
Халь тинех эп татах вӑранса,
Эх. пурнасчӗ-ха, теп, ташласа.
Ҫутатайрӗ мана кӗрхи кун.
Эп ҫуталтӑм пӗр ҫак вӗрене пек...

***

Пӑхса тӑранма май ҫуккӑ тӗнче
Йӑлтӑртатать халь куҫ умӗнче.
Шакла кастарнӑ шурӑ хурӑнсем
Пуҫне тайса тӑраҫҫӗ майӗпен.
Ҫулсем таса. Пылчӑк тени ҫукрах.
Ҫумӑр ҫуса та тертлентерчӗ вӗт!
Утса пыран та, хӑлхана ҫурать
Пӑр ванчӑк сасӑ. Кӳлленчӗк куҫлӑ
Тӗнче пӗр ҫав тӗлте халь вӑранать.
Ҫук, ку тӗнче куҫ пек ҫиҫсе тӑрать!
Илсе каять халь тин мана инҫет.
Сар ҫулҫӑсем халь тин курнаҫҫӗ

Шыв ăшĕнче. Хăш-пĕрисем вĕсем
Асамлă пулăсем пекех ишеççĕ,
Пĕри ура айне лекет. Çук, тараймасть,
Çулçăсене кӳлленчĕк пуçтарать.

***

Пит аякра ман чун – пахча çути,
Эп лартнă йывăççен шăв-шавĕ...
Пит аякра пулсан та çав тăста çити,
Тăста çити каять çав чун пăлхавĕ.
Ак, эп утса тухатăп пахчана...
Пиçсе çитен панулмисем ӳкеççĕ пат!
Ман чунăм таталать çав вăхăтра,
Таталнă чух вăл панулми пулса.
Ӳсеççĕ пек-ха хурлăхан та слива,
Чуна савать пĕртен пĕр çӳлĕ туя.
Çĕр тĕслĕ йывăçран пырса тытсан,
Ман чунăм та ӳсет çав йывăç евĕр.
Тен, çавăнпа ман чун – пахча çути.
Вăл аякра та пурпĕрех пăлхавлă!
Пахча ӳстернĕçем кĕрет пурнăç тути.
Те йӳçĕ вăл, тепĕр чухне пылак та...

* **

Çырса вĕçне çитереймен çыру пек лӳчĕркенчĕк
Кĕрхи пĕрремĕш çулçă ӳкрĕ çул çине...
Çил-почтальон вĕçтернĕçем кӳлленчĕк
Тĕл пулчĕ те...
Çыру вара, вуланăçем, кăшт куççулленчĕ...
Ара, унта çырса вĕт юрату çинчен!
Хăй савнипе тĕл пуласса пит кĕтнĕ,
Сив çил кастарнă чух турачĕ кӳтнĕ...
Пĕрех кĕркуннене кĕтсех те илеймен,
Текста чăн юрату сăмахĕ кĕртеймен...
Выртать вăл халь кăшт сарăхнă та ванчăк,
Ку мĕн тесе, кăшт шăрпласа пăхать пĕр анчăк.

***

Çумăр çапса тухрĕ ман çула...
Эп тармарăм. Манăн çул таса.
Çулçă сарса тухнă вĕт ăна!
Çав пичетлĕх пулчĕ-ши чуна,

Шăпа евĕр çул хывма тата.

***

Ăмăрлă пĕр кăмăлсăр çанталăк
Çумăр çунипе кĕвĕленет.
Пуç çине эп карнă хӳтĕ чатăр
Ман çине пĕрех шыв ӳкерет.
Ӳкерин! Ӳкерчĕк – шыв кӳлленчĕк
Пĕлĕт çутине кăшт евĕрлет.
Ун çине ӳкен тумламĕ вĕттĕн
Тĕтре евĕр тĕнчене тĕрлет.

***

Шутлать çут çанталăк:
«Халь мĕн-ха пулать?»
Каллех тем пулас пек
Шур юр тăкăнать.

Тăкать те кăшт вăрттăн
Ун-кун пăхкалать.
Юр çунă чухне те
Чăнах тем пулать.

Ак, чăлт! вĕçсе анчĕ
Пĕрчи ал çине.
Çанталăк хăвачĕ
Пур пек тĕррине.

Унтан килсе çапрĕ
Питрен çил ачи.
Вăл темĕн каласшăн
Шăхрать ши! те ши!

Килет Хĕл Мучи те
Питрен чĕпĕтет.
Тулли хутаççийĕ
Часах иксĕлет.

Тур пек васкамасăр
Çанталăк шутлать.
Пĕр сас кăлармасăр
Юр вăрттăн çăвать

***

Хĕвел çутипе çуталнă юр
Тĕнчене урăхла кăтартрĕ...
Тĕнче-мĕн тĕлĕнмелле шурă!
Çынсем те юр айнех юлнă...
Тен, çынсем те юр пĕрчи пек
Таçта йăлтăртатаççĕ пуль...
Паян, тен, çынсен çут чунĕ
Çўлтен ман çине çурĕ?

***

Пас тытнă йывăç пит хитре...
Шутлаттăр, темĕнле юмах
Хăй тĕнчине чĕнет пире.
Ирпе тăрсан, çапла, чăнах,
Тухса уталтăр та ĕçе,
Пăхса пыраттăр тĕлĕнсе...
Мĕн-ма вăрман тăрать хитре?
Пас тытнăран, паллах!
Анчах таçта, сисет чĕре,
Сăлтавĕ-мĕнĕ тарăнрах...
Йывăç пас тытнă вăхăтра
Турат ярасшăн пулмалла:
Юртан пулсан та çулçă пек,
Юртан пулсан та çеçкере!

***

Тулта шурă юр – сив хĕлĕн шур тумĕ.
Стена çумĕнчех юр пĕрчийĕн пĕр хумĕ.
Пăхать кантăкран юр çине хĕрлĕ роза.
Калăн, хĕлпе хĕрлĕ роза пĕр ăслă.

Эп те пулатăп вĕсемшĕн юлташ.
Эп те юр йатăп, йывăç тавраш!
Шурă та хĕрлĕ тĕспе киленеп, –
Хам эпĕ симĕс пулма килĕшеп!

Тăтăм та тăтăм хĕл умĕнче.
Питĕ те çăмăл çеçке çумĕнче.
Паçăр кăна хама эп вăрçаттăм...
Халĕ вара çĕнĕренши çуралтăм?

***

Каҫ чунлă пулĕ – чарăнмарĕ
Шур юр тăкма ман пуҫ ҫине.
Темле пулсан та хуплаймарĕ
Ҫула, хăварчĕ хыттине.

Вăл чарăнать тесе шутларăм,
Канма пĕлмесĕр утнă чух.
Кӳлĕ тавра миҫе хутларăм?
Самантлăха пулин те тух!

Икĕ тĕнче, ик тĕрлĕ туйăм:
Пĕри пулать тăр кăнтăрла.
Тепри килет пĕрмай каҫкулĕм,
Куҫа хупсан та курмалла.

Каҫ чунлă пулĕ – чарăнмарĕ
Шур юр тăкма ман пуҫ ҫине.
Ăна никам та ăнланмарĕ –
Телей ҫăвать-мĕн каҫхине!

***

Халь тин мĕне вăл пĕлтерет?
Каллех мана тĕлĕнтерет.
Вĕҫет шур кайăк пек умра –
Ун юррине юрлать йăмра.

Шур юр ҫăвать, шур юр ҫăвать!
Ман чунăма вăл шуратать...
Мĕн-ма тесен, вăл юратать,
Тен, ҫавăнпа хĕн-хур курать?

Шур юр ҫăвать, шур юр ҫăвать...
Ман пĕвĕме вăл явăнать.
Хура ҫĕре йăлтах хуплать.
Тен, Хĕл Мучи халь куҫ пăвать?

***

Тăр кăнтăрлах хĕвелĕм анчĕ.
Тĕнче, тен, ача пек кулянчĕ?

Хӗлле хуҫа пек хуҫаланчӗ,
Хула урамӗ те пушанчӗ...

Мӗн-ма мана ҫак пӑлхантарчӗ?
Ман чӗрене йӑлт шуйлантарчӗ?
Анать хӗвел вӑрман хӗрне...
Шевли ӳкет сан пит ҫине!

Хыпса илейтӗн шӑл-кӑвар.
Санпа тӑма халь ҫӑмӑл мар!
Атя, пулатпӑр пӗр кавар?
Ҫук, кирлӗ мар. Тем тӑвар мар.

Анчах та темӗн пур тата
Сан ҫумӑнта та аякра...
Таҫта кайма пур ухата –
Пӗр ҫӑлтӑр тухрӗ тапӑра!

Ҫунать анчах вӑл ман ҫумра.
Чечек ҫурать пуль шӑн йӑмра?
Мӗнрен килет ку япала?
Анать хӗвел тӑр кӑнтӑрла!

***

Ҫул хӗрринче пӗр тӗмеске...
Шур юр ҫине ӳкет мӗлке...
Чуна тӑм тытнӑ пек таҫтан
Аса килет сап-сар вӑрман.

Аса килет сап-сар кӑмпа.
Тӑвататӑп кӑмпапа тупа!
Тахҫан асамлӑ вырӑнта –
Шур юр тата пӗр тунката.

Ларса канатӑп пӗр кана.
Итлетӗп ватӑлнӑ чуна.
Тем хускалать пекех шалта.
Ҫын пек ларать вӗт тунката!

***

Малтан унне куҫне тӑм илчӗ...
Кайран пачах курми вӑл пулчӗ.

Шап-шурă хĕл пĕр сассăр килчĕ –
Çут тĕлĕкпе ман чунăм тулчĕ.

Вăр çаврака çеç симĕс куçлă
Пăхса вырттаттăн пĕлĕте.
Санпа тахçан пулса эп туслă –
Çитсе курман ку чух пĕртте!

Хĕл сиввинчен ăшша тухсассăн
Пырса курсаччĕ каç енне...
Çил ачипе кăшт тĕл пулсассăн
Хум ывăтаттăн çыр çине...

Унтанпала ман алă сыхрĕ
Вил туйĕ хыççăн чĕрĕ туй.
Хĕлле каллех килсе ак тухрĕ –
Ман чĕрере вара пуш уй!

Ман куçăма та, тен, тăм илчĕ?
Çавра кӳлле курми вăл пулчĕ.
Шап-шурă хĕл пĕр сассăр килчĕ –
Çут тĕлĕкпе ман чунăм тулчĕ.

***

Чĕр туратран тытма хăрарăм...
Чĕтрет халь те тута хĕрри!
Мĕн-ма юр пек ларса юрларăн,
Çапла юрлать-и юр пĕрчи?

Унта çеç мар-ха та ун айăп...
Çук, вăрттăн шухăша пĕтерĕп.
Ӳкет çӳлтен пĕччен пĕр кайăк –
Хама унпа пĕрле вĕçтерĕп!

Чĕтревлĕ эп, енчен чĕр ӳтлĕ
Тĕнче пулать хĕл кунĕнче.
Тута çине шур пĕрчĕ ӳкрĕ –
Çав чĕпĕтет чун тĕпĕнче!

***

Юр пĕрчи пуль пачĕ паллă.
Йывăçăн турачĕ те тăмхаллă!
Ун çинче темле пĕр вăрттăн алăк –

Çут çанталăк вăл хăех пĕр палăк!
Эпĕ халь çӳретĕп йывăç айĕн.
Йывăççем тăраççĕ тăван майăн.
Ал çине пĕр туратне илесчĕ,
Юр пĕрчи пек вăрттăн ирĕлесчĕ.
Çут тăмха пулса ӳкесчĕ вăрттăн.
Ав, епле ун папкисем тăртаннă!
Çил çинче вĕсем халь питĕ шăннă.
Ман тута çинче кăштах та ăшăн!
Тутлă-тутлă тутанса пăхмалăх
Вăрманта та пур ман пек пĕр халăх.
Çутă-çутă юр выртать çутмалăх.
Юр çăвать, çăвать чуна уçмалăх.

***

Урамра вăйлă тăвăл кĕрлет,
Урамра халĕ тĕттĕм тăрать.
Мĕн вара пит ачашшăн каласçĕ?
Ман çине куç илмесĕр пăхать.
Çурхи кайăк пуль ку вĕçсе килнĕ?
Ӳкнĕ пĕр юр пĕрчи ирĕлет.
Хĕл Мучи майĕпен вилчĕ,
Ман чĕре вара тин чĕрĕлет.

***

Вăрăм чăрăш авăнать те
Чăпар куккук авăтать.
Ăшă чухне, мĕн калăн,
Мĕнпур тĕнче савăнать.
Сив хĕл çитсен, пас тытсан,
Куккук сасси çухалать.
Ун вырăнне турат çинче
Юр чăмакки курăнать.
Чăрăш каллех авăнать,
Куккук ларнă пек туять.

***

Тултан илтĕнет хурлăхлăн
Кайăк сасси аран.
Тĕлĕнмелле те туйăмлă
Маншăн тĕнче паян...

Ирхи шăплăхран халлă
Çĕн кун сăрхăнса кĕрет.
Ĕçе васкакан халăх
Урам тăрăх хăвăрт çўрет.

А, эпĕ вара ларатăп,
Туятăп – мана та аван!
Çав куншăн сăмах калатăп,
Кайăк пек саслă пулсан...

Тин-тин! терĕ, чăн та, кайăк
Пăхрĕ килсе кантăкран.
Çав кайăк пулас хушса пачĕ
Хăй кăмăлне чунран...

***

Хăтлă хутлăх çакă чăрăш...
Айĕнче тăрса пăхсам!
Çилĕ пулчĕ питĕ чăркăш,
Тăкăнать йĕкел пĕрмай.
Алла илтĕм, пĕр йĕкелĕ
Питĕ çуттăн курăнать.
Хупписем ун пит йĕркеллĕ.
Тен, вăрри те тупăнать?
Кайăк евĕр-и шырарăм
Тутлă чăрăш вăррине.
Эп шырарăм – тупаймарăм.
Кайăк мар çав... Ирхине
Эп апат тума пĕлмерĕм,
Пăхса чăрăш тăррине.
Эх, унта йĕкел çĕклемĕн
Çакăнса тăрать илемлĕн,
Çуллахи куна кĕтсе.

***

Таçта вăрманта шалта шурă-шурă...
Таçта чăтлăхра шур вĕçсĕрлĕх пур.
Таçта çавăнта çўрет манăн чунăм,
Таçта çавăнтах вĕçет шурă юр.
Унта эс турат пек, унта эсĕ Турă.
Унта уйăп евĕр ман кайăкăм пур.
Унта упранать шур хĕлĕн чăн мулĕ,
Унта юрламалăх ман юрă та пур!

Таҫта вăрманта шалта шурă-шурă...
Таҫта чăтлăхра шур вĕҫсĕрлĕх пур.
Таҫта ҫавăнта пурăнать манăн туррăм,
Таҫта ҫавăнта вĕҫет шурă юр...

## ЧĂВАШ ПУРНĂҪĔ

***

Тĕтреллĕ уй, тĕтреллĕ пурнăҫ
Ăҫта ҫитерчĕҫ, хăш тĕле?
Тĕтре пĕрмай сĕре ҫеҫ ҫурĕ,
Пĕлмерĕ пĕлĕт мĕнлине...

Уй тăрăх эпĕ лăпкăн утрăм,
Шырарăм пурнăҫ никĕсне.
Таҫтан ҫӳлтен ҫеҫ лăпкăн ҫурĕ
Тĕтре, каларĕ тупкăмне...

Каларĕ те, чăн пурнăҫ килчĕ,
Хĕвел те тухрĕ майĕпен.
Вăл пăхнăҫем телейĕм ҫитрĕ,
Уй урлă лăпкăн утнăҫем...

***

Хура халăх, тетчĕҫ. Ăнланмастăм.
Эп хура-и, теттĕм. Хамăрта
Эпĕ курнă шурă тум кăна...
Пурпĕрех эп ҫав ята манмарăм,
Хура халăх пултăм тăтăм... Кур!
Кур-ха, кур. Халь тин хама уйрапта,
Хура ҫын пулса тăрап та...
Тĕлĕнтерчĕ ку тĕнче. Мĕн ĕмĕр
Ҫӳресе чăваш пулса тахҫан...
Пĕринче ҫапла янрарĕ уҫлăх.
Хура халăх, эй! Тăрсам ҫӳлте!
Мĕншĕн эсĕ хура ҫын пек хурлăн
Хăвна ху пусартăн-им тата?
Эсĕ мĕн, чура-и пулса курнă,
Ҫĕнтерменим эсĕ пурнăҫра?

Ку самант, ак, манш̆ӑн пулчĕ
хурçӑ.
Эпĕ туйрӑм, эп хура, чӑнах!
Эп хура! Чӑн турӑ Хор пек эпĕ
Хӑрататӑп тĕнчене пӑхса...
Кам курать мана, ку, тейĕ, Турӑ!
Çавӑнпа та эп пĕлмес ӑна!
Çавӑнпа пуль чӑвашсем çӳреççĕ
Пĕр пĕлмесĕр турӑ мĕнлине.
Хура халӑхӑм, ӑçта халь эсĕ,
Халь ӑçта сан Турӑ, пур-и вӑл?
Манӑн Турӑ пулчĕ тачĕ халӑх.
Хура халӑх манӑн Турӑ халь!

***

Чӑнах та, пур-ха шур хĕрсем –
Шап-шурӑ уйӑх пек пӑхаççĕ...
Тепĕр чухне сӑмах хушаççĕ –
Илтсен те калӑн, Тур тесе...
Турӑ пекех, чӑнах, лараççĕ –
Тур тесенех, пуçна хӑть çап!
Мишша çинчен, çук, шутламаççĕ,
Вĕсем шутлаççĕ кил çинчен.
Тин çеç вĕсем килтен халь çитнĕ,
Килтех çӳрет пуль шухӑшĕ.
Унтах килтерĕш те, каччи те...
Унтах выртать вĕсен чĕри!
Тен, çавӑнпа та шутламаççĕ
Мишша çинчен пĕр шухӑш та.
Вĕсенĕн чĕрисем çӳреççĕ
Пачах та урӑх сукмакпа.
Тен, çавӑнпа эп çилленместĕп.
Эпĕ пурри вӑл мур тĕпне!
Енчен те шур хĕрсем килеççĕ,
Кунта пулать хӑй пĕр тĕнче!

***

Юр çунӑ чух ку шухӑш кĕчĕ...
Ӑçта, тет, пулнӑ ку чӑваш?
Мĕн-ма халь тин чӑн чӑваш ячĕ
Нихçан илтмен пек янӑрать?
Ӑçта çӳренĕ эс, тӑванӑм,

Пиншер çулсем тăршши чăтса?
Вара сана, тет, каламан-и,
Ăçта каян, чăваш, тата?
Мĕн-ма сана чĕнсе «пăлхар» пек,
Мĕн-ма ят илнĕ эс, «сăвар»?
Таçта пулса тет-и «ар» пек те,
«Ĕçхĕл» те, «агаксем», «пăртас»...
Такам та пулнă эс, куратăп,
Хăвăн ятна çеç кăтартман.
Мĕн-ма тесен, эпĕ шутлатăп,
Хăй чăн ятне калаттарман!
Чăн ячĕ ун – чăваш! Пит вăрттăн
Хăйне упранă çав ачаш.
Вăхăт çитсен вара каланă –
Ак, эпĕ вăл, эпĕ чăваш...
Чăваш тесе каласанах
Тĕнче те Турă пек çуталнă.
Чăваш килсен, тĕнче пулать,
Тĕнче татах аталанать...
Юр çунă чух ку пулса иртрĕ...
Тĕнче пĕтсе килсен чылай
Хăйне таçта пытарнă чух та
Каллех чăваш пек тыткаларĕ,
Çак тĕнчене те ыпаларĕ,
Илес пек тăчĕ хăй çине...
Чăваш-ха эп... чăвашччĕ эпĕ
Пиншер çулсем те каярах.
Çапла пире чĕнсеччĕ... Халăх
Таçта «шыв ашшĕ» пулнă чух.
Пире «патша» тесе пăхатчĕç
Çăлтăрсене шутланă май.
Эпир, тен, пулнă Турă хамăр,
Мĕн ахальтен-им халĕ те
Хĕвел те пур, тесе тăратпăр.
Эпир çав чаплă вăхăта
Халь тин каллех аса илетпĕр...
Эпир чăваш халь, чăн чăваш,
Эпир каллех шыв пуç пулатпăр!
«Шăваш» та халь, «субар» та, тен,
«Шумер» та, тен, кăштах «пăлхар»,
Тахçан, тет, пулнă эпĕр «сăхăт»,
Унтах «пўлейĕ» те «пўлерĕ»...
Нумай пит сăнлă-çке, апай,

Эпир такам та пулнă май.
Çапах та пулнă эпĕр халăх!
Пĕр халăх пек чăмăртанса
Тĕнче хĕрне çитсе çĕкленнĕ...
Мĕн-ма тесен чăвашшăн çуннă,
Чăвашшăн çуннă ĕмрипех!
Çав чăн ята эпир упранă...
Чутах тыпатчĕ вĕт усал!
Тен, халĕ те тытса пăвасшăн...
Анчах мĕн чухлĕ халь чăваш,
Халь вĕсемпе эс мĕн тăвайăн.
Чăваш тăрать çанталăк пек.
Кирек мĕнле килсен те вăл,
Пĕрех ăна халь лайăх теççĕ...
Шур юр çăвать-ха, ан хăра...
Тен, çавăнпа чăваш çĕкленчĕ
Авалхи пек, юр çунă пек...

* * *

Чĕлхе çинчен тепре шутларăм,
Пĕтĕм ĕç-пуçăма сирсе, эп патăм
Хам сассăма – тĕнче илтмелĕх...
Пĕр сассăр тăнă чух, чăнах та,
Мана аванччĕ пурăнмашкăн...
Никам та ним те каламастчĕ,
Тĕнче те ним те шарламастчĕ...
Пĕр сассăр тăнă чух... Сасартăк
Хам сассăма эпĕ кăлартăм...
Тем пулчĕ пек – тăнларăм та –
Тĕнче чĕтревлĕн сиксе илчĕ.
Хăрарĕ пулинех, чăнах та,
Анчах та ман янравлă сассăм
Ун чĕринчех пытаннă пулĕ?
Тĕнче пĕр ахрăм сас кăларчĕ...

* * *

Чĕрем пĕтменшĕн савăнатăп...
Кирек мĕне курсассăн та
Пĕр кайăк пек темле хавассăн
Сиксе илет çунат сарса...
Ак, темĕнле тĕнче хайлавĕ –
Ăна пĕлесшĕн вăл çунать.
Е тепĕр чух пăр пек тапранĕ –

Халăхпала та пĕр пулать...
Е пĕр хĕрарăм тĕл пулать те,
Чăнах та, Турă пек тапать.
Ун пек чухне вăл хăй те чаплă,
Арçын пекех паттăрланать...
Чĕре пурришĕн савăнатăп.
Чĕре пĕтмест-ха, пурăнсан.
Мĕн-ма тесен, тĕнче вăл хăй те
Ман чĕрепе пулать пĕр тан!

***

Шăплăх хуçаланать чунра...
Тĕнче шăпланнă чух, чăнах та,
Эп хам та шăп çÿретĕп пуль?
Калатчĕр, тетĕп, эп тем мар,
Чĕнмесĕр çÿресен те юрĕ...
Çынсем вара пĕр чăрăнми
Çак тĕнчене сÿтсе яваççĕ...
Эп шăп тăрап. Калаçчĕрех!
Тĕнче, теп, тен, кăштах лăпланĕ?
Пĕр çын лăпланнă чух кăштах
Хайне те вăл татах ăнланĕ...
Мĕн-ма тесен, сас кăларсан та,
Сăлтавсăр мар вĕт кăларатăн.
Кăларасса та кăларать,
Пĕр шăплăх çеç. Çав çуратать!

***

Тĕнче туталлă та çут куçлă,
Калаçнăçемĕн, сас парать.
Çавăн чухне тути ун туллă,
Куçĕ ачан пек ялтăрать...
Ак, пĕринче ăна каларăм:
«Мĕнле эс çутă та таса!»
Тĕнче вара пĕр сас памарĕ –
Тути çеç кулчĕ кăштарах.
Эпĕ тата темскер тăваслăн
Калатăп тулла сăмахсем...
Каланăçем, тĕнче тăванлăн
Ыталанçи тăвать çемçен...
Сисеп, вăл хăй те тем каласшăн,
Темскер тăвасшăн пуль манпа?..
Анчах тĕнчен тути-ши калнă,

Е ҫута куҫё суккӑрланнӑ?
Ҫук, шарламасть, темле вёрӳҫён
Кӑшт пӑхкалать те йӑл кулать.
Эпё вара вут пек хёрӳҫён
Татах, татах та калаҫап...

***

Мён-ма калаҫҫё: пӑлхартан
Эпир пулса кайса...
Ниҫтан та эпёр пултарман –
Эпир пулса ялан!
Пӑлхар пекех, тен, сӑвар пек
Эпир те пулнӑ авалтан.
Чӑваш, анчах, кӑшкӑрашман,
Вӑл никама та хӑратман...
Тен, ҫавӑнпа историксем
Асӑрхаман та чӑваша.
Вёт халь те, чӑвашсем ӑҫта,
Тесе ыйтсан ку уҫлӑхран.
Пёр сас та илтёнмест вара –
Йёри-тавра чӑваш тӑрсан та!
Чӑваш нихҫан та шарламасть,
Хӑй пуррине вӑл кӑтартмасть.
Ҫын пул-ха, тет, те пурӑнать,
Ӑна вара никам курмасть.
Вӑл никама та курӑнмасть!
Вӑл сывлӑш пулё, тен?
Тен, ҫавӑнпа историре
Ун йёрё палӑрмасть.
Ку, питё пысӑк шухӑш пек,
Ку, пирён вӑрттӑн ҫул.
Чӑваш ӑҫта, тесе ыйтсан,
Турӑ калать – пёлмес!
Турӑ пекех вӑл, кам пёлет,
Ниҫта та курӑнмасть.
Чӑваш, тет, курӑнсан вара,
Вара – тёнче пётет!

***

Мён пулса иртнишён эп яваплӑ мар.
Яваллӑ ҫак пурнӑҫ хӑй ҫапла тӑвать.
Пёр пёрне халь ёнтё уямастпӑр та,

Явăл хăй кунне пуль уявлать?
Çавăнпа та тухрĕ ик куçран куççуль.
Эсĕ пуль шутларăн, ну, усал ку çын.
Темĕн чул халь ĕнтĕ каласан та пуль
Эсĕ ĕненместĕн, айăплатăн та...
Эпĕ мĕн каларăм, вăйлă, терĕм, чун.
Хурланса лармалăх вăхăт çуккă та!
Эсĕ вара, куртăм, пĕр кĕтмен çĕртен
Макăрса та ятăн. Мĕн тăвас халь тин?
Алă, туртăнасчĕ! Ачашлас кăштах,
Кăмăл, хĕрхенмелĕх, пурччĕ-ха татах.
Ах, анчах вăл пулчĕ тата пысăкрах
Маннинчен çĕр хут та. Çапла пултăрах!
Ачашла çĕкленнĕ алă уссăрах
Халĕ ак выртать-ха ман çумрах.
Эпĕ тек пĕлмерĕм ним те калама.
Эсĕ чарăнмарăн куççуль юхтарма.
Эсĕ мĕн пит вăйсăр, пит черчен чуну.
Тахçанах кĕтет мĕн ярăнма чуччу.
Ярăнас килет çав лайăх пурнăçра!
Пурнăçĕ халь ĕнтĕ, ху курса тăран.
Урама тухма та каçпала хăран...

***

Тĕлĕнетĕп хитре тĕнчерен.
Хăш чухне вăл, чăн та, питĕ тĕссĕр.
Хĕрхенсе çÿретĕн чĕререн,
Эс шутлатăн, мĕншĕн-ха вăл хĕссĕр?
Мĕн тума вара мана валли
Кун йышши пĕр тĕссĕр çут çанталăк?
Хура тĕс ахаль те чун тулли.
Эсĕ пул чуна кăшт çутатмалăх.
Çитĕ-ха, тесе эс калăн та,
Çитĕ-ха çап-çутă нарăс кунĕ.
Ун чухне тапранĕ чунунта
Авалтан упраннă халăх юнĕ.
Хĕвеле пуç çапăн та, ара,
Тепĕр хут тĕнче каллех çĕкленĕ.
Турă пана çутă хăвата
Чăвашсем çапла тет хисепленĕ.
Тĕлĕнетĕп тĕссĕр тĕнчерен.
Хăш чухне вăл чăн та питĕ тĕссĕр!
Тимлеме пĕлсессĕн чĕререн

Пулмĕ вăл тек нихăçан та хĕсĕр.

***

Çумăр пекех сырма пĕлесчĕ
Çĕре тумламăн шăварса.
Çырма пекех пĕрре кĕрлесчĕ
Куçран куççулĕ кăларса.

Ăт, сырнă ку, тесе калатчăр,
Çемçе çĕрпе те утнăçем.
Çырма патне çитсен аптратчăр,
Сиксе каçма та çук тесе.

Çумăр пекрех халь ман сырасчĕ,
Çемçен, вăрахăн, каниччен...
Кайран вара пĕтсе каясчĕ,
Хĕвел те тухтăр эп пĕтсен...

Хĕвел çинче вара выльятăр
Тумлам пек сырнă пин сăмах.
Сар кайăк та хăй май юрлатăр
Эп сырнине ирпе пĕрмай!

Ăт, çавăн чух вара лăпланăп,
Умри пĕр тĕкĕр пек пулса.
Эп пĕлĕтри пек пурăнатăп,
Çĕре те кĕрĕп сăрхăнса.

Унтан вара, каллех, куратăр,
Шăтса тухатăп курăк пек.
Ĕне те сурăх шатăр-шатăр!
Çисе çÿретĕр кунĕпе...

Халăх çавна курса калатăр,
Çумăр çусассăн çĕр çине
Чăвашăнне пĕр уямасăр
Ĕни çиет мĕн сырнине!

***

Ай, хай, пурнăç иртет, пурнăç иртет...
Вăхăт иртни пĕтерет!
Ĕнтĕ пирĕн пурнăç çинчен
Шуплама вăхăт çитет.

Пурнăç тени, мĕн тени?
Ача чухне калатчĕç –
Пурнăç тени кулă мар!
Халĕ вăхăт иртрĕ те
Мана ним те кирлĕ мар.
Пăхкаласа выртнă чух
Сентре çинчен ÿкес мар!
Ай, хай, вăхăт иртрĕ-çке,
Шутлă кунсем юлчĕç-çке...
Ун пек чухне мĕн тăвăн, –
Пуçа çапса кĕл тăвăн.
Вилĕм кусран пăхнă чух
Тур пуррине чухлатăн.
Ялтан тухса кайсассăн,
Ăçта выртăн, пĕлместĕн.
Ĕнтĕ элĕр пурте харсăр.
Çамрăк чухне ăссăрла
Тем те тунă пулĕ, ахăр,
Тен, пире ылханнă та...
Халĕ тин пире касăрчăр,
Эпир хамăр та халь ватă.
Çавăнпа та çула майăн
Ал сулсах ăсатăр-ха.
Вăхăта сутăн илеймĕн,
Вăхăт хăй вăл калĕ-ха!
Тен, ăна тăсма пулать пуль
Ĕмĕрлĕх пĕр ĕç тусан.
Пĕр çав ĕçшĕн, паллă ĕнтĕ,
Çамрăклах пĕтеççĕ те...
Ман вара, ман вăхăт пур-ха
Çав ĕçе туса хума.
Вăл ĕçе эп пуçăнман та!
Вилĕме кура кăна
Эп ăна пуçлатăп-ха.
Вăхăт çитрĕ, чăн та, чан пек
Чанн! çапать пек хăлхара.
Ку чăн пек пулса тухсан та
Ас тивме кăштах тăхта!..
Тураса пĕтернĕ кунăм
Тăварлантăр купăстан!
Ун чухне вара мĕн калăн,
Çиме лартăнах пулсан...
Ай, хай, пурнăç питĕ йÿçĕ,

Купăста пек йӳçрĕ-çке!
Кам-ха калĕ, вăхăт йӳçĕ –
Çулçă евĕр вĕçрĕ-çке!

* * *

Мăн асатте тахçан лартнă йăмра,
Хăрса çитнĕскер, çырма урлă
Тинех пĕрлештерчĕ ик çырана...
Выртать пулĕ халĕ хăрах.
Йăваннă чухне, çил вăйлансан,
Тен, кăшкăрнă пулĕ – хурах!
Анчах та патне никам та пыман.
Тăвăллă чух çын чунĕ çукрах...
Ун пеккисем, чăнах та, пайтах!
Пĕр чунсăр юлсан, чăнах та,
Хăвна эс туян йывăртарах...
Çапах та эс калăн: ним мар!
Пĕр кут та пĕр пуç – урăх килмар!
Çӳретĕн вара пĕр кĕлеткен...
Мĕлке пек кaçпа йăлт пĕтен!
Çак кун та кайсассăн, тĕттĕмре
Пĕлеймĕн хăвна та, ху камне...
Пĕр çутăсăр юлнă çак тĕнчере
Çугă шырать пĕр чĕре...
Темскерĕ кaçпа хаяррăн тухать,
Сиксе ӳкес пек карăнать!..
Ак, ухă та ячĕ... Сăнни
Тӳрех тăрăнать... Чăнни
Тинех палăрать, юн тухсан.
Ну, мĕн, манса кайрăн пулать?
Кун хыççăн кун хăвăрт шăвать.
Шуса тухса кайрĕç чунсем,
Шуса пырса кĕчĕç ютсем...
Халь ĕнтĕ эп хам та çич ют.
Мана кирлĕ мар сут çурт!
Тапатăп, ватaтăп... Халь аслă эп тин,
Ман пек чăвашах пĕр çĕр пин!
Эп хам пин-пин-пин...
Юрлать кăсăя тин-тин-тин!
Яла килсе çитрĕм тин.

* * *

Пурнăçра урăх ним те çуккă. Çуккă!

Пурнăçра пурнăç пур. Çавă çех!
Тепĕр чух туянсассăн çупкă,
Пурнăçран тухса ÿкнĕ пекех.
Эх, вара çил пекех хускалатăн.
Шыв пекех юхнăçем шухăшлан.
Мĕн тесе мана пурнăç вăратрĕ?
Çывăраттăм-çке питĕ аван..
Анчах çупкă пани те иртет мĕн.
Пурнăçпа каллех пурнăç тулать.
Тепĕр чух çавăнпа та пĕр уссăр
Пурнăç иртнĕ пекех туйăнать.

***

Утаттăр элĕр кăптăр-каптăр...
Çав сасă юлчĕ-ши вара?
Çÿл тÿпери шап-шурă юр
Чĕлтĕртетет пек сывлăшра.
Çак çут тÿпе шутланă евĕр
Тăраттăр элĕр Турă пек.
Халь тин çак уçлăх анинче.
Сывлаттăр тăрăннăн... Чутах
Кулса яраттăм... Пит çине
Ÿкеççĕ пĕрчĕсем пĕр кассăн,
Савăнтараççĕ ÿт-пĕве.
Халь тин хама туятăп çамрăк,
Вĕçсе каятăп юр пĕрчин!
Çак тĕнчери пĕртен пĕр çарăк
Юлса тет йăранра халь тин!
Кăлар, апла, туртса, хăватлăн!
Эс, çарăкăм, халь тин тăраннă,
Çĕр пулăхне илсе тултарнă...
Хĕлле çавна çисе тăран та
Каллех шутла çав çарăк пек.
Эх, çарăк майлă çут çанталăк!
Каллех уçать хăй алăкне.
Хальхи кĕрхи пек тулă палăк
Çукрах пуль пуçă тÿпере.
Тÿпе вăл уçă, ним те çуккă.
Çав пушлăхра шур юр кăна.
Çĕре ÿксен вара вăл пулĕ
Шур ÿтлĕ çарăк пек таса.

***

Васкатать тĕнче, чуптарать –
Çаврăнса та пăхма вăхăт çуккă.
Укçапа та купла астарать –
Тепĕр чух çитерет çупкă.
Халĕ ĕнтĕ эс темĕн тусан та
Тĕнчене хăвна май çаврас çук.
Çын çĕкленĕ хура тусанран та
Çаннупа та куçна хуплас çук.
Мĕн-ха, мĕн халь çынна пĕтерет,
Кам алли-ха пăвать майран?
Пĕр сăмах, Тур сăмахĕ пурах,
Çав çăлассăн туятăп хама.
Авалхи пек ĕçре туптансан,
Эс пĕтместĕн вара пĕтĕмпех!
Чыс та ĕç – çав кăна тĕнчере!
Ĕçлĕ чух пурăнатăн вара...

***

Кăвакарнă тĕнче шăвăнать майĕпен,
Васкамасттăр эпир те – чăваш ачисем!
Çук, тумасттăр усал. Тупра кирлĕ мар!
Эпир йывăç пулса тĕреклесшĕн...
Йывăç пек те ÿссен... Нумай ĕмĕртен
Хамăра та паллаймăпăр эпĕр.
Ак, кусем, тесе калĕç иртен-çÿренсем,
Мĕнле пысăккăн килнĕ, тĕнче ачисем!
Халь вара сапалаттăр çулçа çĕр çине,
Кашни çул вĕт çаппа хĕн тÿсетпĕр...
Тепĕр хут çур енне тăхăнар çĕнĕ тум.
Пултăр вăл чаплăрах киввинчен!
Ăт, çаппа. Ма каппа ÿкерет ку тĕнче
Шăнса кÿтнĕ тумне çĕр çине? –
Çĕр илет хăйне мĕн кирлине!

***

Шупашкарта каç пулса килет,
Çулçăсене çĕклекелесе çил вĕрет.
Çÿлти хула çути мĕлкеленет,
Çавăнпа та пулĕ пит илемленет.
Иртсе кайрĕç çумранах яш каччăсем.
Тен, хĕрсем кĕтеççĕ, тен, кичем?

Уттинче пур вăй питти, яртти...
Акă çитрĕ тĕлĕнтермĕш – каç пултти.
Каçхине шур Шупашкар таса.
Хураран таси те çук вара!

***

Çаралчĕ вăрман. Пушанчĕç уйсем.
Унта халь таса та çап-çутă.
Унта пуль çÿреççĕ чăваш туррисем?
Весем те халь тин питĕ тутă.
Мĕн-ма илĕртет-ха чуна çакă ырлăх?
Кăмпа та унта... Тен, мăйăр та пур?
Пушаннă вăрман пĕрех питĕ мăнтăр.
Пĕр сассăр тăрсан та пĕрех чунлăрах!..
Таван çĕршыва çакăн пек эпĕ куртăм.
Уй-хирĕ, вăрманĕ, çырми те пуян.
Тен, çавăнпа çакăнта хама тупрăм?

***

Хресчен хĕрарăмĕ тесе,
Çапса кăларнăччĕ сире
Журналăн хуплашки çине.
Лараттăр эсĕр сарăлса,
Кăкăрсене уçса хурса...
Нимех те çукчĕ ÿт çинче,
Кĕскепиĕ пĕр кĕпе пекки
Хуплатчĕ вăрттăн вырăна...
Епле-ха эс, хресчен ачи,
Çапла пулма пултарнă-ха?
Çĕр ĕçĕнче, пĕлетĕр вĕт,
Турă пекрех курăнмалла!
Çĕрпе пĕр пек пулса кайса,
Амăш пекрех пурăнмалла...
Эсир вара пит чаплă хĕр,
Çум çумласа курман та-тĕр?
Тырă епле те ÿснине
Ыйтсан та каласа параймăр...
Анчах нимех те мар иккен.
Хресчен хĕрарăмĕ тесех
Тухса курнатăр çын умне.
Тен, илĕртесшĕн çынсене
Пачах та çав, урăххипе?

Хресченĕн хĕрĕ... Вăл таса.
Вăл çут çанталăк пек хитре
Тăпра пек пулăх. Шыв пекрех...
Ун кăмăлĕ çемçе-çемçе...
Е çил пекрех вăл авăклă
Авкаланать те тепĕр чух...
Йĕр хăварать çак çĕр çинче –
Упăшкипе ачисене.
Мĕн-ма, тет, кирлĕ çын çине
Çаппа çарапаккан тухма?
Çĕртен-и пистерессĕн вăл?
Е хăй патне туртса илсе,
Йăлтах, тен, пĕтерессĕн пуль?
Кирек мĕнле шухăшласан та
Кăмăл туртмасть ку хĕр патне.
Темле вăл йĕлпĕрсе кулсан та
Пырса тăмастăп ун çумне.
Çаппа çуралчĕ шухăшăм
«Крестьянка» журнала курсан.
Ăна тепре илместĕп те –
Тивĕçтермест вăл хресчене!

***

Мĕн хурлăхлăн пăхса ларатăн?
Пуçна ухатăн талхăртан.
Е çумăр çăвасран хăратăн?
Çусан вăл çутăр хыпăрах!
Пĕрех ятна çуса яраймĕ.
Мĕн çырнă – юлĕ ĕмĕре!
Усал тени те тек тытаймĕ –
Яту çӳрет халь пĕлĕтре.
Пĕрех такам пырса калас пек,
Санăн ума йĕкĕлтесе...
Мĕн-ма вара кунта çак палăк
Тухса та ларнă пĕшкĕнсе?
Пире вăл кансĕрлет кăна-иç,
Ыйтсан та ним те парас çук.
Ун пеккисем, чăнах, сахал-им?
Çавăн йышши ку, ăçтиçук!
Пырса пăхап та чун таçта пек
Çӳрет санпа пĕр пĕлĕтре.
Поэт пекрех пуçа ухап та

Хама курап ӗмӗрлӗхре!

***

Мӗн кирлӗ пултăр ҫӗр ҫинче?
Мӗн кирлӗ пултăр пĕлӗтре?
Пурнăҫ пулсан ҫын умӗнче
Кӗтни килет пӗр ӗмӗтре.
Ӗмӗтленме пӗлсессӗн ҫеҫ
Хăвна туятăн Турă пек.
Анчах тӗнче ҫавна пӗлмест –
Иртет ҫеҫ хăйӗн ҫулӗпе.
Ӗмӗтленесчӗ те – пулмасть.
Ӗмӗтленме чӗрем ҫитмест.
Тен, ҫавăнпа та ăс-пуҫа
Мала хуратпăр... Тем пӗлсе
Ӗмӗтленме те вӗт хăратпăр!
Ҫын куласран, тен, усалран...
Халь-халь тытать тесе тăратпăр...
Ăҫта ӗмӗтленме вара?
Ал-ураран хытса ӳкатпăр,
Ҫынран тек юлас мар тесе...
Телей пекки темли тупатпăр.
Тӗнчи парать – йӗкӗлтесе...

***

Шурă ӗнтӗ тӗнче, питӗ шурă...
Кунӗ пӗлӗтӗн майӗпен шурӗ.
Юр пӗрчисем ҫаврăнкаласа килчӗҫ –
Вӗсем те-ши вара ҫапла вилчӗҫ?
Шурă ӗнтӗ, юр пӗрчисем те шурă!
Ҫӳҫ пӗрчисем те шуррисем пурччӗ!..
Вата ҫын пек калаҫатчӗ теплӗ,
Чăваш чӗрӗлессе питӗ кӗтрӗ...
Акă ҫитрӗ те чăваш кун-ҫулӗ –
Пурнăҫӗ те ҫапла шурӗ пулӗ?
Ача чухне амăш чӗрҫине таптарӗ.
Пӗрех такăр ҫулпа утса кураймарӗ...
Сана аса илсе питӗ ыррăн
Пуҫра шухăш ҫаврăнкалать йывăррăн.
Ӗнтӗ тӗнче шурă, питӗ шурă.
Кунӗ пӗлӗтӗн майӗпен шурӗ...

***

Сăвă çырас терĕр-и?
Сăвă çырма кирлĕ мар.
Сăвва, çырсанах, тӳрех
Çак чунсăр тĕнче вăранать.
Вара вăл сана та тивет!
Пăхаççĕ ун чух йывăççем
Темле урăхла куçпа.
Çул хĕррипчи тем чухлĕ чечек
Темле куççулленнĕ пек...
Чул та, чул терĕм, унра
Чул чунĕ вут пек упранать!
Хĕвелĕ те унщăн сана
Усаллăн тем пек пăхать...
Йăлтах вĕт, йăлтах чунланать!
Вара эс мĕн тăвăн, тет?
Тĕнче халь вăраннă,
Тĕнче халь хăват,
Вăл Турăран та ирттерĕ!..
Ăт, сана, сăвă, тет!
Халь тин вăл сана пĕтерет.
Тен, çавăнпа кирлĕ мар.
Эс сăвă çырсан, пĕлсех тăр –
Мĕн чухлĕ тĕнче килет...

***

Кӳренни вăл тем мар.
Кӳренни те иртет.
Пĕр-икĕ йĕрке çырса хур –
Урăх чĕре пулчĕ те!
Мĕнпе те пулин кӳренсен,
Эс урăх тĕнче ту.
Çав тĕнчере хурлăх çук.
Унта сăвă çех пур.
Кирек мĕн килсе тухсан та
Эс çавăнтах сăвă çыр.
Вара эс ху та урăх.
Санра япăххи çук!
Ак, çыртăм, чăнах та, çыртăм.
Иртет вĕт мĕн хурланни.
Мĕн çырнă, унта кĕвĕç çук.

Мӗн сырнӑ – унта çурасу.
Иртет вӗт, сурасрӑмӑр пек.
Шалти те, тулти те пӗр тан.
Халь тин курӑнӳ çук.
Пӗр сӑвӑ тесен – пур!

***

Килет пек вилӗм... Куçа вӑл курӑнмасть.
Çак çуркуние аван та, пурпӗр пулӑшмасть.
Анчах пӗтес килмест-ха ман!
Эп çакӑнта çитсе те касӑхса кулман...
Çӗрпе çак пӗлӗт хушшинче çӳретӗп,
Телейӗм çӑвасса кӗтетӗп.

***

Ирпе эп пӑхса пыратӑп,
Шыратӑп малашлӑх палли.
Вӗçет, акӑ, кайӑк, куратӑп, –
Вӑл, паллӑ, тӳпе валли!
Ман паллӑ пулинччӗ ку, тетӗп,
Тӳпе çӳллӗшне хӑпартни...
Кашни вӗçеврех эп кӗтетӗп, –
Пулать пуль-ха кун кӑтартни!
Шӑпа, тен, куçа курӑнсассӑн,
Пӗтерӗ чуна хӑратса...
Тӗнче куносрен тем каласпӑн
Тӑрать пурпӗрех çаврӑнса...
Калать пуль те кайӑк, илтместпӗр,
Курма та пӗлместпӗр пулас.
Пӗрех, пӗлмесен те вӗçлетпӗр
Куна кайӑк пек курӑнса!

***

Такам, тасран, шалтан-шалтан
Пӑшӑлтатса калать:
«Пӗтетӗн!», – тет.
Ман ӗнтӗ хӑраса ӳкес,
Пӗр сивӗнес те, пӗр вӗриленес:
«Пӗтетӗн!», – темелле пуç пӗкес.
Анчах та эпӗ пит чее чӑваш.
Пӗр ват юман çине çырса хуратӑп ят.
Тата ун сулçине шӑлпа çыртса тӗрлетӗп
Тем тӗрлӗ тӗрӗсем...

«Пĕтетĕнех!», – тесе хыт кăшкăрсан,
Шуйттанпала кăшт хутăшсан, –
Эп пит чее чăваш, –
Пĕр юрă çех ăшран кăларăп,
Çак тĕнчене çав юрăпа йăлтах чăркатăп...
Е пĕр сăмах!
Ăна пĕлетĕр эсĕр.
Ăна çырса сухаçă уй варне,
Вăл илтĕнет вăрман кашлавĕнче...
Таван та юрă, тĕрĕ те сăмах,
Чăваш! тесе ят панă çутă уй та
Мана пĕтме парассăм çук.
Кам вăйлărах-ха тет вара,
Çут уй, е урмăш сас?

* * *

Хура халăх тени питĕ вăйлă.
Эп хура, эпĕ питĕ хура!
Хĕр тени халь иртет питĕ стайлă.
Çавăнпа ас илетĕп Турра!
Пулнă, тет, пирĕн Турă Хор ятлă –
Хурараn та хура япала!
Çавăнпа, тет, пур мар-и Коран та,
Çавăнпа та пур чул – Кааба.
Хорăн пулнă пуль, чăн та, арăм.
Эп, шутлатăп, вăл пулнă Кебе.
Кам та кам кĕлепе çуралнă,
Çавă, чăн та, телейлĕ пекрех...
Те телейлĕ, те урăх, кам пĕлтĕр?
Пĕр хура çеç, мĕн пулнă пирте.
Хура пулнă, пулатпăр, пултăр,
Ун чухне эпир, чăн та. хитре!
Халь тетни, темĕскер, шурă майлă.
Куçăхатпăр, курсан, шур майра!
Чăваш хĕрĕ вара питĕ стайлă,
Пуç çапать пуль вăл, чăн та, Хора?
Хура халăх пулни питĕ вăйлă.
Эп хура, эпĕ питĕ хура!
Çавăнпа эпир пултăмăр стайлă,
Çавăнпа пуç çапатпăр Турра.

***

Тĕнче пĕтет пуль тенĕ чух,
Эп ĕненеп, килет пĕр сын
Çак çĕр çине пире çăлма,
Чăваш пулса та пурăнма...
Чăваш килет, чăваш килет, –
Вăл килмесен, тĕнче пĕтет!
Тĕнче пĕтсен вара мĕн пур?
Пĕр вĕçĕмсĕр пĕр хурлăх пур.
Ун чух вара, çăкăр тесе,
Ют çĕршывран пырса кĕрсе,
Çын вĕлерен тур ячĕпе
Пире пĕтерĕ пĕтĕмпе...
Тĕнчен те пĕтнĕ паллисем
Куçа тăрнаççĕ: ху пĕлен!
Чунĕсемпе те пĕтнисем,
Çынланĕçĕ, чăваш килсен.
Чăваш пек кăмăллăн кулса,
Чун-чĕререн сывлăх сунса,
Иртен-çӳрен кашни çынна
Ал парĕç, тен?.. Унтан вара
Пуçлайĕçĕ пĕр ĕç тума.
Çынсем вĕренĕç майĕпен
Чăваш пек çыншăн пурăнма...
Чăваш килет, чăваш килет!
Чăваш килсен пулать-ха та!
Анчах та хальлĕхе пăхсан та
Вăл курăнмасть – куçа хупсан та.
Тĕнче пĕтет пулĕ, чăнах та!
Анчах та темĕнле пулсан та
Эп ĕненет: килет пĕр çын –
Çав çыншăн çунтăр кӳтнĕ чун...
Эпир те уншăн тăрăшсан,
Ун пек пулма шухăшласан,
Вăл пурпĕрех çак çĕр çинех
Пире çăлма çул тупатех...
Эпир пулсассăн – вăл пулать.
Эпир килсессĕн – вăл килет.
Чăваш килет, чăваш килет,
Вăл килмесен, тĕнче пĕтет!

***

Вăрмантан тухрăм, уй тăрăх утрăм...

Халхаллă та, куçлă та пултăм.
Çÿле пăхрăм, пĕр çăлтăр куртăм –
Çавăнтах-ши манăн çĕнĕ суртăм?

Çавăнтах пуль тăван-пĕтенĕм, –
Вĕсенĕн юррисене итлерĕм:
«Ан авăн та, шĕшкĕ, ан авăн», – теççĕ,
Уйăх çинче урпа акса илеççĕ.

Урпинех те вырса илес çук,
Сăрине те ĕçсе курас çук.
Çăлтăр çиçет куçа çиес пек,
Çил çĕкленет çула хупас пек.

Çил шавкăнне илтес марччĕ,
Сырма юррисене манас марччĕ.
Чăваш уйĕ тăрăх утрăм та утрăм...
Çăлтăрсемĕм, ăçта ман суртăм?

***

Уйăхран иртетĕп-ха тесетĕм.
Хăвăртран та хăвăрт иптерсетĕм...
Уйăх та чупатчĕ питĕ хăвăрт,
Каçхи ял выртатчĕ питĕ шăпăрт.

Вăл манран пĕр шит юлмарĕ!
Эп çавна курса йăлтах аптрарăм...
Тÿпере тăрать-ха питĕ янкăр,
Темĕн чул сут çăлтăрсем те çакнă...

Темĕн чул çул тăрăшшĕпех эп чупрăм,
Уйăхран иртесшĕн пултăм.
Ентĕ эпĕ ваталăтăм ку темĕн...
Çута уйăх халь те пуç синчех-мĕн!

Эпĕ халь те уйăхран иртесшĕн!
Халĕ те чупатăп – мĕншĕнне пĕлместĕп.
Тÿпере сут çăлтăрсем тăраççĕ,
Эпĕ иртесрен кăштах хăраççĕ...

Çулĕ вăл пĕрех çав уйăх витĕр.
Çакă çул çинчех кун-çулăм ирттĕр!
Пĕчĕк ача евĕр, акă, иптеретĕп,

Уйăхран эп майĕпен иртетĕп.

* * *

Икĕ çырма пуçĕ сăртлă та йывăçлă.
Таçта çакăнтах вырăмалла çăва пуçĕ...
Ял енчен пырса кĕме хапха уçă,
Умне çырма урлă кĕпер хывнă.
Пирĕн те çакăнта килсе вырăма тивет вĕт-ха.
Тăвансемпе пĕрле пурăнас кăмăл пĕтмест вĕт-ха.
Çимĕк кунĕ çăва калама çук илемлĕ.
Кунта килме пире атте-анне пилленĕ.
Анне, сан вил тăпруна пĕр ывăç тăпраран турăм,
Тăпру тÿпери шурă пĕлĕт пек çăмăл пултăр!
Атте, эсĕ те çакă таса çĕр ăшнех кĕрсе выртрăн...
Санпа юнашар ларма халĕ питĕ ырă.
Мĕн тăвăн ĕнтĕ. Çын шăпи вăл çапла.
Пурăннă чух пулать апла та капла...
Пухатпăр та акă темĕн чул тупра,
Пăсатпăр тап-таса юна...
Хура тăпра вара ялан хура.
Çак çĕр çинче эпир кĕтмен хăна кăна!
Пĕрре килсен кайма çитет пуль вăхăт?
Çак алăкăн уçса кĕме пур икĕ хăлăп.
Халĕ, ак, тытса тăратăп пĕр енчен...
Пурăнасчĕ-ха мĕн виличчен!

* * *

Шурă-шурă пĕлĕт çÿлте.
Шурă-шурă сирень – вил тăпри çинче.
Ан хурлан, анне, ачусем килсе çитрĕç,
Пĕлĕт евĕр шурă пуçĕсене усрĕç...
Епле пĕчĕк вĕсем, çав вăхăтрах... ватă.
Эсĕ ĕлĕкхи пекех çап-çамрăк.
Çип-çинçе те хыткан...
Эсĕ пире нихăçан та вăрçман!
Çĕр улми, ас тăватăп, пĕр чугун пĕçерсе лартаттăн,
Икерчĕ вут уççинче пĕçереттĕн...
Эпир пиллĕкĕн те, ĕлкĕрейместĕн!
Çуркуннепе тата урама çарран кăлармастăн.
Эпĕ вара, тухсанах, пушмака карта урлă
Каялла ывăтаттăм,
Урам тăрăх тиха пек ĕрĕхтерсе чупса каяттăм.
Чирлеттĕм.

Эсĕ вара мана вĕри сĕт ĕçтереттĕн...
Ах, епле йывăрччĕăна ĕçме!
Эсĕ хистеттĕн!
Çавăнпа халĕ сывă тăратăп та.
Сан çинчен шухăшлатăп.
Шурă пĕлĕт пек çăп-çăмăл пултăр эсĕ йăтнă çĕр, анне!
Тутлăхра пурăн!
Шурă-шурă сирень çеçкисене хуратăп
Сан вилтăпру çине.
Шурă шухăшлă пул,
Пире ан асăн...
Эпир вара сана асăнсах тăрăпăр...

***

И. Яковлева асăнса.

Чăвашшăн ĕçлесе ун чунĕ тухрĕ.
Ун пулчĕ юлашки сăмах – «Тавах!»
Вăл кайсанах тĕнче, чăнах та, хухрĕ.
Вăй илĕ-ши, ку паллă мар пачах!
Вăл Турă пек, чăнах та, килчĕ.
Эп ас тăвап ăна: ача чухнех,
Чăн юмăç пек, юна чарма пĕлетчĕ,
Çын шăпине курса тăратчĕ пĕтĕмпех!
Христос пек пĕлнĕ хăй шăпине те, ахăр,
Çапах пĕр шеллемесĕр вăхăта
Ĕçленĕ, шаннă çитесçе çĕн тапхăр:
Чăваш ун чух тухать тет улпута!

***

Юрларĕ вăл. Сассийĕ кайрĕ
Çак çĕр çинчен тӳпе таран.
Юрланăçем, юман пуç тайрĕ,
Çут шыв вылянчĕ çыранра...

Юрларĕ вăл. Сас çухалмарĕ,
Çӳлте çуталчĕ пайăркан.
Çав пайăрка мана хăпартрĕ
Çут тӳпери Турă таран...

Юрларĕ вăл. Эп те юрларăм,
Манма май çук халь çав юрра!
Çав юрăри чăн сасăсем те
Вĕçеççĕ халь те ман тавра.

***

Чăваш ачи пирки шутлатăп...
Шăпи тĕтреллĕн курăнать.
Кăшт, чăваш пек, тăрса юлсан та
Хайне пĕрех вăл пăрахать.
Мĕн-ма тесен тĕнче пит аслă,
Пĕрех хайне пăхăнтарать.
Шăлне йерсе тăран усал та
Ак, пур енчен час хупăрлать...
Чăваш ачи, тĕнче паллийĕ,
Эсĕ пĕтсен те мĕн юлать?
Тен, çавăнпа чĕре тымарĕ
Йăлтах сана валли тапать.

***

Тинех, ак, тупрăм канлĕх чунăмра –
Пит чаплă кĕнеке пур ман умра.
Çавна халь вуласа пăхса ларатăп,
Çак тĕнчене йăлт урăхла куратăп.
Кунта улпав та, тĕрĕсмарлăх та...
Ырăпала усал çўреççĕ çавтăнса,
Пĕр курăнса, пĕр пытанса...
Çак пўлĕмре анчах çăтмах,
Кунта анчах хуçаланать юмах.
Асамçă пек туятăп эп хама та.
Чун ыйтнине тупатăп тем тусан та!
Тупатăп чăвашсен çулне-йĕрне!
Ăçта тăкса хăварнă куççульне,
Шăп çавăнта шыратăп чăн çулне.
Таçтан пит аякран, хĕвел енчен
Куçса килсе вĕсем Атăл çине.
Шур Атăлпа Мăн Атăл хушшинчи
Çĕр кăвапи пуçтарнă вĕсене.

***

Каллех ман кăкăра уçать-ха уçă сывлăш.
Куçа уçма та халăм çук чухне
Калать пекех анне: «Эс, ывлăм!
Килсе çак тĕнчене асап мĕнне пĕлме...
Ăна чăтса та ирттерсессĕн çитĕн
Чăн юрату патне те, акă, майĕпен.
Эс ытисем пек пурăн ыплăн-çиплĕн.

Мĕн ҫитмесен, ҫырлах Тур панипе»
Кунсем иртеҫҫĕ... Иртнĕҫем хываҫҫĕ
Эпир пулман ҫĕрте ҫап-ҫут ҫулсем.
Ҫав ҫулсемпе ман инҫене каясчĕ.
Анчах мана валли пӳрмен пуль ҫав вĕсем?
Ҫӳренĕ эп, пĕр ҫӳремен те мар.
Шыранă та – телейĕм тупăнман.
Паян каллех, туятăп, ман шăпам
Темле ҫулпа илсе каять кунтан...

* * *

Эй, пулса пуль эп тасҫта та!
Эй, курса пуль темĕн те!
Пурнĕрех сана нихҫан та
Чĕререн яманччĕ-ха...

Акă, килтĕм, тăван ҫĕрĕм
Ҫупăрларĕ тăванла.
Санпала эп кунĕн-ҫĕрĕн
Ĕнтĕ хатĕр пурăнма...

Тĕлĕнсе пăхса иртетĕп
Ват йăмра та ҫумĕпе.
Чунтанах эп киленетĕп
Тăван ял илемĕпе.

Чăвашла халь шухăшлатăп,
Курăнатăп ҫын пекех.
Ҫавăнпа сăвă ҫыратăп,
Ват йăмра ҫулҫи пекрех...

* * *

Хĕл тăрăшшипех кун сивĕ тăчĕ.
Юлашкинчен, ак, пурнăҫ ăнчĕ.
Пĕрремĕш хут хĕвелĕм килчĕ –
Вăл хăй патне мана та илчĕ!
Унпа пĕрле эп халь ҫӳретĕп,
Хĕвел патнех, каллех, килетĕп...
Тен, ҫавăнтах пуль манăн килĕм?
Тен, ҫавăнтах тупатăп вилĕм?
Ҫунса кайсассăн Икар евĕр
Тепре вĕҫмелĕх тупăп тепĕр

Хӑрах пулсан та пӗр ҫунат –
Ак, кур, епле вӑл саралать!
Унпа пӗр-иккӗ ҫех суллатӑп,
Ҫӗр ҫийӗн ҫӗкленсен, куратӑп:
Ача пек Ҫӗр ҫиҫсе тӑрать.
Пин-пин хула, уйпа вӑрман –
Кун чухлӗ ырлӑх эп курман!
Апла, каллех пулса тӑрас-ха
Ҫак ҫӗр пекрех пӗр муклашка,
Сӗм уҫлӑхра кусса каяс-ха
Хӗвел тавра, хӗвел тавра...

* * *

Эпир килнӗ пулас ҫӑлтӑр витӗр,
Ҫав ҫула пирӗн чун ас тӑвать.
Тен, вӑл халь ҫавӑнпа питӗ вирлӗ
Ҫӑлтӑрсем патнелле туртӑнать?

Ҫӑлтӑрсем тӑкӑнас пек тӑрсассӑн,
Чун темле хаваспа тулать.
Тӳперен ҫумӑр евӗр тӑксассӑн,
Вӑл вара вут пекех хыпать.

Кун килет те хӗвел питӗ вӑйлӑ
Ҫӑлтӑра хӑй айне пытарать.
Каҫпала тепӗр хут питӗ вӑрттӑн
Ҫут тӗнче хӑй сӗмне кӑларать...

Ҫӗр пин тӗслӗ тӳпе пит ытарлӑн
Ман ҫине вара ӑшшӑн пӑхать...
Ҫут хӗвел айӗнче ҫухалсан та
Ҫӑлтӑр ман пуҫ ҫинчех тӑрать!

* * *

Ҫак тӗнчене – вилме ҫуралнӑ?
Ҫуралсанах – вилме вӗрен!
Кам хуйхипе куҫу хуралнӑ,
Кампа тата чӗрре кӗрен?
Ҫӗре ӳкернӗ чӗрене
Ҫӳле илсе татах ҫӗклен...
Кам лашине чарса тӑварнӑ?
Инҫе ҫула тухсан чӑтар!

Пире ăсатнă ял çине
Пуçа çеç çавăрса пăхар.
Пыратпăр эпĕр каçа хирĕç –
Малта пыма пит çăмăл мар!
Чĕтретĕп эп, тапать сив тар...
Пулма эс тăрăш юнашар!
Пĕрле утатпăр çăлтăр витĕр!

***

Ĕнтĕ каять тĕнче, тайăлать
Пăрăнтăкран пăрăнтăка...
Айванах та ачи çул такăрлать:
Те çăтмаха, те тамăка?..

Ĕнтĕ туртать лаши, пуçне ухать,
Çулне утса тухас пек.
Çутăях та уйăх пит пăхать
Уя сурпан сарас пек.

Ĕнтĕ ÿсет йăмра, ваталать,
Тымарĕпе çĕре хыпашлать.
Çамрăках та тусăм, таса чун,
Ăна лартнă çурхи кун.

Ĕнтĕ юрлать шăпчăк, вил ÿкет.
Ыйла хыт юратать пуль?
Ай, çав юрă мана та тивет:
«Чăваш пĕтет!», – теет пуль...

***

Хĕрарăм сăнĕнче шыратăп
Таван çĕршывăмăн сăнне.
Ун куçĕнчен пăхсан, куратăп,
Тапса тăран çут çăл куçне.
Кăкăрĕсем ун сăрт-ту евĕр,
Айлăмĕсем таса çаран.
Çÿç-пуçĕ те – вăрман, ку, тейĕр,
Аташтармалăх пĕр кайсан...
Ал-урисем те ун, вар-хырăм,
Çырма-çатра пек вырăнсем –
Çап-çутă уйăх пăхса выртĕ
Çав хутлăха мĕн касçерен.
Хĕрарăм сăнĕнче куратăп

Тăван çĕршывăн сăнарне.
Вăл чăнласах хитре пулсассăн,
Тăван хиросем те ман – хитре!

***

Хĕрсем хитре те, хитре мар та...
Кама мĕнле пуль? Тепĕр чух
Хитри ытла йăлăхтарать те
Хитре марри шуплаттарать...
Хитре марри сăпайлăрах пек.
Вăл хăй патне туртăнтарть.
Мĕн-ма тесен, шалти хитрелĕх
Тулашринчен те лайăхрах!
Ку, чăнласах вĕт. Çут çанталăк
Хайне пăхсан, йăлт çырлахать.
Эс чăнласах хитре пулас-тăк,
Ху çут çанталăк пул, хăвах!
Е çын пекрех, хытах калас-тăк,
Тен, чăн хитрелĕх çынлăхра?
Çав çынлăх мар-и чăн ахах пек –
Çавна пĕлместтĕр хаклама!
Хĕрсем хитре, хитре те мар пек...
Мĕнле куçпа пăхатăн, няк!
Хĕрсем хитре арçын пулсассăн,
Арçын хитрелетет сăна...

***

Таçта аякра, тĕнчере, тахçанах
Пулса çакă пурнăç чăнах.
Çунать çут тÿпе. Çĕр – хура кĕл...
Кăвар чечексем тĕл-тĕл...
Çÿлте пĕр хăлат. Аялта – калта.
Ура айĕнче таптанать чĕр калча.
Таçта аякра ишĕлет чул чиркÿ...
Унта пухăнать-ха – хĕн-терлÿ!
Тытать кашнинех ват киремет,
Вĕлтрен урана вĕтĕлет...
Майра хура явлăк. Пĕвенет юнпа...
Ватти тем калать... Тулать çутăпа
Çак пăтăрмахлă тĕнче...
Мĕн кĕтет вĕçĕнче?
Тăраççĕ виççĕн. Выçă куçлă ачи...

Ачи аллинче юмахри йăвачи...
Вĕсем килсе тухрĕç ман пата,
Пĕрле илсе килчĕç темле хăвата –
Пĕтмен-ха чăваш авалхи авăрта!
Епле вĕсем виççĕш те чиста!
Вĕсен чунĕнчи çутта пуç çапатăп,
Çак пурнăç çинчен урăхла шухăшлатăп:
Чăваш чăтса тухнă хăруш самана
Каллех хупăрлать-ха сана та мана...
Ăна çĕнсе тух тап-таса!

***

Ман çăлтăр яланах çулте!..
Ача чухне те, çитĕнсен те
Кураттăм çăлтăр çунине –
Çăлтăр çăватчĕ касхине!

Пит аякра йăлл-ял! сиçетчĕ,
Пăхаттăм питĕ тĕлĕнсе.
Анне хĕрес хурса илетчĕ:
«Çын чунĕ татăлчĕ», – тесе.

Такам шăпи – пĕррехинче –
Пĕр çăлтăр ÿкрĕ пуç çине.
«Пĕтерĕр Çеспĕл Мишшине!», –
Пĕр сассăр кăшкăртăм инçе.

Кам илтнĕ ăрăс сассине,
Кам курнă çăлтăр çунине?..
Тăкать тĕнче хăй çутине –
Пĕри ÿкет ман пуç çине!

***

Пĕр хам тĕллĕн пĕрмай шухăшланă:
«Çак çăва çинчи шурă чулсем
Мĕн майпа çĕр çинчен çухалнă? –
Ĕмрипех ларнă вĕт-ха вĕсем»
Каярах пĕринче эп те куртăм:
Пăлхарти пĕр чиркÿ айĕнче
Авалхи тăмхапа çырса хунă
Çын ятне пĕр чечче чул çине.
Вăл пулса чăн чăвашăн ячĕ,

Пулнӑ палӑкӗ килӗ пек, тен?
Ах, анчах тепӗр тӗнӗн хӑвачӗ
Илсе кайнӑ ӑна ҫав тӗлтен.
Ун чухне те темех шутламанччӗ:
Пӗр ӳкерчӗк курсан, пӗтрӗм йӑлт.
Пурнӑҫра пур-мӗн чӑнлӑх саманчӗ –
Эс ӑна курас мӗн-тӗк – чӑт!
Пӗр купа ҫын шӑмми... Хӑрушӑ!
Пухӑнса пӗр чиркӳ айӗнче.
Хыпса тӑтӑм чул пек пӗр хушӑ,
Пултӑм эп те купа тӑррине.
Мӗн-ма-ха мана та пӗтерчӗҫ
«Чӑн Турра ӗненеп» текенсем?
Чул ҫинче ҫӗнӗ чиркӗ ҫӗклерӗҫ,
Тӗнчене тасататпӑр тесех...
Эп вара чылайччен выртрӑм
Тахҫан пӗтнӗ тӑван хушшинче.
Шурӑ чул пулса хыпӑ хытрӑм –
Ҫак тӗнче – ҫавӑ чул ҫинче!

***

Пыраттӑм эпӗ урампа
Тулли те ырӑ кӑмӑлпа.
Ҫынсем утатчӗҫ урлӑ-пирлӗ –
Ҫак пурнӑҫра вӗт тем те кирлӗ!
Пӗрне бутылка... Сӗт е ҫӑкӑр...
Тепри шутлать ҫӳлти сут ҫӑлтӑр...
Сив ҫил саватчӗ питӗме,
Асат хуҫмастчӗ пӗвӗме...
Тулли те ырӑ кӑмӑлпа
Ҫӳреттӗм ҫав тем ҫӑмӑлпа
Тӗл пуличчен пӗр усалпа.
Мухтанчӗ-ши алри вӑйпа,
Мана сасартӑк тӗксе ячӗ,
Усал сӑмах персе хӑварчӗ...
Мӗн-ма ӑна тытса ватмарӑм,
Хуса ҫитсе пуҫран ҫапмарӑм –
Хытса ҫеҫ тӑтӑм ҫавӑнта.
Эп тупрӑм айӑп хамӑнта!
Мӗн-ма ӑна эп ҫул памарӑм,
Сума суса кӑшт пуҫ таймарӑм?
Тен, ҫырлахатчӗ ҫав усал,

Пулмастчĕ пулĕ ку «пасар»?
Пуç çапнипех пĕтмест-ха пыйтă,
Ырă тени те пултăр хыта!
Çынна хăраттăр пысăк чышкă...
Анчах малтан çапма тăхта,
Эс тăхăнтар хăвна нахта!
Кучçуль çăтан пулсассăн та,
Шăл шаккаса тăрсассăн та
Çўлти çут çăлтăра шутла,
Пĕр-икĕ утăм çеç хутла,
Кĕрĕк арки хăть йăвала,
Аптранă кăвакал пек чăм –
Пăрахтăрах ăш-чикĕм «хăм».
Эп лаша мар та, пурпĕрех
Ват янаварпа пĕр пекрех...
Усал çинчен шав шухăшлатăп,
Хам кăмăла пĕрмай таллатăп...

***

Эй, хула çынниcем, куртăр-и,
Хула çийĕн вĕçет пĕр тăри.
Ун сасси илтĕнмест те-и, тен?
Кăсăян вара, пур, тин-тин-тин!
Пур çерçи сассисем те тем чул –
Утнăçем, тăри евĕр эс пул!
Ун сасси, пит çўлте те, аран
Çĕр çинче илтĕнет... Хура
Пăнчăн каять тупенех!..
Пач сухалчĕ тăри кучран.
Хĕвел çулĕ, тет, йывăр çул,
Турăсем те çунса темĕн чул...
Халь тăри те!.. Çерçилĕх кăна
Çул çинче лăплантарчĕ мана.
Çавă çеç. Çук пуль çав, тăри мар,
Хула çийĕн вĕçсе вăл курман.

***

Пуç çапса утса эп тухрăм
Хамăр çĕршыва.
Хам валли кучçуль эп тупрăм
Çак тавралăхра.
Мĕншĕн-ха чăваш таврашĕ

Курӑнать аран?
Ёлёкрех вёт ун пек марччё –
Пурччё пёр ҫавра!
Халь вара ани-ҫаранё
Пуш-хир пек выртать.
Аякри хура вӑрманё
Уя тапӑнать.
Ман ҫёршыв темле канать пуль,
Шухӑшлап пёрмай.
Хӑй вӑйне виҫсе пӑхать пуль
Ҫӑлтӑр ӳкнё май?
Каҫхине уя эп тухрӑм,
Ҫӑлтӑр пит нумай.
Эпёр вёт халь ҫӑлтӑр шутлӑ,
Эпёр сахал мар!
Ма ҫёклес мар ҫёршыва, ак,
Ҫӑлтӑрсем таран?

* * *

Эп турӑ мённе пёлменччё.
Шутланӑ, темле Христос...
Анчах ҫав Христос килместчё,
Памастчё мана вӑл сас.
Пёрре ӑнсӑртран-ши кисренчё
Тёнче питё сивё чухне.
Ӑса та манне иленчё
Пёр Турӑ – ҫавра ҫеҫ тёнче!
Ман туррӑм темле пёр ҫавралӑх,
Нимрен уйрӑлми пёр тёнче.
Вӑл куҫнӑ чухне вӑй пухмалӑх
Эс ху та пулатӑн пёрле.
Эх, пурнӑҫ вара, ҫавӑрать ҫех...
Чӑн турӑ ҫавран курӑнать,
Эс ҫав ҫаврана пӑхӑнан-тӑк,
Пулатӑн эс ху та ҫынах!

* * *

Кёркуние килнё чух куртӑм эпё
Ҫуркуннен пёр хитре ҫугине.
Ҫавӑн пек килнё пулё эпё
Тин ҫуралнӑ чухне хёвелпе.
Сарӑ-симёс те хёрлё пин тёслён
Ялкӑшатчёҫ кёрхи чечексем.

Çавăн чух ман чуна темĕн хĕсрĕ,
Çуккă терĕç пулас малашсем.
Çуккă çав, чечек пек эп çунаймăп,
Çуркунне пек çуралмăп тепре.
Пурпĕрех çак çĕр çийĕн çунатлăн
Вĕçсе кайăп халь урăх çĕре...
Çакă пулĕ ман çуннă телейĕм
Кĕркунне килнĕ чух тепĕре...
Çуркунне тепĕр хут тек килеймĕ,
Кĕрес çук тепĕр хут çак кĕре...

***

Кĕтетĕп, кĕтетĕп, кĕтетĕп...
Кĕтетĕп эп тем килессе.
Эп хам вилессе те пĕлетĕп,
Вилесчĕ-ха, теп, киленсе.
Киленĕçлĕ вилĕм, епле ку,
Епле ку хаваслă тĕнче?
Çухалĕ сасартăк илемлĕн
Тепре ялтăрса çех илсе.
Ялтратăр, çухалтăр, ан килтĕр
Нимле урăх туйăм тавраш.
Тĕнче те киленĕçлĕн вилтĕр –
Манпа пĕр танах каварлаш!
Киленĕçлĕ вилĕм – ку чаплă.
Çак туйăмшăн халь пурăнар!
Кам пурăннă, тет, пĕр майлă
Вăл пирĕншĕн ютă мар.
Кĕтетĕп, кĕтетĕп, кĕтетĕп...
Кĕтетĕп эп тем килессе.
Эп хам пурнасса та пĕлетĕп –
Пурнасчĕ-ха, теп, киленсех!

***

Çынпала пурăнма пĕлеймерĕм.
Хама хутăм пулех пысăка.
Çын умне пуç тайса килеймерĕм,
Тăрса юлтăм пĕччен хутлăхра.
Пурччĕ вĕт-ха чунра савăк туйăм
Çынпала пĕрле пулнă чухне
Пит вăраххăн сăмах эпĕ хуçрăм,
Витеймерĕ пулас çын чунне.
Пурпĕрех! Эп пĕччен те юратăп

Майӗпен пӗр сӑмах каласа...
Эп пӗлетӗп хама. Эп юравлӑ
Ҫынсемпе те ҫынла пурӑнма.

* * *

Ҫак тӗнче тупсӑмне эс тупаймӑн.
Шырасан, тупӑн, тен, пӗр улпав.
Ку тӗнче пурӑнать хайне майлӑ
Акӑ, ыйтӑн та пулӗ хурав.
Ун хуравӗ пурах, вӑл чӗлхелле.
Чӗнме пӗл те илтетӗн пӗр сас.
Ҫак тӗнче вӑл сап-сарӑ хӗвеллӗ
Ҫаврӑнать сан тавра пӗр кас.
Пӗр чӗлхе тупсанах ҫураҫуллӑн
Ытамне вӑл сарать сан валли.
Мӗншӗн-ха эс вара пит салхуллӑ
Пӑхса тӑтӑн ыйту паллин?
Сан ыйту вӑл хӑех пӗр тӗнче-ҫке,
Ыйтура чӑн хуравӗ те пур.
Ун ҫаври чи ҫӳлти пӗлӗтрен те,
Ун ҫураҫӑвӗ ху эсӗ пул.
Ҫураҫуллӑн эс пӑх, сураҫтар-ха,
Ҫавралантӑр тӗнче ҫаврӑнса.
Кирек мӗн каласан та пурнар-ха
Турӑ янӑ ҫын пек ҫураҫса.

* * *

Пӗр кайӑк пӑхса кайрӗ
Чӳречерен мана.
Тен, вӑл темскер каларӗ,
Пӗлмерӗм каласма.
Чӗл-чӗл те чӗлтӗр! терӗ,
Вышятрӗ куҫӗпе.
Вӑл, чӑн та, вӗт пӗлтерчӗ,
Телей килет тесе.
Телейлӗн эп вӗҫесшӗн
Ҫав кайӑк пек паян.
Эп сан пата ҫитесшӗн,
Пӑхатӑп кантӑкран.
Тен, эсӗ те халь ыйтӑн:
Ку кайӑк мӗн калать?–
Кайӑк пекех пулсассӑн,

Вара телей пулать.

***

Паян ҫырма урлӑ эп каҫрӑм.
Пит тарӑн ҫырма Кӗтӗкварь.
Ҫырма тӗпӗнче чарӑнсан та
Хама эпӗ куртӑм таҫтан...
Эп мӗн ҫырма евӗр шыранӑ,
Икке те пайланнӑ тахҫан.
Темскер те тума авӑрланнӑ,
Шутланӑ: аванччӗ тусан!
Ак, пӗр кӗнеке эп ҫырасшӑн
Ҫырма евӗр пурнӑҫ ҫинчен.
Мӗн-ма ҫурхи шыв пуплантарчӗ
Ҫыран хӗрринчи ҫуртсене?
Ак, эпӗ ҫурт лартӑп, шутлатӑп,
Вӑрман ҫумӗнчи ӗшнере.
Чечек те тем тӗрлӗ эп лартӑп
Ҫав ҫуртӑм тавра кунсерен...
Ҫапах та, ҫапах та эп иртрӗм
Ҫак тарӑн ҫырма хӗррипе.
Ҫырма сассине те эп илтрӗм:
Лартатӑп эп ҫурт ун ҫумне!

***

Пӗр ҫын кӑмӑлне те пулин
Кӑштах та пулсан ман юрасчӗ.
Кайран вӑл манран култӑрин!
Пӗрех унпалах ман пуласчӗ.

Ҫын кӑмӑлӗ мӗн вӑл, тесессӗн,
Нимех те калаймӑп тӳрех.
Анчах унпала эп вӗҫессӗн
Туятӑп хама ҫӳлерех.

Ҫапла туйӑмпа эп ҫӳретӗп,
Шыратӑп ҫав ҫут кӑмӑла.
Унпа юнашар эс кӗтретӗн
Кӗрсе те каян пурнӑҫа.

Анчах тем пекех шырасан та
Курмарӑм ун пек кӑмӑла.
Ун пек кӑмӑл чӑн тупӑнсан та

Пулмасть пуль манран юраса.

***
Юрлать пӗр арҫын ҫуттӑн,
Сирет тунсӑхне юрӑпа.
Илсе те каять кӑвак уттӑн
Таҫти аякри уҫлӑха.

Унта, тет, хаваслӑ пурнӑҫ,
Унта чӑнласах юрату.
Унта эс, ҫитсессӗн, пулӑн
Чӑнчӑн юр ӑсти – ху!

Ун чух сан юрру та хускатӗ
Ҫак тунсӑхлӑ тӗнчене.
Сан хыҫҫӑн ҫынсем те тапранӗҫ
Ҫынсен кӑмӑлне иртлеме.

***
Сӑвӑҫ тени кирлӗ мар халь.
Сӑвӑҫ тени ухмах.
Тем пек чунна хурсан та
Пулӗ ку чух кӑлӑхӑх.

Ёлӗк вӑл, зоӗ ас ту-ха,
Час пухӑнатчӗҫ ҫынсем.
Сӑвӑ тесен, савӑнатчӗҫ
Пурнӑҫ тӑвас пекех.

Халӗ вара кирлӗ мар пуль
Ҫын пурнӑҫне кӑтартма.
Сӑвӑ тесен халӗ кулӑ
Кӑшт палӑрать тутара.

***
Эпир нимрен те хӑрамастпӑр.
Мӗн пуласси пулать.
Шур юр пулса эпир выртатпӑр,
Хӗвел пӑхсан, юхса каятпӑр,
Вара, тет, мӗн юлать?

Ҫут хӗвел пӑхать-ха,
Шурӑ юр выртать.

Кăсăя юрлать-ха,
Аппа, кун пулать.

Эпир нимрен те хăрамастпăр.
Мĕн пуласси пулать.
Курăк пулса шăтса тухатпăр,
Кĕрхи кунпа хăрса каятпăр,
Вара, тет, мĕн юлать?

Çут хĕвел пăхать-ха,
Çурхи шыв юхать.
Кăсăя юрлать-ха
Аппа, кун пулать.

Юлать тĕнче, юрлать пĕр кайăк,
Хĕвел те тепĕр хут тухать.
Вара каллех çурхи кун майлă,
Шур юр хĕвелленсе юхать.
Вара, тет, мĕн пулать?

Çут хĕвел пулать-ха,
Курăкĕ тухать.
Кăсăя юрлать-ха,
Аппа, кун пулать.

***

Чун ывăнса çитсессĕн, эсĕ тух,
Тухсам çынсем патне, тухсам уя.
Пĕр çаврăм сывлăша пухса кала эс «Ух!»
Вара тек кирлĕ мар уксахлама туя.
Туяланатпăр çав вăйсем çукрах чухне.
Тен, тайăлса пăхатпăр, кам-ха ку тесе.
Шыратпăр хамăра. Тупатпăр та-и, тен?
Тупсан вара, эх, савăнатпăр. Çиленетпĕр те.
Ăçта вара çӳренĕ эс çĕтсе, айван,
Хăвна ку таранччен те тупайман.
Шыранă эс хăвна урăх çĕрте, çынра.
Эй, ху, тени вара упранă хăвăнта кăна.
Халь ĕнтĕ кăшкăр тепĕр хут, ухлат.
Сан «Ух!» тени хăпарттăр сан чуна, чуллат.
Чуллат хăвна, хăвна эс тупнă тин,
Эс çавăнпа та пултăн халĕ çын.

***

Талма пуҫланă ҫулҫălла
Эп тытăнса таратăп.
Эс, ҫулҫă, тытăнсам татах,
Санра ман пурнăҫ, эп туятăп.
Санпа пĕрле эп ҫил ҫинче
Чылай пуль ярăнтăм сăпка пек.
Хĕвел ансан та ир ҫинче
Кайăк пекех юрларăм тепĕр...
Халь тин тупайăпши татах
Тĕнче ҫилне тытмалăх чĕлпĕр?
Ак килсе ҫапĕ те – чутах
Талса ӳкеттĕм вĕт! Урсах
Вĕрет тата кĕрхи сив ҫил...
Ăна чăтса пулмасть, паллах.
Ӳкетĕп эп. Ăҫта ман ҫул?
Вĕҫсе каятăп тĕнче ҫийĕн...
Пĕтме пуҫланă ҫулҫăлла
Тепре ҫех ярăнса илесчĕ...
Тавах вăрманлă сăпкама,
Тавах чĕвв! саслă кайăка –
Ун сассисем те пĕтрĕҫ халĕ...

***

Ытла та стайлă хĕрупраҫăм,
Пуҫна хăть ҫĕклесе пăхсам!
Тĕнче ҫапла ытла хăравҫă,
Тесе нихҫан та шутламан...
Эп ыйтрăм та, пĕр сас пулмарĕ,
Ҫухалчĕ сассăм инҫетре...
Пĕр чĕппĕм шанчăк та юлмарĕ
Ман кӳтсе ҫитнĕ чĕрере...
Пăхсам тата, пуҫна ҫĕкле те
Кăлар шăнкрав пек сассуна,
Ҫак юрăра... Тĕнче хитре те
Сассу вара хитре тата...
Тĕнче, тет, сасăран пуҫланнă –
Сасă пулсан, тĕнче пулать!
Эс сас парсан, тĕнче сăпайлă
Ҫак хĕрупраҫ пек курăнать.

***

Çĕр çинче чăнлăхсем нумай:
Тур каланă пехех туйăнать.
Мĕншĕн-ха пĕрне-çех-ха паман
Атăшка та çӳрен пĕр чуна?
Чун хăй тĕллĕн, пĕлет-ха, тесе
Тĕрлĕ йăнăш тăвать пĕрмай.
Йăнăшне тĕллесе кăтартсан,
Килĕшмест вĕт-ха вăл, тупата!
Чăнлăх пĕр, тенине те пĕлмест.
Чăнлăх вăл йăнăш урлă килет...

***

Çак пурăнăç çинчен шутларăм,
Ун никĕсне шырарăм эп.
Ют хутлăха мĕн чуль хутларăм,
Тупмарăм хам валли кĕтрет.

Мĕн чухлĕ пуль сăмах вакларăм,
Çиленпĕм пуль тепĕр чухне.
Мĕн кирлине, çук, калаймарăм,
Курмарăм пурнăç никĕсне.

Çапах хама эп пăрахмарăм...
Пит тарăхса çитсен татах
Эп тĕнчепе кăшт сурасмалăх
Тахçан тупсачĕ-çке сăмах!

Сăмах çав пулчĕ «çурасулăх».
Сăмахĕ хăй сурасстару!
Сана çапла кăштах курмалăх
Çуралчĕ ку сăмах тату.

Татса та пачĕ пурăнмалăх:
«Çураçтарса эс пурăн», – тет.
Сăмах çак пулчĕ пит хăватлă –
Вăл никĕсре, вăл Турă пек!

***

Çул çинчи пĕр киоск
Чиркӳ евĕр ларать.
Калăн, хăй пĕр киот,
Пĕр иконостас...

Кам пырать, пуç çапать,
Тен, çурта та лартать...
Сан куçа çĕр майра
Хывăнса курăнать.
Пăхма питĕ ава-ан...
Ку çаппа-çарамас
Куç хĕсет мар-и-ха?
Пултăр сан ирĕкӳ,
Мĕн тума, тет, чиркӳ?
Куç умне çак киоск
Тухса тăчĕ çĕркаç...
Мĕн тума, тет, киот.
Вăл пĕрех чуп тумасть.

***

Хальхи вăхăтри Нарспи
Ăçта-ши çӳрет ши! те пи!
Çӳл ту çине вăл хăпарать,
Тен, тинĕс тĕпне те анать.
Эй, куртăм ăна, вăл вилмен.
Çул урлă каçать чĕлтĕрти.
Вăл йăрăс, хитре, вăр та вар
Сапать çĕр çине шĕл-кăвар.
Иртет сарă хĕр, çунать пур тĕнче.
Кашни юратасшăн çав сарă хĕре!
Мĕнле-ха аппа, вăл кайнăччĕ-çке!
Ăçтан-ха кăварĕ? Çунать ман чĕре!
Нарспиçĕм, Нарспи, эс айăплă-ши,
Сан пурнăç вăл турă çырни!
Тĕнче хăй калать, туртать, пĕтерет...
Нарспи, тет, вăл манăн евит!

***

Нивушлĕ вара чăваш хĕрĕ
Çухатĕ Тур панă сăнне?
Ăшне çĕлен пек шуса кĕчĕ
Çав çылăх тени пĕринче.
Ăна та тыттарчĕç пулать-и
Хĕн-хĕрлĕ ултав панулми?
Ăна çыртса пăхрĕ те манчĕ
Тăван çĕршывне ас илми!
Эй, хĕрĕм, эс аслă та вăйлă

Пуласшăн çак çут тĕнчере.
Анчах Тур мĕн панă тупаймăн
Çĕлен явăнан ют çĕрте.
Тур панă пулсан вăл упрантăр
Эс ÿснĕ таса кил-çуртрах.
Мĕн-ма эс сăнна улăштартăн
Ют çын сăнĕпе самантрах?
Ан пул эсĕ урăх ют евĕр,
Ан тăхăн юхха кĕпине.
Сана валли халăх типтерлĕ
Упранă чăнах хитрине.
Аннӳ пек эс пул-ха сăпайлă,
Ют хыççăн ан кай тепĕр чух.
Вара, тен, калаçĕç: пит стайлă,
Ун пек хĕр ниçта та халь çук!

***

Шутлама пăрахрăм. Шутламастăп та.
Ним те кирлĕ мар тек. Шырамастăп та.
Тахçан тупнă пулнă. Хунă. Маннă та.
Куç тĕлне пулсан та куç курмасть вĕт-ха.
Юрататс тесеттĕм. Юратмалăх çук.
Çиллenес тесеттĕм. Çиленме те çук.
Нимĕн те пулман пек ман чĕре тапать.
Çут тĕнче хăй майĕн çаврăнать.
Вăранасчĕ тетĕп. Вăрансан вара?
Вăрансан та вĕт-ха ним те çук тавра.
Таврара çуккишĕн ма-ха хурланас
Ăт, хăвра пулсассăн – савăнас!
Çук, пулмарĕ пулĕ ĕç тăвас тени.
Ĕçĕ тупăнсан та алă тек пымасть.
Иртрĕç пулĕ хаклă, шутлă самантсем.
Халь тем пек кĕтсен те тек килмеç вĕсем.
Шутлама пăрахрăм – шутăм суккипе.
Шырама тухмарăм – юлташ суккипе.
Хăть вилме выртасчĕ – вилĕм те килмест.
Халь вара, атьсемĕр, мĕн тата тăвас?

***

Шкул патнелле çывхарнăçемĕн,
Кăшт хăвăртрах та утрăм пуль.
Çитсен, çитсен, ак, çитсенех,

Тӳртен те утрӑм шур кӗрт урлӑ...
Эх, ҫак тӗлтеччӗ вӗт-ха, тетӗп,
Ҫуркуннепе серте шӑтса...
Халь тин вара шап-шурӑ кӗрт те
Пӗр шартлама сив хӗл кӑна.
Ҫапах та куртӑм. Шур юр витӗр
Таҫтан шалтан тем сӑрхӑнать.
Кӑшт утрӑм ҫеҫ-и, тапрӗ тухрӗ
Ман куҫ умне серте пӗр карт.
Сип-симӗс хӑй юр айӗнче.
Шӑтса тухмалӑх ӳснӗ тейӗн.
Пӑхсан-пӑхсан куран унта
Йӳҫ паранки те, ҫеҫпӗл те...
Эй, Тур, мӗнле вара кун пек!
Шур кӗрт ҫинех пуль кӗрсе ӳкрӗм.
Ку шартлама сив хӗл пӗлет.
Тем шартлатса пуль ҫурӑлать?
Шартлатрӗ ҫав, эпӗ ас илтӗм
Ҫурхи ҫак вырӑн илемне.
Тата, татах та ярса пусрӑм,
Ҫитсе те ӳкрӗм шкул тӗлне.
Шкулта вара тепре пӗр селӗм.
Хӗрсем лараҫҫӗ шакӑрин.
Пӑхатӑп та, вӗсен сенкерӗ
Кӑвак ҫути пек вӑй кӗртет.
Лараҫҫӗ шавласа пӗр харӑс,
Сӗтпе юн хутӑш, шап-шурах...
Тен, асамат кӗперӗ карчӗ,
Тен, ҫапрӗ харӑс аслати?
Темле аван пек пулса кайрӗ,
Кунта чӑн чечексен пуххи!
Ӑҫта пӑхан, ҫеҫке хуравӗ,
Ӑҫта итлен, ача сасси...
Мӗн-ма тесен, Сӗн ҫул юрри,
Ҫӗн ҫул ҫывхарчӗ хӗвел майӑн.
Кун ҫаврӑнать вӗт паянтан!
Тен, ҫавнпа хӗрсен пуххийӗ
Чечек пекех халь ашкӑрать.
Эсир курман-и, хӗр ахравӗ
Хӑй майлӑ пит хитре тӑрать.
Апла, тавах, Ҫӗн ҫул саламӗ
Ҫапла пуль халӗ янӑрать.

* * *

Çак самантран пуçлатăп пурăнма
Чăн-чăн чăваш пулса.
Пит çăмăл мар пулать çакна тума,
Тĕнче хирĕççине курса тăрса.
Чăваш, тен, кирлĕ мар халь никама та,
Вăл майĕпен çеç çухалса...
Çапах та кирек мĕн пулсан та
Эп кайăп çĕр çинчен чăваш пулса.
Çапла тума ыйтать манран мăн Турă.
Çав çеç халь çылăх мар тесе калать мана.
Чĕре тесен, чĕре те питĕ хăйне майлă.
Ак, чарăнса тăрсах тăнлать çавна.
Çук, хăрамасть вăл, хăраса та мар.
Пит пысăк ĕç кĕтет тесе кăна
Вăл такăнса илет йĕркесĕрен...
Çырнă чухне те такăнать пулсан вара,
Мĕн тумалла тет çакă пурнăçра?
Сана, чăваш, йăлтах ватать вăл çакăнтах.
Çак самантран пуçлать сана ватма çак пурнăç!
Ватсан вара, юлать пĕр нимĕр çеç санран.
А, тен, çав нимĕр, нимрен те тунăскер,
Халь тин туять хăйне чăн чăвашран чăваш!
Эп хăрамас хама йăлт нимресрен.
Чăваш нимри вăл туплă пулаканччĕ.
Ăна çисе вĕт ÿснĕ ачаран.
Хăш чух вĕт çăкăр та пулман.
Нимри тесен вара пыра ларман.
Пулатăп нимĕр пек çак самантран!

* * *

Калать мандолина. Калавçă
Хăрах урине тăсса ларнă.
Хай йăлт шурăмпуç шутлавлă –
Тĕнче пĕтĕмпех шăпланнă.

Кĕвви тĕнче витĕр çÿрерĕ.
Пире те çÿле йăлт çĕклерĕ.
Çук халь тĕнчере пурнăç терчĕ –
Телей патне кĕвĕ çитерчĕ!

Акă, таса пÿлĕм урлă
Сап-сар панулми кăлтăрр! кусрĕ.

Калавҫă пуҫне питĕ уснă –
Ҫавнă эпĕ ҫеҫ куртăм!

Калать мандолина. Ас илнĕ
Таҫти туйăмсем вĕҫсе килчĕҫ.
Эпĕр шутланă: тен, вилнĕ –
Акă, вĕсен чăн килĕ!

Ак, панулмин чăн шăршийĕ
Таҫта кустарса та кайрĕ.
Кĕлт выляньять куҫ харшийĕ...
Ман чун панулми шăршиллĕ.

* * *

Кĕҫтентти палăкне.

Эс пăхса тăратăн,
Эс утса пыратăн...
Атăл сивĕ хумлă,
Ҫумăр юрпа хутăш...
Ҫĕр ҫулхи эс ватă,
Ҫирĕмри эс каччă,
Кампа пĕрле чупнă,
Кампа пĕрле кулнă?
Миҫе мăшăр ҫамрăк
Кунта хăйне тупнă?
Халĕ мĕн тăватăн,
Халĕ мĕн шутлатăн?
Камăн чĕри пыллă,
Кам ҫăварне карнă?
Усал сăмах пенĕ,
Мăшкăллас-ха тенĕ.
Пуҫу тăрăх пылчăк
Вăрăм йĕр хăварнă.
Эх, йăваш чăвашăн
Уҫăлмасть ҫăварĕ.
Куҫĕ кăшт йĕрсен те
Тути кăшт кулать-ҫке.
Халĕ ĕнтĕ эсĕ
Ху та юн хĕреслĕ.
Халь ăҫтан тупатăн
Чун ăшшин хăвачĕ
Хĕрсемпе утмалăх,

Саванса кулмалăх.
Атăл сивĕ хумлă,
Çумăр юрпа хутăш...

***

Мĕн шыратпăр, мĕн тупатпăр çак кун уттинче
Çыврăратпăр, канатпăр шур пурт хӳттинче.
Иртеççĕ кунсем, иртеççĕ каçсем... Ним те çук!
Ку хутлăхра ман валли пурнăç çук!
Ӳт кăна тăранать. Ни вилĕ, ни чĕрĕ.
Пĕринче, ас тăвап, ăна та чун кĕчĕ.
Янраса-янраса çухалать пек пĕр сас.
Çак тĕнче сассине ас тăвать-ха ман ас.
Ку пулса тахçанах. Халĕ эпĕ йăлт пĕтнĕ.
Телее эпĕ ĕнтĕ пит нумай пулĕ кĕтнĕ.
Халĕ те эп кĕтеп кашни кун çутинче.
Мĕн те пуль уçăлмасть-и тĕнче тепĕнче?
Çук çав, çук. Ним те çук ку тĕнче уттинче.
Çыврăратпăр кăна шурă пӳрт хӳттинче.
Иртеççĕ кунсем, иртеççĕ каçсем... Ним те çук!
Ман валли ку çĕрте пурнăç çук!
Ӳт кăна тăранать. Ни вилĕ, ни чĕрĕ.
Пĕринче, ас тăвап, ăна та чун кĕчĕ!

***

Кĕсле ту çине хăпартăм.
Чăваш çĕр-шывне йăлт куртăм.
Халăх пуç тайнă – тăрать.
Пурте: «Кĕçтентин!», – теççĕ.
«Эсĕ пур пулсан, эпир те пур»
Карталанса юрă юрлаççĕ.
Пуçа тайса сăмах калаççĕ.
Пăхса тăтăм та чăтаймарăм.
Кĕсле ту çинчен вĕçрĕм те кайрăм!
Вăйлă çил мана ярса илчĕ.
Чăвашсем мĕн кунта çатан тытаççĕ.
«Курницана çусах тăрăр,
Улма кустарма шухăш пур», – теççĕ.
Улма кустарма эпир çитрĕмĕр,
Чăваш çĕрĕ тăрăх çӳрерĕмĕр,
Сирĕн кăмăлăра килтертĕмĕр.
Пĕр тытăнать карти, пĕр саланать,
Пирĕн куçран куççӳль тăкăнать.

Курнă пĕрне ĕнтĕ çухатăпăр,
Юррăрсене епле манăпăр?..
Тепре кăна ĕнтĕ чуп тăвасчĕ,
Сăмах хушса кăмăл тăвасчĕ.
Çук çав, тĕнче улма мар.
Çĕр чăмăрне пĕрех кустартăмăр тепĕр май!

***

Ача вăл тараса...
Ун чĕри тап-таса.
Ачапа кăна виçетпĕр,
Пурăнма кăштах пĕлетпĕр.
Ырлăха кăна кĕтетпĕр.
Хăрах алăра кулачă.
Урара вара атă.
Çитет хăраса,
Тĕнчене юраса...
Ача пек пулар тап-таса!
Унсăрăн пĕтетпĕр,
Çуралмасăрах вилетпĕр!

***

Усса пултăр та сыппа кайтăр, теççĕ.
Хырăмрах çĕрсе пĕтет вара çăкăр хăвачĕ.
Кĕтӳ пекех кĕпĕрленсе çӳрет халăхĕ –
Уйăрса панă вĕсене апат пĕр валĕм...
Чуна пăрахсан, çын пулатпăрах, теççĕ.
Çак çĕр çинче чи кирли апат, теççĕ.
Çичĕ ютран кĕмĕл-ылтăнпа килеççĕ,
Пуйнă пĕри çавăнтах, кур, вилеççĕ...
Чăваш, ăçта вара сан чун хăвачĕ?
Нивушлĕ сана та ăсран кăларчĕç?..
Çунатчĕ авалта сăвар кăвайчĕ...
Куç айĕнчен пулсан та тĕлкĕшет кăварĕ.

***

Çынна темĕн чул суйсан та
Тĕнче пурпĕрех пĕтмест.
Эсĕ суйсан та – çав самантра
Вăхăт суйма пĕлмест.
Эпĕ çавна ăнлантăм:
Вăхăт вăл хăй халăх пек.

Тен, ахалех хурлантăм:
Эпĕ суйма пĕлмес!

***

Епле çемçе çÿлти шур пĕлĕтсем.
Çĕр çумĕпех вĕçеççĕ чĕкеçсем.
Епле черчен çул хĕрринчи чечек.
Ăна ватса пĕтернĕпе пĕрех.
Мĕн чул курса эп çакă тĕнчене.
Хальччен асăрхаман çак сурт тĕсне.
Темле пĕр кайăк пуç çинче тата
Хăçан вĕçсе килсе вăл ман пата?
Çынсем çапла çĕр тĕрлĕ пулнине
Кашнин майне килен чун уççине
Хĕрĕх çула çитсен те эп ăша хывман.
Хĕрсем капла нихçан хитре пулман!
Апла, тен, эпĕ халь те ватăлман?

***

Пуçра пĕр ыйту та çуралмарĕ.
Апла, пурнăçăм ман пĕр майлă.
Нимле хирĕçÿ те, çитменлĕх те çук.
Пурнап юмахри пек – пыл та çу! –
Такам тахçан панă хуравлă:
«Хушмасăр ним те тума юрамасть!»
Çакă пирĕн кăмăла питĕ юравлă.
Ара, пуçра ун пек чух ыйту çуралмасть.
Паян та, акă, çитрĕм ĕçе.
Ним те кирлĕ мар пек тек...
Çÿресчĕ те кайăк пек вĕçсе –
Пире мĕн пурри те çитет.
Çавăнпа та çуната сармарăм.
Пĕр ыйту та никама та памарăм.
Эпĕ нимуй пек а-а-анрашкаларăм...
Çакă-ши пулчĕ вара ман хуравăм?

***

Шур юр ÿкет, юлать ура йĕрри.
Тĕнчен те пур çав хăй юрри!
Чуна савăнтарать ача сасси.
Амăшĕсем хитре. Мĕн каласси!

Хитри, хитре те... Ах, анчах!
Хӑй чӗлхипе вӑл калаҫмасть пачах.
Ӳкет шур юр, хуплать хура ҫӗре.
Тен, ҫут ҫанталӑкӑн ҫапла йӗрке?

Мӗнле чӑваш, мӗнле пӑхать черчен.
Анчах мӗн-ма чан саслӑ-ха тӗнче?
Тен, эпӗ ӑнланмастӑп унтине?
Ҫӑвать шур юр, хуплать ҫул хыттине.

***

Хуҫрӗҫ те ватрӗҫ ӑна, куратӑп.
Хӗвел пек хӗрлӗ хӑва мар вӑл халь.
Сул хӗррипчи шӑртне тӑратнӑ
Чӗрӗп пек. пӗр папкара юлнӑ хӗвел
Пӗр пытанмасӑр пӑхать...
Сарӑ сӑмси кӑшт пӑрланнӑ...
Хуҫчӗр те ватчӗр, тет. Мана пурпӗрех.
Шип! шиплетет чӑх чӗппи пек папки.
Хуснӑ пӗрне ларт турӑш умне.
«Чӑн чӗрӗлнӗ!» тейӗр вӑрттӑн.
Пӗтнӗ пӗри вӑранать тур ачи пек.
Тин ҫеҫ шиплетнӗ пӗр сас халӗ – кӗлӗ.
Хӑва хуснӑ алӑ хучӗ хӗрес.
Ҫынни пуҫ ҫапать ҫӗре ҫити.
Хӑва ҫинче халӗ хӗвел ҫивитти.
Хуҫчӗр те ватчӗр, тет, туратти.

***

Атӑл кайман-ха, кӑвакарнӑ кӑна.
Ҫил ҫамки ҫинчи пӗр чиркӳ
Хула ҫийӗн ҫапать чан-чан-чан!
Хыт ҫапсан та ҫырма хушшинчи
Чӑвашра илтӗнет аран.
Кӗл тума тӑрса тухнӑ ҫыннсем
Сӑхсӑхса пуҫ таяҫҫӗ хуллен.
Илтӗнет тахҫан хывнӑ пӗр юрӑ –
Тӑнлама та чуна пулчӗ юрӑх.
Ун пекки эп илтменччӗ урӑх.
Атӑл шывӗ юхать лӑпланса,
Вӑл пӑр айӗн тапать хумханса,
Тан каяс пек тӑрать тупата –

Чан пекех пăлхатать ман чуна.
Турă пек-и тăкасшăн юна.
Атăл тăрăх каять кăвак пăр,
Хулана хускатать мăнă хор.
Пуç таятпăр çап-çут уçлăха.
Шухăш кĕчĕ пулас хăмăша?

***

Пĕр хĕрхенӳсĕр, кӳренӳсĕр пурăн.
Чулпа перекене çăкăрпа пер.
Чирлесрен, вилесрен ан хăра.
Алăпа салатакан аркăпа пуçтарать, теççĕ.
Тен, телей шăла çĕмĕрсех кĕрĕ...
Пӳрни пӳрт умнех килсе тăрĕ...
Мĕн пуçтарни шывпа юхса кайсан та – ан кулян!
Шыв типтĕр, çил тухтăр, хаяр ӳктĕр...
Усал вăл усал, ырă пурпĕрех ырă –
Вĕсене эпир шутласа кăларман!
Çавăнпа та никамран та ан хăра,
Нимĕншĕн те нихăçан та ан кулян...

***

Кăвак каç уçлăхри чиркӳ евĕр
Кăтартать ман тăван çĕршыва.
Пуш урам тăрăшшĕпе пĕрре-иккĕн
Мĕлтлетеççĕ тăрри шăтăксем...
Кам çӳрет çĕр хута çывăрмасăр,
Кам мĕлки-ха лартать çĕр çурта?
Кăвак каç пуç тăррисĕр чиркӳ пек.
Тăрринче курăнать çăлтăр çулĕ –
Çав çулпа халь каяççĕ çынсем.

***

Хаçата çăкăра илнĕ пек илетчĕç.
Апла, сăмах та çăкăрпа тан!
Çăкăршăн çынсем çапăçса вилетчĕç,
Сăмахпа та çынна ним те мар хуçан!
Кайран çăкăра хаклама пăрахрĕç.
Пĕр вăхăт пылчăк вырăннех хучĕç.
Ачасем мечĕк пек тапатчĕç,
Амăшĕсем кăларса пăрахатчĕç,
Çăкăр тăваканран кулатчĕç...

Сӑмахпа та ҫапла хӑтланчӗҫ,
Куҫран пӑхса суя сӑмах калатчӗҫ.
Сӑмахӑн та хакӗ хухрӗ.
Анчах ҫӑкӑрсӑр, сӑмахсӑр пурнӑҫ ҫук.
Мӗншӗн вӗсене халь черет тӑрса илмеҫҫӗ?
Тӗрӗс мар ку!

* * *

Тин кӑна ӑшӑччӗ...
Халӗ вара сивӗтсе пӑрахрӗ.
Пӗтӗм чӗрчун тарса пытанчӗ.
Эпӗ кӑна ҫилпе тӑрса юлнӑ.
Эй, Турӑ, пире хӑтаринччӗ!
Кам шутланӑ ҫапла пуласса,
Чечексем пек пулса шанасса...

* * *

Уйӑх та пур, хӗвел те пур, теҫҫӗ.
Эпир мӗнле пурӑннине уйӑхпа хӗвел пӗлеҫҫӗ.
Темле йывӑр пурнӑҫсем килсен те,
Пире пӗтме памаҫҫӗ пӗрре те!
Пӗри сивӗре те пӗрех ӑшӑтать,
Тепри тӗттӗмре те пӗрех йӑлт ҫутать.
Ҫавӑнпа та чӑваш ҫирӗп тӑрать –
Уйӑхпа та, хӗвелпе те тупа тӑвать!

* * *

Ик хут иккӗ тӑваттӑ, терӗҫ,
Ик хут иккӗ тӑваттӑ, терӗмӗр.
Ҫӗр те пин хут каларӑмӑр,
Пурте питӗ хытӑ савӑнтӑмӑр.
Икӗ хут иккӗ тӑваттӑ,
Икӗ хут иккӗ тӑваттӑ –
Янӑрарӗ тӗнче тӑрӑх.
Ахрӑмӗ те ҫитрӗ ҫаврӑнса.
Темшӗн вара икӗ хут иккӗ тӑваттӑ мар,
Икӗ хут иккӗ пиллӗк, тет ҫав сас.
Тин ҫеҫ тӑваттӑччӗ, халӗ вара пиллӗк.
Мӗн пулчӗ?
Халӗ пурте ӑнтӑхса кайсах урӑхла калаҫҫӗ:
Ик хут иккӗ пиллӗк,
Ик хут иккӗ пиллӗк, теҫҫӗ.

Чăн та, пиллĕк-иç!
Мĕн-ма маларах каламан?
Эпир те çынран катăк мар!
Калаттăр эпир те çĕр пин хут.
Кам тăваттă тет, çав пĕтет!
Эпир халь пиллĕк хут паттăр!
Ик хут иккĕ пиллĕк,
Ик хут иккĕ пиллĕк –
Янăрать тĕнче тăрăх.
Ахрăмĕ килет каллех çаврăнса...

***

Епле вăл аслă, çак çĕршыв...
Мăн асаттесем çӳренĕ çул
Илсе каять таçта çити...
Çук пуль, чăваш, тĕнче чикки
Ока енчен Урал таран,
Кăнтăралла Кавказ патнех
Çитсе тухса, тет, сăварсем –
Çитмен çĕр хăварман вĕсем!
Ак, халь те тухнă кун курма,
Тен, хăйсене кăшт кăтартма?
Вăй-хал та тупăнчĕ пулас,
Халь ма-ха чăвашран хăрас?
Пырать вăл ушкăнăн малта,
Çитет ларса хамăр ялта!
Енчен те ял çĕр кăвапи,
Ытти çĕрсем – чун ярапи!
Çитсе курас тесех тухас,
Тухса та çынсемпе пулас...

***

Пире çак пурнăçра парса тет пĕр сăмах.
Çав сăмаха эпир пĕлетпĕр Турă пек.
Пĕр шутласан, тен, калăн: ку, юмах!
Анчах та эпĕр пур. Апла, çак тĕнчепе
Тахçан авал сăмах та пулнă чăн хуçа?
Çак тĕнчене вĕрсех, тен, тунă пуль?..
Халь тин эпир çак сăмаха пĕлетпĕр,
Тен, çавăнпа Турă пекех çӳретпĕр...
Çак тĕнчене, тен, эпĕр тепĕр хут
Пĕр-ик сăмах хушса туса хуратпăр?

***

Тӗнче пӗтет тенӗ чух
Чӑваш чунӗ мӗн шутлать?
Пурӑнмалӑх мул пухать,
Кунӗн-ҫӗрӗн тӑрӑшать...
Анчах вӑхӑт иртет те
Вылямалӑх шак чул ҫех
Ун аллинче курӑнать.

***

Ҫак пурнӑҫ, паллах, патак мар...
Пӗрех хӑратать, ҫавӑнпа та
Ҫӳретпӗр эпир питӗ шӑппӑн.
Шутлаттӑр: «Эпир паттӑр мар!».
Тата ҫакӑ пурнӑҫ пурришӗн
Эпир ҫапӑҫса та курман.
Чӑвашӑн, калаҫҫӗ, нихҫан та
Пӗр чӗптӗм тӑшман та пулман!..
Ҫапах пурӑнса курман мар та,
Пӗлетпӗр мӗн пур-ҫуккине.
Патак пек хыпса тӑрсан та
Туяттӑр тӗнче таппине.

***

Эп пурӑнап никама курӑнмасӑр,
Пур-и, е ҫук – никам та пӗлмест.
Ҫил евӗр ирпе пите сӗртӗнетӗп,
Каҫпа хура тӗм сӑна пытарать.
Юр ҫине пусрӑм – йӗр юлчӗ...
Йӗр куртӑм та питӗ тӗлӗнтӗм.
Эпӗ иртнӗ ҫӗрте те йӗр юлать!
Йӗр хывнӑ юр та мӗн чӗрӗ!
Кӗтеп касченех йӗр пӗтиччен,
Тепре ҫак ирпе юр ҫӑвиччен...
Унтан тин каллех тепӗр хут
Йӗр тӑвӑп ҫӗн юр ҫунӑ чух!

***

Ӗмӗрсем ҫухалса иртсен те
Мӗн пулни тепӗр хут килет.
Тахҫан пурӑннӑ Нефертити

Чăваш хěрě пек, акă, çўрет.
Чăваш хěрě пекех вăл сăпайлă,
Фараонăн майри те мар.
Фараон пек эпир пулман мар та
Юмахри пек пěрех туйăнать.
Ун тути чуп туса, тен, курнă
Пирамидăри пысăк Турра?
Хăй те, тен, çавăнпа турра тухнă,
Ас илет авалхи пěр юрра.
Ун юрри тахçанхи, ку паллă,
Ман анне те çавнах юрлать.
Фараонăн тěнчи çухалсан та
Нефертитти пěрех пурăнать.
Ларса килнě кунта, курса тăр-ха,
Çирěп пулнă сăвар лаши.
Унпала халь пěрле мěн тăвар-ха,
Авалхи ташшиех вěт ташши.
Пěр юрларě те хытă ташларě,
Илěртес терě пуль чăваша.
Эп вара фараон пек шутларăм,
Нефертитти ман арăм пулать!

***

Кăвак çутă ўкнě чўрече çине.
Пулас кун вылять пуль хăйěн куçěпе?
Мěлкесем сикетчěç сиккипе унта,
Кайăк килсе пăхрě ирхи кăмăлпа...
Ним те мар пек ěнтě – чўрече кăна.
Вăранма пуçланă пурнăç çавăнта...
Вăрттăн çеç курнать те вăрттăн çухалать.
Чăн малтан шуйттан пек сăнě курăнать,
Куç хěссе пăхать те питě хăратать...
Каярах Турри те курăнса килет,
Кăвак çутипе те чуна илěртет –
Халь мěнпе çак кантăк пурнăç ўкерет?

***

Ылтăн сулçă сапнă çěр çине
Çěрě-çěрěпе сут çăлтăр çурě.
Ак, алла илсен пěр сулçине,
Асăрхатăн: хура пăнчă юлнă!
Çăлтăр ўкнě вырăн çавăн пек:

Хуп-хура та таткаланчăк, шăтăк...
Çавăн пек çăвать-ши вара çăлтăр,
Çĕр çинче выртса çапла пĕтет?
Типсе çитнĕ те вăл халĕ питĕ
Вут хыпас пекех вĕт курăнать.
Çĕрĕне çапла çулу çапса ларсан,
Çулçă пек çунса тухать çĕр пичĕ...

***

Çын кашни кун хăй шăпине суйлать.
Кашни çĕрте çĕр тĕрлĕ çул курать.
Çул юппинче пăхса тăрать чăваш.
Çав самантра вăл мĕн çинчен шутлать?
Çав çулăн юппинче пур çул Турри,
Çул çаврине тĕрĕслесе пăхса ларать.
Пĕр вăл кăтартнă çулпала кайсам,
Кайсан вара укçа хурса хăвар...
Çула тухас чухне те кĕл тăвар...
Ун пек тумасанах аташтарать шуйттан,
Ăса пăтраштарса çултан пăрать...
Кашни самант кĕтет пире пĕр çул.
Ăна суйла та ху та Турă пул!
Никам утман çулпа утсан аван,
Эс ун чухне чăнах чăваш пулан!

***

Кунран кун турат хушнă хурăнăм,
Сан пекех эпĕ йывăçăн курăнтăм...
Çулçăма сар хĕвел тем сырчĕ,
Сырчĕ-сырчĕ те тем ывăнчĕ.
Халь çавна вуласа ларатăп.
Çур енне çырнă, вĕçне тăм тивнĕ,
Каярах тата юр та витнĕ...
Çав тĕлте ку çыру лӳчĕркенĕ...
Ăна сив çилсем пĕтерме пикеннĕ!
Пĕрех пайăрка çавă çулçă çинех
Çырнă та çырнă çине çинех...
Акă çу кунĕ, шăрăх та вăхăт,
Çимĕк çитсен, иртет питĕ хăвăрт!
Çав тĕлелле çырса та пĕтернĕ,
Ман патăма илсе те çитернĕ...
Эпĕ вулатăп ăна майĕпен.
Ĕнтĕ çу иртрĕ, килет кĕркуне.

Эпӗ пӗлместӗп мӗн килнине!..
Сарӑ хӗвел тек сырмасть сырӑвне,
Никам та пӗлмест сыру асапне.
Вӑл майӗпен сарӑхать, кушӑхать.
Халь тин кирлӗ мар, ҫуккӑ пулать.
Кайран та вара тур сырнӑ сыру
Ҫӗре те ӳкейӗ... Таптать сан уру!
Ун чух ҫӗклесе те пӑхсам ун ҫине,
Турру сырса янӑ сыру йӗркине.

***

Аслати ҫапать те ҫӗр ҫӑтать пуль теппӗр
Ҫакӑ ҫӗр ҫинчи те сылӑх сынсене.
Ҫумӑр ҫунӑ хыҫҫӑн аслати иртет те
Тасалать, ак, курӑр, ҫакӑ ҫут тӗнче.
Ҫӗр ҫинче ҫӳретӗп, пур манра ҫӗр сылӑх.
Анчах ҫӗршӗн эпӗ пӗртте йывӑр мар.
Ҫавӑншӑн мана вӑл ҫапмалла тем чухлӗ,
Сылӑхшӑн ҫак пӗлӗт ҫапмалла паян.
Йывӑр пулас ҫук ҫав сылӑх тенисем!
Эпӗ тунӑ сылӑх пӗлӗт пек ҫӑп-ҫӑмӑл,
Пӗлӗтпе пӗрле те вӗҫсе кайрӗ пуль...
Хам та вара эпӗ аслати пек вӑйлӑ...
Ҫавӑ сылӑх пулӗ, ҫумӑр пек ҫӑватӑп.
Ҫавӑ сылӑх пулӗ – аслати ҫапать,
Ҫӑтас тенӗ ҫӗр те кӑкӑрне уҫать...
Ҫавӑнпа пуль чунӑм питӗ савӑнать!
Аслати ҫапать те ҫӗр ҫӑтать пуль теппӗр,
Ҫӗрпе пӗлӗт хушшинче аташса ҫӳретпӗр –
Ҫавӑнпа таса пуль ҫакӑ ҫут тӗнче!

***

Ҫутӑ ҫӑвать, хӗвел ҫӑвать,
Пурнӑҫ ҫӑвать ҫӗр ҫине.
Ҫутӑ хӑй вӑл вӑрлӑх пек,
Ӑҫта ӳкет – сын пулать!

***

Тӗнче усалланса ҫитсен,
Чӑваш ҫитет ӑна ҫӑлмашкӑн.
Тен, ҫавӑнпа, чӑваш килсен,
Шуйттан хӑрать – вӑл та пурнасшӑн!
Чӑваш, ак, кирлӗ пулчӗ те

Тĕнче тасалăхне тумашкăн.
Ăна малтан, пылчăк тесе,
Пит юрататчĕç таптамашкăн...
Ак, вăл çĕкленчĕ çĕр çинчен
Чăн Улăп пек тепре курнаслăн.
Ăна курнать пуль пĕлĕтрен –
Эпир халь пĕчĕк çеç юласлăн.
Халь вăл пуçлать хăйĕн ĕçне,
Вăл вăй тупать пире çăлмашкăн.
Çук, вăл килмен çак тĕнчене
Хăй сассипе çеç хăратмашкăн.
Çук, кирлĕ мар унран кулма,
Вăл, Турă пек, чăнах айванлăн
Хăйне пĕтерĕ чăнласа,
Пире çăлас тесе хăватлăн...
Кайран, ак, калăпăр, ăçта
Пире çав çăлакан тăванăм?
Тăрать, ак, ĕнсине хыçса
Тĕнче хăйне хăй ăнланмасăр.

***

Ак, пуçланать те пăтăрмах,
Вара ванать тĕнче татах.
Пĕтсе каять чăваш йăлтах,
Тĕпре, апла, пĕр йăнăш пур, чăнах!
Тахçан такам хăй тăванне, тен, сутнă,
Е хăй суялăх шурлăхне те путнă?
Пăрахнă хăйĕн тур пек ачине,
Çапса салатнă пĕчĕк сăпкине...
Тен, çавăнпа инкек тӳсетпĕр,
Çапкаланса çак тĕнчере çӳретпĕр?
Кам айăплă тесе, мĕн-ма ыйтатпăр?
Вăл хамăрта, çавна курмастпăр...

***

Шăнкăртатса юхать сут шыв.
Шыв айĕнче тем чухлĕ чул.
Эпир шыратпăр пĕр вутчуль.
Кăвайт чĕртмешкĕн шăрпăк çук.
Пулли те пур, кăварĕ çук.
Эпир шыратпăр кăвара
Шăнкăртатса выртан шывра.

Выртать вăл ĕмĕртен кунта,
Тен, çавăнпа та ял-яка...
Кăшт найлака та йĕперех...
Çапса пăхатăн та ăна,
Шалта вутран та типĕрех.
Шалта ун çиçĕм йĕррисем,
Тахçан кунта вут чĕртнисем...

***

«Çын çиен», тенисем ахаль мар:
Аттепе аннене, тăван çĕршыва,
Анне панă тăван чĕлхене
Çисе ягăмăр эпĕр йалтах.
Тăрса юлчĕ вара тĕнчен шăмшакки,
Ун чунне çисе янă пулать.
Вăл усал, вăл шуйттан хăраххи,
Унпа çеç эпĕ туслă пурнап.
Чун тени урăхла саккунпа
Пурăнать пулмалла, ху шутла!
Çынна «çирĕн» пулсан, эс пĕтен.
Чун хушсан вара, тен, пурăнан?

***

Халăхăм ман, халь ăçта эс?
Пулнă пулас эс тахçан...
Мĕншĕн хăвна эс пытартăн,
Мĕншĕн сăмах каламан?

Сан пек халь ман чăн пулас-и?
Кĕрр! çеç кĕрлетĕр чăваш!
Ун сăмахне итлекенĕ
Хăй те чăн пулĕ чăваш...

Халăхăм ман, халь ăçта эс?
Мĕншĕн тăратăн шăп?
Эпĕ сан пек те пулсан-и,
Хам та пулатăп лăп!

***

Поэзи халь каллех, ак, ÿсрĕ
Ман куç умне пĕр тĕм пулса.
Сивĕ çилле вăл лайăх тÿсрĕ,

Çулçисенчен кăвайт туса.
Çунать пĕр тĕм поэзи евĕр,
Калать пуль хăйĕн сăмахне...
Çур кунĕсем килсен, ак, тепĕр
Калать сăмах – урăххине.

***

Пуç çапрăм эп сана, çут уйăм,
Пус тăршшипе те утнă чух.
Сан асапна та эпĕ туйрăм,
Пур-çук тырра пуçтарнăçем...
Мĕн ачаран кунта эп утнă
Вăй çитнĕ таранах пĕрмай.
Ыраш та вырнă, тулă акнă –
Эп пурăннă çак анапа...
Мана вăл туйăннă Тур пек.
Тен, çавăнпа ăна пуç çапнă
Тупа туса пĕрле пулма
Мĕн виличчен çак çут уйпа.

***

Турă çинчен шутлатăп эпĕ.
Турă ман пур-и, вăл ăçта?
Кирек мĕскер, тем каласан та –
Сисетĕп – пур вăл ман ăшра!
Çапах чăваш, мĕнле калать-ха,
Тытса пăхмасăр ĕненмест.
Апла пулсан, каçпа тухса та
Пăхса эс тăр-ха уçлăха...
Епле унта тĕнче ялтравлă,
Епле çунать вăл сан чунра!..
Кăштах татах вăйсем тупсан та
Вĕçсе каятăн пуль унта?
Е пĕр тата пилеш çырлийĕ
Турă пекех вĕт туйăнать.
Ăна татса çисе пăхсан та
Ай, йÿçĕ те... турăлатать.
Турă тени, таçта та пур-тăр.
Турă тени пур халăхра!
Çапла, çапла, ан тив эс тенĕ
Ху юлташна, хурăнташна.
Ун туприне ан тĕкĕн тенĕ,
Тек ан пăхсам ют арăма...

Çапла тесе калана халăх
Вăл Турăран та аслăрах!
Малтан вĕт халăхĕ пулса та,
Турри килсе кăшт каярах...
Тен, çавăнпа çӳлти Турра
Эпир пĕлетпĕр хамăрта.

***

Мĕнле-ха, тетĕп, пурнăç сĕмĕ
Шуса кĕрет-ха юн шайне?
Эп ырă тусанах çав паллă
Кăшт сыпăнать пуль ман ӳте?
Мĕнле-ха унсăр кун пулать-ха,
Мĕнле ӳсет-ха ку тĕнче?
Мĕн ĕмĕрсем хушши мĕн ырă
Йăлт сыпăнать пуль чун шайне?
Эпир, тен, çавăнпа çеç Туррăн
Пăхса тăратпăр халь пĕрле.
Мĕншĕн тесен эпир пĕлетпĕр –
Çав Турă пирĕн чĕрере!

***

Кая юлса пырать ман пурнăç.
Тĕнче кайса таçта, малта
Çап-çуттăн ялтăрать, пыруçăн
Тата хитре пек курăнать...
Мĕн-ма кая юлса пыратăп?
Пиншер çул иртрĕ пуль, тахçан
Пуçламăшне туса хуман та –
Ларатăп çавăнтах паян.
Пиншер çулсем иртсен те иртчĕр –
Ман çав ĕçе вĕт тумаллах!
Тен, çавăнпа çак кĕрхи кун
Ман çул пуçламăшĕ пулать.

***

Çил çинче эп тăратăп халĕ.
Çил тени, кĕрхи çил, аван мар.
Çил çинче тăнă чух аса килчĕ
Таван кил те картиш, амбар...
Пурте пур ман килте, пурте лайăх.
Сивĕ чух ăшă пӳрт пит аван.

Ир енче сăрхăнса кĕрет çутă –
Каçпала та çав çутă унтах!
Çавăнпа та, шутлап, манăн çуртăм
Çут валли халĕ тунă пекех.
Ун патне эп каллех ăнтăлатăп
Сивĕ çил çинче тăнă чухне...

* * *

Ахăр çил çавăрттарчĕ, астарчĕ
Чўрече умĕнчи йывăça.
Пĕр кана сивĕ çумăр хупларĕ –
Çук, памарĕ мана çывăрма.
Эп хама капитан пек туятăп.
Пирĕн çурт пĕр пĕччен хăй карап.
Унпала эп ишсе пыратăп,
Тавăлтан та эп халь хăрамас.
Ман кунта халь кил-йыш та тăванăм –
Çывăраççĕ вĕсем вилнĕ пек...
Эп вĕсемшĕн, паллах, пăшăрхантăм –
Хамшăн эп халь нимрен хăрамас!
Çавăрттартăр çил-тăвăл, алхастăр...
Пурпĕрех вăл пире тивеймест!
Ман пўртре çывăраççĕ пĕр харăс
Ик ача халь тин выртнă пекех.
Çук вара, ман карапăм пĕтмен-ха,
Çак çĕр çумĕ ун пристань пулать.
Çил темле ашкăрсан та чун майлă
Манăн çурт çавăнтах лăпчăнать...

* * *

Чăнах та мар-и, çак çырма
Пире çĕклерĕ пит çўле.
Çўлтен-çўлтен пăхса тăрсан,
Çырма та курăнать ĕлккен.
Унта вара хăй пĕр тĕнче!
Çав çырмара пурăннăçемĕн,
Тен, пулнă пулĕ пит чее...
Тен, çавăнпа та ĕлкĕрепĕр?
Эп ĕлкĕретĕп тем тума та!
Мĕншĕн тесен, çырма ман пур.
«Çырма» тесе çырса хурап та
Çырма пуçлап çырма çинчен...
Çав çырма пек атьсемĕр пулăр,

Чăваш çырми асамлă вырăн.

***

Хăваласа пыратпăр пурнăçа.
Пурнăç тени тарать кăна.
Ярса тытасшăн тăсрăм хам ывçа –
Çук, вырнаçмасть ку кустăрма!
Вăл çаврăнать кăна халь ман тавра.
Çаврăннăçем, мана та пуль çаврать?
Тăрса юлатăп варринче вара –
Татах та çавăрас тесе çаврап!
Эс ас тăватни, пĕчĕк чух пĕрре
Круççель эс ярăнтартăн уявра.
Епле аванччĕ ун чухне пĕрле –
Круççелĕ çаврăнатчĕ пин çавра.
Çавăн чухне ăнлантăм пĕр ăнлав,
Пуçа манне пуль халь те шăтарать,
Пулсам эс ху та пĕр çавра майлах –
Вара ку тĕнчене çавăрттаран!

***

Пĕрре кăна санпа çураçтарасчĕ,
Пĕрре кăна пăхсамччĕ ман çине...
Анчах та йывăç хăй пурнасшăн,
Пăхсан та пăхрĕ çиле май кăна.
Вăл çилпеле хăйне юраттарайчĕ.
Вăл авăнать пĕрмай пĕр çиле май.
Мана вара пĕрре те вăл курмарĕ –
Эп пултăм уншăн çук пулас...
Пуртă йăтса пыратăп ун патне –
Часах сана ваклатăп та!..
Ман йывăç пĕр сăмах чĕнмесĕр
Шалт! çеç йăванчĕ çиле май!

***

Тĕлĕнтерсе пăрахрĕç сар хĕрсем.
Вĕсем мĕн ку тĕнчере те мар.
Теме пĕлсен те пурпĕр ĕненмесçĕ –
Вĕсем, тен, чăн та, сывă мар?
Вĕсен черчен пуçĕсенче пĕр Турă.
Турă тăвать, иккен, ку тĕнчене!
Тĕнче мĕн улшăнмасть. Мĕнле вăл пулнă,

Çавăн пекех тăрать чăн шиклене.
Хăçан, апла, пулса та ишĕлсе
Пĕтет-ха ку тĕнче, йăлт çылăхсхер?
Хĕрсем каяççĕ чиркĕве – ан тив,
Унта вĕсем тупаççĕ хăйсене
Турра йăлт ĕненсе те пурăнмалăх...
Турри, тен, çук та мар пуль те, анчах
Ăçта-ха сан юлташ, атте-анне –
Мĕн-ма халь вĕсене эс ĕненместĕн?
Чун пăсăлсан çапла çав, куç курмасть.
Сăмса айне тĕксе парсан та суккăр!
Ĕнен эсĕ хăвна, эс юлташна пуç çап.
Тăван çĕршыв вара сан, чăн та, пулĕ!
Пĕр Турăпа çеç юлтăн эс паян,
Мĕнле чăтса ирттерĕн ĕнтĕ халĕ?

***

Пăхать, пăхать таçтан асамлăн –
Вăл асамлать пуль халĕ те?
Тахçанхисем халь çаврăнса та
Пырса тивеççĕ ман чуна...
Эс каласа: «Вырăс пулар-ха.
Вырăс пулсан, тен, пурăнан?
Чăваш пулса тăрсан, тăхта-ха,
Эс тĕнчерен вĕт йăлт юлан!»
Çапла калана эс, мăнтарăн,
Ху халăхна пĕтернĕçем.
Халь мĕн тата тытса хăварăн
Ним çук чухне чăвашлăхра.
Сар хăйăр пек вĕт шуса тухрĕ
Халăх тени сан аллунтан!
Кăшт курăнмалăх та юлмарĕ
Ача тени ку хулара...
Пăхан, пăхан-ха асăнмалăх.
Тахçан пулса пуль халăху?
Анчах татах пăхса ларсассăн,
Юлмасть манра ку тарăху!

***

Ку тĕнчене улăштарма пулать пуль.
Ак, асăрха-ха, эс малтан аван, пĕр майлă
Пăхкаласа çӳрен, аван, аван тесе...

Унтан темскер ҫитмен пек аванан та
Ҫук, кун пек мар! Тен, урӑхла тӑвар-ха
Текелесе чуна улӑштаран...
Ак, халӗ пӑх-ха, йӑлтӑртатать тӗнче
Пачах урӑх ҫутта. Аван тени аван та
Тата авантарах та пур иккен кунта.
Ҫапла улӑштарма пулать пуль хӑвӑрт
Ҫак тӗнчене кӑштах авӑнтарса...

***

Тӗлӗнмелле пӗр пулӑм
Хуҫаланать чунра.
Хама эп халӗ куртӑм
Таҫтан пек аякран...
Ак, халь утса пыратӑп,
Пӑхатӑп – эп хуҫа!
Эп халь кунта лартатӑп
Тем тӗрлӗрен пахча.
Кунтах пулать йӑранлӑ
Нумай-нумай чечек.
Тепӗр ҫултан, тен, пулӗ
Ӑш витере ӗне?..
Сӗрлет садра халь вӑйлӑ
Пыл хурчӗсем пӗр пуҫ.
Апла, пурнатпӑр эпӗр
Татах та лайӑхрах...
Эх, ҫаврӑнать халь пурнӑҫ
Хуҫалӑхӑм тавра.
Ҫавна пӑхса ҫӳрет халь
Ман арӑм та кунта.
Часах, алли ун ҫӑмӑл,
Илем кӳрет татах...
Ҫавӑнпала ҫак пулӑм
Хуҫаланать чунра.

***

Манӑн пурнӑҫ пӗр ҫавра кӑна.
Ҫаврӑнса пӑхма та вӑхӑт ҫук!
Тин кӑначчӗ эпӗ пӗр ача,
Халӗ тин вара пӗр ватӑ сын...
Мӗн тума, тет, халӗ кирлӗ пулчӗ
Ҫаврасем ҫинчен кӑшт шутлама?
Ҫаврӑнать халь пурнӑҫ хӑйне майлӑ –

Çав çавра çинчеларса эс пыр!
Илсе кайтăр вăл сана таçта çити.
Таврăнмастпăр эпĕр тепĕр хут!
Таврăнсан та таврăнать çавра кăна –
Çавра пек пулсан эс ху та пур вара!..

***

Чĕмпĕрленчĕç хĕрсем, хитреленчĕç.
Халь тин пыскăк вĕсем тĕнчере.
Ма тесессĕн, вĕсем хатĕрленчĕç
Нарспирен те çӳле çĕкленме.
Малтанрах вĕт нимех те марччĕ,
Палламан пĕр хĕрсем кăна.
Халĕ пăх-ха, епле капăрланчĕç,
Хĕм сапассĕ вĕсем çăлтăрла.
Ах, пĕрне те çулса илесчĕ,
Чăмăртасчĕ сĕткен тухиччен.
Çакă пултăр-и Чĕмпĕр сипечĕ, –
Эс çапла-и чуна сиплен?
Чĕмпĕрленчĕç хĕрсем, хитреленчĕç.
Халĕ тин манас çук нихăçан.
Чĕмпĕрте, тет, чĕне сӳтессĕ.
Эпир явăпăр, тен, тепĕр хут!

***

Евĕрлерĕм сана эп, тăванăм,
Сан пекех туса пăхрăм йăлтах.
Пĕрре култăм та, тепĕр хурлантăм –
Пăхса тăчĕ тĕнче те шăпах!
Эс те чăн тĕкĕрленнĕ пек пултăн,
Тен, эп пултăм чăн тĕкĕр хамах?
Сан пекех ман чĕре те чулăн
Авăра халь сикет татах!
Евĕрлен, евĕрлен-ха артисăн,
Тен, халь эсĕ пĕр сцена тăван?
Çавăнпа-ши мана эсĕ сисрĕн,
Çавăнпа авкалантăн татах?
Ыталарăм сана эп, тăванăм,
Чĕрепе те пулин... Эс асра!
Эх, санра пулĕ манăн хăватăм
Халь те пулĕ тапса палăрать?

***

Тĕрлĕрен пулать çырма
Ку тĕнче çинчен.
Çавăнпа та тĕрĕрен
Эп пуçлас-ха терĕм.
Тĕрĕ, тĕрĕ, теç. Тĕрле,
Кам чарать халь, тетĕр?
Тĕррине пуçланă чух
Ху та мĕн-ха, тетĕр?
Акă, чăн та, пĕр тĕрре
Эсĕр халь пĕлетĕр.
Мĕнле тĕрĕ тесенех
Хĕресле ку, тейĕр.
Тен, ку тĕрĕ тени мар.
Ку, асаплă пурнăç!
Иртсе кайрĕç, юлчĕç халь
Пирĕн тĕрĕсем çеç.

***

Çĕр çинче ÿссе çитсессĕн,
Хамăр та çĕр пултăмăр.
Çĕр пулса вырттан-выртсан
Курăк пулса ÿсрĕмĕр.
Курăк лайăх, питĕ вăйлă –
Хамăр та вăйсăр пулман!
Курăк тăрăх çÿресессĕн
Выльăхсем ÿсрĕç нумай!
Выльăх лайăх. Кил картийĕ
Выльăхпа тулса тăрать.
Ачасем те пурăнаççĕ –
Кашниех тутă пулать!
Çĕр çинче каллех ÿсеççĕ
Халь тин манăн ачасем.
Эх, çавна курса тăмашкăн
Чун та панă вĕт мана.
Çав чун мар-и çавăрттарчĕ
Пурнăç çаврине тата?

***

Чун тени – мĕнле çук пултăр?
Чун тени вăл – çавракa!
Халь тин çеç манран-и култăр? –

Кайса ӳкрӗр ҫавӑрӑнса.
Эх, пахса выртатӑр халӗ –
Ҫурма пӗлӗт, ҫӗр те ҫур.
Ҫавӑн пек вӑл чун хавалӗ –
Тепӗр майлӑ тыт та хур!
Вара пулчӗ ҫаврака пек.
Чун тени – пӗр ҫавра ҫӗр.
Чун тени мӗнне пӗлес-тӗк,
Ҫӗр ҫине выртса эс кур!

* * *

Сиреньлӗ ҫул. Ик айккипе сирень.
Пӗр ҫеҫкине татса парахнӑ мӗн...
Выртать пӗччен. Ыгла та пит кичем.
Такамӑн чӗрине ҫапла пӗтернӗ, тен?
Пуҫлать пек ҫумӑр йӑскама каллех,
Тетре кӑваккӑн хӑпарать ҫӳле.
Утма мана аван. Ман сунчӑк пур ҫӳлте.
Пӗлӗт пекех такать тавра хӑй ҫумӑрне.
Пӗр шухӑш ҫеҫ пуҫра. Ҫапла кӑштах утсан,
Тӗнче хӗрне ним мар утса тухан!
Ҫын ӗҫӗ те ҫапла. Кӑштах кӑштӑртатсан,
Ӗмӗрлӗхе лартатӑн пӗр кермен...
Аван, аван, апла пулсан аван!
Пурнатпӑр-ха, апла, ҫумӑр пекех кӑптӑртатса –
Сиреньлӗ ҫул ҫине эпир утса тухатпӑр!

* * *

Ҫӑлма никам та шутламасть-тӗр.
Ҫӑлма ниме те кирлӗ мар!
Эпир пӗрех кунта юлмастпӑр,
Пире кӗтет темле пӗр рай...
Тен, ҫавӑнпа ним шутламасӑр
Эпир пурнатпӑр ку чухне.
Ҫук, хальлӗхе эпир каймастпӑр
Автан сассиеӗр пӗр ҫӗре...
Эпир вилме вӗт шутламастпӑр.
Пурнатпӑр-ха, тенӗ чухне
Сасартӑк йӑванса каятпӑр
Чупнӑ чухне, чупнӑ чухне...
Вара, тен, ҫӑлӑнӑҫ килет-тӗр –
Анчах никам та кирлӗ мар!

***

Укҫа пама пултăм эпĕ...
Мĕнле-ха эс памăн ăна?
Вăл манăн юлташ, чун тĕрекĕ,
Эпир унпала пĕр ҫырма...
Ҫырма тĕпĕнчен эпир тухнă –
Пĕр шывăн вĕт пур ик ҫыран.
Ак, халĕ каллех тĕл пулнă –
Пĕр пĕчĕк ҫĕр хумлă шыв
Тапах эс, чăвашăн ҫăлкуҫĕ –
Пĕрне пĕри хыт пулăшни.
Эпир халь ҫĕр хут та пуль вăйлă –
Мĕн-ма тесен, эпĕр шыв!

***

Юр ҫукалать. Тăрать тĕтреллĕ.
Ҫул, утнăҫемĕн, ҫухалать.
Хăвна тытсан кăштах йĕркеллĕ,
Мĕн шырани – йăлт тупăнать.
Тен, ҫавăнпа ăшра тӳлеклĕ –
Мĕн пулассиех вăл пулатех!
Мĕн авалтан эпир ҫӳревлĕ –
Ҫитес ҫĕре ҫитетпĕрех!
Ак, ал-ура та ĕнтĕ йăшрĕ.
Юр ҫукалать. Ҫав йăпатать.
Ҫавах, ҫавах эс юрăн тусĕ –
Шур хĕл тени, ак, тупăнать.
Ăҫта пăхатăн, юр халь сурĕ.
Халь пурăнатпăр пуль кăштах.
Ман чунăм та юр евĕр юхрĕ
Ҫĕр сумĕнчен вĕҫсе татах.

***

Тĕнчере алхасать пĕр пушар.
Тĕсесен те ăна эс курмастăн...
Кăшкăрать кашниех: «Хурах!
Мĕншĕн эсĕ мана пулăшмастăн?»
Ун та кун пăхкалать тепĕри.
Мĕн курмастн-им, ман чунăм ҫунать.
Вут ҫунать те юлать пуленки.
Вăл чăнах та халь кăмрăк пулать.
Эх, атьсем, ку тĕнче ҫуннине

Эсёр пёртте курмастăр пулать –
Çунса кайрĕç таван уй-хирсем,
Çунса кайрĕç пулас чăвашсем.

* * *

Ахальтен çырса лармастпăр.
Эпир çыратпăр чун валли!
Тепĕр чухне ăша вăратнăн
Тĕнче тăрать пек – чун илли.
Чуна илет, чăнах та, çул ку.
Ăçта халь тин илсе каять?
Кăна пĕлет пĕртен пĕр Турă,
Çынни вара вилсе каять.
Вилсех питех каяс килмест-ха.
Вилсен те чĕрĕ пурпĕрех.
Пире сума суса çӳрет-ха
Ачи-пăчи те ĕмрипех.
Тен, çавăнпа та хăрамастпăр,
Çыратпăр хамăр çинчченех.
Мĕн-ма вара теме çухатнăн
Ман çырмалла, тет, ют çинчен?
Апла, çырар-ха, хамăр халăх
Мĕнле утса тухни пирки.
Ун çулĕ вĕт, пĕлетпĕр, паллă –
Унта пурах тĕнче «хурри».
Çав «хурисем» пире шыраççĕ,
Эпир кунтах, теççĕ пулех.
Тен, çавăнпа та пытараççĕ
Эпир çӳренĕ çулсене?
Пĕрех эпир ăна тупатпăр.
Вĕт пирĕн юн тени пурах!
Çав юн пулать, çакна çыртарчĕ
Çак çырăва татах, татах...

* * *

Хĕрарăм чĕрисем хăватлă...
Хĕрарăм чĕрине шыра!
Ак, çук çĕрлех тупса кăтартрĕ,
Пĕр чĕрне... Ытла шултра!
Мĕн чухлĕ пуль ăна таптанă,
Таптанă пуль вăл ӳснĕ май...
Такам алли пырса хупланă,

Мĕнле вара, тапать, тесе...
Ун пек чĕре, чăнах та, сукка.
Вăл хăйшĕн мар, вăл çыншăн çеç.
Ăна çапла тума-ши пулнă,
Е тунă вăл хăйне хăй çех?
Ниме пĕлмесĕр шухăшлатăп
Хĕрарăм чĕрисем çинчен.
Хĕрарăм мар вĕт, мĕн шутлатăн,
Ăна тупаймăн виличчен...
Пĕрех, пĕрех ман чунăм ыйтрĕ
Çав пĕр чĕре çинчен татах.
Çумма лартмасăр хухрĕ, хухрĕ..
Халь тин вăл сукка пуль пачах!
Мана çав чĕрене парсамччĕ,
Пулсам-и эпĕ çав чĕре!
Вара ман чун та савăнатчĕ
Шултра чĕрелле çын пулса.

***

Пĕтмен иккен вăл, Вавилон...
Ăçтан килет-ха вăйăм, тетĕр?
Тымарĕ унăн авалтан –
Паян куна ўсе çитсе-тĕр!
Мĕн авалтан чăваш тени
Хăйне туйса чăн Вавилон пек.
Тăшман çине те чул пени
Халь тин пырса çапать вут евĕр.
Эпир, тет, пулнă чăн патша.
Наукăсем тем чуль ăсланă –
Çавна эпир манса кайса...
Çавна аса илетпĕр мар-и?
Пĕтмен иккен вăл, Вавилон!
Тепре килсе, акă, тустарчĕ.
Мĕне тахçан вăл калайман –
Çавна тепре çех калаттарчĕ.

***

Чăваш тумĕн кунĕ
Пулчĕ-çке паян.
Ман чуна тем пулчĕ –
Халь те эп пуян!
Юррисем янрарĕç

Уттисем пекех.
Курнăçем çуралчĕç
Ĕлĕкхи вăйсем.
Ĕлĕк вăл пытаннă
Чăваш туменче.
Çавă вĕт вăранчĕ
Чăваш чунĕнче.
Ак, утса пыраççĕ...
Эс те утса тух!
Кам тет чăвашланнă –
Унщăн вилĕм çук!

***

Пĕр тупсăм тупрăм, пурнăçа
Тытса тăрать çемье кăна.
Çемье кăна хăй пĕр хуçа –
Çав кĕчĕ халĕ ман пуçа!
Çемьесĕр çын та çук пулех!?
Ача сассисĕр çук тĕнче!
Киле çитсе вут чĕртсенех
Пурнăç тепре килнĕ пекех.
Çак пурнăçра, çемье, тесен
Телей тени вăл – пулатех!

***

Турă пире йывăç лартса панăччĕ
Уй варрине, лаштра юман тесе...
Çав йывăçа халăх пуç çапатчĕ,
Пуç çапнăçем хитрелесе...
Вăхăт иртрĕ, çав йывăça касса ячĕç.
Йывăç тени пĕлĕтпе çыхăнтараканччĕ...,
Халĕ ĕнтĕ уй та тăрса юлчĕ пĕччеңĕ.
Пĕр шутласан, тĕрĕс те пулĕ ку, тейĕр...
Çын çĕр çинче кăна мар, пĕлĕтре те!..
Эпир вĕçсе килнĕ, тет, ухăхран. Халĕ ĕнтĕ
Тур йывăççи курăнмарĕ пĕрре те!

***

Ăçта карташçă?
Çавă çынсăр
Ман чунăм халĕ çырлахмасть.
Кĕр тăрăшшипе вăл çулсем уçрĕ,

Уттарчĕ пурнăç таранах.
Ак, халь каллех
Юр ўксенех
Таçта çухалчĕ çулсăрах...
Ку çул çинче
Темле пит тарăн
Выртать шур юр кĕрт пеклерех.
Ăна никам та
Тасатмарĕ.
Утма пит йывăр пурнăç пек...
Карташçăна курсан
Каласчĕ,
Çул уçса пар чун кĕтнĕ чух!

***

Никам та çук ман çул çинче.
Пĕччен утатăп эпĕ.
Йĕри-тавра ик айккинчен
Усал утать пек тепĕр.
Эп хăрамастăп усалтан.
Усал халь ман юлташăм.
Унпа эп калаçса пырсан,
Вăл хăй те час çынланĕ.
Никам та çук ку тĕттĕмре.
Пĕр эпĕ çеç пĕччен.
Хамра шыратăп тепĕре –
Юлташсăр вĕт кичемлĕ.
Ырри те, усалли те
Манрах пурнаççĕ пулĕ,
Эп çавсемпе калаçнине
Илтет пуль пурнăç çулĕ?..

***

Тахçан пĕчĕк чух çĕн çул умĕн
Кĕтеттĕм телей килессе.
Ак, çитрĕ пулех çĕн çул кунĕ –
Телейĕ вара кĕтесре!
Мĕн-ма-ха ăна айăпланă,
Мĕн тунă вăл тĕрĕс мар?
Телей килесрен хăранă
Лараççĕ çынсем ахаль мар.
Хăрана пуль те кăларнă
Тем чухлĕ эрех-сăра.

Эрех ĕçнĕçем тăпăлтарнă
Теллейĕн çÿçне, апăрша.
Телей пит кĕресшĕн пулсаччĕ,
Ларасшăнччĕ çын хушшине.
Халь ĕнтĕ, каплa, мĕн-ха пулчĕ,
Тăрать вăл пĕччен хурланса.
Хурланчĕ-хурланчĕ те кайрĕ
Ыттисыннсене шырама.
Сăраллă çынсем вара юлчĕç
Сĕтел хушшинче ахăрса.

***

Çырмара пĕр шуйттан та юлман.
Пĕр хăрушлăх та çук таврара...
Çухалса илтĕнет ăшăмра:
«Эп çунатăп, тăван!»

Чĕрене çавă сасă йĕплет.
Куççульпе тулли куç йĕпенет.
Паянхи çитиччен хур курман...
«Эп çунатăп, тăван!»

Пурччĕ манăн тахçан пĕр тăшман.
Тек туптаччĕ чунри чăтăма.
Халь тесен эп кулатăп кăна:
«Эп çунатăп, тăван!»

Çăмăл мар пуш пуçпа пурăнма.
Çăмăл мар куç хупса савăнма.
Илтĕнет кулă витĕр тăçтан:
«Эп çунатăп, тăван!»

***

Çĕр çийĕпе вĕçме пит лайăх
Турат пекех вăшăлтатса.
Мĕн каласа сана хăварчĕ
Çав çил ачи туратланса.
Çил ачипе калаçрăн эсĕ,
Юманăм, çил пек вĕçнĕçĕм.
Пĕрре унта, тепре суллантăн –
Юман тăрри вĕçет татах!
Вĕçсе каять çĕр çийĕ тăрăх
Кăвак юман пĕр кайăк пек.

Кам ун тăрне чупса хăпарнă
Çавна пĕлет пĕр турă пек.
Юман тăрри тĕнче тăрри пек,
Пăхсан куран пур таврана.
Ахальтен мар пуль пур чăвашĕ
Юман тавра пуçтарăнса
Ăна пуç çапнă, асапланнă
Турă пекех çак çĕр çинче.
Вăхăт çитсен те йăвантарнă
Ват юмана çак çĕр çине.
Йăваннă хăй те йывăç евĕр,
Юман пек выртнă лăпланса.
Тен, çавăнпа пĕр турат евĕр
Тăратăп эпĕ шăхăрса...

***

Çĕн çул хапхине те уçса
Кĕретпĕр эпир юрласа.
Юрри темĕнле тухарла,
Пăхаççĕ куççем урăхла...
Шур юр çукалать тепĕр чух...
Кĕртсем пысăк мар та пĕрех
Кĕтсе илекен урăх çук.
Картишĕ пушах, пĕлтĕрех.
Кăçал та çапла-ши пулать?
Çулталăк каллех пушанать.
Хуралтăра çук чăх-чĕпсем,
Памаççĕ пĕр сас выльăхсем...
Уйра та пĕр кайăк та çук!
Çил çеç шăхăрать майĕпен.
Ăçта эс, хĕртсурт, кĕтме тух.
Тен, эс те пире кĕтмен...
Паратпăр сана кучченеç
Пĕр çăкăр татки. Пĕр апат
Пире хамăра та çитет.
Выçса та вилместпĕр пулать.
Çĕн çул шăхăрать. Ах, Турах!
Шăнса вилес марччĕ татах!
Пуш-пушă килте аван мар
Ахаль çеç ларма. Салтăнар!
Хутса та ярар кăмака.
Çĕн вут хуçалантаăр унта.
Киле ăшă кĕтĕр кăна

Хёртсурчĕ тухать те вара!

***

Тăван кил те темшĕн ют.
Ачи-пăчи çумра çук.
Çакă тĕнче умĕнче
Çын пулмашкăн вăйăм çук...
Тен, чунăма вăрманта аташтарса хăвартăм?
Тен, ăш пите сив шывпа çуса йăлтах сухатрăм?
Тăван çавна сисинччĕ,
Пĕр-ик сăмах калинччĕ!
Каç пултипе шăпчăк пек
Ши! шăхăрма пĕлмерĕм.
Пурăнма та ирĕк пек.
Пурпĕр ырă темерĕм...
Тен, çавăнпа иленмест чĕкеç аслăк тăррине?
Тен, çавăнпа ăнланмасть чĕре чăваш юррине?
Тăван çавна сисинччĕ,
Пĕр-ик сăмах калинччĕ!
Кÿршĕ патне каçнă чух
Çул хĕррипе çÿллĕ çум.
Пĕрле ларма пит аван –
Юхать анчах çулă кун...
Тен, савăнса пурăнма пулчĕ мана пит кичем?
Çум çумлама тытăнсан алла чикет чĕр пиçен...
Тăван çавна сисинччĕ,
Пĕр-ик сăмах калинччĕ!

***

Енчен те эс, ывăлăм ман,
Аçу чĕлхипе пуплеместĕн,
Çынна ыр тума пĕлместĕн...
Ӳкет пуç çине пушă пурнăç тени,
Кулса та канса ирттет самани.
Пĕр пĕрчĕ те пуль хушăнмасть пин çумне...
Туйса-и тата аннÿ хуйхине?
Аннÿ, Çĕр-Аннÿ тăрмалать хăй питне.
Çырма та çатра пĕтерет пĕтĕмпех.
Вăрман хывса çаппĕ хăй кĕрĕкне...
Тăрса та юлатпăр йĕрĕх пекех.
Пĕр çынсăр юлсан хуралтă-çуртсем,
Писет кăвакарчăн хăй йăвинчен.

Йăвасăр йăмра ларать тайăлса...
Никам та утмасть ун тавра савăнса.
Анну пукане пек ÿкевсĕн ÿпне
Çĕршывăм кăларĕ асаплă сасне.
Эс тăрăн хыпса, тен, çавăн чухне
Аса илеймесĕр аçу сăмахне...
Енчен те эс, ывăлăм ман,
Аçу чĕлхипе пуплеместĕн,
Çынна ыр тума пĕлместĕн...

* * *

Чăвашăн чунĕ упранать
Чĕкеç чĕлхийĕ вĕçĕнче...
Савă пулса вăл шăранать
Тăван сăмах хуранĕнче.

Уйсем çине çил ачилле
Вăл хумлăн-хумлăн ывтăнать.
Хура вăрманăн кĕввине
Куккук пулса, тен, авăтать?

Пĕр савăнса, пĕр хурланса
Сăнать чăваш хăй кун-çулне.
Тăрать вăрманĕ ватăлса –
Тăрри каять хĕвел патне...

Шутлать куккук çын шăпине.
Пĕр чарăнать, пĕр авăтать...
Телей килет пуç тÿпине –
Мĕн-ма чĕре ман ыратать?

Мĕн-ма тăратăп пуç тайса
Вĕçет куккук куккукласа...
Юлать ман чун тăвăрланса –
Тÿпе пек тарăн та таса!

* * *

Кун кайса пырсассăн та
Пурпĕрех пăхаттăр-ха.
Кун çути, шанаттăр-ха,
Çитес çул пулать пуль-ха!
Акă ĕнтĕ сисрĕм, чăн та,
Çутă кĕчĕ кантăкран.

Урамра-мӗн пурнӑҫ пур-ха.
Пӗр хӗвелсӗрех юлман!
Кун кайса пырсассӑн та
Пурпӗрех пурнатпӑр-ха,
Ҫирӗплех тӑратпӑр-ха...
Пӗр мӗлкесӗр юлнӑ чух та
Хамӑра шыратпӑр-ха!

* * *

Ҫӳп-ҫап шӑтӑкӗнчен
Тапаланса тухатпӑр майӗпен.
Эй, иртнӗ ӗмӗрте ҫакӑ кунччен
Пире ҫак кӗтесе шӑлса хурса иккен!
Унта эпир выртса, тет, пӑнтӑхса...
Хӑш-пӗр чухне ыраттӑр-ха тесе,
Тӑвар та, тет, сапса ҫав ҫӳп ҫине.
Ак, эпӗр хамӑр та ҫав ҫӳп-ҫапа
Ниҫта кайса та кӗрейми пулсан,
Сапатпӑр ывӑҫпа шап-шур тӑвар.
Туятпӑр, пур пулас юнра та ҫав тӑвар...
Тапаланатпӑр ҫавӑнпа та шӑтӑкран..
Миҫе пуль ӗмӗр кӗтнӗ ҫак куна,
Мӗн чул ҫӳп-ҫап пуҫтартӑмӑр хамра.
Халь ним пулман пек тап-таса
Ҫак тӗнчере тӑратпӑр йӑлл! кулса.
Пире курса, шутланӑ, ҫӳп-ҫапран,
Ку ҫыносене епле сума сӑван..
Курмасҫӗ-ске, эпир хура ӗҫре..
Хура ӗҫре таса тӑратпӑр-ске!
Улма пекех шап-шур та ҫавракка.
Ҫав ылтӑн улмана ҫиме пуҫла кӑна!
Ҫук, тем ҫитмест. Асӑрхамасть тӗнче.
Тен, вӑл шутлать, епле ҫӳп-ҫап!..
Эх, тӑвансем, эсир те вӗт тахҫан
Тухса кайса ҫав шӑтӑкран..
Эпир те сирӗн хыҫҫӑн талпӑнса...
Тухма тӑрсан вара
Тапса хӑвартӑр ҫамкаран.
Халь ҫавӑнпа пӗр-ик шӑлпа
Тата пӗр катӑк тупапа тӑратпӑр та!
Мӗн каласан та тӗрӗс мар тухать,
Темле пӑхсан та ҫӳплӗ курӑнать.

* * *

И. Степанова.

Эпир те йывăç пек, Иван,
Тымарланатпăр майĕпен.
Тĕнче умне пырса тухсан,
Курнатпăр çулçă пек.

Ак, кĕрхи çил вĕçсе килет!
Ак, çулçă çил çинче!
Вĕçсе килет, çўле çĕклет,
Ак, ўкерет пире çĕре!

Эпир те йывăç пек, Иван,
Ўсетпĕр майĕпен.
Курнатпăр тепĕр чух айван –
Кĕтет пире тўпе!

* * *

Чăваш пĕтес тесе шутларĕ...
Çухатрĕ савăк чĕлхине,
Юррисене тек юрламарĕ,
Пăрахрĕ çăмăл ташшине.

Ачисене вăл вĕрентмест
Чăвашăн ырă сăмахне.
Çĕнĕ куна кĕрсен пĕлмест
Çултан-çул тарăн йăлине.

Чăвашăн харсăр чĕрине
Мĕнле-ши тĕлĕк халь карать?
Чăваш çухатрĕ чĕлхине.
Мĕнпе ăна улăштарать?

* * *

Чун тĕпĕнче асамлă сутă.
Пур алăра пĕр вăрттăн вăй.
Епле тапса тăрать вăл хытă,
Кунран кунах илет пек йăлл!

Аттесемпех эпир пуçланă
Типтерлĕ чăнлă пурнăçа.
Тахçан ăсра картса хăварнă –

Чăваш çути чунра хуçа!

Хăй аллипех янравлă шăпăр
Çын ăсталать пуш вăхăтра.
Кун-çул килет хăш чух пит йывăр.
Вăл палăрать шух ташăра!

Чăваш çути таçта ӳкмелĕх
Халь çуралать пек халăхра.
Тăвансене кĕтсе илмелĕх
Тату сăмах пур кăмăлра.

Чăваш çути тесе хаклатпăр
Чун ăшшине эпир паян.
Пĕрле ларса, ак, юмахлатпăр –
Халь тин пулатпăр, тен, пуян?

***
Тахçан тухатнă кив тĕнчен
Çĕтсе пыраççĕ паллисем.
Тасатнă кӳлĕ тĕпĕнчен
Текех тухмаççĕ вутăшсем...

Ал ĕçĕпе лармасть анне,
Ăста ĕçне тумасть атте.
Ача туймасть çанталăка –
Çуралнă вăл пĕр талăка.

Пĕлмест вăл хăйĕн несĕлне,
Тек шырамасть ăру çулне.
Мĕн-ма ăна чăваш тĕрри?
Чунне илмест чăваш турри!

Ун вырăнне çĕн çăлтăрсем
Çутаççĕ тӳпере çынсем.
Çĕнни килет – кивви вилет.
Кам ăнланма ăна пĕлет?

Кам тăнлама ăна пĕлет,
Ăçтан çав çынăну килет?
Вĕçет хур-кайăк кил еппе –
Вăл ас тăвать йăва тĕлне!

***

Чăвашăн чунĕ упранать
Çемçе чĕлхийĕ вĕççĕнче.
Кăвар пекех вăл шăранать
Тăван сăмах вучахĕнче.

Çилентерсен, усал çине
Хум хыççăн хум вăл ывăтать.
Чĕрен чечеклĕ кĕввине
Тăван пулса, тен, кăларать?

Пĕр савăнса, пĕр хурланса,
Сăнать чăваш хăй кун-çулне.
Тăрать вăрманĕ ватăлса,
Тăрри ÿсет хĕвел çине...

Шуçлать куккук çын шăпине.
Пĕр чарăнать, пĕр авăтать.
Килет телей пуç тÿпине.
Мĕн-ма чĕре ман ыратать?

Мĕн-ма тăратăп пуç тайса?
Вĕçет куккук куккукласа.
Юлать ман чун тăвăрланса,
Кăвар пекех кăмрăкланса...

***

Хĕлле те пулать çут хĕвел.
Чи тĕттĕм каçсем те кăшт уçă!
Упратăп ăшра сар çĕмел –
Çурхи кунсенчен те вăл çутă.

Çĕмел ман тĕнче, çĕмел пĕчĕк мар.
Пĕр хĕрĕх кĕпте тата хурса пар.

Уйра вĕри çил... Татах аса ил!
Ăшпиллĕн туртать тĕп кил.
Алкум тăррине пăрахнă çурла...
Юрла калинкке, юрла!

Çĕмел ман тĕнче, çулсем сахал мар.

Пĕр хĕлĕх кĕлте тата хурса пар.

Тухатăп уя. Чунра теветкел.
Ача чухнехи пек чун уçă!
Упратăп ăшра кĕрхи сар çĕмел –
Çурхи кунсенчен те вăл сутă.

Çĕмел ман тĕнче, тĕнче пĕчĕк мар.
Пĕр хĕрĕх кĕлте тата хурса пар.

* * *

Кĕрхи хĕвел кăштах ăшши
Ман чĕрере те пур-тăр халĕ?
Юхать манми кунсен ташши...
Çук, ўсĕнмест тек чун хавалĕ!

Çĕре ўксе çине-çинех
Юнпа куççулĕ кăларсан,
Усал тасалчĕ тин... Тинех
Пусăрăнать шалти тусан.

Пĕрре çапла пĕрле ларса,
Кăштах уçăлчĕ кăмăла.
Теме манса эс хăварса?..
Тупсам шалти çут-тăвăла!

Кĕрхи хĕвел кăштах ăшши
Ман чĕрере те пур-тăр халĕ?
Вĕçет кăвар вăрман тăрăшши –
Çук, çулçă турата чĕртеймĕ!

* * *

Мана касмасăр юрамасть.
Эп кирлĕ мар, тен, ку енче?
Чĕнет мана урăх тĕнче.
Анчах касма...
Касма çинçе!
Чĕтрет пĕрле çемçе чĕре...

Пăхса тăратăп аякран.
Вăйя пухатăп пĕр кана...
Чупса пырап касма патне.

Пусма тăрап..
Мĕнрен хăран?
Шелпен хăвна?..

Мана каçмасăр юрамасть.
Эп кирлĕ мар, тен, ку енче?
Чĕнет мана урăх тĕнче.
Анчах каçма...
Каçма çинçе!
Чĕтрет пĕрле çемçе чĕре...

***

Эрне ытла эп çĕр чаватăп.
Хресчен пекех хама туятăп.
Çурхи сывлатăп сывлăшпа,
Чун тăранать савăнăçпа.

Çак сутă тĕнчере
Çĕмĕрт шапшурă çеçкере!

Кашличĕне кăшт тутанатăп.
Кăшт ывăнсан выртса канатăп.
Шăпчăк пĕлмест пуль ывăнма?
Турачĕ пур ун ярăнма...

Çак сутă тĕнчере
Çĕмĕрт шапшурă çеçкере!

Иленчĕ шăпчăк йăвине.
Тек шăхăрмасть хăй кĕввине.
Лăпкать ăш çил пÿрт тăррине.
Вĕçлерĕ чун çуракине!

Çак сутă тĕнчере
Çĕмĕрт шапшурă çеçкере!

***

Тепĕр утăм малта. Хыçалта ним те çук!
Пушатмалăх лава тиеме, тен, эс мантăн?
Халь тин çеç, тен, çынна ытла шантăн,
Туртайман лашине тăвалла тĕртес çук...
Пурпĕрех!

Çурхи шыв пек кĕрлет тин çеç лăпкă пĕве.
Татса ячĕ чĕре тытса тăнă кĕвве!
Тепĕр хут пĕвене чĕрĕ шыв тулмасан,
Юлтăрах чун тĕпне хура юшкăн!

***

Юрлать Нарспи...
Арлать пек каçхине анне.
Хуçать пек çăпата атте.
Хайă çунать те, чăшш! сÿнет.
Сас-чÿ тин хăлхана кĕрет.

Юрлать Нарспи...
Чĕв-чĕвĕл чĕкеçсем вĕçни,
Чуна канмалăх шыв ĕçни,
Ачалăхри сукмак хытти
Тăрать асра кунта çити.

Юрлать Нарспи...
Хĕрпе пĕрле хухлет тĕнче.
Сетнерĕн харсăр чĕринче
Çĕр тĕрлĕ шухăш çуралать –
Хай телейне вăл çухатать.

Юрлать Нарспи...
Таçтан ăшран вăл сас илет.
Мĕн-ма мана çеç илтĕнет?
Куратăп тĕнчере тивлет.
Чĕре çинех вăл халь ÿкет!

***

Паян ирпе шăнтса пăрахнă.
Пăр карнă шыв валашкине...
Çил ачисем кĕрсе выртнаçнă
Пас тытнă пÿрт кĕтессине.

Чĕртес тесе, чупа пуçларăм,
Ăшă кĕртес сивĕ пÿрте.
Вут çыппине касса вакларăм –
Пĕлмен епле çĕрĕккине!

Чăнах та, малтанрах хаваслăн
Хыпса илет турат хуппи.

Кăшт тăхтасан, шăнтса яраслăн,
Выртса юлать тусан купи.

Хевтесĕр-мĕн вут пуленки!
Ăш тĕтĕм явăннă çĕрте
Мĕлтлетрĕ пек тем йăлтăрkки...
Чун тем тухатрĕ çав тĕлте!

Мĕн хускалма пĕлес тата
Шур илчĕ пӳрт чӳречине.
Кĕлленнĕ сивĕ вучаха
Эп ывăтап хам чĕрене...

Çунах вучах, кăвайтсăрах!
Тĕнче ăшши çынра анчах!
Кăвак хуппи пек йăлтăрса
Хыпса илет ман чĕр вучах...

* * *

Парăр мана, чун выçă.
Ыйткаласа çӳретĕп.
Ăшă сăмах – пĕр пĕрчĕ –
Чĕре сури пулинччĕ!

Мĕншĕн пĕртте чĕнместĕр
Эппе сирĕн чĕре çук.
Чул хушшинче пурăнма
Манăн чăтăм пĕтес çук!

Парăр мана, чун выçă.
Ыйткаласа çӳретĕп.
Ăшă сăмах – пĕр пĕрчĕ –
Чĕре сури пулинччĕ!

Кӳтсе çитнĕ чĕресем
Текех кăмăл хушас çук.
Тахçан талнă чĕлхесем
Ăшă сăмах калас çук!

Парăр мана, чун выçă.
Ыйткаласа çӳретĕп.
Ăшă сăмах – пĕр пĕрчĕ –
Чĕре сури пулинччĕ!

Ыйткалакан тесе-ши,
Çапрĕç ячĕç сăмахпа.
Ыйткалакан тесе-ши,
Тапса ячĕç атăпа!

Парăр мана, чун выçă.
Ыйткаласа çÿретĕп.
Ăшă сăмах – пĕр пĕрчĕ –
Чĕре сури пулинччĕ!

* * *

Кунран-кун шутлă пурнăçа
Сапаттăр кăшт кăна, ывăçпала.
Тĕтрелĕх карнă çул юппи...
Хускалнăн туйăнать пек çын мĕлки!
Вил шывĕ ÿкнĕ çаранра
Йĕрсем юлаççĕ палăрса...

## ЮРАТУ ТĂХРИСЕМ

* * *

Пĕррремĕш чечек, куртăр-и,
Чĕре пек хитре çав тери.
Çурхи шыв юхать çаврăнса,
Пуçа вăл ярать çавăрса...
Ах, чечек, чечекĕм, хĕрлĕ чĕри,
Юрату тумашкăн кирлĕ çав тери...

* * *

Кĕркунне килсе çитрĕ каллех.
Çав тĕттех, ĕлĕкхи сул çинчех
Тĕрлĕ тĕслĕ сар çулçă çиçет,
Çил ăна хĕвел шайĕн çĕклет.
Çулçă витĕр курап сан сăнна.
Çулçăра халь тĕнче çаврăнать.
Чăн çулна çулçă витĕр хывсан,
Çĕнтетĕн пуль тетĕп хăвна...
Çулçă витĕр тухсассăн вара,

Эпĕр кайăкĕр çăлтăр тавра
Çаврăнса, çаврăнса, çаврăнса...
Кирлĕ мар вара ним те мана...
Алăра çулçă евĕр çемçе
Тепĕр алă мана ăшăтать.
Куçунтан кун çути сăрхăнать.
Çулçă тĕслĕ тĕнче таврара
Çаврăнать, çаврăнать, çаврăнать...
Чун чуччу, çулçă пек, ярăнать.

* * *

Мĕн асăрхарăм пурнăçра?
Чăн юрату та пур, чăнах!
Вăл вилĕмрен те вăйлăрах
Илме килет чуна.
Эпир пĕлместпĕр, юрату –
Вăл тĕрлĕрен пулать.
Кĕпе тин витĕнчĕ кăвайт –
Пăлхатрăн та... кăвар тухать.
Хăш чух куçа вăл курăнмасть,
Алран тытсан та ăшăтмасть.
Мĕн чухлĕ пуль чĕре тапмарĕ,
Кăвар çунсан та тупаймарĕ –
Чăн юрату пĕрре пулать!

* * *

Çак тĕнче юратусăр пулман-тăр,
Юратас тесен, кĕр çылăха.
Турă хăй те малтан, мĕн тăван-ха,
Çылăха кĕнĕ пуль çăтмахра?

Авалхи Ева евĕр пулам та
Адамран чăн арçын тăвам.
Панулми, пиçнине, татам та
Çыртăкне, ак, сана парам!

Ахальтен-и вăл лартнă пулать-ха
Пурнăçа паракан йывăçа?
Çимĕçне ас тивсен, мĕн тăван-ха
Усала та ырра ас туса...

Тахçанах çак тĕнче, шутла-ха

Ырăпа чăн усал хушшинче.
Çăтмахри сукмака такăрлат та
Хăвна туп ырă çын çумĕнче.

Çак тĕнче юратусăр пулман-тăр.
Юратас тесен, кĕр çылăха.
Кам тута тутанса пăхмасăр
Туйса куртăр-ха ку çăтмаха?

***

Çĕр çинче сутăсем нумай.
Çын çути те çук мар.
Тутара йăлтăраççĕ кăна...
Эп çутни, тет, вара ăçта?
Çывхарса та килет, ак, сутă.
Кам çутса тет вара ку çутта?
Турă мар, турăсем халь çуккă.
Çакă çутă чĕрешĕн тулă.

***

Пĕр çурт çумĕпе иртнĕ чухне
Ас илтĕм эп. Пулнă ку чăн та.
Ун чух çуркуннечче. Эпĕ ача –
Çумра манăн пурччĕ пĕр хĕрача.
Иккĕн чухне те тĕнче лайăхрах,
Куккукăн янрать çут çанталăк.
Садра пирĕн пурччĕ шăпчăк хорĕ,
Мĕнпур тĕнчене хуплатчĕ йăлт.
Çÿреттĕмĕр эпĕр аташнă пекрех.
Кирек ăçта ут, пĕрмай пĕр çавра.
Пĕрмай пĕр тĕле килсе тухăн...
Çав кил тĕлĕнче эпир халĕ пĕрле,
Пĕрле ытăнса тăраттăр...
Çав çурт çумĕпе иртнĕ чухне
Паян та юрлатчĕ пĕр кайăк.
Эпир те юрланă тахçан çав юрра –
Халь кам малалла тăсаканĕ?

***

Пилеш ман пĕлĕт пек хитре.
Ун çулçисем те çуккă пулĕ?
Килсе çапать сив çил пире...

Пĕлĕт пекех пулатăн сивĕ.
Пилеш ҫырли кайăк валли,
Нумай-и ҫакăнса вăл тăрĕ?
Пилешĕм пулчĕ чун палли –
Халь ĕнтĕ пилеш пек эс пурăн!
Ӳксен те ӳк эс ҫĕр ҫине.
Иртен-ҫӳренпеле таптанăн...
Сив пĕлĕте вара – ăмсанăн.

* * *

Кĕрхи тулăх ҫырла тути
Хĕр тути пек тутлă-тутлă...
Аса килчĕ ҫав кун ҫути –
Хĕр тути пек тутлă кунăм.
Тепĕр хут ҫав кунпа тĕл пулсан,
Татса ҫиĕп ҫырла пахчаран...
Ун чухне чăнласах эпĕ пулăп
Кĕрхи тулăх ҫырла пек тутлă!

* * *

Арăм ман ҫывăрать уйăх пек...
Уйăх витĕр выртать ман ҫул...
Эх, утасчĕ унпа шурă пит ҫутипе,
Урăх ҫул тĕнчере пулас ҫук!
Тӳпене вĕҫсе кайрĕ пĕр кайăк хуран,
Ун сасси хăлхарах янăрать.
Эпĕ хам та пулас кайăк пек курăнап,
Вĕҫсе кайрăм та, сассăр юлап...
Ҫутă уйăх та сассăр... Мĕн тума ăна сас?
Пичĕ ун арăм пек ҫутатать.
Халĕ те ҫавă ҫутă мана ҫутатать,
Ҫавăнпа ҫĕнĕ кун пуҫланать.

* * *

Тĕл пулса санпала хĕллехи тĕттĕм каҫ.
Урамра юрпала вылясаччĕ пĕр кас.
Кăлтăр-кăлтăр куллу халĕ те янăрать,
Ман ура ҫав сас хыҫҫăн кайса йĕр тăвать.

Юр ҫинче, тур курать, пур тем пысăкăш ят –
Ахаль ҫын халь ăна вулаймасть.
Ҫĕр каҫа ҫырнă пулнă ҫавна ик ура –

Çав кăна çав ята ас тăвать.

Ачалла выляни, мĕн тăван, асăмра.
Вылясан вĕт тухать вăкăр та!
Ыраттарчĕ пуль çав шурă юр чăмакки –
Тута тăсрĕ савни, тек тухмасть урама...

Аса ил-ха, савни, хĕллехи çав каçа.
Аса ил те кала пĕр сăмах.
Манса кайнă пулсан, кулса яр савăнса –
Шурă юр та тута ас тăваççĕ ăна!

***

Хĕвел ларать пакша пек
Юман йывăç тăррине.
Сар хĕр вылять ача пек –
Сарă майăр аллинче.

Ан-ха, хĕвел, ан-ха тет.
Сана майăр парап тет.
Хĕвел, чăн та, пакша пек
Анать йывăç тăрринчен...

Акă, майăр, çи-ха тет –
Сар хĕр чĕри хĕпĕртет.
Акă ĕнтĕ, мĕн ĕнтĕ –
Хĕвел çумра çеç çӳрет.

Чун юратсан çапла çав,
Сар хĕвел те пакша çав...
Мĕн кирлине хĕр пĕлет,
Майăр катса çитерет.

***

Эпир пĕчĕк чухне, ас тăватни, савни,
Пӳрт умне шурă хурăн лартсаччĕ.
Чун канмалăх шывне савăнса та ĕçни
Нихăçан та асран каймастчĕ.

Хурăн хăй пуль каларĕ пире чăн сăмах
Куç хупсан та курми çурхи шăн каççенче.
Куркари пĕр тута туса ĕçнĕ шывах
Халь те пулĕ турат вĕççенче...

Халĕ ĕнтĕ çав хурăн пуртрен çулерех –
Ун вулли перĕнет тÿпене...
Ал çитми çакса янă салчсар вĕллерен
Шăнкăрч халь вĕçтерет чĕппине.

Йĕр хăварчĕ пулас хытă пурнăç тени.
Уйрăлма вăхăт çитнĕ чухне
Çырса хутăм унта нихăçан та кайми
Хурăн пек ÿсекен хĕр ятне.

***

Хĕрлĕ-хĕрлĕ, питĕ хĕрлĕ сулçă
Çул çинче выртать хăрах çунатăн...
Укçа пек выртать – тухатнăн,
Чĕрине такам çухатнăн...
Акă вăл кăшт çĕкленсе те илчĕ,
Ун мана юлташ пулассăн килчĕ.
Эп ăна чĕре çумне тытсассăн,
Хам та урăхла туяп пулассăн...
Ах, анчах, ун пек тума пĕлмерĕм,
Çулçăна та хам çума илмерĕм.
Çулçă выртса юлчĕ... Питĕ тăлăх
Эп те утрăм ирхи урам тăрăх...
Ĕнтĕ эп ăна текех кураймăп,
Ун пекки тепре тупаймăп...
Питĕ хĕрлĕччĕ, хитреччĕ хăй.
Витĕрех пăхсан та курăнатчĕ хĕр...

***

Ăшунта сан те Турă ларать,
Тен, шуйттан Турă сăнлă курнать?
Йăлт! кулать те чуна çавăрать,
Чăрр! пăхать те ăса пăтрататать...
Эпĕ ĕнтĕ тем чул пăхса лартăм,
Турă пулĕ тесе шухăшларăм.
Анчах эсĕ мана пулăшмарăн:
«Юрататăп!», – тесе каламарăн.
Халь вара кулянса та айванăн
Яланах шухăшлатăп пĕр майлăн:
Эп чăнах та сана юрататăп!
Тем шуйттан вылясан та сăнра
Пур пĕрех санра Турă куратăп.

***

Чĕре темле хăратнă пĕчĕк кайăк евĕр
Пĕр те пĕр чух тапма та чарăнать пуль терĕм.
Таппи ун илтĕнмест. Тапсан та питĕ сассăр,
Вăл пуррине туйса тăратăп пĕр хавассăр...
Анчах тем пек пĕтсе çитсен те, тем тусан та,
Пуçа çапса ватсан та, суккăрлатсан та
Ман чĕреме нимпе те эс чараймăн, –
Вăл тапнинчен эп хам та халь хăрарăм,
Ăна чарса пĕтереймерĕм...
Кашни таппи пĕр юрату пуль терĕм!

***

Кĕтетĕп эп,
Пĕлместĕп, мĕн кĕтетĕп?
Кĕтмен çĕртен килсе çапать
Шăпа, тен, тип аçа пек çак самант.
Е юхтарать пĕр тапхăр шалкăм çумăр?..

Кĕтетĕп эп,
Пĕлместĕп, мĕн кĕтетĕп?
Манран вăл аслăрах та ăслăрах.
Эп çамрăк, эп айван... Анчах
Унпа пĕрле чухне туятăп Ева евĕр.

Вăл тур ачи пек, тап-таса... Вăл килнĕ
Хăй халăхне Тур хушнипе çăлма.
Кĕтетĕп эп,
Пĕлместĕп, мĕн кĕтетĕп?

***

Сар хĕвел анăçа анса ларчĕ.
Тĕттĕмленчĕ тавралăх кăштах.
Савнă тусăмшăн чун тунсăхларĕ –
Миçе каç ĕнтĕ вăл тунсăхлать?

Эп ăна çĕрĕпех пулĕ кĕтрĕм.
Ак, пуçларĕ те тул çуталма.
Эпĕ кĕтнĕ пекех пырса кĕчĕ,
Тÿпери çăлтăр пек курăнса...

Вăл хăйне тыткалать пит сăпайлă.
Йăл кулса калаçать мантала.
Çавăнпа та ăна хама майлă
Çавăратăп-ха çут çăлтăрла!

Ак сана манăн вĕчĕхнĕ чунăм!
Пĕçертсе те илсен мĕн тăван?
Эп сана юратса та çунни́ан
Сар хĕвел те нихçан çунман!

Кил часрах ман пата, савнă тусăм!
Ма манран ютшăнса эс таран?
Эп юрланă хаваслă юрă
Янăрать эп юратнă таран...

***

Тӳпере çутăран çутă уйăх...
Çуккă пулĕ унта нимле хуйăх?
Çăлтăрсем çĕрĕпех вăйăра
Тем тăвассĕ çав уйăх тавра?
Эпĕ хам та çав уйăх пекрех,
Каччăсем те, тен, çăлтăрсемех...
Ак, пĕри, сывăхри куç хĕсет,
Пуринчен те ытла хыт çиçет.
Ах, анчах, тӳпере çав тĕнче,
Эп вара хамăр кил тĕлĕнче...
Ырă кас чĕрене кăтăклать...
Халь вара сывăрсан та юрать –
Ах, анчах, ырă кас кам сунать?..
Сунаканĕ савни аякра...
Ун сасси пурпĕрех хăлхара.
Куçĕ ун çакă çăлтăр пекрех,
Аякра та... пĕрех чиперех
Вăл курать пек çак пĕчĕк яла.
Çак киле... Çак хапха умĕнче
Вăл тăрсаччĕ манпа мĕн ирччен!
Иртрĕç пулĕ çав савăк кунсем?
Ун чухне вăл пулсаччĕ килме...
Такам пӳлчĕ пуль унăн çулне?
Çутă уйăх, эс манăн тăван,
Тĕнчери пур çула та куран.
Уйсем урлă сурпан сарса хур,

Савнине ман пата илсе кил...

***

Пĕр юратусăр пурăнма май çук.
Юрат – вилсе каяс пулсан та!
Ак, лĕпĕш вĕçсе тухрĕ чунăм пек.
Эс лĕпĕш хыççăн вĕçсе пăх-ха халĕ.
Е çеçпĕл тат ун çиçкĕнне туйса.
Татса илсен шелле вара ăна...
Епле вара чечек чунне курмарăн.
Пĕтертĕн вĕт. Çук каçару сана.
Кирек мĕнле килсе тухсан та халĕ
Çак юрату пĕр çухатусăр çук!
Юратрăм терĕн пулĕ те, пĕр сасă
Çав вăхăтра çухалчĕ сывлăш пек.

***

Ванса пĕтнĕ, пĕтнĕ чечексем,
Эп сире шеллерĕм темĕнччен...
Акă халь тепре пырса пăхсан та
Хам та пултăм хуçнă пек тĕпрен.
Чунăм ванчĕ. Эпĕ те чечек пек
Тепĕр чух пуласшăн хитререх...
Ах, анчах сирĕн пекех вансассăн,
Эпĕ тек пулаймăп сын пекрех!

***

Куç умне халĕ туррăн тухатăн.
Хам та пултăм пулас турă пек...
Пăхса ил те часрах манса кай-ха,
Ан шутла, пĕрле пулăп тесе...
Темĕн чухлĕ çумра эс пулсан та
Тĕршĕнсеймен чунпа ман çума.
Пырса тăтăн пĕрех. Пуç таятăн,
Юлашки сывлăшпа-ши сывлатăн?
Сывлăш пĕтрĕ. Халь тин эп каятăп,
Вăхăт çитрĕ пулать. Тен, юлатăн?
Куçăнта çутă свĕр куççулĕ çунать.
Пăхса ил-ха, чăнах, тепĕре
Тĕкĕр свĕр мана, тен, кăтартăн
Юмăç свĕр теме тĕтĕрсе?
Куçа пăвнă пулех! Эпĕ ватă.

Эх, вĕçетĕп хăлатăн пĕрех.
Çак вĕçевшĕн сана тав тăватăп.
Турă евĕр юлсам ĕмрипех!

***

Эс мана куратăн-и, тĕнче?
Сан умра тăратăп тăр пĕччен.
Юптăнать вĕт çын та килĕнчен,
Кил те манăн юлчĕ çил çинче.
Çитесçе шанатăп-ха касчен...
Çутă пур-иç ман чĕречере!
Е ку пулчĕ манăн чĕрере?

***

Манса кайрăн пулĕ... Çумăр çуккă.
Халь нихçан та çăвас çук тепре.
Пĕлĕтĕн тахçан килсессĕ çуппкă,
Куç хăйех йĕпенĕччĕ пĕрре.
Халь тинех ăна тек ас илместпĕр,
Кирлĕ мар пире тек сивĕ çил.
Ас тăватни, шурă тăм тивсеччĕ
Тин çеç шăтнă чунсене пĕр ир.
Ал парса, тен, уйрăлар чиперрĕн –
Уйрăлу та пит хитре тĕнче!
Сан куллу тута çинче чĕтренĕн
Асра юлчĕ ман тута çинче...
Юрĕ ĕнтĕ... Кирлĕ мар йĕмешкĕн.
Иртсе кайрĕ пĕлĕт. Çумăр çук.
Тепĕр хут та чуп туса илмешкĕн
Аллуна тăсса парсамччĕ хуть.

***

Пурччĕ-ха аякра-аякра пĕр тĕлленчĕк.
Темĕнле ирĕлсе паларать.
Ун патне ан пырсамччĕ... куллеччĕк
Чарса тăчĕ мана хăратса...
Ах, тем чухлĕ çав шыв пухăнсаччĕ.
Пырса кĕр те эс пут çавăнта!..
Çав шывра курăнатчĕ тĕлленчĕк...
Тен, тен, эс те унта пулса?
Çав шывра тĕкĕрти пек курнатчĕ
Сан сăну, кĕлеткӳ те кăкру...

Эп ăна ĕнтĕ тек тытаймастăп.
Эс тĕлленчĕк вĕт ман. Эс шывра!
Шывриссем те аван-ха, пĕлетĕп.
Эпĕ хам та шыври. Мĕн амак?
Эпĕ халь хам чуна ăсталатăп.
Çав кӳлленчĕк пекех тĕлленеп!
Пурчĕ-ха аякра ман тĕрленчĕк,
Пурчĕ манăн пĕр чун тĕкĕрте...
Ах, çавна та пулин курсассăн,
Тем пулать пуль ман – чĕрере?

* * *

Пĕр хĕр пек çеç пуласчĕ ман.
Хĕр пек пулсан çак тĕнчене
Эп çавăрттарнă пулăттăм.
Пĕрре куç хĕснĕ пек туса,
Тепре ахăлтатса кулса,
Çĕнĕ тĕнче те тăвăттăм.
Тĕнче вара... Йăлт чĕрĕлет те
Татах кăшт пурăнас-ха, тет.
Ун юратас килет татах.
Ара, телейĕ те чунра
Çак хĕрĕн умĕнче кăна!

* * *

Тӳпери çăлтăрсем анаççĕ
Çĕнĕ çул каçхине çĕр çине.
Аннă чух çакланса лараççĕ
Чăрăшсен палкисем çине.
Эпĕ те тӳпере ялкăшаттăм,
Çăлтăр пулнă пуль, тен, эпĕ те!
Эпĕ те çакланса вĕт ларăттăм
Пĕр турачĕ çине каçхине.
Эх, çунатăп çав... Çăлтăр ку, тетчĕр.
Çутатасчĕ-ха ку тĕнчене!
Тен, пĕр хĕр каччăпа пырса тăрĕç
Савă çăлтăр айне тĕршĕнсе:
«Манăн çăлтăр çӳлте!», – ĕмĕтленĕç
Çĕр çинче пĕр телей курас пек.
Телейне вĕт тытма килĕшмерĕç,
Ир енне çăлтăр çӳнчĕ вуçех!

***

Пĕр хĕр умĕнче эп тăратăп
Пуҫа кăшт тайса та пăхса...
Мĕн-ма вăл мана пăхăнтарчĕ,
Вăл Турă пек, тен, курăнса?
Тур умĕ пур, теҫҫĕ... Ҫав пулĕ?
Пуҫ ҫап эс ăна, аппа!
Пуҫ ҫапнă чух ҫулăм та тухĕ
Куҫҫуль те тухать, ак, юхса.
Ҫапла вăл турамăш умĕн
Тăрса та пăхсан чура пек.
Вăл, тен, кĕл тусан каҫарĕ...
Анчах та сăмахĕ ăҫта?
Каларăм, эп тупрăм тем чухлĕ
Турамăш валли сăмахсем.
Хурланнă ман кăмăл та хухрĕ.
Халь тин пурăнатăп хуллен.

***

Шăппăн-шăппăн, питĕ шăппăн
Ҫын тени те илтейми
Вăл калать чĕрийĕ шăннăн
Пĕр сăмах. Илтетĕн-и?
Илтнĕ пек те тепĕр чух.
Чун-чĕре ҫĕкленнипе
Ху калатăн пуль кăштах,
Тăрса пăх-ха эс шăпрах!
Тен, ҫавна илтетĕн те!
Эс каларăн, илтрĕн-и,
Е илтем пек турăн-и?
Шăппăн-шăппăн, питĕ шăппăн
Шăвăнать ку шур тĕнче.
Кам илтет, тет, пурăнать,
Ма тесессĕн – хăй калать!

***

Ҫак тĕнче мĕнле пĕлмесĕр
Ман утса курасчĕ.
Ăнсăртран пĕр хĕр курсан,
Мĕн-ха ку теесчĕ.
Алăпа тытса пăхмасăр
Эпĕ ăненместĕп.

Мĕншĕн-ха ку таранччен те
Ку хĕре пĕлмен эп.
Куçĕ симĕс, пуçĕ ăслă.
Калăн, ку çур Тура!
Пĕр пăхса кулса илсессĕн,
Ху та пулăн çурă...

* * *

Каç пулса килет турпаслăн,
Çил çынна авать.
Каçхине санаураслăн
Эп клуба каçал...
Чăн та, пур унта яш-кĕрĕм,
Пур тĕнче ăшши.
Çил пекех пырса эп кĕтĕм –
Пултăр чун ташши!
Эп ташларăм, эп юрларăм
Санпала пĕрле.
Халĕ те манса каймарăм
Çавă тĕнчене!

* * *

Тулли михх пек тулли тĕнче
Час çурăлать пуль тенĕччĕ...
Сана курса та киленсе
Çав тĕнчене те кĕнĕччĕ...
Ун чух эсир тыр тултарса...
Эпир ăна тиенĕччĕ!
Эсир пирĕ те астарса
Ыйла та хыт шӳтлеттĕрччĕ.
Тулли михх пек тулли тĕнче
Ун чух сап-сарă тăнăччĕ.
Халь тин каллех аса илсен –
Тухать çав кунăн чăнлăхĕ.
Эх, тусăм, ху та михх пулсан
Сана та эпĕ йăтăттăм!
Тĕнче каллех туллин кулсан,
Эп çамрăк пек те кулăттăм.

* * *

Пĕр турă килчĕ çĕр çине:
Мĕн-ма мана çеç вăрттăн курчĕ?
Кăшт чуп тусассăн ун питне,

Хитрен кăна пĕр хĕр пек кулчĕ.
Хăй чăн чунне уҫса вăл ячĕ,
Тухса та тăчĕ ҫын умне.
Турă пекех-мĕн ун чăн ячĕ –
Туллин сапать хăй кăмălне.
Ҫав кăмăл ăшă, питĕ ăшă –
Лăпкарĕ манăн чĕреме.
Халь тин ăҫтан-ха пултăр пушă
Ҫак тĕнчере ҫул ҫуреме?
Ҫав турă пуль чăн ҫул кăтартрĕ
Утса тухмалăх тĕнчене.
Тĕнче те вĕт халь урăхланчĕ –
Ҫутийĕ ӳкрĕ ман ҫине!

* * *

Эп тупрăм мар-и чунăма?
Пĕр кĕтесре вăл лăп! ларатчĕ...
Куҫпа курсан та тепĕр чух
Ăна асăрхаманччĕ...
Тахҫан, темле пĕр шухăшпа
Пăхса илсеттĕм те, турамăш
Унта ларать-мĕн ҫуталса,
Хăй тĕнчипе пытаранса...
Ҫав тĕнчепе хаваслanса
Темле ҫул хыванчĕ пулать-и?
Ал-урапа сăх-сăхланса
Эп ӳкрĕм ун умне тупмалăх
Хам чунăма тур умĕнче...
Турамăшĕ епле хăватлă,
Епле вăл ăшă хĕвел пек
Пĕрре ҫеҫ пăхрĕ те пулмалăх
Вăй пачĕ ҫакă тĕнчере.
Халь эпĕ те ҫуталнăн пултăм,
Турамăш пур ман умăмра.
Пĕр кĕтесре вăл лăп! ларатчĕ, –
Курмарĕ ҫын пуҫ ҫапнине!

* * *

Ҫутатать тĕнчене хĕр илемĕ,
Йăлт! кулать уйăх евĕр тути...
Унпала халь хĕвел те киленчĕ –
Питĕнче ун хĕвелĕн кĕлти!

Çиç-ха, çиç! Эс çутат хĕвел евĕр,
Е пĕр тĕкĕр пекрех тĕкĕрлен.
Сан çине ÿксе юлнă пин пĕрчĕ
Халĕ те çуталса пĕтеймен...
Савăнтартăр мана çавă çутă
Кантăкран кĕрекен çут пекрех.
Пурăнма халĕ пулчĕ пит туллă –
Курнăçасчĕ анчах тепĕре!

* * *

Хĕрупраç утать пит меллĕн.
Çав утта халь кам курать?
Турă тунă пуль, эс, тейĕн,
Е арçын çавна тăвать?
Утнăçем курать хăйне те,
Уттине кăштах юсать.
Ак, мĕн тетĕр, ун уттийĕ?
Уттинче ман чун вылять!
Арçын чунĕ пуль çав утăм,
Ман чуна вăл кăтартать.
Чун куçса пырать, пырусăн,
Ун хитреури тĕпнех!

* * *

Чÿхенет çут кун çути
Хĕрупраçăн питĕнче.
Чÿхенет те тăкăнать-и,
Йăлл! кулсассăн ман çине!
Ман çинех кăшт тăкăнсан,
Эпĕ те йăлл! кулăм мар-и?
Эх, аппаçăм, яра пар,
Чĕрине мана та пар!
Хĕрупраçăн сутине
Кун иртсен те манар мар!

* * *

Хитре тĕнче пĕр хĕр тавра
Хăй пĕлнĕ пек çеç çавранать.
Вăл пĕр кулать те кун пуçлать,
Пĕр хурланать те каç тăвать...
Мĕнле ман çав сар хĕр тавра
Хĕвел пулса çÿресчĕ-ха?

Çумăр çуса, кун пултарса,
Каç тăрăшшипе тархасласа,
Çак тĕнчере пурнасчĕ-ха.

* * *

Паян хĕрсем тумланнă
Çурхи чечек пекрех.
Пыл хурчĕ те вăраннă,
Вĕçесшĕн çÿлерех.
Çурхи çил кăшт пăлханчăк,
Сирет çеçке питне.
Пыл хурчĕ те мухтанчăк,
Саратъ хăй çунатне.
Çÿлти халь сар хĕвел те
Вĕçет чечек тавра.
Кĕтет хĕр халĕ тем пек
Хăйне савакана.

* * *

Пĕр хĕрача куç кĕски евĕрех
Чăлтăр та чăлтăр ялтрарĕ.
Кăкăрĕ ун хĕвел тухнă пекех
Куç умĕнче ташларĕ.
Куç кĕски пек çутă ури
Чăн пурнăçа пытармарĕ.
Парăр мана ун чĕрине,
Эпĕ унран хĕвел ярăп.
Çав хĕвел мар-и куç умĕнче?
Çук, эп шутлап, куç кĕски ку!

* * *

Çу çитрĕ панулми пиçмелĕх.
Сад-пахчисем – чуна уçма!
Çиçĕм пекех куçа çимелĕх
Хĕрсем тухаççĕ урама.
Ак, курăр ĕнтĕ, çĕнĕ утăм
Хăй паларатъ турă пекех.
Хĕр пĕвĕ панулми пек туллă.
Ас тивĕн те – вара, пĕтех!
Çапах та эсĕ пул-ха ырă,
Пырсах ан тĕкĕн хĕр ÿтне.
Хĕвел пекех вĕт питĕ хытă
Вăл пĕçертет, тет, каçхине.

* * *

Çырма çап-çутă куслă,
Мĕлкен курнать йăмра.
Туяп, телей çут пулăн
Ишсе çӳрет унта.

Çыр хĕрринче шур тумлă
Пĕр хĕр ларать пăхса.
Ун умĕнче шур чуллă
Касма выртать юхса.

Касма тăрсан та, паллă,
Ури ун йĕпенет.
Сар хĕрĕн çулĕ таллă –
Хĕр çавăнпа йĕрет.

Тăкать тĕнче çут кулă,
Юхать шыв шарласа.
Ак хĕр те çутă пулăн
Ишсе çӳрет шывра!

Шыва вăлта ярап та –
Çут пулă алăмра.
Тута парасла́н туплăн
Çатăлтатать вара...

* * *

Ман çинче симĕс кĕпе.
Пăрса сапнă-ши çине?
Атьăр-ха, чĕнеп пурне те
Пахчана пăрса çиме.

Ах, аннеçĕм, мĕн тума
Пануламиллĕ пахчара
Тупнă тептĕн эс мана
Пăрса çапнă вăхăтра?

Пануламиллĕ пахчара
Пăрса çапнă вăхăтра
Кун кăтартăшăн мана
Тав тăватăп эп сана.

Эп ҫӳретӗп пахчара
Панулмишӗн савӑнса.
Ева та ҫав вӑхӑтра
Панулми ҫисе пӑхса!

***

Ӑҫта тӑратӑп эп, пӗлместӗп:
Те пӗр залра, те чиркӳре...
Пӗр сасӑ ҫеҫ, пӗр сас илтетӗп,
Шур тумлӑскер, курап хӗре.

Вӑл пирӗшти пек вӗҫсе анчӗ
Ҫак ҫӗр ҫине темскер тума.
Вӑл чӗм кӗртес пек асамларӗ
Ман кӳтсе ҫитнӗ чунӑма.

Ак хор пуҫларӗ, тем каларӗ:
Пулать пуль терӗ темӗн те,
Усал килсе чуна ҫакланӗ –
Ӑна сирме эс килтӗн те!

Татах, татах сассу вӑйланчӗ,
Ӑна никам та ҫӗнес ҫук.
Ҫак ҫӗр ҫинчех ҫӑтмах пуҫланчӗ
Залра пӗр хӗр юрланӑ чух.

***

Эп сана тупсаччӗ, тусӑм.
Сана ҫеҫ тупсаччӗ...
Пур енчен те хухнӑ пурнӑҫ
Тулнӑ пек пулсаччӗ...

Анчах вӑхӑт хӑвӑрт иртрӗ,
Иртрӗ вӑхӑт хӑвӑрт.
Уйрӑлма та вӑхӑт ҫитрӗ
Тур калан тӑрӑх.

Эс кайсан чӑнах та тӑлӑх, –
Тӑлӑх-мӗн тӗнче!
Пӗрле чух кӑна-мӗн тулӑх
Пурнӑҫ ҫӗр ҫинче.

Эп сана ҫухатрӑм, тусӑм.

Эп сана ҫухатрӑм.
Утма юлнӑ вӑрӑм ҫулӑм
Курӑнать хӑраххӑн.

* * *

Иртрӗ пулӗ пурнӑҫ, иртрӗ ҫуркунне.
Хӑва ҫути ҫӗтрӗ, ӳкрӗ ҫӗр ҫине.
Майӗпен вӑл сӳнчӗ пурнӑҫ иртнӗҫем.
Хӑва мӗлки ҫуккӑ, ҫуккӑ юрриҫем.
Кӗскелсех-мӗн ҫитрӗ юрату тӑхри.
Халь хӑви те ҫуккӑ, ҫуккӑ ҫут йӑви.
Тен, каллех килесшӗн кайӑксем кунта.
Анчах эп пӗлместӗп кайӑк пек пулма.
Чӗлхе вӗҫӗнче те тек сӑмахӑм ҫук.
Хӑва ҫеҫкине те тек татассӑм ҫук.
Юрату пӗррe вӑл пурнӑҫра килет.
Пӗтнӗ ҫеҫ хӑва та вӗт ҫавна пӗлет.

* * *

Кун пек пурӑнма май ҫук...
Кун пек юрату та ҫук!
Пулас-ха тесеттӗм телейлӗ,
Кунсем те тӑратчӗҫ хӗвеллӗ...
Халь ӗнтӗ ман нимӗн те ҫук.
Халь ӗнтӗ хӗвелӗм те ҫук!
Ҫавать кунӗпех ҫумӑр.
Куҫҫуллӗ ман чун та, курӑр!
Сӑмах каламалӑх та ҫук.
Савни те ман халӗ ҫук.
Пӗр ҫулҫӑ, пӗр сарӑхнӑ ҫулҫӑ
Турат тӑррине ҫеҫ юлнӑ.
Мӗн-ма-ха ман нимӗн те ҫук.
Кулмалӑх тута та вӗт ҫук!
Пулсаччӗ тахҫан ман пурлӑх.
Халь юлчӗ пулас пӗр хурлӑх.
Ҫук, ҫук! Халь тин пӗтес ҫук.
Мӗн пулнӑ, йӑлтах эп ҫухатнӑ –
Чуна ҫавӑнпа, тен, сывватнӑ?

* * *

Эп сана ас илме шутламан та.
Халь вара ас илетӗп пулать.

Аса илтӗм те кӑмӑл ҫӑлкуҫӗн,
Чӗрере – юн тапма пуҫлать.
Эс ҫапла пулнине эп пӗлмен те.
Эп шутланӑ, мӑнтарӑн ача.
Ҫырнӑ чух, ак, сана ас илен те
Тӗлӗнетӗн кӑна пӗр кана.
Епле ӑслӑн та питӗ хаваслӑн
Сарӑ ҫулҫӑ пек тӑкрӑн сӑмах.
Эп вара халь ҫӑтса ярасшӑн
Тин ҫеҫ курнӑ пек пӑхрӑм татах.
Пӑхӑсӑн, тен, пӑхсан эсӗ тупӑн
Ху валли пӗр ҫемҫе ҫеҫ апат.
Тен, шутлатӑн халь пӗр ӑнланмасӑр
Калаҫса та пуль халь ҫитет.

***

Эпир ҫухататпӑр...
Паян, ак, ҫухатӑпӑр пуҫӗпех!
Мӗн-ма савӑнатӑп, пӗлместӗп пачах.
Куҫҫуль эс тӑкатӑн... Эсӗ ухмах!
Лайӑх-ха тенӗ, ҫухалнӑ пулсан.
Кӑштах пуль лӑпланӗ ҫӗкленнӗ тусан.
Ҫук, иккен, ҫук. Тусанӗ чунра.
Эп сана сутрӑм пулас пуҫласа.
Эп упраймарӑм... Куҫ ӳкрӗ, пӗлеп.
Ыррах маррине те сиесп.
Тин ҫех-ха тасаччӗ, тин ҫеҫ савӑшу
Ҫиҫетчӗ хӗвел пек... Халь тавлашу!
Халь ҫитрӗ ҫав вӑхӑт...

***

Эсӗ мана ӑнланатӑн.
Тен, ҫавӑнпа та тупатӑн
Манӑн валли сӑмах.
Ху вӑрттӑн кулатӑн, кулатӑн...
Хирӗҫ эп ним те чӗнместӗп,
Ним калама та пӗлместӗп.
Эп тӗлӗкри пек ҫӳретӗп,
Хам чӗререн тӗлӗнетӗп.
Куккук пырса ларнӑ туратӑн
Вӑл халь авӑнсах чӗтренчӗ.
Эс юнасан хурланчӗ,
Эсӗ кулсан – савӑнайчӗ.

Ăçтан мĕнле вăй илсе тухрĕ
Пире çакă çул çине.
Санпа тĕл пулаймăп тенĕччĕ
Çак çылăхлă çĕр çинче.
Халь ĕнтĕ юлать асăнмалăх
Эсĕ кулни, юнани...
Пурччĕ таçта юманлăх,
Пурччĕ пĕр çутă сулçи!
Чăшăл та чăшăл пĕр сассăр
Тем каласа ÿкрĕç-ши?
Эпĕр утсаччĕ сăмахсăр.
Пулчĕ сăмахĕ – сулçи!

* * *

Çĕр çинче эс анчах пуль, чăнах та.
Каласа тухас çук пин сăмах та.
Çухатса çĕр хута ыйхăма
Сан çинчен шухăшлатăп пĕрмай.
Пурпĕрех эс пĕр вĕçĕмсĕр уçлăх.
Пурпĕрех темле вăрттăнлăх эс.
Ман умра эсĕ çулăмлăн çунтăн –
Çавăнпа çывăрмасăр çÿреп!
Тепĕр хут пĕтĕмпех ас илетĕп.
Санпа пулнă куносем чĕрере.
Пĕрле пулнă телейĕн билечĕ
Лутăрканчĕ пулас кĕсьере.
Эп ăна тепĕр хут ак вулатăп.
Шурăмпуç çутипе те... пĕрех.
Эх, кама эп пулать улталатăп?
Куç курсан та курмас пĕтĕмпех!

* * *

Мĕншĕн сивĕ вара, мĕншĕн сивĕ?
Çил çинче пуль эпир, çил çинче!
Телейе пулинех сивĕ çилĕ те сисрĕ –
Çил вĕрет пĕтиччен, мĕн ирччен.
Çалтăрсем пуç çинче çунчĕç-çунчĕç.
Мĕн каларăм сана, ас тумас халĕ тин.
Калаçу хăй çипне çамхаларĕ те сÿтрĕ,
Тепĕр хут тĕртейместĕн саттин.
Пур унта каламан сăмахсен чăн яправе.
Пур алсем пĕр-пĕрне хăраса шырани.

Палăрать куçунта шухăшсен чăн пĕтравĕ.
Тен, шуттан. Кирлĕ мар, кирлĕ мар тĕл пулни!
Эп шутлатăп вара. Миçе утăмшши юлчĕ.
Телее шутлама кирлĕ мар, кирлĕ мар!
Юлашки утăм пуль... Пурпĕрех пысăк пултăм.
Виçĕ утăм юлсан та... пĕрех юнашар!
Мĕншĕн сикрĕ чĕре, мĕншĕн сикрĕ?
Çил çинче пуль эпир, çил çинче!
Ман чĕре шăннине сивĕ çил те пуль сисрĕ.
Çавăнпа вăл вĕрет пĕтиччен, мĕн
ирччен...

* * *

Курса юл мана, курса юл савни!
Кунта мĕн пулни, кунта куç пăвни...
Ытала савни, ытала мана.
Юлсан юлĕ те сывлăшăм кăна.
Чунăм ман унта, ытамра.
Чун тухать, чупать,
Хĕм сапать куçран...
Курса юл мана, курса юл савни!
Манăн сывлăша эс сывла туллин.
Эс чуп ту мана, хытăрах чуп ту.
Тепĕр самантран эп пулмастăп та!
Тепĕр самантран эс кăна юлан...
Манăн куç та çук, ман тута та çук.
Сывлăшăм кăна сан ăшра,
Куллăм хăлхунта янăрать...
Курса юл савни, курса юл мана.
Кирлĕ мар питех пăхма хурланса.
Эс телейлĕ чух эп телейлĕччĕ.
Кунта мĕн пулни – турăсем çырни.
Юлчĕр сан çумра кулăсем кулни,
Çистĕр куçунта вăйă выляни,
Курса юл мана, курса юл савни!

* * *

Пĕр сас. Тен, тĕнче сассинех ку,
Таçтан ĕмĕрсем тĕпĕнчен, тен,
Илтĕнчĕ. Пирĕштин пекех туйăнчĕ.
Каçар терĕ. Мĕншĕнне хăй те пĕлмерĕ.
Тен, ытлашши те каларăм. Эп ас тумас...
Халь ĕнтĕ эп çылăхлă... Çук, терĕм.

Сана иглеме юрамасть. Итленё-ши эс.
Тĕнче те ун пек хушмасть, телейлĕ тумас.
Тен, кирлĕ те мар ку, тен, тĕрĕсех.
Мана итлемерĕç. Пултăр пĕр итмĕн.

***

Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар...
Юрă тесех-çке тăнларăм.
Вăл илтĕнетчĕ таçтан аякран –
Çăмăллăн, çил пек юхатчĕ...
Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар...
Пулнă мĕн вăл çын куççулĕ.
Юхнă та юхнă кĕрхи çумăр пек.
Юрă тесех йышăнса эп.
Эпĕ пĕлмен вĕт, эсĕ каçар...
Йывăç çумнех таянса эп итлерĕм.
Çумăрлă, чăн та, çанталăк тăратчĕ,
Сывлăш вĕри те çăратчĕ...
Пурпĕр сывларăм хавасăн.
Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар...
Эп тĕлĕкри пек çурерĕм.
Юрă янрать халĕ те!
Пĕрре çумăр майлă, тепре çил пекрех.
Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар
Халха тăратса итлеменшĕн,
Кăмăл сана пĕр килменшĕн.
Эпĕ пĕлмен те, эсĕ каçар..

***

Шыв хĕрри. Шыв хĕрри питĕ сăрлă.
Çутă ӳкнĕ çĕрте хăйăр сăрлă.
Шыв хĕрнех хунă пĕр кăвайта
Çунат сарнă вут кайăк пекех
Ман çине мĕн ирччен пăхса ларчĕ.
Пулчĕ вăл пирĕншĕн тарçă.
Туйрăмăр айăп пĕр авăк.
Хамăр та ĕнтĕ ик явăл.
Ал-урасем хĕреслĕ,
Тĕнче темиçе кĕтеслĕ.
Тĕнче уçăлать чечек пек,
Кăвайта çунать хĕвел пек.
Каçĕ тăрать тĕнчетĕгĕм, –
Çакна ĕнтĕ эпĕ кĕтрĕм!

Халĕ эпир те аслă.
Турă та, тет, аснă...
Пулнă хура çак хуплăх,
Халĕ çап-çутă çуплăх!
Çыранĕ те халĕ çĕтмахлă,
Иккĕн ик хут ухмахлă.
Пултăмăр тăтăмăр халĕ
Иккĕн те тепĕр халăх.
Тен, çавăнпа хăрамарăмăр,
Çулпен те çуле хăпартăмăр.
Ăçта халĕ çавă çутă,
Тĕнче яланхи пек ютă.
Каллех ĕнерхи пек тĕттĕм.
Пĕрех эп ăна чĕртрĕм!

* * *

Ĕнеркаç санпа тĕл пуласран питĕ хăрарăм.
Эсĕ ку тĕнчери чи илемлĕ те чи таса хĕрарăм.
Эпĕ вара калама çук хăрушă хлын,
Урăхла каласан, арçын ĕçне туман çын.
Совеçĕ те çук мар-ха ман, чухлатăп.
Енчен те сан умна ăнсăртран сиксе тухсан,
Эсĕ куçа хупласа шари! кăшкăрса ярăн.
Çавăнпа та сан çул çине эпĕ пĕрре те тухмастăп.
Çул айккинчен кăна пăхкалатăп.
Анчах та эпĕ ахалех хăрарăм.
Эсĕ ку тĕнчери чи илемлĕ те таса хĕрарăм.
Халĕ эпĕ, тен, ытла хăрушах та мар пуль.
Тап-такăрах эп çĕрĕпе такăрлатнă çул.
Эсĕ ирпе ыттисемпе пĕрле ĕçе кайма тухрăн.
Ман çумранах иртсе кайрăн. Эпĕ пуçа усрăм.
Эпĕ халĕ пахчари катемпи те мар вĕт-ха.
Эпĕ каçхи хăрушă мĕлке те мар.
Мĕншĕн, кам ку, тесе çаврăнса пăхмарăн.
Эсĕ ку тĕнчери чи илемлĕ те чи таса хĕрарăм.

* * *

Мăн Атăл атте те – ăçта эс пулса,
Куçа курăнмасăр мĕн чухлĕ юхса?..
Шап-шурă пăр çийĕн утса тахçанах...
Мăн Атăл хуппи вăл пулса яланах!
Халь хумлă чĕрчун пек сăхать çырана,
Чуп тунă пекех илтĕнет хăлхана.

Ку ахаль мар пуль. Пур пулĕ сăлтав.
Çумрах тăракан пĕр хĕре пысăк тав.
Алли ун сив хум пек мана ачашлать.
Вăрман аякра та, пĕрех хашш! сывлать.
Пит лайăх пĕлет юррине хура шăнкăрч,
Каллех вĕренет шăхăрма пĕчĕк шăпчăк.
Каллех хум çапать. Хальхинче вĕрирех.
Тăраттăр-ха эпĕр пĕрле чиперех.
Анчах нумая тăсăлмасть вăрттăн тапхăр.
Ачаш чĕресем хăйсемех харăс тапрĕç.
Тепре чуп тăвать те сив хум сырана,
Лекетпĕр эпир те çав сивĕ таппа...
Шуталанă эпир: хум, шăпчăк, вăрман...
Кун пек пысăк пăр халиччен эп курман.
Выртать сыранра ирĕли-ирĕлми,
Çынсен чĕрисем хĕл хушши пуханни.
Халь тин çемçелет те ачашшăн йĕрет...
Эх, Атăл хуппи çак йăлтах вĕт пĕлет!

* * *

Мĕн чухлĕ хĕрарăм, хĕрарăм...
Пăхса сан çине хушăран
Улпут пекех ирĕклĕ лартăм.
Эп шăпăл та шăпăл калаçрăм
Пĕр питĕ яшшăр майрапа.
Куçпа вара вăрттăн сăнарăм
Пĕр сассăр ларан шăпама...
Шăпа ман пуçне çĕклемерĕ,
Пăхмарĕ пĕрре те çиçсе.
Эп лартăм шарккӳ пек пиçсе.
Пĕр вĕçĕмсĕр эпĕ шавларăм,
Сана ăнланмарăм пачах.
Анчах та сана эп манмарăм,
Татах тĕл пулма та хавас.
Шăпа пек эп вăрттăн эрлентĕм,
Пĕччен пултăм пулĕ турпас?
Чунпа пурпĕрех вĕрентĕм
Сан пек кăларма сассăр сас.

* * *

Çурма уçă алăк – кĕрессĕм килет.
Кармасăр хăварнă гардин...
Куçа илĕртет пĕр хĕр кĕлетки.

Тути те кăшт уçă – ытарайми.
Тăрать пÿлĕмре çалçут пирĕшти...
Вăл турăш пекех – куç илми.
Çурма уçă алăк – кĕрессĕм килет...

***

Пулă çунатлă хĕр-кайăк
Вĕçрĕ те кайрĕ таçта.
Чылай янăрарĕ кулли.
Çапла вăл – çырма пулли!
Шыв юххи пек авăкланчĕ,
Куç кĕски пек вылянчĕ.
Эпĕ те çав юхăмра,
Эпĕ те çав кулăра,
Эпĕ те вĕçрĕм çав кайăкла...

***

Çĕнĕ уçлăхра Адам тата унăн юратнă арăмĕ Ева.
Акă, çутă пайăрки ÿкрĕ, пĕрремĕш сăмах янăрарĕ.
Кайăр, кам унта алăка уçса пăхать!?
Тен, вăл тахçанах тамăка янă шуйттан?
Йăлт! та йăлт! тăвать, Турă ĕçне хутшăнать.
Ева та ун патнеллех туртăнать. Ах, тур!
Хĕвел çинче хĕрнĕ тăм пек çурăлса каяттăм.
Аяк пĕрчи те каллех ыратма пуçларĕ...
Евăна хăй вырăнне кĕртрĕм те лартрăм.
Шуйттан илĕртрĕ-илĕртрĕ те тĕтре пек ирĕлчĕ,
Тĕттĕм кĕтесе майĕпен çутă кун кĕчĕ.
Тĕнче ача сассипе вăранчĕ.
Икĕ чун ăна, ах, ачашлаççĕ,
Вăл аташса каясран хăраççĕ.
Çутă сумне çутă яраççĕ, ăшă сăмах хушаççĕ.
Ачи хăвăртрах ÿстĕр теççĕ.
Ах, Ева, ача чунне тăваттăр мар-и?
Епле вăл – пирĕн ача?
Чăваш куçлă, чăваш чунлă тăвасчĕ!
Кайăр, кам унта алăка уçса пăхать!
Пасăрхи шуйттан каллех пырса кĕрет.
Йăлт! та йăлт! тăвать, пирĕн ачана шырать.
Ах, Турă, Евăна илĕртни çитмест.
Ачана та пĕтерет!
Уçлăх тĕттĕмленет...

Унта халь пасар та ясар. Пылчăк, татах пылчăк!
Там ача чутах ванса каятчĕ...
Ванма памарăм, çутă çине çутă ятăм,
Пирĕн услăх каллех ялтăрать.
Ачи вара! Ачи!
Ачин пĕр куçне шур илнĕ.
Амăшне те палламасть, темле урăхла калаçать.
Çав тете патне каятăп, тет. Ăт, шуйттан,
Пирĕн ачана пăснă вĕт!
Евăн та тута хĕррине вăрттăн кулă тухать.
Мĕне пĕлтерет ку?

***

Çак пăрлă çулпа утнă чух
Санпа тĕл пулатăп пуль тенĕччĕ.
Эп майсăр пуса ўкнĕ чух
Ярса та илетĕп пуль тенĕччĕ.
Кашни ир-ирех çак шухăшпаччĕ,
Кашни кун çав кăмăлпаччĕ...
Эс çук-и тесе пăхкалаттăм,
Чупса та тухмасть-и, шутлаттăм...
Ман сассăр йыхравăм çитинччĕ,
Çак сивĕ тĕнче хĕрхенинччĕ...
Çук, терĕç... Хĕл иртрĕ каллех.
Ĕмĕтленни те пулчĕ ахалех!
Никам та чупса тухмарĕ,
Ман кăмăла курмарĕ –
Çавăнпа та эпĕ ўкмерĕм.

***

Кăлтăр-кăлтăр! питĕ лайăх
Ыткăнса пыма çапла.
Хам та пултăм эпĕ кăлтăрч,
Куçса кайрăм савăнса.
Ман та пурччĕ çумра савăк,
Савăк çеç пĕр хĕрача.
Аллинче ман ал выртатчĕ –
Чупса кайрăмăр çапла...
Ун чухне тĕнче выляччĕ,
Вăл кулатчĕ пирĕн пек.
Тен, вăл курнă: питĕ савăк
Икĕ çамрăк ачана.
Çавăнпа пуль аса килчĕç

Икĕ çĕмрĕк кустăрма.
Кусса кайрĕç те килмерĕç,
Çук, килмерĕç çаврăнса.

***

Туту хускалчĕ,
Куç ывăтрăн...
Тем калаттăн пулĕ те –
Иртсе кайрăн, калаймарăн...
Тантăшу сан енне тайăлнăччĕ.
Пĕр вĕçĕмсĕр тем калаçатчĕ.
Эсĕ вара ун пек мар –
Пĕр сăмах кăна каласшăнччĕ...
Эпĕ тарăхрăм. Хăйсаситрĕм.
Тепĕр кунне ман тута та хускалчĕ.
Тем каласшăн пултăм – калаймарăм.
Иртсе кайрăм.
Ку питĕ хăвăрт пулса иртрĕ.
Кашни кун çапла.
Пĕр-пĕрин çине пăхатпăр,
Тутасем хускалаççĕ,
Пĕр сассăр калаçаççĕ.
Мĕн ятлă эсĕ, кам?
Мĕншĕн пĕр сăмах та чĕнместĕн?
Мĕн пулчĕ?
Эпир те сăмах хушмасан мĕн пулĕ?
Эпир юратмасан кам юратĕ?
Эпĕ те иртсе кайрăм.
Мĕн тумалла, тет, халĕ?

***

Эс пулă пек питĕ вылявлăн,
Шывра хĕвел пек çутăттăн.
Такам çавăнта вăлта пăрахса та
Туртса та кăларнă сыран хĕррине...
Эс, чăн та, хĕвел пек, анчах та
Çыран хĕрринче çеç выртатăн,
Ташланă пек тăпăртататăн,
Ик аллупа шарт çапатăн...

***

Çырма хĕрринчи ват йăмра пек

Теме эп кётсе ларатăп.
Çут тěкěрлě хумлă шывра
Çут пулăсем тытатăп...
Тытатăп та, чăн та, куратăп.
Турат çине пытăн та лартăн!
Эс кайăк пулса-мěн çуретěн...
Куçа курăнатăн кěтретěн.
Ак, халě темле шăпчăк ятлă
Кайăк пек юрласа ятăн...
Кам курнă çапла кайăк,
Пурах ун чунри пěр айăп.
Çав айăп пуль хуса çитрě.
Куçа курăнатăн ик питлěн.
Сана эп кётсеччě хěр ÿтлě.
Шыва вара тěк ÿкрě...
Пěр шур карап пек çак шурă тěк
Шыв çийěн çăмăллăн ишрě.
Эп лартăм вара йăмра пек.

* * *

Тěл пулманччě санпа пěр çулталăк.
Пуç тайсах пăхса тăтăм пěр авăк.
Шурă хурăн татах та çутă.
Çутине сапса тăчě пěр хушă.

* * *

Санпа тепěр хут тěл пуласшăн
Çÿретěм-ха эп ěмěтленсе.
Çил майăн, хěвеллěн, хаваслăн
Тăратчě вăрман çěкленсе...
Пěр çулçă кăна эп тытасшăн.
Ÿксен вěт пěтет самантрах!
Эс, çулçă, ача пек, тархасшăн,
Чуччу ярăнсам туратрах!
Ÿксен те ÿкесчě вăраххăн.
Çÿлте çил çинче вěçкеле!
Вара эпě хам та хăраххăн
Çÿретěп-ха пуль-ха хуллен...
Вара эпě хам та вěçетěп
Çав çулçă пекех пěр самант.
Çěре ÿкес чух çиçěмпертěр
Çак тěнчене тепěртак!
Паян юлашки хут курнасшăн

Çил сиввипе чĕтренет.
Çулçи тытăнса юласшăн –
Юлсассăн, телей килет!

* * *

Сăмса айĕнчи курăнмасть теççĕ.
Пурăннă-пурăннă, курман та...
Çапах та пĕрле пурăннă.
Пурăннă та пураннă!
Тепĕр чух, тен, вăрçнă,
Чирленĕ.
Пĕрех, пурпĕрех пĕр-пĕрне упранă.
Тăхăнтарнă, çитернĕ, тасатнă...
Сăмса айĕнчен тенĕ пек пăхса ларнă.
Пĕр-пĕрне курман.
Тен, хакламан...
Халь вара сан çине пăхатăп,
Сăмса мĕнлине куратăп.
Санпа пĕрле питĕ лайăх.

* * *

Куратпăр хамăра пĕр пек, пĕр тан.
Кашни хăйне кура куштан.
Кашниййĕ шакла пуçлă е кукша.
Кайса тăратпăр та кăштах «шукша»
Каллех пуçлатпăр пĕр-пĕрне çăлма.
Аванçке юнашар тăма, пĕр-пек пулма.
Тен, эпĕр ўкнĕ çĕр çине çĕрме улма?
Куоса каяпăр... Ун пек пулсан аван.
Анчах та эп нихçан та панулми пулман!
Эпир халь курăк выранне те мар,
Каю кăна шăтса тухать пĕрмай!

* * *

Ку темĕн пĕрре те курманччĕ
Нимле тĕлĕкре те сана.
Пачах сан çинчен шутламанччĕ.
Нихçан та килмен ман ăса...
Мĕн пулчĕ-ши, тусăм, мĕн пулчĕ,
Мĕн-ма килсе тăтăн ума?
Тен, зоĕ чирлинĕ пулнă,
Çавна çеç каларăн мана...

Тен, эпĕ халь хам та чирлĕ
Шыратăп пуль эпĕ сана?
Мана эсĕ питĕ кирлĕ.
Мĕн пулчĕ ман мĕскĕн чуна?
Сана юратса çитерменшĕн
Халь эп кулянатăп пăртак.
Тен, çавăнпа эсĕ килтĕн?
Апла пулсан кил татах!
Пăхма хăй темле хытанкă,
Ик пит çăмарти тап-таса.
Кĕске кĕпепе те... тăсланкă
Кăштах курăнать куçа.
Каллех куç умне тухса тăчĕ
Хыткан та таса хĕрача.
Темле тепĕр хут телей сăрчĕ
Кĕтет пек мана тата!

* * *

Турă чунлă пулĕ эсĕ, чăн та.
Çакă тĕнчене ăслана чух
Турă та çапла вĕрÿçĕ евĕр
Сăмахне вĕрсе калана пуль.
Çавăнпа каллех çисме пуçларĕ
Тин кăна хуран тăран çанталăк.
Пит çинче хĕвел шевли выльярĕ,
Сивĕ çил те çавăрчĕ çунат –
Шăнса кÿтнĕ ир те урăхла çунать!
Ту çинче тăратăп эпĕ халĕ.
Христоса кунта çакаççĕ пек.
Ман çумах ăна халь пăталанă,
Çавăнпа туяп хама – аван!

* * *

Авалхи вăхăтсем çаврăнса килчĕçĕ.
Çав вăхăтсем каллех илĕртрĕçĕ.
Ун чухне тĕнче панулмиллĕччĕ –
Эпир те ăна çисе киленнĕччĕ!
Юлашкине таçта пенĕччĕ!
Халĕ эпир хамăр та шуйттан,
Е турăпа тăратпăр юнашар?..
Эпĕ халĕ хам та панулми –
Çисе яр мана та ним юлми!

Çисе ятăмăр та – тĕнче пек пĕтрĕмĕр,
Панулми шăпине тӳсрĕмĕр.

***

Тăраттăн пăхса зоĕ чаплăн.
Такам, калăн, фото çапнă?
Кулаттăн пĕр вĕçĕмсĕр – чăлтăр!
Куçу кăтартса икĕ çăлтăр.
Çакна эпĕ куртăм каç витĕр.
Тĕнче тĕкĕрленчĕ, ахăр?
Çакна курсанах кăмăл çитрĕ –
Халь ĕнтĕ мана хăть çакăр!

***

Куç илмесĕр, чуна чармасăр –
Кӳтсе çитнĕ-ха та ĕнтĕ вĕсем! –
Никамран та нимрен хăрамасăр
Иккĕнтен калаçаççĕ хĕрсе:
– Эп сана каласа ăнлантарнă;
– Эп сана нихăçан та манман;
– Зоĕ мĕншĕн вара манран тартăн?;
– Ун пек йывăр нихçан та пулман;
– Эп, шуtларăм, мана зоĕ мантăн;
– Мĕн таватăн вара эс манпа?;
– Тахçанах ĕнтĕ эп аманнă;
– Асăнса, тен, лартатăн юпа?.
Кирлĕ мар шелleме, кирлĕ марчĕ,
Эп те халĕ асаплăн пăхап.
Ак, юпа тăррине пырса ларчĕ
Ылтăн кайăк, темскер юрлать.
Вăл юрлать те мĕнле чăтса тăрăн,
Чул юпан та чĕри тапать.
Эп пулса, тет, тахçан чăваш тăрăн.
Çавă тăрăн пекех пурнап.
Вĕçсе кайăпăр икоĕмĕр харăс –
Чĕвĕл-чĕвĕл каять икĕ сас.
Кам пире халь вĕçме те чарĕ?
Чул юпа та вĕçевшĕн хавас!.

***

Эс килтĕн çĕр çине хĕвел элчийĕн.
Эс килтĕн ăшăтма çак сив çĕре.

Вĕçет çутту хуралнă хула çийĕн,
Тем тĕрлĕн çутатать юр пĕрчине.
Ик аллунтан тумларĕ вăхăт хăвăрт.
Çут шыв юхать пăрлак аллусенчен.
Эс ху та халь тăратăн питĕ шăпăрт.
Кĕтместĕн сив сăмах çурхи çут кунсенчен.

* * *

Телейĕн çĕршывĕ те пур, тет, таçта.
Пулса çавăнта, тет, такам та!
Çӳрер-и эпир те çав юмахра,
Юмах ярса пар-ха тессссĕн.
Анчах та унта çул тени темиçе.
Пĕр çулшăн пырать тавлашу.
Ик çул ыткăнаççĕ тет çав çăтмаха,
Таçта çухалаççĕ пĕр йĕрсĕр...
Чăн çулăн палли, тет, унта пĕр чечек.
Вăл та сӳнет пуль кĕçех?
Çĕршывĕ вара юлать пуль пĕрех
Сана эп кĕтетĕп çав çĕртех!

* * *

Юлашки аслати пек кĕрлерĕ,
Юлашки çиçĕм пек халь çиçет.
Юлашки тумламсем эрлĕк евĕр
Çĕр çине халь ӳкеççĕ пулать.
Юнашар-ха çӳрет ман телейĕм,
Юнашар-ха тăрать кĕлетки.
Кашт кăна йăлп! кулли çиçĕмленчĕ,
Куçĕнче вăй илет аслати.
Юлашки хут çапать шăпа евĕр.
Эп юлатăп хытса юпа пек.

* * *

Мĕн-ма мана эс куç пăватăн?
Мана пуç хĕрлĕ тăрататăн.
Леш тĕнчери пек халь пурнатăп,
Эп турă умĕнче тăратăп.
Каçар мана, чĕре туратлă,
Ăна эс чăннипех тухатнă.
Вăл пĕрре мар. Вăл халь тăватта.
Мĕн кирлине вара – çухатнă!
Каçар мана, эп халь çунатăп.

Çылăх шутне картса ларатăп.
Телей тени кăштах çăватчĕ,
Халь тин ăна та тупаймастăп.

* * *

Çил синче сив çилтен пытанса эпĕ пытăм,
Тен, санран пытанасшăн эп пултăм?
Çил вĕçсе кĕчĕ пуль, уйăрттарчĕ пире,
Ларса юлтăн пĕччен чĕрече умĕнче.
Эп вара çил синче, çил синче, çил синче...
Пĕчĕк тĕмĕ пекех сив çĕре пуç çапатăп.
Эпĕ айăплă халь, эпĕ кутăн чакатăп.
Эсĕ лар çавăнтах, чӳрече умĕнчех!
Эп вара çил синче, çил синче, çил синче...
Çил пекех кастарап тĕнчене тепĕр май.
Эсĕ лар çавăнтах, ман кусран тек ан кай!
Эп вара çил синче, çил синче, çил синче...
Эсĕ лар çавăнтах, чӳрече умĕнче.
Пуç çаптартăн мана сив çĕре сыртиччен,
Çакă çил ман чунра пĕтиччен!

* * *

Çут сурта ташшине ас тăватăп.
Çав çурта пирĕн пурнăç пулса.
Çав çурта çутине тав тăватăп –
Мĕлкине те тăрап ас туса!
Çутăпа çав мĕлке ыталашрĕç,
Пĕр самант та пулмарĕç пĕччен.
Çĕрĕпе çав çурта ташларĕ
Пулĕмри пĕр çĕтел синче.
Икĕ чун ун çине пăхса ларчĕç,
Шăпăрт пулчĕç çурта умĕнче.
Тен, вĕçсем çурта свĕр шутларĕç,
Пĕр шутларĕç те сунчĕç пĕрле.
Шăтăр-шăтăр! тăвать шурă ăвăс,
Пăшăл-пăшăл! пĕтти – пĕр апат.
Шур çурта çуратать шурă сăвă,
Шурă сăвă чуна кăтартать.
Шур çурта пĕтĕмпех çунса пĕтрĕ –
Çĕрĕпе çуннă çут та çӳнет.
Шусăма çĕрĕпе пĕрле кĕтнĕ,
Çĕнĕ кун ялтăрса килет.
Çав куна шур çурта суратрĕ –

Ахаль мар çурта сӳнне пулать!
Çавăнпа çуртана юратрăм,
Халь ăçта-ши тата вăл ташлать?

* * *

Илтрĕм эп урăхла темле сас.
Урамри çил лăпланчĕ пĕр кас.
Шăппăн-шăппăн каларăн темскер,
Эп ун пек сăмаха илтменскер,
Туйса илтĕм хама йывăç пек.
Çивĕ çумăр хытарнă пекрех.
Çав сăмах... эп ăна илтмен мар,
Ах, анчах халь мана кирлех мар.
Пурпĕрех кĕрхи кун çывхарать,
Кĕрхи çумăр каллех сас парать.

* * *

Ирхи сар хĕвел пек
Сар хĕр вăранать.
Ăçта-ши ман каччă,
Чĕри шухăшлать.
Каччи кĕттермерĕ,
Шаккать кантăкран.
Чие çырлипе те
Сайласшăн пулать.
Перет пĕриншне те
Çут кантăк вара
Чĕрс пек хĕн-хĕрлĕ
Çунать çавракан...
Чие пана сасă
Кĕрет хăлхана.
Хĕвел пек хавасл
Тапать халь чĕре.
Чие çырли евĕр
Хĕр кусĕ çиçет.
Хĕвел евчĕ евĕр
Хавасăн сĕрет.
Халь ĕнтĕ çырла та
Пĕр тупăă тута.
Пулать чуп тума та,
Пулатчĕ татма...
Анчах май килмерĕ
Пĕрле сӳреме.

Тен, вăхăт ҫитмерĕ?
Пĕрех вăл ҫĕтмерĕ –
Чие панă сас
Тăрать халхара!

***

Аллуна хыпарса чăмăркка ăш юра
Ирĕлсе пĕтиччен тытса пыр.
Савни кайрĕ пулсан уйрăлса та санран
Кайнине те пулин пăхса юл.
Ăшă юр, ăшă юр, ăшă юр,
Куҫҫуль евĕр ҫĕре ан ӳксем.
Ăшă юр, ăшă юр, ăшă юр,
Ахалех ирĕлсе ан пĕтсем.
Савни кайнă чухне тӳпере,
Тен, такам хурланать пулинех.
Юр пĕрчи тăкăнать ҫутă пек,
Тĕнче тулчĕ пуль юр ҫунипех.
Йĕр ҫинче, курăнать, пухăнать сивĕ юр,
Аллăмра чĕре евĕр туни те ман пур.
Юр хӳсе кайиччен... тепĕр хут
Ҫав йĕр хыҫҫăн тепре утса тух.

***

Ах, сăнĕ ун куҫ умĕнчех-ха,
Куҫҫулĕ те пичĕ ҫинчех.
Кушак пек куҫса ӳкерет-ха,
Ман чун та ун ҫумĕнчех...
Пырса ыталас пек пăхать те
Каллех йăл-йăл-йăл! кулать.
Ах, чунăмҫăм, кулă каять те
Куҫҫулĕ питре – юлать.
Сапта ҫеҫ выляс тенĕн
Ӳкерчĕк-ха эп ир те каҫ.
Ҫынра темăскер тупаслăн
Хама та мансах пырап.
Ак ĕнтĕ, чăнах та тупрăм:
Курнатăн шап-шур панулмин.
Таса урай тăрăх кăлтрин!
Кулса куҫса кайрăн хуллен...
Улма, тет, тухатнăн пулать,
Ҫапла, тет, элем суралать.
Тăмран тунă ҫыннăн ӳчĕ

Асаплăн халь тин ыратать.
Çавра хĕвел евĕр хĕр чунĕ
Каллех улмалла çаврăнать...
Тахçан тухнă çутă куççулĕ
Шăрçан çĕре йăлт тăкăнать.

* * *

Юлса çур сехет... Килинччĕ
Часрах эпĕ кĕтнĕ вăхăт.
Çара алăпах илинччĕ
Ман чĕрене... Чĕрĕпĕн
Вăл хутланса выртсан та,
Аллу юнланса ыратсан та
Илсем эс ăна ална...
Чĕре таппине тăнла...
Епле вăл хăравăçлăн та татăклăн
Тăк-так! пек тăвать сан умра.
Хăйне вăл темле пытарсан та
Илтетĕн пулех çавна.
Е, акă, ытла йĕплесен те
Ай-уй! тесе калăн пăртак.
Унтан тăхтаса тăмасăр
Пăрахăн ăна лăпах...
Анчах ан хăра... Вăл пĕтмĕ,
Вăл ĕнтĕ йăлтах халь йĕплĕ,
Ăна, тем, тытма та тертлĕ.
Тен, урăх тытаймăн... Мĕн-ма
Кирлех, тет, сана макăрма.
Юлса çур сехет... Килинччĕ,
Килсен те çав вăхăт иртинччĕ,
Ман чĕрене те илминччĕ...
Вăл юлтăр çав чĕрĕп пек –
Чĕрĕп вĕт чĕрĕ пекех!

* * *

Авалхи шăпчăксем юр юрлаççĕ.
Çук, пĕтмен-ха йăлтах вĕсем.
Ним пулман пек каллех чăплатаççĕ.
Ас илеççĕ пулех. Эх, туссем!
Ас тăватри, ун чух аслă чӳкчĕ.
Чĕрĕ туйăмчĕ пуль ал-ура
Çак çырма тăрăшшĕпех çыхланатчĕ
Çуллĕ курăк та... тĕкĕл-тура!

Утнӑ чух пӗрлешетчӗҫ ик чун та.
Эх, епле пӗрлешмесӗр тӑран?
Чӗрери, сан ӳтри таса юн та
Ҫакӑ шӑпчӑкӑн пек, мӗн тӑван?
Эс юрла халӗ, шӑпчӑк, ан чарӑн,
Чӑплаттар авалхи вӑхӑта.
Эх, мӗн-ма чуп тума эс тӑхтарӑн
Сар хӗре утнӑ чух ҫавтӑнса?
Ҫавӑн чух чарӑнатчӗ пуль шӑпчӑк,
Чарӑнатчӗ пуль ҫӗр ҫаврӑнма?

* * *

Сан пата чылайччен ӑнтӑлатӑп,
Ҫитейместӗп пуль тенӗ чухне
Ман чунра темӗскер йӑлтӑртатрӗ,
Тем кӑтартрӗ пулас хӑй чунне.
Эс кӑтарт-ха чунна чӑн курмалӑх,
Пӗр сӑмах та пулин эс кала.
Вара юлӗ кайран асӑнмалӑх
Пӗр сӑмах, Турӑ пек, ман ӑшра...
Ах, анчах пӗр сӑмах та пулмарӗ.
Ӑнтӑлни ку суя. Ку эс мар.
Вӗт тӗнче те текех чӑтаймарӗ,
Вӑл та ячӗ пулас макӑрса...
Епле чӑтӑн, чӑнах. Вӗт тӗнче те
Пуҫланса, тет, пӗр ӑш сӑмахран.
Ҫав сӑмах вара халь пуланчӗ.
Ларса юлчӗ пулас сан ӑшра.
Пӗр сӑмах ҫеҫ мана эс калинччӗ –
Ним те мар пек вара пурӑнни!
Кам тата ман пекех ӑнтӑлинччӗ
Ҫак сӑмахшӑн кӑна сан пата.
Ҫапла пултӑр, апла. Уйрӑлатпӑр.
Уйрӑлатпӑр пулать теприччен –
Каярах, тен, пӗрех пурӑнмалӑх
Сӑмахран пӗр тӗнче тӑвиччен.

* * *

Эп пӗр сӑмах та калаймарӑм...
Калас тени нумайччӗ-ҫке!
Хама, тен, эпӗ тупаймарӑм,
Сана тупас тенӗ чухне?..

Тен, çавăнпа темле асаплăн
Хытса та килчĕ юрату.
Тепĕр чухне епле хаваслăн
Юхса пыратчĕ калаçу...
Ак, халь вара мĕскер-ха пулчĕ,
Мĕн-ма шăнаççĕ сăмахсем?
Тен, Турă хăй пире кăшт пÿлчĕ,
Сăмахлани ахаль тесе?
Чăнах та, тепĕр чух сăмахлăх
Тапса тухать ахальтенех.
Çитменнине нумай чухне вăл
Чăннипеле суя пек çех!
Тен, Турă, чăн та, пире чарчĕ
Юратăр, тет, сăмахсăрах!
Чăн юрату тенин хăвачĕ –
Вăл курăнать вĕт куçранах!
Куçран пăхса мана юратрĕ
Пĕр хĕрупраç тени татах.
Мĕн-ма, тет-ха, вара вăратрĕ
Чăн юрату сăмахсăрах?

* * *

Сăпайлăн, сăпайлăн кăшт сĕртĕнчĕ пуль
Пĕр алă ачашшăн, чĕтревлĕн...
Çурхи ăшă çумăр кăшт ÿкнĕ пекех
Хама çавăн чух эпĕ туйрăм.
Эп туйрăм сана ăшваркăш çил пек.
Çапла пурăнать юрату сан.
Сана туйнă чух шыв юхрĕ аран.
Ытла та пит шăп ку çу каçĕ...
Ачашшăн-ачашшăн никам та туйми
Хускалчĕ чунра сан пĕр пĕлĕт.
Çав пĕлĕт хупларĕ. Çак çут тĕнчере
Сана çеç куратăп, чăн пулĕ,
Чăн пулĕ çапла пĕр сисми пурăнни,
Никам та ан пĕлĕр тесе юратни...
Юрат эс, чăнах та, юрат вăйлăрах,
Анчах та никам та ан пĕлтĕр!
Кăшт çеç сĕртĕнсессĕн çемçе çеç аллу
Тĕнче те вăрантăр вăрçма пек.
Анчах çав вăрçа никам та курмасть,
Никам та курмасть сан чуна та.

Халь мӗн-ха вара, юрату тет-и, ку?
Е, ку, чӑнласа пурӑнни тет?
Пӗрех, кирек мӗн, кирек мӗн каласан та,
Кӑштах ман ҫума эсӗ сӗртӗн.
Ачашшӑн-ачашшӑн вӑрантӑр тӗнче.
Тӗнче вӗт вӑл хӑй те сар хӗр пек!

***

Эп сан пата кӑшт ҫывхарсассӑн...
Тытма тӑрсассӑн аллунтан.
Анчах та пурнӑҫӑм пӑмасть-мӗн
Татах та ҫывӑхрах тӑма.

Кусран пӑхса, алран тытса
Санпа кӑштах утса пӑхасчӗ.
Кӑшт май килсен татах, тата
Ҫӗнӗ тӗнче туса хурасчӗ.

Анчах, каларӑм, тем памасть ҫав
Тӗнче туса хума татах.
Тен, ҫак шеп килнӗ чӑн шуплав
Чарса тӑрать-тӗр... Пултӑрах!

Эп пурпӗрех пырса тӑратӑп
Татах, татах та ҫывӑхрах.
Ун чух вара мӗнле хӑрамӑн –
Тарса каятӑн ҫавӑнтах.

Ҫапла ҫав вӑл. Ҫапла ман пурнӑҫ –
Инҫе юлатӑн эсӗ те!
Ҫапах та кӑшт темскер эп курнӑ
Санпа пӗрле тӑнӑ чухне.

Эп сан пата кӑшт ҫывхарсассӑн...
Халь тин пулмасть пуль тепӗр хут.
Эп ӗмӗтре кӑна шутлатӑп –
Кусран пӑхасчӗ тепӗр чух...

***

Шоколадкӑ тӗслӗ пӗр хӗрарӑм
Хайсӑн ӳчӗпе кӑшт мухтанать.
Эп вара унран кӑштах хӑрарӑм –
Вӑл мана йӑлтах вӗт кӑтартать!

Ак сана, хӗвел куҫса тухаслӑн,
Сан умра пӗр тӗлӗнтермӗш, тет.
Пурнепе тытса пӑхса кураслӑн,
Чӗтреме часах еретӗп вӗт!
Ах, аван та ун яка пит-куҫӗ...
Хӗвел хӑй савса пуль куносерен?
Мӗнлерех-ши пулӗ пуҫӗ-кучӗ –
Ӑна халь хӗвел пӗлет-и, тен?
Пӑх-ха, пӑх, хӗвел, мӑнтарӑн,
Таранаймӑн эс пӑхса каҫчен.
Каҫхине вара эс ху та тем ҫухатӑн
Курӑймасӑр ҫак ӳте ирччен...

* * *

Чун пек ялтӑран тӳпене
Тепре ҫеҫ вӗҫсе хӑпарасчӗ.
Курасчӗ ҫав ял урамне,
Тепре унпала-ҫех утасчӗ.
Ун чух ҫурхи каҫ ҫупӑрларӗ
Пӗр хӗршӗн сикен чӗрене.
Мана ҫӗр ҫинче хӑвармарӗ,
Ҫӗклерӗ ҫӳлтен те ҫӳле...
Ун чух ҫӑлтӑрсем шӑнкӑравлӑн
Кулатчӗҫ ҫав хӗр сассипе...
Мӗн-ма эс ӑна ӑсатмарӑн
Пӗр пӗчӗккӗ килӗ тӗлне...
Ӑсатнӑ пулсан вӑл калатчӗ:
«Пуласчӗ санпа ман пӗрле!»
Ун чух манӑн чун ялтӑравӗ
Пулатчӗ ҫут ҫӑлтӑр пекле.
Халь ӗнтӗ ҫухалчӗ ҫав каҫ та,
Халь тин янрамасть хӗр сасси.
Ҫапах тепӗр чух илтӗнет пек
Чуна ҫӑлтӑрсем каласни...

* * *

Тӗлӗнмелле пӗр пысӑк чӑнлӑх
Пурах пекех ман арӑмра.
Пуҫне пӗксе пипех те тӑнлӑ
Ертсе пырать хуҫалӑха...
Тен, йывӑр та ӑна, пӗлместӗп,
Мана пӗрре те каламан.
Ир тӑрсанах пӗр-ик икерчӗ

Вăл пĕçерет ырă сунса.
Пиллештеретпĕр те пуçлатпăр
Кăштăртатма хуçалăхра.
Йăлтах вĕт хамăрах тăватпăр
Килне-çуртне те алăпа...
Ак, вăхăт çитрĕ, ÿссе ларчĕ
Пĕр пĕчĕк сурт пĕр урамра.
Икĕ енчен те çил хупларĕ,
Памарĕ лăпкăн пурăнма.
Пĕрех, çил вĕртĕр те кашлатăр,
Тустартăр лăпкă тĕнчене.
Пÿрт çумĕнчи лаштра йăмра
Пире анчах çăлса хăвартăр,
Эпир ĕçленине кура...
Пуçа пĕксе ĕçлет ман арăм –
Ун чунĕ çавăнпа таса!
Мĕн чухлĕ курнă пуль асапĕ,
Ăна халь пулăшать чăтма.
Чăтах, аппа, чăтах, хĕртсуртăм,
Куç умĕнчи çак тураш пек.
Мĕн чухлĕ пуль сана хур тунă –
Эс çавăн чухлĕ хитререх!

***

Сана эп тасста та куртăм.
Ăçта перĕнмен пуль аллу!
Татах, ак, тăватпăр пĕр утăм.
Кĕтет, тен, пире уйрăлу.
Часах 40 çул пĕрле çитĕ
Пĕрле пурăнни, мĕн тăван.
Тен, çавăнпа арăм пичĕ
Çиçет уйăх пек ăнсăртран.
Çиçет те, ак, пĕлĕт хупланăн
Ÿкет çакă пурнăç мĕлки.
Мĕн чухлĕ пуль зĕ хăватлăн
Сирсе çав хура пĕлĕте.
Чăнах та, чун вăйĕ сан пысăк.
Ÿстертĕн чăтса ача.
Анчах параймарĕ вăл усă,
Çухалчĕ таçта аякра...
Тен, сан упăшку та усаллăн
Пăхса çеç тăрать сан çине.
Пĕрех тепĕр чух алла-аллăн

Вăл утнă санпа ир çинче.
Нумай пулнă пулĕ хăлтăк.
Пурнан пурнăçра унсăр мар!
Халь тин тепĕр хут зоĕ йăлтăр
Кулса çеç илен уйăх пек.

* * *

Куç илейми пăхатăп.
Таранайми сывлатăп.
Ыгла та туплă,
Ыгла та тарăн...
Пĕрре те пулин санпа тĕл пуласчĕ.
Хĕвел çутине ывçăпа çеç тыпасчĕ.
Вара?
Куçăма хупăттăм.
Сывлайми тăрăттăм.
Ыгла та туплă,
Ыгла та тарăн...
Пĕрре те пулин сана ыталасчĕ.
Ăшă хĕвеле чечек пек туясчĕ.
Вара?
Чунăма шăрататтăм.
Кăкăра кантарăттăм.
Ыгла та туплă,
Ыгла та тарăн...
Çук, санпа пĕрре те тĕл пулаймарăм.
Хĕвел те хула хыçне анчĕ...
Ыгла та туплă,
Ыгла та тарăн...

* * *

Шап-шурах çеçкеллĕ турата
Хуçса илтĕмĕр тем тума.
Хуçса илнĕ чухне, тупата,
Шапăр юлчĕ пулас аллăмра.

Çавă каç çĕнĕ уйăх тухатчĕ,
Çĕнелме те пуçлатчĕ тĕнче.
Пуç çине шурă юр тăкăнатчĕ
Турата çĕнетеснĕн пулса.

Иккĕнтен сывласассăн харăс
Пас ўкет пек турат çине.

Ун ҫине те пăхсассăн, калăн,
Тепĕр хут чĕрĕлет-ха тĕнче!

Чăн та, вăхăт нумай та иртмерĕ.
Хуҫса илнĕ турат чиперех!
Паҫăрхи пек илем кӳреймерĕ,
Чуна илчĕ вара – пĕтĕмпех!

* * *

Питĕ сивĕ, сивĕ, терĕм,
Шур пите пытарнăҫем.
Пурпĕрех йăтса ҫитертĕм
Кăмăла, хытарнăҫем.
Питĕ сивĕ, сивĕ пулчĕ,
Ҫухатма пулатчĕ ҫав!
Кăмăлсем те вара тулчĕҫ,
Калаҫса та пынăҫем.

* * *

Эс таҫтан аякран килнĕ пулĕ?
Пит ҫинче санăн пур пичет.
Темĕнле авалхи вăрттăн пулăм
Ун ҫинче халь ҫиҫсе илет.
Тем калаҫрăмăр, ас тумастăп.
Ас тума та, кирлех те мар.
Куҫа-куҫăн ларса та курмастăп
Хам шыранă пĕртен-пĕр ҫынна.
Куҫ хупса та пулин пăхатăп,
Курăнмастăн-и-ха хам ăшра?
Тăнласан-тăнласан, чăнах та,
Сиксе тухрăн темле авăкран.
Сан сăну-мĕн черчен те ăслă,
Пулăшасшăн тăран пек мана.
Сив шыва ывăҫпа ăснăн
Ĕҫсе ятăм эп сан кăмăлна...
Питĕ тутлă халь ҫав калаҫу та
Пит илемлĕ пичетлĕ сăну.
Ҫӳҫпеле эрешленĕ пуҫу та
Хайне майлă темле курăну.
Тен, май килнĕ пулсан, арҫын пек
Тен, тытса та пăхаттăм кăштах?
Пуҫласа чечек татнă ача пек
Аптраса ҫеҫ тăратăп вăрах.

Çав вăрахлăх вăл халĕ те пур-ха,
Халь те пур-ха çав кăмăл тени.
Эс çавна тараса çине хур та...

***

Эп юлтăм пулать чунсăр,
Эп те турат пек юнсăр...
Мĕн пулса иртрĕ теп,
Каллех тепĕр хут кĕтеп,
Кĕтеп нимĕне пăхмасăр,
Кĕтеп вăхăта тăсмасăр
Эс тепĕр хут тухасса
Вĕл-вĕлтĕр туса ташлама.
Тĕп-тĕпĕр! те тĕпĕр! терĕ
Урайăн хăми ун чух.
Чун тухса ÿкрĕ тейĕн
Эсĕ ташланă чух.
Эп ăна куртăм та илтĕм.
Выртатчĕ вăл, чăн та, пĕччен.
Ăна илсенех эс те килтĕн,
Килтĕн телей пек куçса.
Халь ĕнтĕ эпир икĕ чунлă
Пултăмăр çĕр каçа.

***

Кайăкăм ман, хăçан эс
Тартăн тухса аллăмран?
Кĕтрет свĕр пултăн та лартăн
Манăн ума паян.
Эп ĕнтĕ сана тытмалăх
Вăй тупас çук хамра.
Эс те, курап, хурланнăн
Вĕçсе те пăхан ман тавра.
Пĕр-иккĕ пуль алă тăсрăм
Тытас пек пулса, айван.
Кайран пĕтĕмпех ăнлантăм:
Эс ялана каян!
Кайăкăм ман, хăçан эс
Ларăн килсе ман çума?
Ун чух ĕлĕкхи пек чаплăн
Вĕçетпĕр-ха иккĕн пулса...
Çук, пулмĕ ун пек нихăçан та.
Эс вĕçрĕн, курап, аякка.

Чунпа эп санпа пулсан та,
Туятăп хама çукла...
Кайăкăм ман, хăçан эс...

***

Турă тунă, тет, сана, хĕрарăм,
Адам яплă çын аякĕнчен.
Арçынпа пĕрле пулма хушса хăварнă
Çакă тĕнчерен мĕн кайиччен...
Çавăнпа та эсĕ çав арçынсăр
Утăм та тăваймăн урăх тек.
Унсăр эс тăрса юлатăн сумсăр,
Унсăр чечекленмĕн чечек пек...
Акă вăл, çав Турă пек, асамлăн
Сан çине ачашшăн çеç пăхать.
Эсĕ çавă Ева пек пулатăн,
Савăнса туту сан йăлл! кулать.
Акă, ху та, тен, сисмерĕн пулĕ,
Кĕрсе ўкрĕн унăн ытамне...
Пулса тăтăн кăвакарчăн чунлă,
Илтĕн пулĕ кайăк çунатне...
Халĕ ĕнтĕ ху та Турă майлăн
Унпала пăхса тăран пĕр тан.
Вăл çеç мар-ха! Ху та хурмăлатăн
Арçынна, çав Турă пек, тăмран.
Халĕ ĕнтĕ икĕĕр те пĕр чун пек
Икĕĕр те унатăр... пĕр ача.
Çак тĕнче, апла, арçынсăр çуккă.
Çуккă вăл хĕрарăмсăр пачах!

***

Нумай та кирлĕ мар мана.
Эп пĕчĕк çын анчах.
Юхса кĕрет телей юна,
Пĕлмен ăна пачах.

Çумра кăна тăма эп ыйтрăм.
Эс килĕшрĕн аран-аран.
Пĕр минут мар, сур ĕмĕр тытрăн
Ман чĕрене эсĕ паян.

Тен, çавăнпа эп кайăк чунлă,
Ĕмĕтпеле хăюллă пит.

Чӗре варне эс халӗ юлнӑ.
Халь тин шутлатӑн: «Ну, камит!».

Апла пулсан та эпӗ пысӑк.
Нумай ыйтмастӑп ҫке тата...
Пӗр хурӑнӑн турачӗ хуҫӑк,
Теприн вара, кур, яштака!

* * *

Татах ҫак саманта тӑсасчӗ.
Ӗмӗрлӗхе пулинччӗ вӑл!
Тӗл пулӑва картса хурасчӗ.
Пур пек унра асамлӑ вӑй!

Сана тахҫан эп каласаччӗ:
«Пӗрле пулни телей!» – тесе.
Эс ун чухне темрен кулсаччӗ,
Ик аллуна хӗреслетсе.

Куҫа хупса та пуль тӑратпӑр.
Тӑсасчӗ саманта тата.
Тӗл пулӑва картса хуратпӑр –
Чӗре пӗлет пек ҫак шута?

* * *

Каллех хӗлле. Каллех пин шухӑш.
Пӗр пысӑк туйӑм чӗрере.
Хытса тӑратӑп пек пӗр хушӑ,
Хампа хамах кӗреп чӗрре...

Санпа пулма епле пӑлхавлӑ.
Епле черчен халь хурӑнсем!
«Сив хӗл килет паян тӑманлӑ!» –
Пӑшӑлтатаҫҫӗ тусем.

Ман куҫӑмра вара кӑваклӑх.
Кӳл хӗрринчи хӗвел шевли.
Юр ӳкнӗ те... пин-пин шӑрҫалӑх
Пуҫтарӑнать варли валли.

* * *

Чунра – хама ҫеҫ курӑнмалӑх –
Ҫавра ҫеҫ кӳлӗ. Ешӗл сад.

Ир-ирпеле чупса тухмалăх
Пĕртен-пĕрех çинçе сукмак.

Кӳл хĕрринчех пĕртен-пĕр хурăн,
Ыйăла та шуррăн курăнать.
Кӳл хĕрринчех çӳрет ман туррăм.
Телей теме, тен, юрать?

Эп ун патне ĕмĕтленеттĕм
Кунран-куна тек çывхарма.
Çук, аякран та киленеттĕм –
Аванччĕ шухăш çавăрма!

Паян вара шăпа шăпланчĕ.
Хирмест вăл тек ман пурнăçа.
Кӳл хĕррине çитсен лăпланчĕ
Чĕре ман – хурăнпа хуçа!

Хуçа пăртак ыталамалăх,
Куç хӳрипе кăштах пăхмалăх...
Нумай пулман сан çумăнта!
Çук çылăх манăн тек унта.

Ман чунăмра ку – курăнмалăх –
Çавра çеç кӳлĕ. Ешĕл сад.
Кунран-кунах чĕре сурмалăх
Хурăн хушать турат!

* * *

Ман умра эс Турă пек тăраттăн...
Тем те куртăн пулĕ ку таран?
Пур чухне пурне те пулăшаттăн,
Çук чухне чунна, ак, хытаран.

Хăвна ху эс çĕнтерме çуралтăн.
Кăшт пулсан та йăл кулсам паян!
Унсăрăн тапмасть чĕре кăлт-калттăн,
Тем çитмест пек унсăрăн паян.

Тĕнчене эс сутатма пултартăн.
Сан хĕвре, тен, тепĕр хĕвел пур?
Курăнман шкех куçран сухалтăн –
Тăкăнать çӳлтен халь шурă юр...

* * *

Сăхăппуç пикисем, çĕр çинчи çăлтăрсем,
Хăва пек аванса тӳр ӳсеççĕ вĕсем.
Чĕр кулли çемçетет чул пек хытнă чуна,
Çĕр тăпах чарăнать пĕрле утăм туна.

Çĕн урам тăршшĕпе кивĕ юрă килет,
Инçетрен сывхарса ман чуна иленет.
Ах, пĕрле сирĕнпе çухаласчĕ çĕрле...
Мĕн чарать туртăма? Вĕрсе эс кĕрле!

Ял ĕçчен хĕрĕсем, юмахри вутăшсем,
Ман чун витĕр тухса иртсе кайрĕç вĕсем.
Чĕр кулли янăрать халь тин сапнăн ăшра...
Вăхăт тăп чарăнать, хăварса йĕр асра.

* * *

Кам та пулин вуланă-ши сана?
Вуланă чух чуну, тен, илĕртӳллĕ?
Тухса тăрать, куç пăвнă пек, ума
Тем такама хыт кӳлешӳ е кĕлĕ.

Ак, темшĕн кашни кун эс ăшăмра хускалнăн,
Тем кайăк айăпла пăхать пек хурланса...
Пур-мĕн чăвашра та телейлĕ Джоконда!
Анчах та кулать вăл, куççуль юхтарса...

Чăлах чунăмра пĕр хĕлĕх чĕтревлĕ.
Хур курнă савнин, тен, çĕнĕ кĕвви?
Тинех чĕрере çĕкленет пек вĕçевлĕ,
Пухса сыхăнать, тен, пурнăç тĕвви

Хăш чух тĕл пулсан, эс темĕн каласшăн.
Тен, пĕчĕк телей тапать куçунтан?
Чĕнсе пек сана пĕр утăм тусассăн,
Уçман кĕнеке куран умăнта!

* * *

Пĕрле чухне пĕчченн çӳрерĕм:
«Сăнран илемсĕр эс!» – тесе.
Телей, тен, кӳршĕре пуль, терĕм,

Кусса кайма хатӗрленсе.

Пӑхма ҫур утӑм – эсӗ юлтӑн –
Пит аякра алӑ пама.
Эп киличчен кӗтме эс пултӑн –
Пӗлмест ӑс-тӑн ҫавна манма!

Юта кайсан, тинех ӑнлантӑм
Епле эс сывӑх тӑнине.
Чӗре пекех эпӗ юнлантӑм,
Кӗрсе пырсан хӗл сиввине...

Таҫта кайсан та эп тӑварӑп
Хам лашана сан кил умне.
Чун тӗпӗнчен туртса кӑларӑп
Чӗрен чи тӗрӗс юррине.

* * *

Пӗрмай сӑнанӑ-ши сана?
Пӗрле чухне курмасӑр иртнӗ...
Ҫавах та ырӑ кӑмӑлна
Аса илсен, телейӗм ҫитрӗ.

Иртеҫҫӗ паянхи кунсем
Пӗр улшӑнмасӑр юмахри пек.
Нихҫан та ҫӗтес ҫук вӗсем
Ман чӗрере. Вӑл халь кӑвар пек.

Ахаль чухне, килте, ӗҫре...
Эп пурӑнатӑп сын ҫинче.
Йӑлт ывӑнса ҫитнӗ ҫӗре
Сан сӑнару куҫ умӗнче!

Сӑмси те пӗчӗк мар курма.
Ачаш та куҫӗ пысӑк мар, тен?
Анчах та кӑмӑлӗ вара...
Тин ҫеҫ ҫуралнӑ пирӗштин пек!

Сан сӑнару ман умӑмра,
Нихҫан манассӑм ҫук ӑна.

* * *

Юлашки эс манӑн, юлашки...

Пурăнăç пусмин пĕр картлашки.
Сантала анчах кăшт калаçатăп,
Пĕр сана анчах чунпа куратăп.

Юлашки эс манăн, юлашки...
Ĕмĕр иксĕлми шыв валашки.
Сантала анчах юрра пуçлатăп,
Пĕр сана анчах çумма лартатăп.

Юлашки эс манăн, юлашки...
Халь тин тулнă юрату курки!

* * *

Санпа юнашар пулнă чух
Чи тĕттĕм каçсем те кăшт çутă.
Эй, юх эсĕ, çил евĕр юх!
Кĕрхи кун пекех эпĕ тутă!

Шăпа кукăртать кун-çула?
Вăл пултăр чуна канăçмалăх.
Тӳлек çывăрать мăн хула...
Пур вăй пирĕнте вăратмалăх!

Санпа юнашар тăнă чух
Чи тĕттĕм каçсем те кăшт çутă.
Телей, ман тĕле йăтăнса эсĕ тух!
Тĕнче, мĕн-ма эсĕ ютă?

* * *

Ача чухне чечек пуххи тăваттăм,
Лартаттăм чӳрече умне.
Шăпăнпур çеçке... Пĕлсех тăраттăм,
Талса ӳкетчĕ урайне...

Çак тĕнчере нумай шыранă
Нихçан сӳнми чечек!
Кам чĕрине перес хăварнă –
Ăна тупаймĕ тек!

Ухмах пулни халь те пит лайăх.
«Чечек» – тесе йĕреп.
Ман ывăçра... Ăша хывмалăх
Çунать пĕр пиг нар пек.

Куҫа хупсан та, тек куратăп...
Пĕлместĕп, тен, инкек?
Тинех татса чуна лартатăп –
Нихҫан сӳнми чечек!

***

Тулли ҫут уйăх хăвара тчĕ
Шур юр ҫине икĕ мĕлке...
Савни тени манпа пыратчĕ...
Кĕрсе юлать ҫав – тĕлĕке!

Асра юлать ҫап-ҫутă уйăх,
Асра юлать пăрлă сукмак.
Ун чух пулманччĕ пĕртте хурлăх...
Халь ма вара чунра пуклак?

Тытсам хулран! Ӳкме ан пар!
Ури шăват-ҫке ӳкмелле.
Ялан ҫаппа пĕрле утар!
Телей патне-ҫке ҫитмелле...

Ури тесен, шуҫсан вăл шутăр...
Чунра ан пултăрччĕ шуҫлак!
Ҫĕре ӳксен те пиртен юлтăр
Пĕрле утма ҫап-ҫут сукмак.

***

Ас тăватни, епле пĕринче
Йĕкел ҫурĕ юман айĕнче?
Пат! ҫеҫ пат! ҫапăнать ҫĕр ҫумне.
Пат! та пат! тăкăнать сан ҫине.

Тĕнчере юманосем, юманосем...
Таврара вырăнта йĕкелосем...
Мĕншĕн эсĕ тăкан вăрлăхна,
Кĕркунне, ан тивсем эс мана!

Иртсе кайрĕ йĕкел тăкăнни.
Иртсе кайрĕ тахҫан кулянни.
Асăмра пĕр сас ҫеҫ упранать –
Пат! та пат! йĕкел тăкăнать.

***

Тӳпере тӳлек каҫ. Хура пӗлӗт хӗрри
Ялкӑшать ҫуламра. Пур хӗвелӗн ури.
Пур таҫта чӗнекен ҫутӑ кӑмӑл.
Иленкайӑкӑм ман, ҫунату епле ҫӑмӑл.
Килсе лар чун ҫине, ҫавӑр ӑшӑ йӑва...
Ним те ҫук. Куҫ илмелӗх хӑна
Аякра... Пушӑ хир. ҫил кӑна.
Хирӗҫ мар тӑвӑла ҫырмари шур хӑва!
Иленкайӑкӑм ман, кам шуйхатрӗ сана?
Килсе лар чун ҫине, ҫавӑр ӑшӑ йӑва...
Тӳлек каҫ тӳпере. Ҫӗрпе пӗлӗт хӗрри
Ялкӑшать ҫуламра. Ҫук хӗвелӗн ури.

***

Шурӑ уйӑх пек, утать пӗр сассӑр.
Ик витре – тулли ҫӑлтӑр ҫути.
Иртсе кайрӗ ҫаврӑнса пӑхмасӑр –
Шӑтса ӳсрӗ йӳҫӗ армути.

Хӑмӑр куҫлӑ ӑш ҫунтармӑш вутӑш,
Темӗн кӑтӑклать ман чӗреме!
Пурлӑ-ҫуклӑ туйӑмпа пӗр хутӑш
Ӑшӑмра пуҫлать тем вӗреме?

Тӗл пулсан мӗн-ма иртен чӗнмесӗр
Хӑш енче йӑву – тирпейлӗ ҫурт
Кантӑк умӗнчен кайма пӗлмесӗр
Ал ӗҫпе ларать килте хӗрпсурт.

Мӗн тума мана кӗтмен куҫҫулӗ?
Ас илмесӗр чӑтӑп пӗрех хут!
Халь анчах эс – чӗрери вут чулӗ...
Каярах – чунри пытанчӑк ҫут!

***

Кӑвак пӗлӗт тӗсӗ пур шур юр ҫинче.
Ҫуркунне сасси – эс каласнинче.
Пӗрре ҫеҫ эс пӑхрӑн ман ҫине паян.
Кӑвак хуппи уҫӑлчӗ. Пултӑр ҫав ялан!

Телей çулĕ пур унта... Илейми илем.
Тарăнрах, пăхсассăн, пур тата та тем:
Юрату чĕртмелĕх чĕрери сăмах...
Мĕншĕн калаймарăм çавăнтах!

Уçăлчĕ те хупăнчĕ. Чĕрере кăвар!
Кăвак кĕртсем урлă юр ишсе каяр...
Аякри тĕнчен пек пур йыхравлă чун.
Ĕмĕре вăл юлтăр, кăвак куçлă кун!

***

Хула çийĕн паян Юркайăк вĕçет,
Тĕкне ўкерет.
Ăна тем амантнă, куç кĕрет,
Темле шăхăрса вăл йĕрет.

Тем айăп чунра йăтăнать пек вара.
Такам хăпса тухнă каçхи сунара.
Сив çеç сăмахпа пĕрре çех перет –
Юркайăка пĕтерет.

Вăраххăн ўкет тĕк ман алă çине.
Пăхса тăранаймăн сив хĕл тĕррине...
Мĕн чухлĕ выртать вăл ура айĕнче!
Мĕн чухлĕ пĕтет пуль чĕре çумĕнче?

Пĕрле эпир тухрăмăр кайăк тытма.
Пире илĕртет вăл таçта та кайма.
Çĕн çул çывхарса аякран ак килет,
Телей сукки çеç пĕтерет.

Хула çийĕн паян Юркайăк вĕçет,
Тĕкне ўкерет.

***

Хурăн, теççĕ сана, шап-шуртан.
Хуран çеç курăнан эс паян.
Шурă юр çĕр çине тек ўкмест,
Çавăнпа чун курма, тен, пĕлмест?

Çил ачи пек пулса шухăрах
Сан тавра пĕрре çех çаврăнам.
Сивĕ хĕл шурă юр тăктăрах...

Пурпӗрех эс хура курӑнан!

Хуран ҫеҫ курӑнан... Ку мӗн-ма?
Хура каҫ, тен, ҫӳлтен вӗҫсе анчӗ
Кӳл хӗрне эп тухап уҫӑлма...
Шурӑ хурӑн чӑнах та хуралчӗ!

Шурӑ юр. Сивӗ ҫил. Пӑрлӑ кӳлӗ.
Ушкӑнра эс тӑратӑн пӗччен.
Кирек камӑн та вӑл асра юлӗ...
Шурӑ кун тухатать тӗттӗмччен.

***

Ватӑлмасть-ха авалхи вӑрман.
Хура ҫул каллех кӑшт ҫеремленнӗ.
Кам кӑна унта кӗрсе курман?
Пӗр кӗрсен, туха пӗлми ҫӳренӗ...

Икӗ ҫул пӗрлешнӗ пӗр тӗлте.
Уйрӑлу, сана пӗрле тӑратӑп!
Ҫулҫӑсем вӗҫеҫҫӗ пек ҫӳлте –
Хурама та тайӑлнӑ – куратӑп.

Ҫамрӑк чӗрене кӗрхи пушар
Ачашларӗ ун чухне хаяр.
Эс каларӑн: «Ан ҫӳре хыҫран.
Ҫаврӑнса утсан, мана куран!»

Иртсе кайрӗ ҫав телей кӳмесӗр.
Кун килет ҫавна, тен, ҫаварма?
Юрату ҫинчен аса илмесӗр
Вырнаҫмасть чӗре ҫӗр ҫывӑрма.

***

Сана ӑнсӑртран тӗл пулманшӑн,
Тахҫан кулянаттӑмччӗ пит.
Паян, ҫыншӑн мар, тулькӑ саншӑн
Ҫиҫсе пӑлханать ӑшӑ пит.

Анчах эп хӑйса чӗнеймерӗм
Ҫанҫугӑ салам чӗлхипе.
Таҫта тӑрса юлтӑн, пӗлмерӗм?..

Куçу çеç вылять хўрипе.

Халь тин тĕл пулма та хĕнрех пуль?
Ўкет шурă юр çĕр çине.
Чун çеç калама тем пĕлет пуль?
Усрать ăш салам сăмахне...

***

Шурă тĕтреллĕ çырма
Халĕ те пулĕ асра.
Урлă шур чуллă каçма –
Ик айккипе шур хăва...

Иккĕнтен ик çилхăван
Çав хуплăхра çул хывса:
Шăпчăк юрлатчĕ ун чух,
Уйăх пăхса пит шух...

Шухă пулса эпĕр те.
Юхнă çырма шывĕ пек.
Шывĕ эс каçнă тĕлте
Сасă парать халĕ те.

Ăшă çапатчĕ санран
Сивĕ çырма тĕпĕнче.
Пў сан пулса хăваран,
Çўç-шур хăва çулçинчен.

Аврăм ăна çĕр çумнех,
Ўстĕр тесе хăвăртрах.
Шурă хăва çулçине,
Тен, чуп туса та кăштах?..

Ухрăмăр эпĕр сăрта,
Куртăмăр çав хуплăха.
Уйăх тăратчĕ унта –
Уйăх вăл, тет, хурлăха!

Кайрăмăр эпĕр вĕçсе
Çавă сăртран кайăк пек.
Авăк хăва та тĕтре
Юлчĕç асра тĕлĕк пек.

***

Çавра çут уйăх тўпереччĕ.
Тăкатчĕ сĕт пек çутине.
Икĕ мĕлке çĕтсе çўретчĕç
Çав сĕтлĕ çутă айĕнче.
Шап-шурă хурăн шап-шурахчĕ...
Мĕлки вара ытла хура!
Эс ун айне кĕрсе тăрсаччĕ –
Тăраттăм эп те сан умра.
Сана эп шăппăн чуп тăваттăм.
Сиксе чĕтретчĕ ман тута.
Эп хам та вĕт санран хăраттăм –
Ална çех хытăрах тытса!
Ах, уйăх та пиртен кулатчĕ
Курса тăрса çавна çўлтен.
Пĕрех çитерчĕ «шур кулачă»–
Пире вăл выçă çўретмен!
Пĕрле тăма вăл хўтлĕх панă
Шап-шурă хурăн айĕнче.
Савни питне çутса кăтартнă
Хĕр кăшт вăтаннăрах чухне.
Ах, вăхăт иртрĕ, иртрĕ вăхăт.
Таçта çухалчĕ ик мĕлке.
Çут уйăх та касма пĕр вăхăт
Тухса пăхать ăçта тесе.
Шур хурăн та таçта çухалнă...
Тен, каснă пулĕ тĕпренех?
Ай, уйăх та кăштах вĕт калнă! –
Шутлать пуль хăйĕн тăхрине?
Пĕрех çав уйăх тўперех-ха,
Пĕрех тăкать сĕт çутине.
Çав хурăн айĕнчех тепре-çех
Курасшăн икĕ мĕлкене!

***

Юр тăкать, хўтерет, çупăрлать,
Сăрт çинчи сукмака çухатать...
Унта аннăччĕ эп савниие ăсатма,
Çавăнтах халь кĕтетĕп ăна.
Анчах çук ман савни, курăнмасть.
Вăрçса кайнă эпир тахçанах...

Çавăнпа та сăрта хăпармасть,
Çавăнпа та сукмак палăрмасть.
Куççуле чарма çук, тупата!
Вăл вĕри те шăнтмасть ман пите.
Пурпĕрех эп ăна, намăс пек те –
Шăлса илтĕм пĕр ывăç юрпа.
Шăнтса ячĕ мана сивĕ юр...
Юрату вĕт юрпа çăвăнать!
Кун пек хурлăх, савни, эс ан кур –
Шур сукмак пĕрре çех таптанать...
Иртсе кайри сăртри юрату.
Халь тин ĕнтĕ сукмакĕ те çук.
Пурпĕрех çав сукмак асăмра хывăнать,
Çав сăрта тепĕр хут таварать.

***

Çимĕк каçĕ – асамлă каç.
Уйăрать тĕнчене ик пая.
Пĕр енче шăпчăк пачĕ сас,
Тепĕр енĕ – чун сӳ-ӳ! каять.
Тĕттĕмре, çырма леш енче
Хуп-хуран курăнать вăрман.
Шăпчăк пачĕ пĕр сас тĕлĕнсе...
Çав тĕлте пĕр турат авăнать...
Хĕрпе каччă ларасçĕ унта.
Тем тăвасçĕ, никам та пĕлмест.
Пĕр енче шăпчăк ларнă турат.
Тепĕр енĕ – пĕр сас илтĕнмест.
Акă хусрĕç вĕсем турата,
Юрлакан шăпчăка хăратса.
Туратпа тет пĕрне пĕр çапсан
Юрату ĕмĕрне пымалла!
Шăпчăк ларнă турат асамне
Астивессĕн çак икĕ чун,
Кĕрсе кайрĕç тĕнчен леш енне –
Леш енче нимле сас та çук!
Çимĕк каçĕ – асамлă каç
Уйăрать тĕнчене ик пая.
Пĕр енче шăпчăк пачĕ сас.
Тепĕр енĕ – пĕр сассăр паян!

***

Шăпчăк ларнă турат сулланма чарăнман-ха.

Хуҫса ил эс ӑна.
Сана хирӗҫ тухас ӗмӗте пӑрахман-ха.
Тен, кӗтме те вӗрентӗм пулас тин кӑна.
Чуна юлнӑ юрра кӑларап палӑртмасӑр.
Пырса лар шӑпчӑк пек. Эпӗ тӑлӑх турат.
Юрӑпа ярӑнать, ярӑнать чарӑнмасӑр...
Сив ҫилпе, тен, ҫапла ярӑнать пуш турат?
Шӑпчӑк ларнӑ турат сулланма чарӑнман-ха.
Хуҫса ил эс ӑна.
Санпала тӗл пулас ӗмӗте пӑрахман-ха.
Тӗл пулсан, тен, кӗретӗп тӑна

***

Сан ӑшра темле турӑ ларать...
Тен шуйттан турӑ сӑнлӑ курнать?
Йалт! кулать те чуна ҫавӑрать,
Чӑрр! пӑхать те ӑса пӑтратать...
Эпӗ ӗнтӗ тем чул пӑхса лартӑм,
Турӑ пулӗ тесе шухӑшларӑм.
Анчах зӗӗ мана пулӑшмарӑн:
«Юрататӑп!» – тесе каламарӑн.
Халь вара кулянса та айванӑн
Пӗрмаях шухӑшлатӑп пӗр майлӑн:
«Эп чӑнах та сана юрататӑп»
Тем шуйттан вылясан та сӑнра
Пурпӗрех санра турӑ куратӑп.

***

Чӗре темле хӑратнӑ пӗчӗк кайӑк евӗр
Пӗр тепӗр чух тапма та чарӑнать пуль терӗм.
Таппи ун илтӗнмест. Тапсан та питӗ сассӑр,
Вӑл пуррине туйса тӑратӑп пӗр хавассӑр...
Анчах тем пек пӗтсе ҫитсен те, тем тусан та,
Пуҫа ҫапса ватсан та, суккӑрлансан та
Ман чӗрене нимпе те эс чараймӑн, –
Вӑл таппинчен эп хам та халь хӑрарӑм,
Ӑна чарса пӗтерейӗмӗрӗм...
Кашни таппи пӗр юрату пуль, терӗм!

* * *

Ылтӑн кайӑкӑм, эс ӑҫта пурӑнатӑн,
Камӑн ырӑ куҫне вӑрттӑн курӑнатӑн?

Эс юрлаттӑн-ха, халь те илтетӗп, –
Юрруна эпӗ хам та пӗлететӗп!

Тӗнчесем хӗрринче вырӑн пурччӗ, –
Чултан тунӑ пӗр пӗчӗк ҫуртчӗ.
Сан пекех пӗччен пӗр кайӑк...
Пӗтнӗ терӗҫ... Ан тӑвӑр айӑп.

Ун сасси тахҫан питӗ хавасчӗ.
Итлеме калама ҫук аванччӗ.
Ак, каллех илтӗнет вӑл уҫҫӑн,
Тӗл пулассӑн пекех куҫа-куҫӑн.

Вӑрттӑн кайӑкӑм, мӗн эс юрлатӑн?
Ҫын курман ҫӗрте ма пурӑнатӑн?
Эс пытаннӑ вӑрман питӗ чӑтлӑх.
Тупаймарӑм унта нимле хӑтлӑх.

Эп ӑна пӗтӗмпех хуҫса ватӑттӑм!
Ҫук, сана итлесех ӗнтӗ ватӑлтӑм...

***

Ҫак сӑрт ҫине касхине
Эсӗ пулсаччӗ тухма.
Ҫурҫӗр иртсен, ир енне
Ҫӑлтӑр пуҫларӗ ҫума...

Ҫак вут тумлам айӗнче
Ман халь епле-ха ҫӳрес?
Хӑрӑк турат хушшинче
Уйӑх хурать сут хӗрес...

Ҫӑлтӑр ӳкет те, сукмак
Ҫӑлтӑрлӑ ҫул пек курнать.
Чун кӗтнӗ ырӑ самант
Ҫитнӗн пекех туйӑнать!

***

Кӑвакарчӑн пулӗ ҫапрӗ ик сунат?
Кӑвӑлтатрӗ Атӑл... Канлӗн-канлӗн...
Ҫил ачи каллех сунат хушать,
Халӗ ху та Атӑл ҫинӗн вӗҫӗн кайӑн...

Чи çӳлте пĕр уйăх çеç çуретчĕ.
Унтала пĕрле халь эсĕ пур.
Çĕрĕпе вăл сурере çӳрерĕ...
Атăл пичĕ çавăнпа шап-шур!

Эс те, ас тăватăп, уйăх пек пăхаттăн.
Эп шуплаттăм юрату тăхри...
Чи çӳлте эс ярăнса тăраттăн.
Аяптачĕ çӳллĕ хыр тăрри...

Уйăх пек пит сăнаса пăхсассăн,
Ним те мар пек çак хумсен чуппи.
Ах, анчах кунтан талса кайсассăн,
Мĕн тăвать-ши çӳллĕ хыр хуппи?

Вăл каллех сар сухăрпа тулать пуль?
Вăл каллех юхать пуль майĕпен.
Шав тумлать, тумлать те – хаклă чул
Ĕмĕрсем иртсен пулать пуль, тен?

Кăвакарчăн пулĕ çапрĕ ик çунат?
Чи çӳлте пĕр уйăх çеç çунать...
Чи çӳлте эс çакăнса тăратăн!
Ман çине турамăш пек пăхатăн...

***

Хĕр тути пылтан та тутлă, –
Тутуна ман чуптăвасчĕ ытлă.
Панулми пек çавраka та шурă
Кăкруна та ачашласчĕ хытăн.
Тăррипчен хурт евĕр пыл пухасчĕ,
Е тепре хыт кăшкăрса ярасчăн
Сантала чăн юрату тăвасчĕ...
Ах, анчах сан кăмăлу тиркет,
Вут уççи пек пулнă та... сӳнет, –
Юрату тума... вара... çитет!

***

Çак тута хĕррипчи пĕр кулă
Ир тăрсан та, касна та пулчĕ...
Пур унта каламан пĕр шухăш, –

Ăнланса илме, турă, пулăш!
Мĕн каласшăн эс пултăн, пĕлместĕп.
Пĕр ыйтатăп та евитлетĕп:
Çак тута хĕрринчи пĕр авăк
Калама та çук пысăк савăк!
Хĕр тути манран хытă кулчĕ, –
Ас илни кăлăхах пулчĕ!
Эп ăна тек аваймăп, пĕлетĕп...
Пурпĕрех çуралать пысăк кăмăл,
Пурăнма та халь пулчĕ çăмăл...

***

Ĕнтĕ халĕ ĕнерхи пек пулмĕ...
Ыранхи – ăна пĕлместпĕр те!
Мĕн тума мана пит кирлĕ пулчĕ
Эс кăтартнă хитре çеç тетте?
Эп унпа вылярăм ача евĕр.
Тыткаларăм, ватрăм та пуль кăшт.
Выляса та тăрансан, ак, тепĕр
Самантран манса та кайрăм вĕт.
Манса кайрăм та çÿретĕп ăссăр...
Тем çухатнă пек туятăп-ха,
Мĕн çухатнине те ним пĕлмесĕр
Кунĕпех çавнах шыратăп-ха.
Ах, тетте, теттеçĕм, эсĕ пурччĕ,
Пурччĕ пур чухне пурнăç екки.
Сансăр ĕнтĕ халь питрен те шуртăм,
Тăрса юлтăм, калăн, çын мĕлки.
Ах, теттеçĕм, эсĕ çук пулсассăн,
Мĕн тума мана çакă тĕнче.
Тетте пек, сана тепре тупсассăн,
Çакса çÿрĕп-ха кăкăр çинче!

***

Эс тăр пĕчченех пурăнан шур пÿртре
Шап-шурă та сивĕ хĕлле
Шап-шур кăмака ман пуласчĕ.
Ирпе ир-ирех вут хутса тултарсан,
Сана майĕпен ăшăтасчĕ.
Çĕркаç нăрпа витнĕ кăвак чÿрече
Йăлт ирĕлсе çуталĕ,
Çап-çутă та ăшă, шурă пÿртре
Ирхи сар хĕвел хуçаланĕ...

Тринк-транк!
Сиксе тухě шап-шурă путек, -
Эс те ăна пăхса ларăн!..
Кěлт çеç палăрать тутара йăл куллу...
Тен, ху та пěрле сикетěн?
Тахçан, ас тăватни, пит пěчěккě чух
Çуна ярăнса килсессěн,
Пÿрне вěçсене ăшăтаттăн.
Суранлă пекех ырататчěç вěсем...
Выртаттăн пěр сассăр.
Куççуль кăларма та хăраттăн!
Ăçта макăрма? Эс ярăннăшăн савăнаттăн!
Кусра мěлтлететчěç çуна йěрриисем,
Таçта янăратчěç ача сассисем...
Паян та çаппа пек, паян та хěлле.
Эп çав шур пÿртрех пек ларатăп,
Сан кăмаку пулатăп!

* * *

Аякра-аякра салтакра çÿрекен
Çыру илтěм паян савниртен.
«Эпě куртăм сана касхине тěлěкре –
Иккěн тăтăмăр пек венчетре!..
Пěрле пулăпăр, тен, – вуланать майěпен, –
Кěт мана эп киле киличчен..»
«Ах, Турах, мěн шутлать вăл таçта,
Эпě вěт хěр пěрчийě кăна.
Ахальтен калама, эп пěлеп, вăл ăста.
Салтакра, ют çěрте, ак, манать те мана..»
Мěн çырни, пурнěрех, суя мар, туйăнать.
Ман валли те телей тупăнать.
Эп тăрап пек унпа чăнахах чиркÿре, –
Ман çире шурă тум пит хитре!
«Эп сана юратап!» – илтěнет чěрере,
Эп çÿретěп санпа тěлěкре...
Çыру тытнă шур ал та чěтрет,
Çырури саспалли те сикет...
«Салтакран килсенех эп пуçлап майěпен
Иккěне пурăнмалăх шур сурт çěклеме...
Пулě пирěн çемье вицě ывăл та хěр, –
Килтěр çеç тепěр хут хура кěр!..»
Эп вуларăм çыру çывăрса кайиччен,
Çырура çырнине тěлěкре куриччен..

***

Эс таса пулнине эп пӗлетӗп.
Эс таса, эсӗ питӗ таса.
Эп сана ҫӳлерех те ҫӗклетӗп –
Эсӗ тивӗҫлӗ иконостаса...
Вӑрттӑн ҫеҫ эс пӑхса ларатӑн...
Сӗт шӑршиллӗ вӗри сывлӑшу
Ман чуна ӑшӑтать пек пулсассӑн,
Пурӑнма та пулать вара...
Эс таса, эсӗ питӗ таса.
Кирек кам, кирек мӗн каласан та
Эсӗ тивӗҫлӗ иконостаса...
Ҫавӑнтах, тамӑкрах ҫӳресен те
Пурпӗрех эп ҫӗклетӗп сана.
Сан-питӳ ахаль чух пит хаваслӑ.
Хальхинче вара, тем, салху...
Эп пӗр-иккӗ пӑхса илсессӗн,
Майӗпен-ха тухать йӑлл куллу.
Эс ӑна ман чунран пытараймӑн,
Сан ӑшрах вӑл пӗрмай пурӑнать,
Ӑнсӑртран сиксе тухнӑ телей пек
Сан тута хӗррипчех ялкӑшать.
Ӗлӗкхи пек. Вӑт, халь хаваслӑ...
Кулса ил те пӗрре хӑвӑртрах,
Кулса ил те пӗр пӗчӗк хӗр евӗр
Чӗлхӳне эс тӑсса кӑтарт.

***

Ҫӗр ҫинче эс кӑна.
Урӑх ҫук. Кирлӗ мар, пулсан та.
Турӑ тунӑ пекех ҫанталӑк
Чуп тӑвать халь мана та.
Ӑша илнӗ, эс тӳснӗ кунҫул
Ман тӗлех килсе тухрӗ.
Иккӗн курчӗҫ те икӗ куҫҫуль
Пичӗсем тӑрӑх юхрӗҫ.
Пурнӑҫра вӑл ҫапла.
Нимсӗрех хӑш чухне ҫӗкленет ҫутӑ туйӑм.
Тӗнчере Турӑ пур.
Ҫавӑнпа эп сана ҫакӑнта тӗл пултӑм...
Ҫӗр ҫинче эс кӑна.
Урӑх ҫук.

Кирлĕ мар, пулсан та.

***

Шăтăкла çыхнă чух та шутлатăн:
«Пурнăç мар ку, темле япала!»
Шăтăкла витĕр мĕн-ха куратăн,
Курнине пытармасăр кала!
Çак тĕнче калама çук илемлĕ.
Пĕр курсан, манас çук нихăçан.
Ăна, тен, сан чуна илĕртмелĕх
Турă хăй туса янă тахçан?
Эп санпа пĕрле питĕ пылаккăн
Ярăнатăп тĕнче сăпкинче.
Эс вара пытарса тем калатăн, –
Тем вăратрăн чĕре варринче...
Эп вара тарăхса çеç шутлатăп:
«Пурнăç мар ку, темле япала!»
Эс манпа, ăнланап, улталантăн:
Эс çыхан урăхла шăтăкла!

***

Урайĕнчи пĕр çутă лампа
Мĕн çутатасшăн-ха татах,
Тухать вĕт-ха мĕлке анчах...
Мĕлки вăл ахаль мар мĕлке –
Унта пур пурнăç ĕмĕлкки;
Пĕр вăхăт аванса тăрать,
Сĕрен кăпер пек курăнать.
Ăна халь ĕнтĕ калама,
Мĕн ку тесе шухăшлама
Никамăн та ăс çитес çук.
Мĕншĕн тесен турри çапла
Çутă ярса мĕлкепеле
Тĕнче пуçламăшне туса...
Епле çав çутă халь те пур?
Унтах тупаппăр юрапу!
Çав çутăях та çĕрĕпе
Сапса тăрать урайĕнчен.
Стена çинче темскер мĕлки
Нимс пĕлмесĕн авăнать,
Ача пек тытмалла выльять.
Çутăпала мĕлке пĕтсен,

Асамлă пурнăç çухалать...
Ах, çунтăр лампа çĕрĕпех!
Мĕлке ташлатăр тĕнчипех!
Çуралтăр кун, çуралтăр услăх!
Юратура пĕр лампа çутăр!
Çав лампа хăй ĕçне пĕлет,
Ун турă пек пулас килет!

***

Эс шăнкăравларăн – шăпа тем каларĕ пекех.
Эп шухăшларăм – тĕл пулма май çуккă текех.
Иртрĕç кунсем, иртсе кайрĕç çĕрсем, –
Ун чухне телейрехчĕ пуль çав чĕресем?
Эс шăнкăравларăн – çавăнпа тăчĕ пулĕ хитре.
Эп шухăшларăм – çакă тĕнче хĕр пекех чиперкке.
Хĕвел, сив тăрсан та, пăхать ăшшăнрах.
Пурнăç, пĕтнĕ пек курăнсан та, чĕре
Эс шăнкăравланăн тапать хăвăртрах.
Каллех тепĕр хут кăтартать тĕпĕнче
Шăнкрав саслă пулнă урăх тĕнче...
Эс шăнкăравларăн – пулчĕ асамлă тем пекех.
Эп шухăшларăм – халь ĕнтĕ пĕтместĕп текех.

***

Тасти аякри пĕр хĕре аса илтĕм...
Тасра аякра та...
Пĕрех питĕ тимлĕн
Пăхса та тăрать ман айван пурнăçа, –
Тен çавăнпа та тухмасть манăçа?
Çав сарă хĕре тахçанах эп курманччĕ,
Унпа пĕрле чух чуна та аванччĕ...
Ун пĕчĕк пÿрни, ас тăвап, ачашлатчĕ
Алпа ал пĕр-пĕрне ăнлантарнă чухне...
Аякра-аякра, тăр пĕччен, ют çĕрте
Пурăнать пулĕ халь, шухăшлать ман çинчен...
Эп çавна кăшт пулсан та туяпăп,
Ун патне пĕрмаях туртăнатăп.
Тен, ăна эп нихçан та кураймăп,
Çак сĕтел хушшинчен те тăраймăп!..
Пурпĕрех çак перо-калеме çыркалатăп,
Шур хута хуратса чунăма пусаратăп...
Ак, пÿрне вĕçне çитнĕ чун та, чăнах,
Çак перо вĕçĕнчен тăканать пек йăлтах!

***

«Эп каятăп, сывă пул. Туслă пулăпăр...»
Юлашки хут икоĕмĕр утă султăмăр...
Выртрĕç юлчĕç ретĕн çĕнĕ паккусем,
Питĕ туллă шăршлă утă куписем...
Эй, сырли те пурччĕ!
Пиçнĕ-пиçменех
Ăна çулса хунă çав паккус çинех.
Çав тĕлтех шапшурă-шурă çеçкере
Нумайччен вăл ларнă пиçесе кĕтсе...
Симĕс-симĕс курăк ÿснĕ ĕшнере,
Шурă-шурă лĕпĕш çÿресе вĕçсе...
Халĕ пурте пĕтнĕ курăкпа пĕрле!
Симĕс-симĕс тĕслĕ çĕр сырли выртать,
Çавара хыпмашкăн та юрать?
Ĕнтĕ иртрĕ вăхăт, ĕнтĕ иртрĕ çу,
Ĕнтĕ эпĕ хам та курăнмастăп шух...
«Эп каятăп, – терĕн. – Сывă юл!». Юлах!
Ĕшнере çеç пурччĕ пирĕн çав улах!

***

Пĕр хĕр кăтартрĕ кăмăлне.
Çÿхе те çăмăл аллине
Тута тумалăх тăсса пачĕ –
Паян пуль çуркуне пуçланчĕ?
Ун аллине тытса пăхмалăх
Хăçан-ха эпĕ хăюллантăм?
Пÿрнисене вăл кăшт хуçлатрĕ –
Паян пуль çуркуне пуçланчĕ?
Ачашшăн сĕртĕнчĕ пулать те
Чĕре те чĕн пек тапкаланчĕ,
Çав алă евĕр çунатланчĕ, –
Паян пуль çуркуне пуçланчĕ?
Темле тĕнче туса хурасшăн
Хăй тĕллĕнех тухать пек сассăм.
Ăна илтсе хĕр хавасланчĕ –
Паян пуль çуркуне пуçланчĕ?

***

Çак хĕр калани маншăн темиĕн,
Те турă пек хăй те хитринĕн,

Шыв юхнӑ пекех илтӗнет...
Ак, халь те вӑл темӗн каларӗ,
Таҫта ҫитиех чунӑм кайрӗ...
Ҫӳрет пуль-ха халь те таҫта,
Хӑй шӑпине шыраса...
Пӗрре савӑнса ак илет,
Ыр тунӑшӑн ҫупкӑ ҫиет,
Телей пур ҫӗртех ӗсӗклет, –
Хӑй пӗтнине вӑл пӗлет!
Ӑна, тен, ҫав хӗр таҫта курнӑ,
Ӑна юратса тем каланӑ,
Телей килессе, тен, шантарнӑ...
Ҫав ӗнтӗ тин ҫитрӗ. Халь ӗнтӗ
Манӑн ӑша та вӑл кӗчӗ!..
Ҫав хӗр калани маншӑн темшӗн,
Те турӑ пек хӑй те пулнишӗн,
Шыв юхнӑ пекех илтӗнет.
Эп чӑнкӑ ҫыран хӗрринче...
Сикме те хӑрап...
Ларасчӗ-ха теп шыв умӗнче,
Итлесчӗ ҫав хӗр сассине...

* * *

Чун ӑшӗнчи пӗр ҫулҫӑ та
Паян кунччен те хускалмарӗ,
Чечек таврашӗ та курӑнмарӗ...
Чӗре шухӑшлама пӑрахрӗ.
Сар хӗр курсан та пуҫлаймарӗ
Ҫурки шыв пек сиксе тапма.
Вил ӳкнӗ пек тек вӑранмарӗ...
Ҫапах та ыйхӑра чухне
Теме вӑл халь те тӗлленет,
Ача пек тӗлӗнсе пӑхать,
Шур сӑвӑ йӗркине пухать...
Анчах курмасть-ха кирлине,
Пӗлмест чӗринӗ чирлине...
Тен ҫавӑнпа шухӑшлаймасть,
Ӑш ыйӑхран вӑранаймасть,
Чун ҫулҫине те кӑлармасть,
Чечек пек ҫеҫкине сармасть...
Ҫунса каяс пек тӑнӑ чух
Вӗри пулас килетчӗ те...
Анчах тем пек вӗрилессӗн те,

Пĕтес пекех пит киленсен те
Савни килсе чуп тăвиччен
Сивви пĕтмест-ха ку тĕнчен...

* * *

Клуба кайрăм... Эсĕ çукка.
Ларкаларăм...
Темĕн пулчĕ,
Чупрăм тухрăм урама
Савнă çынна шырама...
Урамра çап-хута уйăх,
Ун та пурччĕ пуль çав хуйăх:
Çĕрĕпех пĕччен çÿрет,
Мĕлкесем-çех ÿкерет...
Эпĕ те пĕччен çÿретĕп,
Эсĕ килессе кĕтетĕп...
Уйăх пек хитре тетте
Тен, шутлап, çÿрет килте?
Тĕттĕм кантăкран пăхатăп,
Шаккама та эп хăратăп...
Çавăнпа тусанпа çеç
Пĕр-ик хут ывтатăп кĕç...
Вăштăр! çеç тăвать тусанлă
Уйăх çутипе çуталнă
Тĕттĕм кантăк самантрах...
Тух-ха эсĕ хăвăртрах!
Уйăх пек çап-çуттăн тухнăн,
Чĕрере хускалнăн шуххăн
Мĕлтлетет шалта мĕлке –
Ман савни чăнах килте!
Ак тухать пуль тенĕччĕ,
Чун пекех пит кĕтнĕччĕ...
Ман савни вара кулать:
«Уйăх, – тет, – санпа пулать!»

* * *

Панулмин пĕр пичĕ хĕрелчĕ.
Акă çитрĕ те ыттăн сăпас!
Панулми тепĕр хут ас илтерчĕ:
Сăпас кунĕ пулать тет сăвап!
Сан пата тепĕр хут шăнкравлатăп.
Шăнкăрр-шăнкăрр! илтĕнчĕ сас.

Халь каллех аран-çех сывлатăп,
Йăлт пĕтетĕп – пĕрех хавас.
Телефон номерне чĕтревлĕн
Числасем шутласа çавăрап.
Эс мана маннине пĕлетĕп –
Çавăнпа шутласа тăрап!
Эс мана пĕр сăмах та каламăн.
Каласан та – пĕр сивĕ сăмах.
Пурпĕрех ман чĕре хаваслăн
Сиксе илĕ пĕр авăк кăштах.
Çапла пултăр тесе шăнкравлатăп.
Шăнкăр-шăнкăрр! таçта пĕр сас.
Эх, кама эп пулать улталатăп,
Килес çук тепĕр хут сăпас!

* * *

Аслă вăрман хĕрринче çурт ларатчĕ.
Çав пĕчĕк çуртра çунатчĕ пĕр çут.
Çил, эс, ан макăр, ун пек кирлĕ марччĕ, –
Иртнĕ куна тавăрма шутăм çук.
Эс, ас тăватни, тырпул шăркаратчĕ?
Эс ас тăватни, çав пĕчĕк çурта?
Чакăр куçне те хитре хĕрупрасăн
Шурă сăнне манас çук нихăçан та!
Пулĕç телейлĕ хурăн та хырĕ,
Сив кĕркунне вĕсем чăтĕç кăштах.
Килĕç каллех шурă хĕл те çур кунĕ, –
Манăн вара пĕчченех çул выртать...
Ӳкрĕ садра сарă çулçă вăраххăн.
Кĕр, çулçӳревçĕн, шаккать кантăкран.
Çил, эс, ан макăр, ун пек кирлĕ марччĕ, –
Иртрĕ ман пурнăç йăлтах çак кунран.

* * *

Сан юрруна, чĕкеçĕм, илтрĕм:
Çунат сарса, чĕкеç некех,
Самант, ĕçе вĕçсе те çитрĕм –
Ларатăн, ак, халь чиперех!..
Аса илетĕп... Янăрарĕ
Каллех пĕр юрату чунра.
Çунатупа чĕрсе хăварнă
Чĕре чӳхенчĕ уçлăхра...

Унта вĕçме епле çитертĕн
Вăй-хал та кăмăл...
Тен, шăпа
Сана чĕкеç пек хăй килтерчĕ
Ман чун çине пырса ларма?..

* * *

Тăлăх хирпе çулсăр утма пит кичем,
Вĕçкелет пĕр кайăк, ман пекех пĕччен.
Темĕскер шырать-и, такама чĕнет –
Шыв ĕçес килсен тет вăл çапла йĕрет!
Шутласа пыратăп пурнăçăм çинчен, –
Йăтăнса анать вăл пуç çинех иккен!
Сывă юл эс, ялăм!
Сывă юл, савни!
Асăмрах-ха халь те санпала пулни...
Çут уйăх тухатчĕ ун чухне çавра,
Çутине тăкатчĕ йăлт сан пуç тавра...
Тута типсе çитрĕ, ăшра вут çунать!
Юратусăр хĕр те кайăк пек пулать...
Тăлăх хирпе сансăр утма пит кичем,
Вĕçкелет пĕр кайăк, ман пекех пĕччен.
Темĕскер шырать вăл, такама чĕнет –
Çунатне сулать те пуç çинех килет.

* * *

Кăнкăвак тÿпечĕ, шурă юр çăватчĕ,
Юр пĕрчи вĕçетчĕ сивĕ çиле май.
Юр пĕрчи телейлĕ, юр пĕрчи вылявлă,
Сан çине ÿкетчĕ пит нумай.
Ах, анчах мĕн-ма-ха ача пек кулмарăн,
Мĕншĕн-ха салху сан пар пекех сăну?
Уйăхăн тăхри пек, эпĕ асăрхарăм,
Иртнĕçсмĕн иртрĕ юрату.
Иртсе кайрĕ пуль çав, çаврăнса пăхмарăн.
Шурă юр çăвать-ха, çут хĕвел çунать...
Юр çине хăврнă ура йĕрĕ тарăн
Сивĕ пичет евĕр курăнать.
Кăнкăвак кунах-ха, шурă юр çăвать-ха,
Тÿпери хĕвел те пĕрчĕре çиçет.
Юр пĕрчи телейлĕ, юр пĕрчи вылявлă,
Çиле май кăнаниш вĕлл вĕçет?

***

Иртсе кайрӗ юрату, иртсе кайрӗ...
Шӑпӑлтатрӗ-шӑпӑлтатрӗ шыв хӗрри,
Шӑпӑлтатрӗ-шӑпӑлтатрӗ те хӑварчӗ
Шурӑ хӑйӑрне ҫыран хӗрне...
Шурӑ хӑйӑр тап-таса та ҫутӑ,
Ун ҫинчех ларать шап-шурӑ сӑртӑм...
Ҫав ҫуртра эпир йӑва тусачӗ,
Иккӗн ик енчен пӑхса выртсаччӗ.
Ҫут хӗвел вылятчӗ пит ҫинче,
Шур хумсем кусатчӗҫ ҫурт ҫине...
Куснӑҫем ванатчӗҫ алӑксем,
Тунӑҫем ӳсетчӗҫ стенисем...
Шурӑ хӑйӑр таврара нумай,
Ак ҫурта ҫӗклерӗмӗр чылай.
Питӗ ҫӳллӗ, чаплӑ кермен евӗр
Ман куҫа вӑл курӑнатчӗ тепӗр.
Анчах вӑхӑт шеллемест ниме те,
Килтчӗ пуль ҫав ҫӳллӗрех пӗр хум?
Пырса ҫапрӗ, ванчӗ пирӗн ҫурт, –
Ҫӗклеймеспӗр пулӗ тепӗр хут?
Ванса кайрӗ пуль ҫав юрату та...
Ҫӳлӗрех ҫӗкленчӗ шурӑ хум та...
Пӑшӑлтатрӗ-пӑшӑлтатрӗ те хӑварчӗ
Шурӑ хӑйӑрне ҫыран хӗрне...
Шурӑ хӑйӑр тап-таса та ҫутӑ –
Курӑнмасть халь ун ҫинче шур ҫуртӑм.

***

Хамӑр сӑнпа эпир пултӑмӑр кӑмӑлсӑр,
Тӗкӗр умне икӗмӗр пытӑмӑр тӑтӑмӑр.
Кӗленче енче хамӑра чӑнласа куртӑмӑр –
«Хӑш ҫырмаран кусем?» – тесе култӑмӑр.
Эсӗ, чӑн та, тӑраттӑн питӗ капӑр, –
Ҫавӑнпа пуль чун пулчӗ хапӑл?
Эпӗ вара сан хыҫра, калӑпӑр,
Ман ҫинчен пымасть-ҫке-ха халапӑмӑр.
Акӑ эсӗ теме систерсе куҫ хӗсрӗн,
Тӗпне ҫуталса илчӗ тӗрлӗ-тӗслӗн.
Эпӗ те вара, айван, сапӑрлантӑм,
Ҫав урӑх тӗнчешӗн хавасланттӑм.

Манăн та сан кăмăлу хыççăн каяс килчĕ,
Анчах куллăм çуралнă чухнех вилчĕ.
Эпĕ-мĕн курăнатăп питĕ ватă,
Çав ăнлав ман чуна йăлтах ватрĕ.
Хăюсăррăн тен хулран тыткаларăм,
Тен, ас тумастăп, калаçкаларăм...
Эсĕ пĕр сăмах та илтмен ĕнтĕ,
Чунăм вара курпшак тĕпĕ пек ĕнчĕ...
Тĕкĕр çине майкки кайса уксе ÿлĕнчĕ.
Тĕрлĕ-тĕслĕ укерчĕксем тĕксĕмленчĕç,
Ĕнтĕ пирĕн юрату тăвассисем вĕçленчĕç.
Турă та пуль ку юратушăн ÿкĕнчĕ,
Чун урăх туйăмпа кулĕнчĕ...
Тĕкĕр умĕнчен ĕнтĕ эпир кайрăмăр,
Çав укерчĕкри пек тек тăрса кураймарăмăр...

* * *

Пĕр ансăр çеç юр хывнă сукмакпа
Эп шыв ăсма анатăп сырмана.
Эх, аннă чух шăвать, шăвать ура...
Шуса кайсах анатăп сырмана!

Ах, тур, пит йывăр та вара пусă шывне йăтма.
Шуса кайсан, çав вырăнта, пăхса тăратăн та
Пит тарăн курăнать мана çав çут сырма.
Сив шывĕ ялтăрать пуль пусăра...

Çавна пĕлсе тăрса пуль тепĕр чух
Кĕтсе тăраттăн эс мана çав вырăнта.
Ярса илеттĕн çĕклемсе ик алăпа
Йăтса тухса параттăн çÿл сăрта...

Юлташ пекех пулса кулаттăн та вара,
Юрпа та ывăтаттăн, тарăхтараттăн та!
Çиленнĕ пек пулсан та тепĕр чух
Сырма хĕрне килсен, чĕнеттĕм: «Тух!»

Ăçта эс халь, çав сырмари пуса каччи?
Çак пурнăç çĕклемне кампа йăтса пыран?
Сырма çавах пуль, тарăн та шаннпур, –
Ун тĕпĕнче эс ăснĕ шыв та пур!

Яла килсен аса илеп вара,

Çырма хĕрне чупса пыратăп та
Ăсас-ха тетĕп сив шыва, ăссан,
Йăтса пыратăп пĕчченех аран-аран...

## ЭПĔ – КАМ?

***

Çеçпĕл утать хĕллехи урампа,
Çийĕнче гимнастерка кăна.
Çÿçĕ ун шăннă шурă юрпа,
Сăнĕ калать пĕр сăвва.
Çеçпĕл, ăçтан эс, каятăн ăçта,
Мĕншĕн эс сăвă калатăн?
Пĕр сас та памарĕ Çеçпĕл мана.
Тен, ман сасса вăл илтмерĕ?
Иртрĕ çул тăрăх çамрăк пекех,
Утти ун, чăнах та, тĕнче пек!
Ирттĕр-ха, терĕм, килтĕр тата,
Çеçпĕл килни – аван вăл!
Юлтăм хыçра, Çеçпĕле сăнаса,
Мĕн эс туса халь тăратăн?
Кайрĕ хуçалăхăм ман саланса,
Хам та халь эп Мишук мар пуль!..
Иртрĕç иккен пирĕн хăвăрт çулсем,
Çеçпĕл те иртрĕ сут сăввăн.
Эп тăрса юлтăм шур сăвă пекрех,
Тен, эпĕ, чăнах та, шур сăвă?

***

Тахçантанпах шутлатăп эпĕ
Çăлăнмалли меслет çинчен.
Тепĕртакран, сисетĕп, эпĕр
Вилес каяттăр ним те мар.
Мĕн-ма тесен, апат çимелĕх
Çакăр-тăвар та ман çукрах...
Тепĕр чухне эпир чĕнместпĕр –
Калаçаймастпăр вĕт чунтан...
Тĕнче халь хĕстерет хăвапăн,
Вăл хăйĕн пек тутарттарать.

Эпир тепле пулсан та чаплăн
Пире пĕрех парăнтарать...
Тен, çавăнпа хирĕç тăрас та
Хирĕç тăрса та вăй пухас,
Тесе шутлатпăр халăхпа...
Анчах та халăх – ху кăна –
Унта та тем пек хăраса,
Пăхса тăратăп чунăмпа.
Тепĕр чухне, тепĕр чухне
Эп те пулатăп пулĕ харсăр.
Çыратăп тем, тем шухăшлатăп –
Пĕрех пĕтессĕм вĕт килмест!
Çак тĕнчене усал килсен те,
Пире тыпса хып хĕстерсен те –
Çак тĕнчене çăлас тепех!

***

Ан шутла, лайăх çыртăм тесе,
Шур пуçна çулелле ан кăнтсам.
Эсĕ çырнă пĕр çĕр йĕркере
Пĕр йĕрки тĕрĕс пултăр кăна...
Çавăн чух йăлтăрать ку тĕнче,
Çавăн чух эпĕ хам та йĕркеллĕ!
Çук, ан пултăр кунта пĕр йĕрке те,
Тен, пĕр сăвă та çук лайăххи...
Пурпĕрех, тем пулса иртнĕ пек,
Темĕн пулчĕ вĕт çак тĕнчере!
Çак тĕнче пурпĕрех савăланчĕ,
Хитрех мар пулĕ те, пурпĕрех,
Пĕр ача пĕр йĕрке çеç каларĕ –
Йĕркеленчĕ тĕнче çавăнтах!

***

Темскер, таса мар эпĕр халь:
Суятпăр темскер, калатпăр.
Пĕрех, мĕн тăвас тенине
Ыгла тăрăшсан та тумастпăр.
Кăштах тасарах пулсанах –
Тăвас тени килĕ хăех!
Тен, кăшт ырăрах пулмалла,
Ун чух, тен, туятăн вăйна?
Пулсан та пуласчĕ Тур пек,
Сăмах калама вĕренесчĕ!

Чăнни, каласан, пулатех,
Тепре ҫĕкленет ку тĕнче те!
Ак, халь вара мĕн-ха куратпăр –
Тĕнче ишĕлет майĕпен.
Сăмах калама та тăхтатпăр –
Суятпăр, суятпăр, суятпăр...

* * *

Тĕтреленчĕ тĕнче, тĕтреленчĕ...
Утма ҫул та кăшт ҫеҫ курăнать.
Пĕр ача питĕ хыт тинкеретчĕ –
Курăнать, хăй ҫулне шырать!

Унăн ҫулĕ килет тĕтре витĕр.
Те тупать ĕнтĕ вăл, те тупмасть.
Кăштахран тĕтрене ҫилĕ сирчĕ –
Тĕтре витĕр темскер курăнать!

Аякра пек таҫта, вĕҫ-хĕррисĕр
Питĕ чаплă тĕнче курăнать.
Ун патне пĕр ача хĕрхенусĕр
Кун та ҫĕр ун патне туртăнать.

Эх, мăнтарăн, утса ҫитейместĕн.
Пит тĕтреллĕ-ҫке ку тĕнче.
Утса тухăн-ши, эпĕ пĕлместĕп.
Тем вĕҫет-ха, вĕҫет ҫил ҫинче!

* * *

Эп пурнатăп таҫта. Эп пĕлместĕп.
Кунпа ҫĕр хушшинче, тен, пурнап?
Пĕр тухатăп та пĕр кĕретĕп...
Алăкно-ши вара кам уҫать?
Ҫĕрпе кун хушшинче темĕн пур пек.
Тем шыратăп эп ҫава тĕлте.
Кун килсен эп кăштах ҫуралап пек.
Каҫ ҫитсен, тен, вилетĕп татах...
Ҫавăн чух пулĕ эп ҫĕнелетĕп,
Улшăнатăп эп ҫавăн чухне...
Ир тăрсан эс мана паллаймастăн –
Каҫ выртсан, эпĕ хам та виле!
Тăр-ха, тăр, акă, кун та килет вĕт!
Ҫиттĕр мар-и выртса вилнĕ пек.

Хěвел тухрě те зоě ача пек,
Тин çуралнă пек, çухăр татах.
Чупса тух урама. Сывлăш урăх.
Ку тěнче те, иккен, аван!
Ир çинче çуралать манăн сăввăм.
Сăввăмра пурăнать çав ача!

***

Юр ўкнě тěлте урăх нимěн те çук...
Пěр йыпа чупса, тен, иртнě?
Унăн йěрри курăнать тěрě пек,
Çав тěрěпе эпě çитнě.
Чăн та, йěрсем çуккă мар пуль кунта.
Акă, мулкач та пулнă!..
Вăл тěрěслет пуль ку пахчана.
Мěн-ха кунта, тет, юлнă?
Эпě те ěнтě пăхап тěлěнсе –
Манăн пахча питě пушă!..
Час, акă, эп те çав йыпа пекрех
Иртěп юр çинă тěлтен те...
Иртěп тě юлě манран та пěр йěр.
Килě мулкачě тепре...
Мěн-ха, ку, тейě, çын йěрри!
Мěн тунă кунта вăл халě?
Чăн та, мěн турăм-ха эпě кунта?
Эпě нимех те тумарăм.
Куртăм, юр ўкнě пěр вырăнта
Пěр çын хăй йěрне хăварнă...

***

Кěвентеллě пěр хěр пек таратăн эс халě.
Ма илмерě-ха, тетěн, хăй патне уйăхпи?
Эп ăна пулнă пулăттăм çывăх юлташ...
Кам пěлет, тен, чăнах та, çапла хěр пăпи?

Уйăхпин эп утап, шурă юр шăтăр-шатăр.
Ман хыçран çул амакě тухать, эп курап.
Эп унран пурпěрех вěт-ха, çук, хăрамастăп.
Çул çинче манăн чун ыррине çеç шырать.

***

Таппаттарать çав пурнăç çулě,

Тепĕр чухне такăнтарать...
Мĕн утнă çулĕ пурпĕр юлĕ –
Утса пыни савăнтарать.
Мĕн чухлĕ пулĕ пулчĕ шырлăк,
Мĕн чухлĕ пулчĕ хур курни.
Пĕрех çул парнелет пек ырлăх,
Пĕрех пур пулĕ çул Турри.
Чăнах та, эпĕ уркенмерĕм
Чăн пил ыйтма çул Турринчен.
Пĕрех, каллех эпĕ пĕлмерĕм
Чăнни ăçта, мĕн пулнине...
Кайрăн кăна пуль кăшт чухларăм –
Ман утмаллачĕ тӳр çулпа!
Эпĕ вара каллех суйларăм,
Эп утрăм вăрттăн çулпала.
Унта, шутларăм, ним те çуккă –
Мана вĕт ним те кирлĕ мар!
Анчах та куртăм эп тем чухлĕ
Çак çул çинче асап та шар!
Халь тин шутлатăп, эх, шутлатăп:
Ташлаттарать пурнăç тени!
Тепĕр тесен, мĕн чуль утатăн,
Çавăн чухлех тупатăн вĕт...

* * *

Тĕнче çыврать... Эпĕ те...
Аван мĕн çапла пурăнма,
Пĕр вĕçĕмсĕр çывăрма...
Вăхăт питех те туплă!
Ниçта васкамасăр кĕрт пек
Килчĕ те выртрĕ...
Тата юр пекех кăпăшка,
Хăех вĕт ӳкет те çупăрлать...
Вара урăх мĕн. Ним те мар,
Мана тĕнчере кирлĕ мар.

* * *

Шартлама сивĕ кун
Çын сухатрĕ пĕр чун.
Тĕл пуласчĕ ăна çул çинче!
Эсир курнă пулех çын пекрех пĕр мĕлке.
Пуçне чикнĕ пырать. Пĕр çĕлĕк кăна
Ларса юлнă пулас хулпуççийĕ çине?

Чĕрĕп пек хупланать, ал-ури кукăр-макăр...
Чăваш чунĕ пулех хуçăлса пырса кĕчĕ?
Çав анчах çул тăршши пĕрмаях питĕ йĕчĕ.
Сассине, çук илтмерĕ пуль урăх пĕр çын та,
Тĕл пулсан, пĕр этем те, мĕн пулчĕ темерĕ.
Лучăрканнă хут пек çул çинче вĕçкелерĕ,
Тен, пытанчĕ те пуль, кĕрт айне кĕрсе выртрĕ...
Пурпĕрех вăл йĕни чĕрене кĕрсе юлчĕ.

* * *

Ăçтан тупатăн пурăнмалăх?
Тапра та вĕт çумра юлман!
Пĕрех эс çÿлеллех уçетĕн –
Юман пекех вĕт курăнан!
Эс йывăçах-ха, питĕ симĕс,
Тачка та сарлака туна...
Такам куçне те савăнтарĕ
Йывăç ÿсни çак пахчара.
Сана пырса кăштах шăварăп,
Эс йывăç вĕт-ха, шыв ачи.
Хам кăмăла парса хăварăп,
Тен, эс те парăн сулхăнна?
Кашни кунах пăхса ларатăн
Эп çырнине, ĕçленине...
Эс чăннипех вăйна паратăн,
Çивĕчлетен сăмахсене...
Тен, сывлăп та, сан пек эп пурнăп
Пĕр тăпрапа, пĕр сывлăшпа...
Тен, çилĕрех сан пек ал сулăп,
Çын çумнерех пулас тесе...

* * *

Ах, пурнăç тенине пĕлесчĕ –
Пурăнни çеç çителĕксĕр!
Пĕррс те хăть пулин вилесчĕ...
Вара, тен, пĕлĕн, ку мĕскер.
Мĕскер ку пурнăç пĕрмаях
Сана ватса тăрать.
Тин çеç, аван пек тенĕ чух
Сана каллех такăнтарать.
Ах, пурнăç, пурнăç сан ăсу
Тумхахлă çул пек курăнать.

Тепĕр чухне çу пек чĕрÿ
Каçса кайса çухăрттарать...
Ак, витчĕ манăн тусăм та –
Епле вăл питĕ чĕрĕччĕ!
Мана курсан, кирек кампа та
Пĕрмай хыт калаçатчĕ.
Халь çуккă акă нимĕн те.
Пĕр тĕмеске çеç юлчĕ.
Çав тĕмескен чечекĕ пек
Хĕрес тени çеç ларчĕ.
Ах, пурнăç тенине пĕлесчĕ,
Çав тĕмеске – пуласчĕ.

***

Эп утса çуретĕп ĕлĕкхи çĕртех.
Эп машина пулĕ, вăхăт çуревçи.
Ĕлĕкхи пек эпĕ халĕ те айван –
Çавăнпа та пулĕ пит аван!
Акă, эп пăхатăп... Пăх-ха, çав суртах,
Чÿречи те çавă. Эпĕ те кунтах!
Эх, вĕт вăхăт иртрĕ. Эпĕ вăхăт мар.
Эп кунтах çÿретĕп. Эпĕ урăх мар...
Эх, тытса пăхасчĕ çавă вăхăта,
Мĕншĕн-ха тарать вăл пĕчĕк ачалла...
Чунĕ те кунтах вĕт, ман ăшрах ларать,
Ăна упраканĕ, суртăм та курнать.
Эп утса пыратăп. Авалхи урам.
Кам кăна пулман пуль, кам-ши халь упман?
Кур-ха, кур-ха эсĕ ачалла чупать,
Ачалăх чупать те аташса юлать.
Юл-ха, апла, эсĕ. Юл-ха авалхи!
Тепĕр чух килсен, ак, курăн тепĕр хут!
Ман чуна упратни, пур-им эп кунта?
Ĕмĕрлĕх упрантăр умри ват йăмра.

***

Никам та килмерĕ вĕт, пăх-ха –
Чĕнсеччĕ сире килме!
Эпир хатĕрленĕ ăс-танлă
Çынна кăтартма кĕнеке...
Анчах эс тăхта-ха, тек çуккă
Вулас текенсен йышĕнчен...
Пĕр çын та, пĕр çын та çуккă –

Калас текенсем килеймен...
Чăнах та, малтан эп аптрарăм.
Мĕн-ма-ха килмесçĕ çынсем?
Вĕсем каласан та чĕнмесçĕ,
Вĕсем вĕт чĕнсен те килмесçĕ...
Апла, эпĕр пĕтрĕмĕр тин!
Çук, çук, ун пекех кирлĕ маар пуль?
Ытла та эс хыпă шутлан.
Чăваш вăл пĕлсен те пĕлмен пек,
Чăваш эс чĕнсен те чĕнмест.
Вăл Турă, ăна кам пĕлет?

* * *

Вĕлтĕртетет кĕрхи çанталăк,
Вĕçĕ-хĕрринĕ çук.
Вĕлтĕртетсен, вĕлтĕртетсен те
Хăвна эс пурпĕр туп!
Çухалнăччĕ тахçан вĕт эсĕ
Тасти темле çынра.
Халь ху та пул-ха çав çын евĕр,
Вĕлтĕртетех тата.
Вĕлтĕртетет кĕрхи çанталăк,
Вĕçĕ-хĕрринĕ çук.
Хама шырарăм пĕр-ик талăк –
Çуталчĕ те – тупатăп вĕт!

* * *

Çил çинче те тăма çăмăл мар.
Çил çинче те сырма вăйна пар!
Сивĕ çил ман алла шăнтать,
Хут листи те çÿле хăпарать.
Пурпĕрех пĕр-ик хут листи
Эп сыратăп çак çил çинчен...
Ма тесен, пур ман чун хистени,
Пур-ха, пур ман çинчен калани!
Сивĕ çил тем каларĕ, тăнла,
Шăнса кайрĕ вĕт алă та сан...
Ручкăна тытаймастăн, ачам.
Сив çилне парăнатăн пулать!
Эпĕ халь шăнса кайрăм йăлтах.
Кирлĕ мар мана сăвă тени!
Ах, анчах мĕнле лайăх татах

Çил çинче тăрса сăвă çырни...

***

Çук, урăх нимĕн те туйман –
Пурăннăшăн эп савăннă.
Хăвна тытса пăхкаласан,
Хăвнах пырса эс тăраннă.
Эс ху пулсассăн, мĕн вара,
Вара тĕнче те пур пек.
Тен, çавăнпа ху пуррипе
Ку таранччен эс пурăннă.
Тепĕр чухне куç хÿрипе
Çын кайнине куратăн та
Тем пулнă пек туятăн.
Пĕрех, тепре çех çĕкленен...
Апла, татах пурнатăн-ха!
Эп пур-ха тенĕ пек татах
Тыткаласа пăхатăн.
Мĕнле калас, чăваш тени
Тыткаласа пăхасшăн.
Çавăн чухне, тепĕр чухне
Хăвна эп чĕрĕ, терĕн-ши?

***

Çак тулăхсăр вăрçлă кун
Ăçта пурăнать-ши ман чун?
Тен, чун выртăнне халь чул?..
Çав чул айĕнче пулă пур!
Тытас пек çав йăпăлт пулла
Эп кун тăршшипех чупкалатăп.
Пулли вара, паллă, чула
Хăй кил выртăнне шутламас та!
Чул хыççăн чула ухтарап,
Чула çут шывран кăларап...
Тен, чулсăр тăрса юлсан,
Пулла çăмăлах эп тытап?
Ак, чăн та, пĕр чулсăр шыв –
Тĕпне юшкăн тулнă пуль? –
Пĕррс ярса пусрăм, тепре...
Çĕкленчĕ тастан çĕпре.
Пулли кăна мар, алли те халь çук!
Çăра та пĕтранчăк шывра

Халь ӗнтӗ ман чул вырӑнне
Юлса пӗр ҫăра ланкашка.
Ах, пулӑ тесе мӗн турăм пулать?

* * *

Пӗрле ларма чӗннӗ ҫанталăк
Пӗр йӗчӗ те пӗр уларӗ...
Йăтса килчӗ юр пӗр ытам...
Эп ларнă ҫӗрте, халь, курăр,
Шур кӗрт сăрт пекех аван.
Ҫав сăрт ҫинче эп те лартăм,
Сывларăм тăман пек ҫил май.
Ҫанталăк хăех хуравларӗ –
Эс лар, терӗ. Лар, лар!..
Ларсан та ларсан ак, чăн та,
Эс пулăн та кайăн пӗр сăрт.
Аллу-урусем кăна мар,
Эс ху та пулан ҫутă пăр!
Ҫак пулчӗ ҫанталăк хуравӗ.
Хуравӗ тек кирлӗ мар!
Ҫиле иглеме питӗ майлă,
Пит туплăн эс халь сывăран...
Чăн-чăн хуплăхра ҫапла пуль,
Унта пуль юмах та ҫăтмах...
Ҫапах та, вăй хутăм та – тăтăм...
Вилетӗп вӗт, терӗм, ларса!
Темле питӗ туплă тӗнче те
Мана тек тытаймӗ кунта.
Шур сăрт ҫине тăтăм асаплăн,
Ҫил майăн кăштах сулланап...
Кирек мӗн пулсан та ху тӗллӗн
Тухатăн тăван кил тӗлне...
Халь ӗнтӗ вăйлантăм, ман чунăм
Кунта вӗҫленмест-ха, курап.
Тăман та сывлать ассăн,
Сив ҫил те каллех сывăрать...
Мана вара ҫиттӗр... Эп кӗтнӗ,
Эп кӗтнӗ самант ҫывхарать.
Эп хам та халь чаплă ҫанталăк,
Эп хам та тăман кăларап!
Тута шăхăрать шухă ҫилӗн,
Умри шур юра хускатать.
Ура такăнать те шур кӗрчӗ

Юхха пек тавра çаврăнать.
Çапла утса пытăм пĕр йĕрсĕр,
Пĕр çулсăр, тĕллевсĕр, аран...
Шапнщурă уй тăрах, курман-им,
Эсир аташса пырса?..

***

Кун пек хисепре эп пулманччĕ.
Мана юратманччĕ кун пек.
Эс, Турă, тесе каламанччĕ,
Чĕре ирĕлменччĕ çу пек...
Тата, ак, кĕтмен çĕртен
Пĕр кăкăр тулли чун!
Хăш чух темĕнле кĕтсен те
Килмест вĕт-ха кĕтнĕ кун.
Кунта вара, ак, ал айĕн
Юхать шурă кун çути.
Çак пулăм текех килеймĕ,
Çути вара юлĕ, тен?

***

Çапла пуль, мĕн пултăр урăх
Шăл сыртнă шапнщур тĕнчере.
Пĕрне пĕри ырă пултăр,
Тесех те тăмаспăр пĕрле.
Кулма тесен, кулă та кирлĕ...
Чĕре юрри пек пĕр кана
Кулатпăр вара питĕ вирлĕ –
Çав кирлĕ сана, ухмаха!
Вар-хырăм вара чул пек хытăр,
Çемçелтĕр чĕре сар çу пек...
Кулса пĕтерсен, кулă хыççăн
Сын евĕр пулатпăр-и, тен?

***

Пĕр пурнăçран тăратпăр эпĕр.
Пĕр пурнăç пулнă тет тахçан.
Пĕр пурнăç пек пулас тесессĕн,
Ăна тăвас пулать паян!..
Çак пурнăçа, шуплатпăр, панă
Пире туса такам, тахçан...
Ку тĕрĕс мар, йăлт хамăрах

Ăна таватпăр халь, ялан...
Кашни самант, кашни пĕр шухăш
Вăл çыхăнать пуçламăшпа.
Пуçпарăн-тăк, каллех пĕр хушă
Эс пурăнăн çав пурнăçпа.
Анчах каллех çав пурнăç пĕтĕ.
Кивелĕ вăл та, кайнăçем...
Тен, çавăнпа та питĕ вирлĕ
Чăваш тăвать çĕнĕ чӳксем.
Чӳк тунă чух тĕнче вăраннăн
Пулса илет пуль çав, чăнах.
Пăхса илет усал хаярран,
Ырри те уксахлать татах.
Шывне тăкать-и Турă евĕр,
Е вĕçтерет çеç çеçкине.
Кашни хусканăвĕ, пĕлсемĕр,
Ас илтерет Çĕр тунине.
Çапла вĕт, пулнă, тет, çырса та
Библи çине мĕн авалтан.
Шыв çийĕн сăрт-тусем тухсан та
Кайăк вĕçсе вĕт чăн малтан!..
Тен, çавăнпа ниме пăхмасăр
Чăн Турă пек чăваш тăрать.
Кашни кунах пĕрре канмасăр
Кив чӳк туса çĕн ĕç тăвать.
Е тепĕр чух, вăхăт çитмест-тĕк,
Тупать вăл меслетне пăртак.
Кăмăл килмелĕх пуç таять те
Калать пĕр-икĕ ыр сăмах!
Çав ыр сăмах та питĕ çирĕп
Тытса тăрать пек тĕнчене.
Кам каласмасть, çавсем пит чирлĕ
Çын пек тухаççĕ кун умне.
Эп çавăнпа, тăван, кив чӳкшĕн.
Çĕнĕ тĕнче тăвас тесен,
Пĕтĕм чунтан пĕрре эс ӳкĕн,
Тепре вара татах çĕклен!
Çын мăшкăлне вара аран
Сирсе те ярăн хăвăнтан!
Ырра чăтма пĕлмеснине
Усал пырса çапса çурать.
Усал кăна асать пĕрмай.
Турă пĕрмай шăпа çырать.

Анчах шăпи, куран, темскер,
Тур çырнă пек килсе тухмасть.
Апла, çырни те кирлĕ мар!
Эпир, тен, хамăр Турă майлă
Туса хуратпăр пысăк ят?!

***

Телейлĕ тесе калаймăн –
Ку кун та килет вăрах.
Пĕр пус та килте юлман-тăк,
Чĕре кăшкăрать – хурах!
Хурах кăшкăратăн хăватлăн
Хура курак пек пăртак.
Вара темĕскер тăваслăн
Вĕçетĕн таçта татах.
Вĕçетĕн те тем шутлатăн,
Тĕнче вĕт пĕтмен-ха паян.
Хăвна ахалех хурлатăн –
Курак пек эс пул-ха хурах!

***

Тек пĕр кун та ахаль ан ирттĕр.
Мĕн шăтарса тухнă чун витĕр,
Çавă ăс уççи те пултăр.
Çавна çын та куртăр.
Апла, çыр. Çын курмалла та çыр!
Çурхи шыв çурнă çĕре якатсах эс пыр.
Çырнă пĕрне вуласан çын пултăр.
Çырнин кăшт уççи те курăнтăр!
Сăмах калама тивĕç çук тесе ан тăр.
Ĕнтĕ сан та сăмах калама вăхăт-тăр.
Пĕр каламан сăмах, тен, каланмĕ те...
Эсĕ туман ĕç çапла, тен, сухалĕ те...
Çак самантра мĕн тума май килнине ту!
Çав пĕр саманг пек туйса тăр хăвна ху!
Чун витĕр мĕн тухнă, ăс уççи те пултăр.
Тĕнчере эс пуррине Турă та куртăр.

***

Эп пĕлместĕп ĕнтĕ, тем пулать паян.
Ирхи шурă юр та, ак, выртать аран.
Пуçласа пуль çурĕ, пуçласа каять.

Çакă пулăмран та ытла мĕн пулать?
Шутласа пыратăп, юрă янăрать.
Вăхăт та вилмешкĕн сывхарса пырать.
Ик енчен те, акă аяк ыратать.
Пурăнмалăх сывлăх ĕнтĕ те юлать?
Шурă юр çăвать те савăннăн пулап.
Шурă юрпа ÿтĕм ман та çăвăнать.
Пит йывăр пулсан та чунăм таврăнать.
Шурă çăмăл юр пек çÿлтех çаврăнать.
Çаврăнса илет те майĕпен ÿкет.
Ÿкнĕçем пĕрре çех ялтăрса илет.
Ялтăрни вăл мĕн-ха, вăл вĕт ним те мар!
Савăнмалăх çеç вĕт. Çăварна ан кар!
Хам та вĕт сисмерĕм, илпĕм йăлл! кулса,
Çăвара карса та шур шăл кăтартса.
Нивушлĕ вара çав, шурă юр пĕрчи,
Пĕрре çаврăнсах-ши турĕ шăл шурри?
Çутă çеç те мар пуль. Юр пĕтни тем мар.
Çулпа упнăçемĕн, юр пек кулса яр!

***

Эп тусан çĕклерĕм утнă чух.
Çав тусан пуль халĕ те тăрать.
Сывлама та йывăр тепĕр чух.
Чун та хăйĕнчен халь хăй харать –
Эп тусан çĕклерĕм ним те мар!
Вăл вара çÿлтен çÿле каять,
Хĕвеле те, ак, часах хуплать...
Вăл вара, тухсассăнах, анать.
Ах, турах, çĕклерĕм эп тусан.
Тен, утма та кирлĕ марччĕ ман.
Пуснăçем, татах вĕт çĕкленет!
Халь кама тата вăл пĕтерет?
Тăр-ха, тăр! Пит ан васка, Миша.
Уруна эс çĕклесен – тăхта!
Пит тусанлă çул ку, эс ăнлан.
Пуссанах, каллех тухать тусан.
Эс уни, çĕкленĕ урупа,
Майĕпен çеç ирт-ха çулпала...
Кустарать ку çăмарта нара,
Çапларах калачкĕр урамра.
Çăмарта пек кустарса пырсан,

Тусана çапла хускатмасан,
Йĕрĕм те юлмасть вара...

* * *

Эп урăх пурнăçа пĕлместĕп.
Тен, çавăнпа та пит аван.
Аван тесех кулса илетĕп...
Эп урăх пурнăçа пĕлместĕп!
Ак, эп паян та килтĕм, лартăм,
Кĕçех ĕçе те кулĕнеп.
Мĕн тунипех эп çырлахатăп,
Эп урăх пурнăçа пĕлместĕп.
Мĕнле пурнан, тесе чĕнсен те
Аван-ха, тетĕп, майĕпен.
Тĕнче хĕрне çитсе ÿксен те
Эп урăх пурнăçа пĕлместĕп...
Пĕрмай пĕр майлă, выльăх пек,
Ĕçлеп, çиеп те çывăрап.
Ун пек тумасăн çыллăх пек.
Эп урăх пурнăçа пĕлместĕп.
Пĕлместĕп çав, пĕлместĕп эп!
Сăмса кутне тĕртсе парсан та
Ĕлĕкхи пек эп, хама май...
Тен, çавăнпа та кирлĕ мар
Тесе шутлатăп никама та
Çак тĕнчене çавăрттарни...
Эп кутăн-пуçăн хам та пулнă,
Хам пурнăçа пăсса та курнă.
Анчах усси... Уссийĕ çук.
Тен, çавăнпа та çиленместĕп.
Эп урăх пурнăçа пĕлместĕп.

* * *

Хĕвел те пур, уйăх та пур.
Çак ир çинче тасалăх пур.
Кĕлĕ тăватăп: пултăрах,
Кĕрхи кун килтĕр сутăрах!
Çисет-ха сывлăм ялтăрах!
Турри чуп тунă вырăнсем,
Шур хурăнра палăрнăçем,
Чуна татах пăлхантараççĕ,
Ĕлĕкхине ас тутараççĕ...
Халь пануллми те палăрать.

Ăна татса çиесчĕ те...
Хӳме пурринçке кансĕрлет.
Пĕр вăрă пек пуласчĕ те...
Уйăх çутийĕ пĕтерет.
Хĕвел те пур. Çук, юрамасть.
Таса куна эп варламас.
Эп вăрă мар. Ман чун кăна
Тахçан, тет, пулнă пĕр чана.
Тен, вăл пăсасшăн çак куна?
Çук, юрамасть ун пек тума.
Тăрать-ха хурăн сап-сарах.
Çиçет-ха сывлăм ялтăрах.
Хĕвел те пур, уйăх та пур.
Çак ир çинче тасалăх пур.

***

Чун пĕр савăнать те хурланать.
Урамра çумăр чашлаттарса çăвать.
Ирпе ăна итлеме питĕ аван.
Ĕçе эпĕ халĕ те тухса кайман.
Ĕнер анчах çанталăк тăратчĕ уяр.
Пахчари çĕр улмие кăлар та кăлар...
Кăларнăçемĕн анчах пилĕк ыйăнать,
Чĕркуççи те пĕр тĕлте ыратать.
Çĕр улми ани вара курăнать чылай.
Ал-урана ку, паллă, ыйăнтарать самай.
Кун панă чух ăна пĕтерсе пĕрех.
Тып хусăкна, Мишша, çирĕппех!
Çил вĕрнипех тайкаланан каç енне.
Хĕвелĕнне тытап юлашки хĕлхемне.
Манăн ана выртать халь хуп-хура.
Эпĕ те савăнатăп ăна кура.
Паян вара çумăр каллех тăкать.
Манăн чĕре пĕр савăнпа çĕрпех
такăнать.
Çумăр айне юлать пуль ялти ана...
Ăна кăларса пĕтерме хатĕрле хăвна!

***

Паян эпĕ пĕччен, питĕ пĕччен...
Мана çавăнпа та кăшт кичем.
Çанталăк та ĕнтĕ хăй талай.
Пур пулĕ çӳлте хăйне майлă ала.

Пĕрре хĕвел, тепре çумăр кăларать.
Алаçă, паллă, сăвăрса ларать...
Эпир халĕ çанталăк тĕлĕкĕ пуль.
Ыйхи унăн тата килет пуль.
Çул хĕрринчи чечек те ун алинче,
Çул хĕрринчи вĕрене те ун ăшĕнче...
Хытхура хытсах ларнă. Ларать...
Çак тĕнчене кам уçса ярать?
Пĕрре хĕвел, тепре çумăр тăкăнать.
Çулçă çинче кăна чун ярăнать...
Çутă кăларакан ала манăн алă пуль.
Ĕнтĕ пӳрне витĕр çутă сăрхăнчĕ темĕн чул.
Пӳрне витĕрех тумларĕ çумăр тумламĕ –
Çавăн пек вăл курăнать чун хупламĕ.

* * *

Питĕ тĕлĕнмелле вĕт-ха вăл.
Чун та, эпĕ асăрхарăм, чисти йывăç.
Йывăç пекех чечеке ларать, çулçă сарать...
Кĕркуннеле хытсах пырать!
Ĕнтĕ халĕ çуркуннене кĕтме тивет!
Кĕр хыççăн, ас ту-ха, хĕл килет.
Йывăç пекех шăнса хытатăп ĕнтĕ эпĕ те.
Ку, чул юпа тесе, ватма та тăрĕç, тен.
Кам вилнĕ вара тесе, пырса вуласа та пăхĕç, тен.
Эпĕ вара тӳпере Хуркайăк çулĕ çине ӳкнĕ пек.
Ку çул тăрăх çăлтăрсем çеç куçаççĕ пек.
Хăшпĕр турат çинче чылай пухăнса кайнă пек.
Сан пуçу çине, ас ту, халех персе анаççĕ!
Çăлтăр çунă куносем, ан хăра, иртеççĕ.
Юр пĕрчисем те çăлтăра аса илтереççĕ.
Акă килсе çитĕ çур кунĕ тепре.
Чашкăрса хăпарса çитĕ чун тĕпĕнчи çĕпре.
Йывăç каллех çулçă сарасшăн хăлаçланĕ,
Хăй те Хуркайăк çулĕ пулса çунатланĕ.
Чун кĕнĕ кăна тесе калĕç вара ман çинчен те...

* * *

Кирек мĕнле шухăшăма,
Кирек мĕнле туйăмсене те –
Çырма пĕлесчĕ тетĕпĕçке!
Тен, çавăнпа çыратăп та
Пĕр тĕм çинчен, чечек пирки...

Эп вӗсемпе туслашнӑ та
Нихҫан та пӗтмӗп – вӗсем пек
Эп кашнинчех вӗт ҫӗкленеп,
Хӗл тӑрӑшшипех ӑшша кӗтеп...
Ак, ӑшӑ килӗ те ҫерҫи
Турат ҫине ларса та канӗ...
Эх, чӗриклетрӗ пӗринче!
Мана чӑтма пит лайӑх пулчӗ.
Тен, ҫавӑнпа мана аван!
Вӗсемпеле шухӑш тытса,
Пӗр пек пулса, пӗр пек сырса
Татах – эп пурӑнатӑп та!

***

Ёҫ тумалли хамӑн та темӗн чухлехчӗ.
Бродский кӗнекине пӑхса тухмаллаччӗ.
Ҫитес эрнери ӗҫсене палӑртмаллаччӗ.
Пьеса та вырлатчӗ... тӑлӑххӑн.
Эпӗ вара сырмаран тислӗк йӑтма кайрӑм.
Ҫав тумалли ӗҫсем пирки пӑшӑрхантӑм.
Тислӗкӗ те ӗнтӗ, пулса ҫитменскер, шӑршлӑ.
Ҫӳлерех йӑтса ситерме вӑй кирлӗ.
Пӗрре ура шуса каять, тепре такӑнатӑн.
Куҫ хӑрать те ура пурпӗрех тӑвать.
Тислӗк туртса миҫе хутчен тар тухрӗ-ши?
Ёҫне вӗҫне ситерме вӑй пур-ши?
Акӑ, хӗвел пекех ывӑнса ситрӗмӗр,
Вӑя та, вӑхӑта та тислӗк йӑтса пӗтертӗмӗр.
Пьеса та вырлать халь... тӑлӑххӑн.
Бродский сӑввисене те никам та вуламасть.
Ҫитес эрнере тумалли ӗҫсем те пирчесе ситрӗҫ.
Ах, анчах, ҫак тислӗке те ҫӳле йӑтмалла вӗт!
Пӗр-иккӗ хупласанах ларса канас килет.
Ал-ура вара мӗн тумаллине хӑех пӗлет.
Акӑ, ситчӗмӗш хут тар тухрӗ.
Тем пысӑкӑш купа та пӗчӗкленчӗ.
Тепре танӑнтӑмӑр, тепре вӑй хутӑмӑр,
Ку купана йӑтса та пӗтертӗмӗр.
Эй, халӗ хуҫсем ыратасҫӗ.
Ах, чӗрсем те савӑнасҫӗ.
Каласу та сӑвӑланса тухать.

***

Шăлан тĕслĕ пулас та
Çул хĕрринче шăп ларас.
Çынсен куçне курăнса та
Çын сăмсине кăтăклас.
Ачху! тетчĕр иртнĕ чухне,
Илтчĕр чĕкеç вĕçнине.
Поэт тенин чăн сăмахĕ
Тупăнать çак çул çинче.

***

Ларатăп сĕнкое сĕтел хушшинче.
Тĕтреллĕ тĕнче – куç умĕнче.
Пăхма та – асаплă куççуль сăрхăнать,
Ларма та хăрушă – пуç çаврăнать.
Пурпĕр çыратăп пĕр-икĕ йĕрке,
Çаппа кĕрешетпĕр усал чир-чирпе.
Сăмса айĕнче те питĕ йĕпе,
Ăна типĕтетĕп сăмса тутрипе.
Ĕçне те кăштах тумалла пуль пулать,
Тумасăр тăрсан, тăшманĕ кулать.
Каю та шăтать!
Тытас та тăвас ал пынă чухне,
Эпир çĕнтеретпĕр ĕçпе çав чире!

***

Çулсем ман çавăнпа пуль çўллĕ,
Кунсем те килчĕç савăк куллă.
Пăхса ларатăп – тăмана!
Мĕнле килет ку самана?
Пĕрре те савăк мар-ха маншăн.
Пĕрмай хĕнет хама манманшăн.
Вăл чышкă кăтартасшăн пуль?
Манпа та хуйхă пулчĕ пуль?..
Çапах та эпĕ шыв пек тулнă,
Çил çинчи пек тем чухлĕ хумлă
Çынран та, хамăнран та кулнă.
Аса илен те, самана
Каллех тăрать пек чун йăтса.
Таçта утатăп çав чунпа,
Мĕнлин кĕтет мана шăпа?

***

Ёнер те, паян та вилес пек выртатăп.
Чĕрĕлес тесех пуль – чирлетĕп.
Ача пек хурланатăп,
Савăсăр, пĕлетĕп, вилетĕп.
Çанталăк та ĕнтĕ чисти урнă йытă –
Вĕрет, тулашать, алхасать...
Шăнса пăсăлать те сурăх пекех
Ўсĕрме тытăнать,
Сăмса юхтарать...
Ăçта юратма е юрлама?
Пăхса çеç выртатăп,
Тем каласкалатăп.
Сиввĕн сывлать çанталăк –
Гардин хăмпăланать.
Парăс тейĕн?
Эпĕ темле карап çинче, тен?
Тавăлĕ те пур!
Ăçта, апла, каяпăр чун хурса –
Сăвă патне хыватпăр çул.

***

Çак çул çинчех эпир тупнăччĕ телей.
Телейĕ ĕнтĕ вăл пĕр вĕренечĕ.
Çул хĕрринче усе ларнăччĕ пĕр сиче.
Унпа килесетĕмĕр куносрен...
Эп ун çинчен нумай сăмах калатă,
Ак, халь вара çав вĕрене йăванни.
Текех вăл чечеке ларас çук.
Ун вуллине пĕрле эпир услăхра вĕçес çук.
Ун хăрнă туратне тытса пăхатăп,
Хама çав вĕрене пекех туятăп.

***

Алăк урати урлă ура ярса пуснăччĕ кăна –
Шак хытса тăтăм.
Куç умĕнчи тĕнче яр уçă. Хăрушă!
Тепĕр утăм тусанах эпĕ сутă пек
Ялтăр çиçсе илĕн те çухалăп.
Алăк урати асамлă ăслай тейĕн,
Хăйĕн витĕр ахаль кăлармасть.
Санăн сăна, чĕлхÿне, ятна улăштарать.

Килте эпĕ Мишукчĕ. Тухрăм кăна,
Айван пултăм пуль, ят улшăнчĕ.
Халĕ эпĕ Михаил. Сарри, тетчĕç.
Халĕ – Желтов. Мĕн пулчĕ-тăчĕ сăнăмпа тата?
Атте-анне те палласа илеймĕ!
Халĕ эпĕ каçăр сăмсаллă,
Сивĕ куçлă, хьтă хăлхаллă...
Мĕн шуйттанĕ пулчĕ? Мĕнле алăк ку?
Ура ярса пусрăм кăна, тĕнче ярǃ уçăлчĕ.
Эпĕ: «Анне!», – тесе те каласа ĕлкĕреймерĕм,
Çута пек ялтăр çиçсе илтĕм те çухалтăм.

***

Мĕн каласшăн пулчĕ-ши çанталăк?
Карса хучĕ темĕнле шăналăк.
Çил кустарчĕ, ўкрĕ шурă юр.
Чĕрере ман çепĕç юрă пур.
Вăл юрра эп тахçанах кĕтсечĕ,
Çил пекех эп тĕлĕкре вĕçсечĕ.
Эпĕ яш ача – çўрел пĕччен.
Ĕлĕкхи пекех ўкет шур юр çўлтен.

***

Ăçта кайсан та такăнатăн,
Хăвна валли пĕрмай тупатăн
Усал сăмах, е çамкаран
Çапса ярасçĕ ăнсăртран.
Сана мĕн пуринчен нумай
Ĕç кирлĕ пулчĕ те, пĕрмай
Чупса çўретĕн йытă пек.
Пĕрре кулса тепре йĕретĕн.
Çук, куççуле эс кăлармастăн,
Ыр куллă та пĕрех пулмастăн.
Хўре çўлте пăлтăртатмасть.
Тен, çавăнпа сан кун ăнмасть?

***

Курасчĕ çын курманнине,
Тупасчĕ чун çухатнине,
Ăсласчĕ ăс пĕлменнине...
Вара тасатан эп çак тĕнче пекех
Тем тĕрлĕ çуталса илме пĕлеп пулех.

***

Тěнче ҫути таҫта ҫухалчě,
Мана хăр талăххăн хăварчě.
Выртса-тăма та питě йывăр,
Аран-аран ҫеҫ халě сывлăн..
Аса илетěн, питě канлěн,
Пăхса тăраттăм тин ҫуралнăн
Эп сан ҫине, эс кулнă чух,
Эп хам та пулнă питě шух.
Анчах мěн-ма-ха пуҫа пěкрěн,
Пěр кайăк пек пěччен ҫěн пěтрěн?
Вěҫеттěн эсě каҫа хирěҫ,
Пуҫна та пуль ку темěн ҫирěҫ?
Е пěр старик пек пит курпунлă, –
Ун пеккине таҫта эп курнă!
Утса пыраттăн питě шăппăн,
Туйю шыратчě шăкăрт-шăкăрт!
Туя вěҫне тăрса юлсассăн,
Телей тени йăлтах тарсассăн,
Сана пěрех эп манас ҫук.
Аса илетěп, ҫамрăк чух
Пěрле ҫÿреттěмěр пит лайăх.
Ҫавна аса илсе-ши лартăм?
Тен, ҫавăнпа халь питě йывăр
Сывлать пуль ман пекех ват йывăҫ?

***

Юр ҫинчи курăк ытла та симěс.
Ун илемне нимěнле илемсем те ҫитмěҫ.
Ку ěнтě, паллă-ха, уттавлăх.
Юр ҫинче кам ҫапла хуҫалантăр?
Юр вăл питě сивě, сивě, сивě..
Кам ун ҫине пырса выртнă – вилнě!
Пěрех вěт-ха, пăх-ха, шăтнă.
Ку курăкăн тăрри, тен, шăтăк?
Юр ҫинчи курăк калама ҫук илемлě.
Манăн куҫа курăнчě темле имлě.
Ҫак тěпте пуль тěл пулчěҫ
Пурăнăҫпа вилěм?
Эпě те ҫак тěле тем тума килнě?
Эпě темле пěр палламан ҫěрпыврпа пурăнатăп,

Çав çĕршывра курăк пек пĕтесрен хăратăп.

* * *

Пăлтăр-палтăр! çĕр куçатчĕ
Уçлăх варринче.
Кăптăр-каптăр! пек курнатчĕ
Пурнăç çĕр çинче.
Тăйлăк-тайлăк! пек утаттăм
Халь ӳкес пекех.
Çыннисем те, эп куратăп,
Чунсăр пулинех!
Эпĕ те вĕсем пек пулнă,
Эп те мур ачи.
Эпĕ кулнă, эпĕ сурнă –
Эп хула ачи!
Пăлтăр-палтăр! çеç тăватăп
Уркка хушшинче.
Кăптăр-каптăр! пек, туятăп,
Пурнăç çĕр çинче.
Ĕнтĕ çиттĕр, эп шутлатăп,
Пурăнса кун пек.
Аттене эп ас тăватăп,
Пулнă Улăп пек.
Эпĕ хам та питĕ пысăк,
Юман пек ӳсеп.
Турата çеç темшĕн усрăм...
Вăл та хур тӳсет.

* * *

Мĕн уçăлчĕ?.. Ним те уçăлман вĕт-ха!
Уçăлман пулсан мĕн-ма çыран?
Чун йăлт хыпса хупăланса ларнă.
Ăна, тен, хускатма та кирлĕ мар!
Хыпă хуппине тĕрлĕ тĕслĕ сăрлас та
Питĕ илемлĕ туса кăтартас.
Ай, лайăх ку! Ай, чипер, тейĕç.
Эсĕ вара ним пулман пек чей ĕç!
Çав айвансем çине пăхкаласа лар –
Атьăр, эпир те вĕсенчен кулар!
Хăвна хывăхпах улталама пулать çав.
Тулашĕ пур, шалĕ вара нимĕн чухлĕ те çук.
Çавăн чухне тумалла мар-и чӳк?

Акă, эпĕ пуçа пĕкетĕп, сывласа илетĕп,
Пĕр-икĕ сăмах та пулин калас тетĕп.
Сăмах каласан, чун кĕрет, пĕлетĕп.

* * *

Пилеш палăра пуçларĕ,
Çупкамĕ, паллă, йывăрланчĕ.
Тур панă парне пуль пулчĕ,
Чĕрем те çупкам пек тулчĕ.
Хĕп-хĕрлĕ темле кăвайт майлă
Тавралăх та хăвăрт çуталчĕ.
Пилеш çутипе утса кайрăм,
Кайсан, çаврăнса пăхкаларăм.
Эп хам та пилеш пек пултăм,
Пилеш пек тепре хыпса çунтăм.

* * *

Ăшă çумăр çăвать кунĕпе.
Ăшă çумăр çуса çĕрĕпе!
Ăшă çумăр çăвать ĕмĕр-ĕмĕр.
Çумăра аса илтĕмĕр эпĕр.
Тахçанах вăл çуса тĕнчипе,
Халь те пулĕ çăвать çрипе.
Ăшă-ăшă çумăр çăвать,
Ман чуна çу пекех тăвать.
Питĕ лайăх мана ас илме,
Çумăр айĕн пăхса çÿреме.
Çумăр халĕ кăвак-симĕс куçлă,
Ман ÿт тăрăх шăрçа пек кусрĕ.
Ăшă çумăр вĕт шăнкăрав пек
Шăпăр-шăпăр! та шăпăртак! тет.

* * *

Август, август, шăллă çурла.
Пĕр сăмах та тек ан шарла!
Вĕрене те, ак, шăпăрт ларать.
Вăл çеç тĕнчене халь курать.
Сивĕ, тет, сивĕ. Сивĕ-сивĕ!..
Кaçсемне çанталăк сивĕ.
Çĕрĕне ларса шăнса кÿтрĕм.
Çулçăм та çĕре пĕр-иккĕ ÿкрĕ.
Çав çулçа курса эпĕ те ÿкрĕм.
Çул çинче выртатăп ÿппĕн.

Çĕр сивĕ, сивĕ, сивĕ, сивĕ!..
Манăн та ватăлма вăхăт çитрĕ.
Çӳç пĕрчисем, сисмерĕм те, шуралчĕç.
Ӳт, тем пулчĕ, пĕрчĕкленсе ларчĕ.
Çак самантрах вилесрен хăрарăм,
Вĕрене пекех шуглама пуçларăм.
Ирпе хĕвел тухсан аванччĕ,
Ăшă çил çинче туратăм авăнатчĕ.
Сĕткенĕм те туна тăрăх чупатчĕ,
Çулçа çутă сăн çапатчĕ.
Хĕвел, чăн та, кĕтгермерĕ – тухрĕ.
Сивĕ пулсан та чун сывларĕ.
Хайĕн вырăнне ман чун тупрĕ.
Вĕрене тек урăх шарламарĕ.

***

Пурте пур чухне пурте пур пек.
Çак сăмахсене те сырма кирлĕ мар тек.
Анчах кун хыççăн кун иртет,
Каллех темĕн тăвас килет.
Пурри те пĕтет!
Пуçлатăн вара ĕçлеме...
Ĕçне туса пĕтертĕн те – каллех ирĕклĕ.
Каллех ним те кирлĕ мар пире.

***

Ыйтарайми куçпа пăхса илетĕп тепĕр хут.
Епле пĕтми çунать кĕрхи сар çулçă!
Ăна ача пек эс пуçтар-ха тепĕр хут,
Унпа пĕрле вара çунан эс ху та...
Туятăп эп хама çав çулçă тăрăллă –
Тӳпе те вĕт ку темĕн йăлтах тăрăлнă.
Таса та тарăн-мĕн чăвашăн тӳпи –
Унтан кăларăпăр эпир хĕвел çути.

***

Каллех çулçă йăтрĕ шур хурăн,
Каллех симĕс тум çийĕнче.
Кăштах пăхса илĕм салхуллăн –
Çулçи кăшт вылять çил çинче.
Мĕн-ма сана çил хыт юратрĕ,
Мĕн-ма туй тăвать суркунне?
Пĕрех эп сан пек тек пулаймăп,

Пĕрех пĕлес çук чун мĕнне.
Таçта ларса юлтăн эс шăппăн,
Пĕр авăк çырма хĕрринче.
Çӳретĕн-ха эпĕ те лăпкăн,
Ман çӳç те вĕçет çил çинче.
Кăштах сан пекех тайăлатăп,
Кăштах юратас та килет.
Сан евĕр, тен, çулçă йăтатăп –
Манра та çур кунĕ çурет!

* * *

Каллех, акă, эп ас илетĕп
Пĕрле кĕл туса ларнине.
Пĕлетĕп, пĕрех эп вилетĕп.
Пурнасчĕ-ха, тет, кайиччен.
Пĕрех тепĕр хут куратăп
Тĕнче ялтăрса тăнине.
Çавна та курса кулатăп –
Туятăп телей пуррине.
Сăмах хыççăн ӳкрĕ сăмахăм
Ачашшăн ачаш ача пек.
Тен, çав вăл тĕнче юмахĕ
Кĕрет чĕрене майĕпен...
Кĕрет те юлать ялан ăх.
Вара майĕпен аса ил.
Мĕнле хĕрхенсе каларăн:
«Пĕтетĕн эс, Михаил!».

* * *

Пăхатăп та, курăк питĕ савăк,
Йывăç тураттисем те темле авăк...
Эпĕ вара, тĕнче пĕтнĕ тенĕччĕ...
Пăхăсăн, мĕн чухлĕ чĕрĕлĕх!
Тӳпе темле тĕкĕрленнĕн...
Кайăк пек шăхăрса юрласа ятăм.
Пĕтмен-ха манăн ятăм!
Кивĕ çулçăн çĕртен çĕклене илпĕм,
Эпĕ те пурăнма тепĕр хут килпĕм.

* * *

Эпĕ ĕнтĕ ку çулта çĕр пин хут упрĕ.
Ку çул çинче эпĕ тем те тупнĕ.
Паян та, акă, пуçа пăркаласа пырапăп.

Паян эпĕ хама хам пуçласа куратăп...
Пĕчĕкех те мар эпĕ, анчах темле сăнсăр,
Мĕн тунă пĕр ĕç килсе тухать ăнăçсăр.
Тĕссĕр кăна плаща йÿле янă,
Хирĕç пулакан пуль тем те калană.
Эпĕ халĕ питĕ вăйсăр, тата питĕ хăравçă,
Çав вăхăтрах темĕнле ăслă шухăшлавçă.
Çакă тĕнче пĕтесрен питĕ пăшăрханатăп,
Хирĕç пулакансене ăнлантаратăп.
Акă, пĕр пĕтнĕ чуна çăлма тесе тăнăччĕ,
Çавăншăн мана хама та тăна кĕртнĕччĕ.
Ÿкĕтлеме ăна никама та кирлĕ мар-мĕн,
Вĕсен туррисем тахçанах тарса пĕтнĕ-мĕн...
Акă, халĕ вара, кур, пыратăп яр уçă.
Йывăçсем те вĕт-ха ман пекех çара пуçăн.
Çул хĕррипчи йывăç пек хама куртăм,
Çак çул çинчи пĕтнĕ чунра хама тупрăм.

* * *

Вунтăватта çаптăр-ха,
Вунтăватта çаптăр...
Эпĕ те çырмара кĕрлесе юхăп.
Унтан вара акана тухăп.
Пĕр сăмах та пулин акса хăварăп.
Çакă пулĕ ман ака.
Вунтăватта çаптăр-ха.
Акатăп...

* * *

Анаталла ĕрĕхтерет пек вăхăт
Пĕр аллăран иртсен.
Пĕр чупнă чух ача пек шăхăр
Хăвна халь кăтартас пекех.
Эп ту тăрне каллех пăхса илетĕп,
Каллех вĕт хăпарма тивет.
Унтан анма, паллах, пĕлетĕп.
Анчах та хăпарма халь кам пĕлет?
Эп Сизиф пек чупса анатăп.
Çÿле тек хăпармашкăн вăхăт çук!
Çак ту çинче эп тек пулмастăп.
Мнçе хут улăхса та – халĕ çук!
Халь тин ман вăхăт иртрĕ пулĕ.

Шуйттан-и, тет, анаталла туртать?
Манран çӳлте тăрса пулмарĕ...
Эп аялта та пит хитре выртап!
Анаталла ĕрĕхтерет пек вăхăт.
Пĕр аллăран иртсен вара хăвăртланать.
Ун чух вара шуйттан пекех эс шăхăр,
Ун чух вара пăкку та сан шанать!

* * *

Мана пĕрре пăхса илни те çитетчĕ.
Анчах та эсĕ пĕрре те пăхмарăн.
Эпĕ çак тĕнчере çук пултăм...
Çук, пуç çине вут çумарĕ,
Эпĕ çуннине никам та курмарĕ.
Пĕрех, чĕре самантрах çунса тухрĕ.
Чунри сĕтлĕ кӳлĕ те хухрĕ.
Выртатăп халь типпе юлнă пулă пек,
Тепĕр темиçе минутран вилетĕп пек.
Анчах вилесси-тăвасси пулмарĕ.
Пулă тени çĕлен-калта пулчĕ тăчĕ.
Юшкăн çийĕн авкаланса шуса кайрăм –
Пурнăç мĕнне питĕ лайăх ăнлантăм.

* * *

Юр йăтнă йывăç пит хитре,
Юр йăтнă йывăç пĕлĕт пек.
Çил вĕрсенех вăл авăнать,
Çĕре шур юрĕ тăкăнать...
Вара эс ху та йывăç пек
Юр йăтнă та... хитре!

* * *

Мĕне курма пĕлет-ха ман чĕре,
Юр ларнă турата... тата хура çĕре?
Çӳлте çӳрет пас тытнă шур турат,
Çĕрте вара ман ӳт выртать.
Мана та çак çĕртен тунă пулать!
Мана та халь иртен-çӳрен таптать!
Тен, çавăнпа чĕре ман ыратать,
Тен, çавăнпа хăйне турат пекех курать?
Турат пулса тăрасчĕ ман кăштах,
Сив-сив хĕлпе пас тытăрччĕ йăлтах!

***

Çĕр те пĕр тĕрлĕ тĕнче
Халь çуралать çак тĕлте.
Нивушлĕ вăл та пĕтет,
Нивушлĕ вилĕм килет?
Вилĕм килсен та кала
Çакă пĕр-икĕ сăвва!
Сăвă куçран пăхнă чух
Вилĕм тени ку чух çук!

***

Пусса ăна хура тусан,
Çисе хĕвел шурă хутне.
Эп хам та пурнăç майлăскер,
Çак пĕтнĕ кĕнеке пекскер...
Йăлтах кивелнĕ кĕнеке
Ман алăра каллех тулать
Çĕн шухăшпа, çĕн туйăмпа...
Вăл манăн пурнăçа сăнлать.
Хама куратăп паттăр пек!
Вĕт эпĕ паттăр пек пĕрмай
Çӳрерĕм çĕр çинче нумай...

***

Пирс усал тĕрĕслет,
Сырма тĕпне сĕтĕрет.
Эх, чупаттăр аялла –
Чупнă чух савăнмалла!
Шăпăр-шăпăр ал çупаттăр,
Ача евĕр йăлл! кулаттăр.
Питĕ лайăх, ах, анчах
Пурнăç мар-çке сырмара!
Упалентĕм тăвалла –
Пурнĕрех хăпармалла!
Эх, кулаççĕ пек манран,
Тăвалла хăпаранран.
Эй, ара, илемсĕр-çке,
Ку чăваш урасăр-çке!

***

И, шыв тулли, шыв тулли.

Çыран епле чĕтать-ши?
Чĕре тапать, чĕре çунать,
Чĕре епле чăтать-ши?
Е каям-ши шывсем тăрăх
Шывсене хумхантарса.
Иртсе кайнă çамрăк вăхăт
Тек килмест пуль çаврăнса?
Çумăр çăвать тӳммен-тӳммен
Пĕр тăвăлса-чарăнса.
Çеçенхирти шурă хурăн
Ас илтерчĕ пек сана.

* * *

Çулçă ӳкрĕ çӳлтен майĕпен...
Ӳкнĕ чух эс ăна хăвăрт тыт!
Сан аллу çине ӳкнĕ чухне
Вăл темле савăнса чĕтренет.
Эп ӳкмерĕм, пĕтмерĕм-ха, тет.
Пĕр самант, тен, пĕр авăк шуплать,
Кам-ха тытрĕ мана, тет, пулать?

* * *

Ĕнтĕ эпĕ йывăç мар та...
Урăх тек ӳсеймĕп.
Эпĕ халĕ вата çын пек
Пуç пĕксе çӳретĕп.
Кун килсе иртсе кайсан та
Пĕртте савăнмастăп.
Е пĕр симĕс çулçă пур-тăк,
Çулçăна вылятăп.
Хĕвел тухнă чух ача пек
Йăлт! кулса тăратăп.
Çав анчах. Халь ĕнтĕ эсĕ
Кун çинчен пĕлетĕн,
Ман валли çак тĕнчене
Çĕклесе килетĕн.
Ĕнтĕ эпĕ, йывăç мар та,
Пурпĕрех çулçи пур!..

* * *

Пĕрре хып çĕрле ташлатăн,
Тепре йĕр туса ашатăн...

Çил вăтăрать вăхăтран,
Хĕве юр кĕрет ăнсăртран...
Вара сыхланса пек пытатăн,
Пуçа çиле май пăркалан.
Çил майăн килен сыннене
Пуçа кăшт пĕксе ăсатан...
Епле тепĕр чух хитре
Тĕл пултăм пĕр çамрăк хĕре.
Е тепĕр ват сын аран
Ӳкес пек утать урапан...
Тем тĕрлĕ тĕнче таврара.
Пуçа пĕксе утнă май
Курмасăр юлатăн нумай.

***

Пĕчĕк çеç телей эп тупрăм.
Шурă юр пусса эп утрăм.
Çĕнĕ юр шур мамăк пек,
Утса пăх-ха, тенĕ пек...
Утса кайăттăм татах,
Тупăттăм чăн-чăн çăтмах.
Ах, анчах халь кĕмелле,
Çак суртра ĕçлемелле...
Кунĕпе пăхса та ларăп
Кантăкран урамалла.
Çак сăвва çырса хăварăп,
Шур юра ас тумалла...

***

Эс çак пулăма кĕтнĕренни,
Эс çак илеме туйнăранши,
Тĕнче хăй чунне уçса пачĕ.
Çĕре пирĕшти, тен, анчĕ?
Ун, чăн та, пур икĕ çуначĕ!
Мана кайăк пек çуллăрларĕ...
Чăнах та хĕвел пек сăн-пичĕ
Сăнка сиктерни пек çисрĕ...
Тĕнче халь чăнах пирĕштиллĕ –
Пулатпăр эпир те ăшшиллĕ!

***

Пурӑнасчӗ лӑпкӑн,
Пурӑнасчӗ шӑппӑн,
Чун ҫеҫ илтмелле.
Мӗн тума вӑрҫма, тет,
Пирӗн килмелле?
Пурнӑҫри юмах пек
Вӑрттӑн курӑнасчӗ,
Чечек пек пӗлесчӗ
Вӑрттӑн пуҫ тайма.
Хӗвелпе пӗрле те
Ҫутатса ҫӳресчӗ,
Тутлӑ тӗлӗк евӗр
Кӑмӑла тупасчӗ...

***

Ӑшӑтать пуль теттӗм,
Юрату кӗтеттӗм...
Килсе ҫитрӗ сивӗ, –
Туйӑмсем ман кивӗ...

Юр пӗрчи пек сикрӗм,
Ҫулпа вӗҫсе кайрӑм.
Пӗртте хӑрамарӑм, –
Ҫутӑ ман сукмакӑм.

Ҫакӑ ман телейӗм.
Эп вӗҫме пӗлетӗп...
Юр пек эпӗ халӗ –
Юр ман чун хавалӗ.

***

Урамра темӗнле йывӑҫсем...
Ҫул ҫинче пур усал йӗрринсем.
Усал йӗрӗ ҫине пусрӑм эпӗ –
Пулса тӑтӑм эпӗ те упӑте!
Усал йӗрӗпе каяс марччӗ...
Малтан эп вӗҫсе ҫӳресеччӗ...
Такам тӑм пӑшалӗ печӗ,
Ку та пӗттӗр, терӗ...
Ҫунатӑм ӗнтӗ усӑнчӗ,
Усал тени мана тытрӗ.
Пӗрех урӑх ҫул тупатӑп,

Ыр çын йĕрĕпех каятăп.

***

Çĕнĕ уçлăх уçăласса кĕтрĕм...
Кĕтнĕ кун нумай пĕтрĕм.
Ку тĕнчере пурăнас килместчĕ,
Кунта пĕр çын та тăван теместчĕ...
Çав уçлăха çул шырарăм,
Çула тухма питĕ хăрарăм.
Унта илемлĕ пулĕ те – пурнăç çук.
Анчах кунта та эсĕ – ăçтиçук!
Тен, çавăнпа кунта та пит аван?
Утса пыратăп урампа аран-аран...
Питрен ирхи çил çупăрлать...
Илемлĕх-мĕн ирпе çеç çуралать...
Хĕвел те ман пекех тапаçланать!
Эп çĕнĕ уçлăхра çӳретĕп вĕт, атьсем!
Таçта çухалчĕç тĕксĕм пĕлĕтсем...
Эс, ăçтиçук, пĕрех çак уçлăхрах
Çĕнелтĕн вĕт ирхи çак самантрах!

***

Шăлса кайрăн пулать сар çулçа?
Хура çĕр тăрса юлчĕ сан хыççăн.
Сан пекех эп кунта халь пулса –
Эп хупларăм çĕре сарă çулçăн...
Мĕн тума эс çĕре халь уçса,
Сивĕре шăнтас терĕн-и халĕ?
Хуçа пек эс кăштах шутласа,
Йĕркелесе-ха тесе-ши хăтланнă?
Апăрша, юрамасть пуль ун пек
Турăран эсĕ урăх иртеймĕн!
Сарса панă çулçа çил кăна пĕлейрет –
Хăш тĕле пăрахать-ха ирçемĕн?

***

Пĕр кăмăл тупнă чух пĕрле
Çырар-ха пĕр-пĕрин çинчен.
Эсĕ çырса тахçан пĕтчен –
Эпĕ çыратăп çил çинче!
Пĕтчен унта нимех те курмăн,
Пĕлеймĕн мĕн килес тухать.

Ку çил çинче вара çил майăн
Санăн чуну та татăлать.
Йывăç тени... Чечек тата –
Пур çут çанталăк ман умра!
Халь пурте çил пек авăнать,
Халь пĕтĕмпех çилпе тулать.
Халь ман ăш-чик те çиле май
Пĕр çĕкленет те лăпчăнать.
Мана икке хальхи тĕнче
Ку сутăра та пайăрать...
Çапла пулех, пĕччен тени
Пĕччен çĕртех ку юлтăр-ха...
Çилсем çинче те çырнине
Кăшт çӳлерех çĕклесчĕ-ха...

* * *

Çĕр тĕрлĕ тĕл пулу, çĕршер ăсчах...
Ăçта çитсен те эс шыран хăвна...
Эс чăн та пур, анчах çынра кăна.
Кашни çынра тупан пĕр-ик сăмах.
Сăмах пĕрлештерет пулас пире?
Кирек мĕн каласан та – Турă пек
Тĕнче хай тĕллĕнех чечекленет тепре.
Апла, эс пул ялан чĕлхеллĕ те хитре.
Çапла шутлатăп эп çак çĕр çинче.
Çынпа тĕл пулăп та – калатăп пĕр сăмах.
Эп пур çак тĕнчере, мĕн-ма тесен,
Сăмахламалăх пур-ха пĕр ăсчах.

* * *

Паянтанна çырма пуçлатăп
Çак кулленхи пурнăç çинчен.
Хам пурнăçа эпĕ куратăп
Хĕвел шевлиллĕ хум çинче.
Юхать ман пурнăç юхан шыв пек.
Икĕ енчен икĕ çыран...
Такам унта пырса пăхсан та
Нимех те курмĕ паянтан.
Мĕн-ма тесен эпĕ пытарăп
Сив çил çĕклснĕ сул хума...
Эп питĕ майĕпен юхатăп,
Тытса пăхаймăн эс мана.
Юххи те çук, шыв хумĕ те...

Çыранĕ те пит курăнмасть пуль.
Анчах та тепĕр чух, куратăн,
Çав хум çапать çыран çине.
Ун чух ман пурнăçăм кăра.
Ăна тытса чарма та çук!
Çавăн чухне эп курăнап
Чăнах та юхан шыв пекрех...
Ахаль чухне ман ним те çук.
Пит лăпкă кÿлĕ пек выртап.
Паянтанпа çав кÿль çинчен
Кашни кунах кăштах çырап.

* * *

Иртет çав вăхăт... Çак самант
Мĕнпе тулса килет-ши, тетĕп?
Е ахалех вăл çухалать?
Юхать вара тĕнче хăй тĕллĕн...
Енчен те эп çак саманта
Чунпа вĕрсе те çĕклесен...
Ун чух вара ку вăхăт та
Ахаль иртмест-ха пулĕ тетĕп?
Алра пĕр сăвă пур халь тин.
Ăна эс вуласа киленĕн...
Çав сăвăри йĕркесенче
Самант тени те пур-тăр халĕ?
Çаппа пуль çав, самантăм манăн,
Эс ан çухал ман умăмран.
Ун чух вара тĕнче çуралĕ
Пĕр самантран, пĕр самантран...

* * *

Кĕрхи куносем килсе çитсен,
Эс мĕн çинчен шутлатăн-ха?
Çулçă пекех ÿсе çитсен,
Сив çил çинче вĕçетĕн-ха!

Вĕçетĕп эпĕ çулçă пек
Пĕтсе çитес чухне.
Ялт! ялтăрапăл сутă пек
Хĕвел çинче тепре.

Кĕрхи куносем, пĕлетĕр-и,

Тепĕр чухне пит муллă-ске.
Хăвна туятăн... Тухрĕ-и,
Сан витĕр çак тĕнче вĕçсе?

Вĕçетĕп эпĕ сулçă пек
Пĕтсе çитес чухне.
Ялт! ялтăратăп сутă пек
Хĕвел çинче тепре.

Тен, çавăнпа пуян пекех
Хăвна тытатăн тĕпер чух.
Халь ĕнтĕ сулçă чиперех
Вĕçет вăрман çинче.

Вĕçетĕп эпĕ сулçă пек
Пĕтсе çитес чухне.
Ялт! ялтăратăп сутă пек
Хĕвел çинче тепре.

* * *

Эп сырма пăрахрăм...
Ним те мар пек халь.
Ним те шутламастăп –
Пурăнма аван!
Пĕрре пăхрăм, иккĕ –
Пурте пĕр пекрех.
Мĕн тума, тет, кирлĕ
Сăвăри чечек?
Пурăнма пит лайăх
Ним те çук чухне.
Ак, сырма пуçларăм,
Лартăм чечекле.
Ун чухне, куратăн –
Пурнăç сăвă пек.
Пурăнас тесссĕн,
Çырса пăх-ха эс!

* * *

Кала-ха, кала... Каламастăн.
Каларĕç те... Кавăн, терĕç.
Лартасчĕ кăна вуга!
Эх, çав кăмака, тем пекехчĕ.

Пиçсе эпĕ тухăттăм. тен?
Ун чух эс çисе пăхсассăн,
Мĕн калăн вара? Тепĕртак
Кала-ха, кала... Каламастăн
Ку, туплă тесе çинĕçем.
Çапла çав, тăванăм, эс, кавăн.
Эс кавăн пулсан, мĕн калан?

* * *

Çулçă сăмахлă хурăнпа
Тупатăп эпĕ пĕр чĕлхе.
Сип-симĕс тумлă тĕнчепе
Эп калаçатăп çил пекле...
Мĕнпе вара, ун пек тума
Хурăн пекех вĕт пулмалла?
Пулатăн çав, хăвна тупсан,
Çав хурăн пек кăшт шавласан...
Сăмахĕ унăн çулçинче,
Вăл калаçать пек çил çинче.
Ун шухăшĕ ун тĕсĕнче,
Хĕвелпеле вылянинче...
Илтме кĕлт вĕренесчĕ те.
Тен, çавăнпа пырса тăратăп
Эп ун çумнех. Ак, таянатăп...
Епле эс хурăн, шавлăскер.
Е, мĕн тетни, ӳсе пыратăп,
Турат çумне турат хушатăп.
Ачасене вĕçтернĕ чух
Пушшех шавлатăп питĕ шух!
Ман шухăшăм ансат-ансат,
Сăмахăмсем таса-таса...
Калатăп эпĕ сын пекех –
Тĕнче сăмахлă пĕтĕмпех!

* * *

Кая юлса çитрĕм пуль –
Эп тахçанах килменччĕ.
Вăрман çипĕн вĕçрĕ чун –
Кун пеккине пĕлменччĕ.
Мĕн-ма-ха тесен, ку
Чун ăшĕнче пулчĕ.
Эпĕ тăраттăм ку чух

Хам та юман шутлă...
Ӳсрĕ пулать манăн та
Кукăр пулсан та туратăм.
Эпĕ те халь тăханса
Çӳретĕп таса симĕс тумлă.
Эх, çил тени, çил тени!..
Мана та пуçран ачашларĕ.
Кукăр турат текенни
Парăс пекех хускалчĕ.
Эпĕ те – вĕçрĕм те кайрăм –
Вĕçетĕп тӳпе таран!
Çук, вăхăтра пуль çитрĕм –
Çулçă саран вăхăта...
Сартăм та, чунăм сипленчĕ –
Вĕçрĕм çапла юман пек.
Эсĕр курса-и, тăванăм,
Юман та вĕçет карап пек.

***

Утти ман, утти, атьсемĕр –
Ытла та эп хып уксахлап!..
Инкек килессе пĕлмесĕр
Пĕр çамрăк, эс пăх, ыткăнать.
Тен, эп те çапла вĕçсе пынă,
Вăй пулнă-ха та çамрăк чух!
Ак, халĕ вара утса тухрăм
Çав пĕтнĕ çулпах тепĕр хут.
Анчах та эп халь ĕнтĕ урăх.
Ура уксахлать ман хытах!
Эх, пулнă çав эпĕр сурăх –
Пăхсан та курман ватлăха!..
Ак, халĕ ман пĕтнĕ ура та –
Чылай ыратать пĕр тĕпе...
Мĕн-ма эп ăна упрамарăм,
Пит хытă чупас-ха тесе?
Чупса эпĕ тухрăм, чăнах та,
Çав пĕтнĕ пĕр çул хĕррипе.
Анчах та ăçта-ха хăватăм –
Вăл юлчĕ пулас çул çинче.
Халь, акă, утти ман, уттийĕ
Ытла та вăраххăн тухать.
Эх, пулнă пулсан кун çулийĕ –
Тепре эп пĕрех чупкăнлап!

***

Пĕр çавра çине пăхса
Эпĕ пурăнатăп.
Эп таçта пырса тухса –
Унта ыр куратăп.
Ак, пăхса ларатăп та
Çаврасем шутлатăп.
Эп ăçта кайсассăн та
Каялла тухатăп.
Кайрăм-кайрăм пĕринче –
Каялла килмес пуль.
Ах, анчах та чĕринче
Ку ачан çавра пуль?
Эп каллех юратрăм вĕт.
Ак, тăван çĕршывăм,
Сан пата та килчĕ вĕт
Çапкаланчăк ывăл.

***

Тахçанхисем, хурăнлăхра тĕл пулнисем
Сасартăк сиксе тухрĕç куç умне.
Тахçанхи пек, ĕлĕкхи пек шап-шуррăн
Пуçне усать шур хурăн ир енне.
Мĕнле эс пурăнатăн, тет, пит тĕлĕнсе!
Ара, курманнисем çĕр çул та пулĕ...
Пăхатăп та, шур хурăнах, ĕлĕкхиех –
Ун çумĕнче нумай эс курнă ырлăх.
Ак, халь тăкать, тăкать ман пит çине.
Ай, кăтăклать ман питĕме шур юр!
Мĕн пулнă, иртнĕ, кайнă, халĕ мĕн,
Халь тин çав кăтăк кирлĕ мар та пулĕ?
Çапах та кăмăлнă, шур пас тытса,
Хура çĕр çинелле хуллен тăкса,
Эп ăнсăртран, кĕтмен çĕртен тĕл пултăм...
Тен, çавăнпа самантлăха хурăн пекех эп шуртăм?

***

Кулса илтĕнни эсĕ, хĕвелĕм?
Кулса илтĕм эп хам та сан пек.
Кĕпт пулсан та ман кăмăл çĕкленчĕ,
Кĕпт пулсан та тем пысăкăш эп...

Тахçанах çут хĕвелĕм тухманччĕ –
Кĕрхи кун ăмăрпа çав тулать.
Ак, паян вăл уяв пек тумланчĕ,
Паянтан вăл хĕвел пек çунать.
Çук ниçта та хура тĕм таврашĕ,
Ярса илнĕ пурне те шур пас.
Паянтан курăнать хурăнташăн
Шур пас тытнă хура катăркас.
Эх, хĕвелĕм, сан пек ман куласчĕ,
Сан пекех питтеле сăнланса...
Кулса илтĕм те, чăн та, ăнлантăм –
Эпĕ хам та хĕвел пек пулас!

***

Ман тĕнче, тин ăнлантăм,
Пĕчĕкçеç пĕр ача.
Çав ачашăн шуйлантăм –
Çăлса пăх-ха ăна!
Ак, чăнах та, ача пек
Сиккелетĕп кăна.
Ача евĕр пулсан, тен,
Эс хăтарăн хăвна?
Эп шуглатăп, утатăп
Тĕнче тăрăх пĕрмай.
Тĕнчене эп куратăп
Ача евĕр, хам май.
Тепĕр чух, тен, куççуль те
Чĕререн ман тухать.
Ах, чăваш ачине, тен,
Пулăшасшăн пулать?
Тĕнчере пĕр ача çех
Юлнă, тен, халĕ тин...
Эсĕ халĕ çавна
Пулăшатăн... Хăть вил!
Пĕр ача çеç юлать-и?
Мĕн тăватпăр... Ах, Тур!
Вăл тĕнче пек пулать-и? –
Çав тĕнче зсĕ ху!

***

Хĕвел тухать-ха... Савăнатăп.
Хĕвел, эс ман пекех-ха пул!

Çак тĕнчене курсан, шутлатăп,
Пурне те пил паратăн пуль.

Кала, вăрман, пĕр вăтанмасăр:
Тавах сана, хĕвел, эс пур!
Çак тĕпрен куçса каймасăр
Тĕнче нихçан та пĕтмĕ, кур!

Кала тата, ку çын вăрмансăр
Тăрса юлсан халь мĕн тăвать?
Эп çавăнпа пĕр ывăнмасăр
Пĕр йывăçран вăрман тăвап.

Çак шыв та, акă, шăнкăр-шăнкăр...
Эп пăхнипе вĕт тасалать.
Тупе тăрсассăн тарăн, чакăр,
Мĕн шутлани – пурнăçланать.

Çапла шутлать чăваш килнишĕн,
Хĕвел тухнишĕн савăнать.
Тен, вăл теме аса илнийĕн,
Тен, вăл та хĕвелпе каять?

***

Миçе хутчен эп йăнăшман пуль,
Ĕçе тытса тума тăрсан.
Ун пек те тунă, тен, кун пек те –
Пĕрех ман ĕçĕм ăнăçман.
Мĕн-ма тесен, эп иглемен, тен,
Чăваш каланă пĕр чăна.
Ĕç пуçличчен малтан эс ил-ха
Халăх пуçтарнă чăн ăса.

***

Ыйтулать тĕнче. Мĕн ыйтать?
Мĕн ыйтни те çук, паллă мар вĕт-ха!
Мĕн хуравĕ, тет. Ăна кам пĕлет?
Ыйтăвне те вĕт халь пĕлместпĕр-ха.
Кун пек чух, паллах, аптăрамалла,
Çапкаланчăк пек курăнтармалла.
Ним те çуккă ман, кирлĕ мар тĕнче –

Ҫулсем юппинче эп тăрап пĕччен...
Халь тин кайăпши... Тен, каймастăп та.
Эп ларса канап ҫулсем юппинче,
Эп ларса канап, кăштă шухăшлап –
Ак, ҫул ыйтăвĕ куҫ умнех тухать.
Ман хурав пĕрре! Пăхса лартăмнӑҫ...
Пăхса ларнăҫем хурав килчĕ-те!
Ман хурав тĕнчи симĕс куҫлă-ҫке,
Ăҫта кирлĕ, тет, ҫавăтсах каять...
Хальлĕхе вара, кил ҫумма ларма.
Тĕнчен пĕр ыйту, пул хурав пама!
Эп ăнлантăм тин. Мĕн ыйтни – эс ҫеҫ!

* * *

Пырса кĕр те – никам курман евĕр,
Сывлăш евĕр ҫӳре ҫаврăнса...
Ку тĕнче те – ҫапла тăнă теппĕр –
Эпĕр пулнă чухне юр ҫуса!

Пĕр ҫулнйĕрсĕр, пĕр йĕр хăвармасăр
Эп ҫӳрерĕм пĕр уҫлăх туса.
Кам мана шыраса халь тупайтăр, –
Ман пĕр йĕр те юлман кунта!

Эх, ҫапла сывлăш евĕр пуласчĕ,
Кăшт сывласчĕ ҫанталăк пек...
Ун чухне эп сана мĕн тусачĕ?–
Эп туйсаччĕ хама Турă пек!

Пĕр тĕлленчĕк пекех эп ҫӳрерĕм,
Курăнмарăм никамăн куҫне.
Юр ҫуса пĕтĕмпех пĕтерчĕ
Эп ҫӳренĕ ҫулсен йĕррине.

* * *

Чипер кăна ăста хĕрсем,
Тур тунă пек шур улмасем!
Калаҫнăҫем ăса уҫатăр,
Шутланăҫем – турăланатăр.
Халь ĕнтĕ сирĕн пек пуласчĕ,
Шутлатăп, хам ҫинчен кăштах.
Сирĕн пекех хĕрсе шутласчĕ...
Сирĕн пекех, тен, калаҫсан,

Эп хам та Турă пек пулатăп...

* * *

Çÿлтен эп шурă юр пек çурăм,
Эп çил кăлартăм упнăçнем.
Эп çут çанталăк пек чук турăм,
Утса та вăйăм пĕтнĕçем.
Вăй çук чухне эп вăй кăлартăм
Хам ăш-чикрен, хам чĕремрен.
Хĕвел те тухнă пек эп пăхрăм,
Эп пултăм вăйлă пĕлĕтрен...
Тен, çавăнпа шур юрĕ çурĕ?
Тен, çавăнпа вĕрет сив çил?
Манăн чĕре асамлăн сурчĕ,
Ыйтса та илчĕ пысăк пил.
Халь тин эпир тек аптрамастпăр.
Вăй çук пулсан та утăм пур.
Çак шур çула утса тухатпăр,
Çул çук пулсан – хыватпăр пуль?

* * *

Хĕрсем кулса пыраççĕ,
Каяççĕ пухăва...
Вĕсем пăхса курмаççĕ
Чунри ман пăлхава.
Кулаççĕ те ирттеççĕ
Инçе каян çулпа.
Çын ирткнĕçем ÿкеççĕ
Сăмахĕсем – чул пек.
Вĕсем пек мар пыратăп,
Вĕсем пек мар пурнап.
Эп ватă курăнатăп
Çак çамрăк пурнăçра.
Мĕнех, вĕсем те иртчĕр –
Иртсен те ирттĕр сул!
Эп çакăнтах выртатăп –
Мĕн-ма тесен, эп чул!

* * *

Каллех тинкелетме пуçларĕ,
Кăларчĕ чăн хĕл сассине.
Вăл хăй сăмахне каларĕ –

Хӗл ҫитрӗ хула варрине!

Малтан вӑрманта та аванччӗ.
Унтах пурччӗ манӑн апат.
Хӗл ҫитрӗ те ҫавӑ ҫухалчӗ –
Мӗнле халь пулать шӑпа?

Пӗр чӗптӗм пулсан пурнатӑп.
Ҫинҫе ҫеҫ сасса кӑларап.
Ӑна кам илтсен те пултарӗ –
Хӑйне калама – эп пурнап!

Пурнать-ха ку, пӗчӗк кайӑк,
Ку халь те вилмен-и хӗлле?
Вӑл пултӑр, апла, чӑн палӑк.
Чӗр палӑк ҫак юр ҫинче!

***

Тӗнче кусран пӑхса юрларӗ:
Эс япӑх мар, эс лайӑх ҫын!
Мӗн калани сая каймарӗ,
Ман чӗрере те пур ыр юн.

Мӗнле тӗнче пӑхать хӑюллӑн
Ҫак чӗрепе пӗрле паян.
Нихҫан та вӑл чупман пек юсӑн,
Сӑмахсӑр утӑм та пусман...

Ялан калана, лайӑх пултӑр,
Нихҫан ан ҫулӑхтӑр усал.
Тен, ҫавӑнпа пӑхса ҫеҫ юлтӑр
Усал сӑмах калан юлхав.

Сахал юлса пирӗн кунсем те,
Юрсем каяҫҫӗ хӑйне май.
Пӗрех кӗскелнӗ каҫсене те
Тупатпӑр чӑн телей пӗрмай.

***

Чиркӳ умӗнче тӑратӑп...
Кӗрет те тухать такам...
Хама та унта куратӑп –

Вĕт эп те çынран ытла мар!

Шуплатăп, ку пурнăç терчĕ
Пурне те пырса тивет.
Мана та илсе çитерчĕ
Тур çурчĕ умне тивлет.

Эп ĕнтĕ чăлах та марччĕ,
Кĕменччĕ кун пек çылăха.
Пĕрех эп кăна курманччĕ –
Курман эп кун пек чăлаха!

Тем пулчĕ мана, пĕлмерĕм,
Кăлартăм пур-çук укçана.
Никам та çавна сисмерĕ –
Никам та ан куртăр ăна!

Эп патăм, хама пуль, мăнтарăн.
Туймарĕ те вăл панине.
Хамран çавăн чух хăрарăм –
Вĕт эп те шăпа аллинче!

Ун пек пулас марччĕ-çке, тетĕп.
Пулмастăп кун евĕр чăлах!
Пĕрех тепĕр хут килетĕп
Тур çурчĕ умне пуç çапма.

* * *

Пурнăç нумай та юлмарĕ.
Вăхăт чупать сиккипе.
Вăл никама та курмарĕ,
Иртрĕ çак çул варрипе.

Вăхăт, мĕн-ма кăтартмарăн,
Хăшĕ ман çул тĕрĕсси?
Çул юппинче чарăнмарăн –
Пулмарĕ хама пĕлесси.

Вăхăчĕ те, ку, сахал пек.
Ваттăн тăрап çул çинче.
Килĕм тĕлне çитмесен те
Вилесчĕ ман çул юппинчех!

Çул юппинче, тет, пурнăç
Упрать хăйĕн чăн вăйне.
Çул юппинче эсĕ курăн,
Ху халĕ кам пулнине.

***

Кĕтме пит лайăх...
Чун, кĕтÿçĕн,
Хăйне курса кăшт лăпланать.
Халь ман теме кĕтсе тăмалăх
Чун вăйĕ кăшт пуçтарăнать.
Кĕтех, апла, эс кĕт, кĕтÿçĕн,
Çитсе тухатăн ху патне...
Ху пурнăçна аса илетĕн,
Кĕтетĕн тепĕр пурнăçа...
Унтан, тен, çиткелет кĕтнийĕ,
Хăй çутипе капăрланса.
Таçтан çапать ку çутă тейĕн?
Тен, çавăнпа кĕтеп сана!

***

Тута калуллă предложени
Сăмахсăрах темле калать.
Çав тутапа эс килĕшетни –
Тута тени вăл уппалать!

Тута кулать асăрхануллăн.
Пулма ыйтать кăшт туслăрах.
Ан, тивĕр, тет, мана. Эп туллă,
Юратăва пултарнăран.

Тута кулать айванлăн пек те,
Анчах шалта хăюллăх пур.
Çын çын патне утса çитет те
Кулса пăхать малтан тем чул.

***

Тăван чĕлхепе пуплемесĕр
Пĕр кун та ан иртгĕр урăх.
Унсăр эс юлăн чĕлхесĕр,
Пулăн, чăнах та, сурăх!

Тахçан çамрăк чух аванчĕ.

Нихҫан чӑвашла калаҫман!
Шутланӑ эпир, халь вырӑс
Хутать тӗнчере курӑс.

Тен, ҫавӑнпа та хутмарӑм,
Хама вали кулӗ тумарӑм.
Ун чух шӑхӑрса эп ҫӳрерӗм,
Ялан ямӑтти шыраттӑм...

Ун чух, ас тӑвап, илтӗм
Ют тӗнчерен нумай.
Тен, ҫавӑнпа эпӗ вилтӗм,
Чирлеттӗмчӗ эпӗ пӗрмай.

Халь тин тулса ҫитрӗ кӑмӑл.
Чӑвашӑн та ҫитрӗ вӑхӑт!
Таван чӗлхепе калаҫатӑп,
Пӗрех эп чӑваш пулатӑп.

***

Ҫурхи каҫ сывӑрать кайӑк майлӑ.
Сар чечек куҫне хупрӗ пулас.
Тӗнчене тӑнлама пуҫа тайрӑм –
Пӗр кана манӑҫать ялти сас.

Шӑхӑрать шӑплӑх – чунлӑ тейӗн.
Шӑхӑрать уҫлӑх пек ҫурхи каҫ!
Тем пекех итлесен те илтеймӗн
Сассине. Вӑл ытла та мӑнаҫ.

Эпӗ юлтӑм пулех хӑлхасӑр.
Шӑхӑрать шӑплӑх – пуҫсӑр пекех!
Тачӗ уйӑх пӗр кас хускалмасӑр...
Кӑкӑрта канӑҫ ҫук – текех!

***

Паян пурпӗрех сыратӑп
Шапнпурӑ чечек ҫинчен.
Юра ҫавӑнпа та хыратӑп
Ҫул тасалса тухинчен.
Шр-шр! та шр-шр! илтӗнетчӗ
Юра хырнӑ чух пӗчӗкҫӗн.
Шур юр хырнӑҫем килетчӗҫ

Пуҫа йӗркесем хуллен..
Ак, халь те ас илтӗм пулать те
Ӳкертӗм алри ручкӑна.
Манран вулакан, тен, кулать те
Кулсан та пулать вӗт ҫырма!
Кула-кула эп те ҫыртӑм
Хыт ҫул хӗррипчи юр ҫинчен.
Ҫав шурӑ кӗртре те куртӑм
Шап-шур чечеке тӗттӗмчен..

***

Сӗм тӗттӗм ҫӗрте, тӳпе тӗпӗнче
Темле, тен, тасалӑх пур?
Ҫӳлтен ӳксе тулнӑ шур юр тӗлӗнче
Хӑвна тупери пек кур!
Ҫав тӗттӗм ҫӗрте, тӳпе тӗпӗнче
Таҫтан тупӑнать пуль ҫут та!..
Нимрен хӑрамасӑр вара ҫул ҫинче
Ҫурта пек юра эсӗ ҫут та
Уттар пурнӑҫ тӑрӑх... Питӗ таса
Ҫав шурӑ юр пек эсӗ ху та!

***

Эп виличчен, ман алӑ чӑтӗ-ха,
Мӗн кирлине те туса парӗ-ха...
Ак, халӗ те унпа ҫырса ларатӑп,
Е мӑнука тытса пӑхатӑп.
Ҫӳлрен-ҫӳле ӑна ывӑтнӑҫем,
Ал ӗҫлесе ывӑннӑҫем,
Хама туятӑп кӑшт телейлӗ...
Ҫав аларах пуль ман чӗре те,
Ҫав аларах ӑс-тӑн, шӑпа...
Пӗрре туса, тет, вӑл мана ҫын евӗр?
Тепре, кӑшт, ак, чӑтсан, тен, ху та турӑлла
Туса хуратӑн, ӗҫлесен, тепӗр ача...
Ӑна вара эс чӑнласах ҫӗклене
Ху аллупа ҫӳле те. Ӗҫлесе тупгана
Ҫын вӑл. Вӑл халь санран маттур!
Хӑйне хӑй тунӑ ҫын, тет, турӑран та тур!

***

Пӗрре ҫех пӗр ӗҫе тумарӑм,

Йывăр пулчĕ кайран хамах.
Пĕр-иккĕ кăштах вăрçкаларăм,
Ĕçĕ юлчĕ вара татах...
Ĕçĕм ман пухăнса та пычĕ –
Ĕлкĕрсе те пыма май çук.
Ал-ура та йăлтах ывăнчĕ
Хайне майлă «ĕçленĕ» чух.
Ĕнтĕ эпĕ çине тек тăмастăп,
Кирлĕ мар мана ним те халь.
Ирпеле пахчана тухмастăп,
Вăхăта ирттеретĕп ахаль.
Ĕç вара пухăнсах пычĕ...
Арман чулĕ пек майран
Кунран-кун çакăнса тăчĕ.
Мĕнле чăтăп ĕнтĕ кайран!?
Йăтса пынă чухне сывлăш пĕтрĕ,
Питĕ тăвăр-çке пулчĕ чуна.
Чăтаймарăм, илсе те петĕм,
Илсе петĕм чул евĕр çăка!
Лăштăрах ăш-чикре пулса кайрĕ, –
Пĕчĕк ĕç тытса турăм эп!

***

Сăвă савни пек туслă!
Лартăм унпа мĕн ирччен.
Сăнпичĕ шап-шурă хутăн
Хуралчĕ кăштах, çырнăçем...
Хама эп темскер каласшăн
Çыртăм пулас пĕрмай.
Чунра такама курасшăн
Шырарăм пулас нумай.
Анчах та тем пек ларсан та
Ним те иккен калаймас.
Хама сăвăра курсан та
Никам та мана паллаймасть.
Пĕрех питĕ туслă пулчĕ
Сăвă çырса ларма.
Йĕрке çырнăçем тулчĕ
Туйăм ман хĕрнĕ чуна.
Халь ĕнтĕ нимрен хăрамастăп,
Пур халĕ ман чун савни!
Ăна эп пĕрех пăрахмастăп –
Вăл та пăрахмĕ тетни?

***

Юр çăвать. Ку ним те мар.
Урăх ним те кирлĕ мар.
Хула тăрăх эп çӳрерĕм,
Ывăнма та пуль пĕлмерĕм...
Майĕпен хула вăранчĕ,
Чакаксем вĕçме пуçларĕç.
Юр çăвать. Ку ним те мар.
Урăх ним те кирлĕ мар.
Юр çине пăхса тăратпăр,
Тем ăнланнă пек пулатпăр.
Алăпа тытса пăхатпăр,
Сивĕ те, пĕрех савнатпăр.
Юр çăвать. Ку ним те мар.
Урăх ним те кирлĕ мар.
Пĕлĕте пăхса тăратпăр,
Сив пите юрпа çăватпăр.
Юр пĕрчи пире хуплать,
Пит-куçа та кăтăклать.
Юр çăвать. Ку ним те мар.
Урăх ним те кирлĕ мар.

***

Ма çырма пăрахрăн, тусăм,
Сăмахран пуль вĕт хăвна эс тунă?
Сăвă çырнă чух кăна каллех çуралăн...
Пĕртен пĕр сăмах – чĕре хуралĕ –
Вăл пĕтме памасть сана, тĕнче!
Çырнă хут вăл, калăн, кĕленче.
Çав хут витĕр курăнать тĕнче.
Тем те пĕр курса эс тĕлĕнсем те,
Лăпланса вара ларсам пăртак.
Ма çырма пăрахрăн эс татах?
Çырнăçем пулатăн вĕт эс ху та чаплă,
Хут çине ӳкернĕ чуншăн та яваплă.
Ак, каларăн пĕр сăмах «чĕкеç».
Вĕçсе кайăн ху та ак кĕçех!
Чĕкеç мĕн-ха, вăл нимех те мар.
Каласа пăхсам эс «эп сывмар».
Çавăнтах кайса ӳкетĕн – пыр та кур!
Ак, епле вăл кăтартать хĕн-хур.
Çавăнпа та эп çырмастăп урăх. Çук!

Эп ҫырсассӑн тем пӗтессӗм пур!
Пӗр сӑмахсӑр савӑнса ларап,
Саншала, тӗнче, сӑмахсӑр калаҫап.

* * *

Тавах сана, пӗчӗк катаҫӑм,
Эс хӑтлӑ та вӑйлӑ асамҫӑн
Сиплетӗн ман пӗтнӗ чуна,
Сыхлатӑн ҫак иртнӗ куна...
Иртсе, ак, пыратӑп каллех эп
Ката ҫумӗпе ача пек...
Пӗр ҫулҫӑ, куратӑп, талчӗ.
Мӗнех вара, вӑл та ҫуталчӗ!
Мӗн-ма эс ӑна тытмарӑн?
Ката пек хӑватлӑ пулаттӑн...

* * *

Лӑпкӑн кӑна пырса ҫапрӗ
Ман питӗмрен ӑшӑ ҫил.
Тӳпе тепӗр хут ҫутарчӗ
Ҫурхи тахҫан кӗтнӗ пил.
Халь ӗнтӗ асамлӑ ҫеҫке пек
Куратӑп усал тӗсне,
Кӑштах уйӑратӑп ырра та,
Ырри ҫумӗнчи сынна...
Халь эпӗ чечек пек сывӑ
Ҫыратӑп ҫак ҫӗнӗ сӑвва.
Пӗр вӑхӑт эп пултӑм чечек пек,
Унтан эп пӗтеп пӗтӗмпех!

* * *

Мӗн чухлӗ сӑвӑ ҫакӑ тӗнчере!
Мӗн чул поэт! Анчах та чӗрере
Пӗрех темскер ҫитмен пек туйӑнать.
Чӗре каллех сӑвӑ ыйтать...
Пӗр сӑвӑра тӗвӗленет чӑн пурнӑҫ.
Суя теме те ҫаврӑнмасть чӗлхе.
Суя пулсан та – сӑвӑри пек пултӑр!
Ман пурнӑҫ. Ӑна вуланӑҫем, тепӗр чухне
Куҫҫуль тумламӗнче ялтратӑр ҫак тӗнче.
Аса илсен темскер, пулатӑн ху та сӑвӑ,
Кӗрсе каятӑн урӑх хутлӑха...
Унта тупатӑн хӑтлӑ ҫӗршыва!

Çапла. Каллех ыйтать чĕре сăвă çырма.
Çырмасăр та май çук. Тĕнче ытла та хытă.
Пĕрмай ыйтать укçа, çĕклет патак...
Ун вырăнне çырас килет пăртак!
Ман кун çапла çын хыççăн çÿремест.
Çил евĕр юрлама та вăл пĕлмест.
Ун хăйĕн пур юрри. Çав юрă сăвăра.
Тен, сăмахра та мар вăл? Кам пĕлет, ара?
Тен, сăмахсен хушши, нимскер çырман çĕрте
Ман шухăш ялтăрать пĕр сассăр çиçĕмле?
Çав ним çук çĕрте чăваш тĕнчи выртать.
Çуралтăр çав тĕнче çак самантра...

* * *

Сана тута тусан тĕнче те
Туталлă пулчĕ пулмалла?
Тута тăвать кил телĕнчи
Хĕм сапакан хĕрлĕ улма та!
Йăмра та питĕ мăн туталлă...
Çулçи вара, çулçи, чăнах та,
Çÿхен-çÿхен çеç чуп тăвать...
Апла, ман чун туталанать!
Тут кĕнĕ тĕнчере çапла
Пуçлатăп пулĕ юрлама?
Тута тăсатăп кăмăлтан...
Кам чуп тăвать ăна кайран?

* * *

Çĕр çине ирпе шур тăм укосн те,
Утса пынă чух пÿрне кÿтсен те,
Эп туятăп, пур-ха, пур çулла.
Çав çутса пырать пуль ман çула?

Кирек мĕн килсе тухсан та пурнăçра,
Хуралса килсен те куçăм. Таврара
Эп куратăп, Тур шуратнă пуль, сана?
Кĕркунне, эс ман патра хăна кăна!

Кĕркунне пĕрех килсе çитсен те,
Куççульпе турачĕ йĕпенсен те,
Асăрхатăп, шурă хурăн пек
Куçусем сан симĕс çулçă пек.

***

Эп пыратăп утса...
Ерипен эп пыратăп.
Чĕре евĕр çулçа
Таптама та хăратăп.
Çыншăн, тен, ним те мар –
Ак, таптарĕ те кайрĕ.
Сарă çулçă вара
Çĕрпе тулчĕ те ларчĕ.
Эп ăна çил çине
Çĕклесе те пăхатăп.
Ах, амантнă, тесе
Пуçтарса та хуратăп.
Вăл çӳретĕр пĕрле,
Ман амантнă чĕре!
Тен, мана та кĕрет
Çулçă сăнĕ?

***

Тухрăм та эпĕ, куратăп, тĕнче –
Ăстаçă сăрланă пек çут кĕленче.
Ун витĕр пăхан та, куран темĕн те –
Пĕлмен япала та тухать куç умне.
Ак, эпĕ сисетĕп, çĕр айĕнчен
Шур кăрăç тухать çуталса пит чечен.
Ăна та тататăн, тăватăн тута
Кая юлса писнĕ хăмла çырлине.
Ак, килчĕ пĕр кайăк – мана пĕр юлташ.
Вăл темĕн каларĕ. Эп ăнланмас.
Унтан килчĕ шăплăх. Ларап тăнласа.
Тĕнче-мĕн, чăнах та, таса япала!
Ларсассăн, туяп, мана та аван...
Аван, кайăк евĕр, темскер калама.
Аван пуль, чăнах та, шур кăрăç пулма –
Çырла пек хĕп-хĕрлĕн пулсан та юрать!
Ăна та пырать те пĕр хĕр, ак, татать...

***

Çемçе çанталăк çемĕçтерчĕ
Чул евĕр хытнă чунăма.
Çумăр çуни канлĕрлемерĕ

Пылчăк пулсан та çул утма.
Ак, эпĕ сывласа илетĕп
Чĕп-чĕрĕ, нÿрлĕ сывлăша,
Çуренĕçем илсе килетĕп
Чун туйăмне пĕрле хушса.
Халь ĕнтĕ эпĕ те çемçелнĕ
Çемçе-çемçе ăш çумăр пек.
Сана çак çумăрпа кĕлернĕ –
Кирлĕ пулать çакă тÿпе.
Пĕрле ăна илсе эп килтĕм
Хам хулпуççи çине хурса.
Сана çапла эп илĕм-тилĕм
Шăварăттăм çумăр çуса...
Вара, тен, эсĕ те çемçелĕн
Шыва кĕртен ача пекех.
Алă çупса темле илемлĕн
Кулса та ярăн юххи пек...
Ун чух вара тепре пуçлатпăр
Юратупа та выляма...
Ан тив, çанталăк çумăрлантăр!
Пире вăл кирлĕ çăвăнма...

* * *

Çак хуплăхран эп тек тухаймăп.
Çак хуплăх – çăмăрчăк кăна.
Унтах хама эпĕ çухатнă,
Е тупнă пулĕ тепĕр хут?
Çу çумăр, çу татах та хытă.
Мĕн пур таса мара юхтар!
Çуса тасатнă хыççăн ыррăн
Пăхса çÿретĕп юххи май.
Епле халь çутă та таса,
Епле ку тăрăх çутă саслă.
Халь ĕнтĕ епĕ те çарран
Чупса çÿретĕп ача евĕр.
Çат-çаттăн илтĕнет чупни,
Сасси чуна та уналать.
Мĕн-ма ача шыв чăххи пек
Шыв тавраш пит юратать?
Çав хуплăхран эп тухаймарăм –
Чупатăп çумăр айĕнче...

* * *

Аптрамалла, халь тем тумалла тет?
Чунра, чăн малтан, сăмах тупмалла.
Сăмахĕ те пулнă, те пулман – паллă мар.
Унсăр, çапах та, тĕнче çуралман пуль?
Акă, эпĕ те тупрăм чунра, сыртăм сăмах.
Пулса кайрĕ чунра темĕнле çут çăтмах...
Тепĕр сыртăм та куртăм, тĕнче урăхла!
Тĕнче пĕтĕмпех-мĕн сырнă пек чăвашла...
Кĕтĕм унта, пăхрăм та – пурте таван!
Никам та унта аптраса халь ларман.
Каланă та, сырнă та пуль пин сăмах –
Мĕн каланă, кунта йăлтах халĕ пур.

* * *

Паян мана питĕ çăмăл:
Çурхи çутă ир пекрех.
Чунра пухăнать ырă кăмăл,
Çыносем те, курап, хитререх!
Ура айĕнчи шурă пăр
Шатăрр! туса ванать.
Çак пурнăçра çапла-тăр
Пуçа та ватма пулать?
Çутă та ăшă çур кунĕ
Сиплĕх кăна пиллет.
Çул тăршшипе шурă юрĕ –
Çисе те пăхассăм килет!
Курак сассине илтеп те
Хытах кăшкăрса ярап.
Курак пек, тен, эпĕ хама та
Тĕнче тăррине курап.

* * *

Пурнатăп эп çанталăк пек,
Унпа пĕрле эп – ир те каç.
Çурхи çап-çутă куççульпе
Куççем тулаççĕ те пĕр кас,
Йăлтăрр! кăна кулса ярать
Телей туйса тута хĕрри.
Е хăвăрт çеç мулкач пекрех
Йĕр хăварап та юр çине,
Тухса шыратăп çут ирпе

Мулкач хăварнă çав йĕре.

***

Хĕвел тухасса та кĕтетĕп.
Ун чух, тен, сас парĕ пĕр кайăк
Хĕвел тухасса çеç кĕтетĕп...
Хĕвел, ак, çап-сутă хуралçă
Тӳпе тăрринех хăпарчĕ.
Ак, чăн та, тaçтан пĕр кайăк
Юрри пуррине пĕлтерчĕ.
Тин-тин! те тин-тин! текелет,
Хĕвел юррине вăл пĕлет.
Хĕвел те пит ăшшăн килет,
Юр çунă тĕлте ялтăрать,
Паян ытларах кăмăллать
Юр кайнă хура вырăна...
Унта пухăнать те вара
Юр шывĕ ĕçмелĕх кăна.

***

Эп хама аякран курман –
Питĕ ывăннă çын майлă
Шыв çине те пăхса тăман.
Шыв юххи вăл хăй те хайлавлă.
Итлесе тăнăçем сăмахла...
Пăхса тăтăм та тем каларăм:
Шăнкăр-шăнкăр! терĕ пĕр сас –
Мангала темĕн пулчĕ пулас?

***

Çанталăк хăйне кăтартать:
Халь ĕнтĕ тата мĕн тăвать?
Халь ĕнтĕ ун майлă пулас пек
Эпĕ те шăхăркалап...
Хăй вырăнне халь тупас пек
Кив çулçă ун-кун чупкалать.
Пĕччен те иккен пит лайăх!
Кив çулçă пек мар та, паллах,
Çанталăк пек каламалăх
Тупрăм эп пĕр сăмах!

***

Ирпе çил-тăвăл вăйланчĕ,
Çурт çумĕнчи хурăна тапăнчĕ.
Аврĕ те аврĕ, шавларĕ...
Пĕрех парăнтараймарĕ!
Унтан пурте кĕме тăчĕ,
Тĕртрĕ те тĕртрĕ – пăрахрĕ.
Халĕ ĕнтĕ пăх-ха, шăп.
Çил хыççăн çур кунĕ килет!
Урăх вара мĕн кирлĕ?
Тухрăм та утрăм çурхи çулпала,
Вăрттăн каласрăм çап-çут тумлампа.

***

Ак, ĕнтĕ çурхи ăшă çил те
Хускатрĕ çемçе турата.
Эпĕ тахçан çиленниĕ
Иртсе те каять пулмалла.
Каллех тепĕр хут эп пăхатăп
Вăранлă ача пек ачаш.
Тĕнче ман пĕрре те хытман-мĕн,
Халь уншăн та савăнап.
Халь ĕнтĕ эп хурăн пек ăшшăн
Çу тăршшипех ларап.

***

Ун чух кĕркуннеччĕ... Шап-шур
Ларатчĕç кунта чечексем.
Халь ĕнтĕ куçа хупса кур
Вĕсем тайăлса пăхнине...
Ун чух питĕ лайăхчĕ çав.
Телейлĕччĕ эп тилĕ пек.
Таратчĕ тавра çап-çут
Ӳт тĕслĕ сап-сар кĕркунне.
Эп тугă пулас та, нимех те
Мана кирлĕ марччĕ ун чух.

***

Ĕнер ман мăнук çуралчĕ.
Тĕнче ача евĕр суталчĕ.
Халь ĕнтĕ ман та ун евĕр
Çын пек çураласчĕ-ха тепĕр...

Ун пек ман пуласчĕ таса.
Çитет пуль çул тăрăх куçса!
Çук, урăхла май килмест,
Эп урăхла çул пĕлмес!

***

Сивĕтсе пăрахрĕ, ÿкрĕм чирлесе...
Сивĕне пĕрле, тет, чир çÿрет йерсе.
Сыхланма пĕлмерĕм, курăнать, аран
Сывлăш та тухать ман карланкăран...
Акă халь выртатăп, ÿсĕркелесе...
Кăшт ларсан вăй илĕп, эс çавна пĕлсем!
Ак, ĕçе те çитрĕм, тытрăм ручкине,
Виç йĕрке пуль çыртăм шурă хут çине.
Çавăнтах лăпланттăм – турăм эп те ĕç!
Халĕ, сиплеНмешкĕн, эрехне те ĕç...
Эй, çапла пулмасăр! Сивĕре анчах
Эпĕр пурăнаттăр кăшт урăхларах.
Тен, чир-чĕр те килĕ? Пурăнăç вара
Сывалсан, туятăн, кирлĕрех тата.
Сивĕтсе пăрахрĕ, ÿкрĕм чирлесе.
Чирлесе выртатăп – телее кĕтсе...

***

Санпа тĕл пулманни çĕр çул та пулĕ иртрĕ,
Шăммăм-шаккăм та ĕнтĕ çĕрсе пĕтрĕ пуль
Сывлăшăм таçта çĕр тавра çаврăнса çĕтрĕ,
Ятăм та сан асунтан тухса ÿкрĕ...
Çапах та, акă, каллех ним пулман пек тăрататăп,
Каллех сан çине хĕрхенсе çеç пăхатăп...
Эп мар-мĕн, эс ху йăлт пĕтнĕ!..
Эсĕ вĕт мана манса кайса çапла çĕртнĕ.
Акă халĕ эпĕ ÿт-пĕвĕме тÿрлетрĕм,
Юн таппине те, еппе вăл вăйлă, çĕнĕрен хускатрăм.
Сывлăшăм вĕрин тапса тухрĕ, ăш-чикĕм
Тек ĕнтĕ ыратса аптратмасть тек.
Ятăм тăсса хам юратнă юрра тепре.
Тепĕр çĕр çул ним те мар пурăнатăп-ха...
Сан çума та тепре пырса ларăп-ха...
Ун чух вара мĕн калăн? Тепĕр чух
Çумра ларнишĕн вĕт пулатăн чух.
Эх, питĕ лайăх пулчĕ сан çумра ларма!
Майĕпен-майĕпен те пĕтсе пынăçем

Çулсем, чăн та, çĕр çул та иртрĕç пуль?

* * *

Хама шыратăп пĕрмаях,
Пĕрмай хама шырап...
Хама тупсан, ак, самаях
Эп çын пекех пулап.
Паян та, акă, тарăхап –
Эп нимĕн те туман!
Эс тĕплĕнрех пăхса тухсам
Ăнман ĕçе татах!
Вара хăвна, тен, ăнланан –
Санра çав – япăххи!
Вара каллех тупа тăван –
Шыратăн лайăххи!
Çапла кунран-кун майĕпен
Эс улшăнсах пыран...
Эс лайăхрах пулса пырсан,
Тĕнче – лайăхланать!
Акă мĕнле иккен ку çул –
Хăвна шыранă çул.
Эс хăвна майлă урăх пул,
Хăвна тапта та – çăл!

* * *

Пур манăн пĕр чир. Чĕтрет чĕрĕ тир.
«Шăнса пăсăлман-ши, ку?», – тетĕр.
«Касу, – тет, пĕри. «Грипп», – тет, тепри.
Тӳссе курнисем, тен, пĕлетĕр?

Çынсем умĕнче пуçа çĕклеймиз,
Тăратăп хытса пĕр сасӑ-чĕвсĕр.
Пит йывăр иккен шăпа çĕклемми...
Чăваш, эс ытла та пит чĕмсĕр!

Пăрахрăн та кайрăн. Çĕр юлчĕ йĕрсе,
Çырмаллă-пӳрнеллĕ усал аллинче.
Чĕрӳ тытамаклăн кăрт-карт! халь тăвать.
Такам, тен, ăна та усал пек пăвать?

Манра темле чир. Кĕрет вăл чĕрре.
Нимле те çĕнсе илейместĕп пĕрре!

«Касу, – тет, пĕри. «Гринп», – тет, тепри.
Хăйне хăй пĕлет-ши чăвашăн чĕри?

***

Чул айĕнче ман чун выртатчĕ.
Йĕри-тавра тусанлă çул...
Тати-сыпписĕр çын утатчĕ.
Таптантăм пулĕ темĕн чул?

Шăпа, тен, палăртрĕ вăйне?
Эс такăнтăн çав чул çине.
Чул айĕнчи чуна кăлартăн,
Пĕлмесĕр хўтлĕхсĕр хăвартăн.

Хăрах уран аран тăран!
Ыратнине кăшт пытаран...
Кама кўрентĕн эс пулать?
Эсир иртетĕр... чул юлать.

Сана эп курăнман пачах.
Сан умăнта эп чул анчах.

***

Мĕн-ма мана малтан пĕтерчĕç,
Мĕн-ма салатрĕç асăма?
Халь, тем тесен те, пурнăç терчĕ
Хытса çеç юлчĕ чунăмра.

Эп сыхланас тесе шутларăм.
Эп тăхăнтăм кĕççе тумтир.
Çынран кулма пăртак пуçларăм...
Çук, çемçелмест ăшри сив чир!

Халь кам пулса çынна тухас-ши?
Манса эп кайнă хам çинчен.
Кам ман чунра илем курать-ши?
Пĕр сăн палли юлман çĕртен.

«Çĕклен!» – тесе, кĕрлет пĕр сасă.
Чул пек чунна çапса эс ват!
Нихçанхинчен çунать таса
Çĕрте таптаннă чĕрĕ вачăк!

***

Пĕр утрав.
Вĕçсĕр тинĕс хура.
Ак, каллех вăл пуçлать тапăнма.
Ишĕлет шыв айне чĕр тăпра...
Чул хысакĕ пул хирĕç тăма!

Чул пӳ-силлĕ кунта йывăçсем.
Чул тымарлă тин тухнă чечек.
Ачашла сивĕ çил, тивĕçсем!
Тинĕсре пĕр утрав тăр пĕччен.

Тăр пĕччен.
Пĕр утрав.
Халиччен никама парăнман!
Чашкăрать чакнăçсем шур пăтрав:
«Пурпĕрех çук пулан!»

***

Çывăрать лăпкă çын, хускалмасть те.
Çисе тултарнă, какăрать.
Ăшĕнче вăштăр ăшă çил вĕрет.
Ыйхăлать лăпкă çын. Куçне хупнă.
Кам ăна шăппăн пырса чĕртĕ?
Хаяррăн кăшкăрса шарт! вăратĕ?

Эй, тепĕр енĕм!
Сан çине анчах ман шанчăкăм.
Вăрат мана.
Ăнсăртран, сисмен хутран питрен çупса яр.
Ман чун ыратнипе йĕрсе ятăр.
Ăшчик хускалтăр.

Мĕскĕн çын найкăшса илет.
Вăл пĕчĕкрен те пĕчĕк пуласшăн.
Вăл хирĕç тăрасшăн мар.
Вăл тĕссĕр çанталăк.
Пуç çине ăшă çумăр çăвать.
Тĕтре... Лайăх.

Эй, чун тĕпĕнчи тепĕр енĕм,
Тух кунта!

Вăрат мана.
Пĕтĕм вăйупа çĕр çумне лапчăт.
Тапта мана, ват, нимĕр...
Çĕнĕрен тăм ту!

Кайран вара?
Кайран, хирĕç тăнăçем, çирĕпленсе пырăп,
Хурçă касăп.
Мĕн чухлĕ мана ватăн, çавăн чухлĕ çирĕпленĕп.
Мĕн чухлĕ хивре сăмах ярса çапăн,
Çавăн чухлĕ тасалăп.
Асап тӳснĕ çын улăпран та аслă теççĕ.
Вăл чаплă.
Уйрăммăн эпĕ тĕлĕрсе выртатăп, мăкалатăп, мăкланатăп.
Тикĕтпе çу мана, тăвăлпа çап, хĕвелпе çунтар!
Чун хытса çиттĕр, алă чуллантăр, куç хĕрсе пăхтăр.
Эй, тепĕр енĕм! Сан çине анчах ман шанчăкăм...

***

Ман хăватăм хама кура.
Кăмăл вара кăра.
Чупса каятăп та ӳкетĕп.
Чĕнмесĕр выртатăп.
Хăват ӳснĕçем ӳсет...

Нумайччен хăш чух выртатăп.
Пуçра шухăш çавăратăп
Пурнăç çинчен, хам çинчен...
Ӳкмесĕрех çын пулаймăн,
Йăнăшмасăр ăс пухаймăн...

Майĕпен ура çине тăратăп.
Татах такăнатăп!..
Вăй çитменни пĕтерет, тем?
Вăйлă пулма вăхăт!
Çĕр çинче пурăнатпăр вĕт!

Эп хăватлă хама кура.
Кăмăл вара кăра.
Пĕр такăнатăп та, пĕр ӳкетĕп...
Тем, тепĕр утăм тума
Тăхтаса тăратăп.

***

Хама çын пек эпĕ туятăп..
Çапла пĕр пĕчĕк ĕç тусан,
Таçта çити вĕçсе каятăп
Хампа пĕрле пĕччен юлсан.

Анчах та темшĕн тепĕр чух
Ниçта кайса кĕме те çук.
Тума пуçланă ĕç çине
Пăхса тăратăп.. Çĕр тĕпне!

Мана-и кирлĕ çак тĕнче?
Эп пуранни чылай пиççе.
Янрать алра пуш кĕленче...
Пите çĕленĕ пек кĕççе!

Туйман эп кăкăр хĕснине,
Курман куççуль юхтарнине...
Тахçантанпах, ак, ас тумас
Каçса кайса савăннине...

Çĕн сывлăш кирлĕ. Уçă варкăш!
Çын сынлăхне çÿлте тытар!
Пĕр тытăнсан ĕçе пĕр харăс,
Çуртсем ÿсеççĕ пит капмар!

Пĕрре çеç кăкăрăм сывлать,
Сăн-питĕме хĕвел тухать.
Хама çын пек эпĕ туятăп.
Пĕр пысăк ĕç тытса тăватăп!

***

Пит шавлă тĕнчере пĕр сас:
«Çынпа вăрçмасăр пурăнас.
Парсан илес, çапсан тарас –
Тĕттĕм кĕтес пире хавас...».

Мĕнле апла эс пурăнатăн,
Епле чăтатăн шăпшăха?
Пĕрре кăна хирĕç тăмашкăн
Чунра капланмĕ-ши хавха?

Пулсан пурах вăл. Ан пытар!
Пĕр сасă та пулин кăлар.
Куккук пĕчченн, ав – авăтать,
Кичем вăрман хавас тăрать...

Пĕлетĕп, шăпăхлă тĕнче –
Шарт! çурăласлă кĕленче –
Кĕтет чăн-чăн сăмахăма.
Эп йыхăратăп тăхăма...

Пĕрле пулар, пĕрле юрлар,
Пин сасăллă тĕнче тăвар!
Çурать ман кăкăра пĕр сас:
«Эпир вĕт халĕ те çăвас!».

***

Çынран килет, çын тăвать.
Пĕтĕм ĕçе çын курать.
Пит тĕлĕнмелле çакă тĕнчере!
Ăнланма пăрахрăм хамăн чĕрене.

Шухăшлама ман чĕре манса кайрĕ пулмалла.
Тапасса та вăл тапать темле халĕ урăхла.
Кашни кунах эп килте кино курса ларатăп...
Ларнăçемĕн майĕпен чул пек хытса каятăп...

Тен, çавăнпа çын ĕçне хакламасăр пăхатпăр?
Калас тенĕ шухăшпа ăшпа хурса тăратпăр.
Кашни калас сăмахне тытать чĕлхе вĕçĕнчех!
Мĕн-ма кăштах юррунпа пуçламастăн çийĕнчех?

Çынран килет, çын тăвать.
Пĕтĕм ĕçе çын курать.
Пит тĕлĕнмелле çакă тĕнчере!
Кам тытса тăвать-ши пирĕн ĕçсене?

***

Ăçта утмалла-ши, кампа каймалла,
Мĕнле ĕç туса ман çын пулмалла?
Хам тĕллĕн утса тĕллевсĕр çулпа
Пĕр йĕрсĕр çухалăп ирхи сывлăмпа...

Чунри сукмакпа тухап мăн çула...
Чупать хура халăх унта-кунталла.
Ăнлан-ха, юлташ, кампа каймалла,
Ертсе каякан ман çук пулмалла?..

Тăратăп çĕтсе айван ăс-тăнпа.
Хăватлă сасса тăнлатăп чунпа:
«Ан тăр эс хытса, шав ут малалла,
Ялан халăхпа пĕрле пулмалла!».

Çынсен ĕçĕнче вăрттăн вăй упранать.
Вăл тĕрĕс çулпа илсе чуптарать.

***

Кунран кунах хама хистерĕм
Хăюллăрах пулса çитме.
Юратура пĕр хăрамасăр
Шырарăм пурнăç асапне.
Тăван çĕршыв, тинех çуралтăм
Ăша илсен çак тĕнчене!
Ман тĕнчере, кĕрсен куратăн,
Ялсем унта, тем чул хула...
Çыр хĕрринче кашлать вăрман,
Çиле иплет авăк хăва...
Атте унта, унта ман йăх –
Вăл хатĕр тĕпретме тăва!
Çĕкленчĕ чун, çакна курсан –
Татах та эсĕ хăватлан!
Юрлать сухаçă майĕпен,
Суха тума ăна аван...
Шырать ман куç тăванлăха...
Епле эп курăнап айван!
Каçа юлса пирĕн пата
Килсе кĕрейрĕç паттăрсем...
Чунри чи тарăн илеме
Уçса кăтартрĕç хăрхăмсем!..
Хастаррăн тĕлкĕшен куçсем,
Çунса кĕлленмĕç тек вĕсем!

***

Хыт хирĕçӳ упрать тĕнче
Хăй ăшĕнче.
Шырать чĕр шыв вар тĕпĕнче

Хăйĕн çулне.

Çук, юратмасть хирĕçнине
Манăн чĕре.
Пĕрре çапла халь çырнине
Хăват çитмест чĕрме.

Итле, епле чĕр сасăсем
Халь шăратаççĕ кайăксем!
Тĕнче пĕр карăмлă ялан –
Аван паян.

Аван паян юлташпала
Пĕрле çапла ларма.
Пĕрне-пĕри килĕштерме,
Ĕçре пĕрле пулма...

Телей те мĕн йăлăхтарать.
Тавай пĕрле вăйма!
Куçаттăр тăвăлпа пĕрле,
Пăхаттăр пуç пулма...

* * *

Пур пурнăçăн илемлĕх мелĕ...
Пур, курăнать, пĕрпеклĕх сĕмĕ –
Пĕр пек çынсем, пĕр пек тумсем,
Пĕр урамри пĕр пек çуртсем...

Пĕрпеклĕх иленет пире?
Тивмест ун чух сив чир тире!..
Тен, пурăнма ансат тесе,
Пĕр пек тăваттăр пур ĕçе?

Тен, çыннисем пĕр чустаран?
Ăс-хакăлне улăштарман...
Çул хĕррипчи çавра çăка –
Вăл та пулин йăлт çавракка!

Мĕн пулчĕ, тетĕр, чунăма?
Вăл васкамасть урăхланма.
Мала тухма тăхтать ăста,
Пĕр пек пулма васкать ача.

Эп ӑнланатӑп пек ӑна.
Эп тытӑнап хама ватма.
Ҫӗр шухӑш ҫаврӑнать пуҫра,
Пӗр туйӑм канӑҫсӑр чунра:

Пӗр тӗрлӗ чун – вӑл пӗтнӗ чун,
Пӗр майлӑ юрӑ – чухӑн ҫул.
Пӗрпеклетме ҫын юратать
Пурне те пӗр пек кастарать!

***

Тататӑп чӑтса
Чунри сӑнчӑра!
Пыратӑп утса
Хура чӑтлӑхра.
Хӑранӑ чӗре
Хӗвел пек ҫунать.
Чӗтренӗ ура
Юман пек тӑрать.
Хыҫра юлнӑ шурлӑх
Ҫӑтать тӑлласа.
Таҫта ҫиҫен ырлӑх
Туптать чунӑма!

***

Хуралнӑ ман алӑ, чулланнӑ чӗре...
Сана парӑнаптни, уптавлӑ тӗнче?
Ҫитмен ҫӗре ҫитӗп, кӗретӗп чӗрре –
Теллейӗм вырттать, тен, атте килӗнче?

Ҫил-тӑвӑл тустарчӗ, ӳкерчӗ ҫӗре.
Аҫа-ҫиҫӗм ҫапрӗ хуралнӑ чанне.
Ҫӗн туйӑмлӑ пулнӑ тӗллевлӗ чӗре
Нихҫан та ҫӳнтермӗ кӑварлӑ вутне.

Сив ҫил ҫапӑнать хӗрӳ ҫулӑмпа.
Чакса та пулин утап малалла.

***

Хуралнӑ ҫӗр ҫине хуллен
Шур юр ӳкет те ирӗлет.

Чĕре татах кӳтет!
Таçта сухалнă йĕрсене
Шыра, шыра пĕтет...

Ăçта эсир, куç хывнисем,
Ачалăхри çут тĕлĕксем?..
Шур юр ӳкет... Тен, вăл пĕлет?
Тата теме кĕтет.

***

Манăн чун пек таçта... Аякра, аякра...
Çăлтăр йăлтăрр! тăвать сухалса-тупăнса.
Пуçăма каçăртса кăшкăрап: «Эй-хей-ей!»,
Ахрăм çук-и тесе.
Юн тапать тăнлавра.
Çук пулас.
Тахçанхи авалхи сапаланчăк сассем –
Пăшăл-пăшăл! тусах сӳнсе пĕтрĕç вĕсем.

***

Аякра, аякра... Чĕлтĕрти чунăмра
Ачаран илтнĕ сас упранать.
Çывăрать хĕлĕпех шăн туратлă йăмра,
Çуркунне вăл каллех вăранать.

Çапла мар-и вара? Ăшăтсан ăшăмра,
Шăн палка шаплатсах çурăлать.
Манăçми тусăмсем, ак, тапать аллăмра
Пĕр чĕре! Паллаймарăр пулать?

***

Кунçулăм килчĕ-ши пит терслĕ?
Çут тĕлĕк пек иртсе мĕлтлетрĕ.
Патак та, çăкăр та çитерчĕ –
Анчах чĕре пĕрех пĕлмерĕ.
Шăппăн пулин те, чĕппĕм, терĕ.
Пĕлсе пуль тăчĕ чăнни-и-е?
Тен, пурăнма вăл хатĕрленчĕ?
Куçа хупса курма вĕренчĕ
Мĕн пуррипе мĕн суккине.
Ачаш сăмах та кирлĕ терĕ.
Тутăх пăта пекех вăл вирлĕ

Кĕрсе ларать чĕре варне!..
Епле вăл пăталать, пĕлесчĕ.
Шăпăн пулин те, ан чĕн, тесчĕ.
Кăшт та пулин хăть хĕрхенесчĕ!..
Вара ҫитет ĕмĕтленни,
Христос пекех вилес тени...
Тен, эс мана хальччен пĕлмен,
Нихҫан та кивҫене кĕмен?
Иуда чуптусан вара?..

* * *

Ҫил ҫинче ярăнать шурă ҫĕмĕрт.
Ҫав ҫил майлă ăна эс те ҫĕмĕр.
Пырса кĕр те юрла шăпчăк евĕр...
Ку мĕнле-ха, юрлать-ха, тетчĕр.
Эс вара тута хускатмасăр
Пĕр кана сывламасăр ларăн...
Ҫĕмĕрт ҫеҫ пĕр хускалĕ те кайĕ...
Эс вара тепĕр хут вăй илнĕн
Юрлама та пуҫла илĕм-тилĕм...
Ку юрлать-ха, ухмах, тетчĕр.

* * *

Вăрман шăршиллĕ чунăм
Пĕр лăпкăн та пĕр шиклĕн
Ăшра шăхăркалать.
Утса пыратăп вăрттăн.
Кăмпа шыратăп туллăн.
Ман алăри туя
Ҫулҫа ҫавăркалать...

* * *

Кун чакса пынăҫем
Кĕчĕ хĕвел пÿлĕме.
Пулчĕ вăл хăй пĕчĕк ҫемĕ
Тунсăхлă чĕреме...
Эп ĕнтĕ нимех те кĕтменччĕ
Ҫакă иртен ҫут кунран.
Никам та кун пек килменччĕ –
Анне те кун пек курăнман!
Ак ĕнтĕ халь пĕчĕк паллă
Пачĕ пуль вăл таҫтан...
Туйрăм хама чун-хавалла.

Куртăм хама аякран...
Эп мĕн пĕччен те пĕчĕк
Ларатăп пĕр кивĕ пуртре:
Хĕвел çутипе килетĕп,
Каятăп – хĕвел çутипе!

* * *

Çил çинчи сарă çулçăн, çунатлăн
Таталатăп та, шăппăн ÿкетĕп.
Ÿкнĕçем ярăнса илетĕп:
Çутă-çутă вăрман тăрăшшипе,
Киленетĕп çĕлен ăшшипе...
Ĕнтĕ яшлăх та иртрĕ çу пек,
Пуç тăрри те ман кăшт çутă.
Тен, çÿçсем те çак çулçă евĕр
Çил çинчех тăкăнса пĕтрĕç,
Эс ачаш пуласса кĕтрĕç...
Ах, кĕтни ахалех пулчĕ,
Çу кунсем çухалса юлчĕç...
Халĕ эпĕ те çулçă евĕр
Таталатăп та шăппăн ÿкетĕп,
Çуттăнрах курăнасчĕ-ха, тетĕп.

* * *

Çил тăманлă, сылăхлă
Ман чĕре паян.
Санпала вăл сыхăнчĕ
Ăнсăртран тасттан...
Юр кайма пуçланăран-ши
Тухнă хура çĕр.
Пылчăкран хăранăран-ши
Хыврăм урăх йĕр.
Ман валли те мĕн хăварнă
Шурă юр хирте.
Вилĕм те шап-шур çăварлă,
Пуринчен хитре...
Çавăнпа та эп çÿрерĕм
Шур юрпа пĕрле...

* * *

Питĕ йывăр чухне пĕррех
Йывăçсем пуррине туйса илтĕм.

Туйса илтём хура çĕре,
Уй вăйне пухса илтĕм...
Утса пынă чухне ăнсăртран
Туратран пырса тытрăм.
Хĕвел аннă чухне анаçран
Хытăрах çуталма ыйтрăм...
Ун çути халĕ ман сăнăмра,
Тĕнче чунĕ халь манăн чунăм.
Питĕ йывăр чухне пурнăçра
Çавăн пек килсе тухрĕ... кунăм.

***

Ку тĕнчере никам та çуккă.
Никам та çук, пĕр эс кăна.
Сана курса тăрсассăн тулькăш
Час çухатан хăвăн тăнна...

Эс ним те мар пек, эс ху тĕллĕн
Пăхса ларатăн хурланса.
Темле калатăн пек пĕр кĕлĕ
Турă валли кăна пăхса.

А, эп вара таçта хам халлĕн
Тăрса юлатăп юнашар.
Санпа пулма çитмест ман халăм –
Эп халĕ хам та сывă мар.

Темле сывлатăп пек пĕр майсăр,
Темме чĕре те ыратать...
Ак халĕ те сывлăш тухмасăр
Мĕскĕн Мишша асапланать...

Тен çавăнпа никам та çуккă
Манпа пĕр çын та юнашар.
Çукки çав пулчĕ лайăх çупкă –
Ăна та ирттерсе ярар.

Мана никам та кирлĕ мар халь.
Эп хам пĕччен, эп хам куштан.
Анчах мĕн-ма темле кăварлăн
Çунать чĕре пĕччен юлсан?

## ПИЛ ПАНИСЕМ

* * *

Каллех килет ҫуралнӑ кун сан...
Ҫавна туйса тӑратӑн-ши?
Пуҫа пӗксе шутлатӑн та,
Кӑштах ҫамку пӗркеленет...
Еплe-ха зоӗ, чун йапатмӑщ,
Ҫырма пултартӑн ҫакӑн чул?
Пуҫна пӗксе тӑмарӑн ҫав!
Тӗнче сана хӗстернӗ чух
Пӗрех ҫӗкленттӗн питӗ шух.
Шӑрантарать куна сан сӑвӑ:
«Нихҫан ан пӗтӗр, тет, тӗнче!» –
Ҫапла шутлать пуль Хусанкай,
Хай вырӑнне вырнаҫнӑ май?
Тӗнче те курчӗ, хай те пӑхрӗ...
Тӑранаймарӗ, курӑнать.
Татах, татах вӑл шухӑшлать:
«Мӗн-ма тӗнче чӑваш пек мар?»
Тӗнче ҫын аллинче, пӗлмен-им,
Халь мӗн тӑвайӑн, Хусанкай?
Ҫӗклен-ха тепӗр хут хӑватлӑн,
Сӑвву янратӑр ҫӗнӗрен.
Чӗрӗ пекех аллу-уру та –
Утса та кайӑн тепӗр хут.
Ҫапла, ҫапла, ҫак тӗнче майлӑ
Пулсам эс ху та тепӗр чух!

* * *

Шкул чухнехи хӑватлӑ-ҫке!
Тӑраҫҫӗ ачасем ӗретӗн
Кӗрнеклӗ, ӑслӑ та хӑюллӑн
Пӑхса ҫак аслӑ тӗнчене...
Мӗн-ма тесен шкул ҫыхӑнтарнӑ,
Шкул ҫупипе ӑс-тӑн ҫуталнӑ.
Тен, чӗресем те чиперех –
Ҫавна пулах пуль кӑшт упранӑ?
Еплe вӗсем халь маттурланнӑ.
Пӗр ал ҫине хурса тӑраҫҫӗ

Тин çеç çуралнă паттăрсем.
Шкул тĕнчине каллех вăратрĕç
Пĕрле тăрса тухса кунта,
Аваллăха ас илтерсе...
Ах, хĕрĕсем епле тата
Хитре тумланнă, çалтăр евĕр
Каллех курнаççĕ тейĕн, тепĕр.
Кăштах, кăшт ватăлнă пулсан та
Куç умĕнчи чечек пекех
Утса пыраççĕ чиперех.
Апла, манман-ха, çав кунсем
Пире каллех ак ыталаççĕ,
Çын пек пулма чунсем хушаççĕ.

***

Кĕрхи чечеклĕ Хусанкай
Ларать шухăшласа.
Çула тухаççĕ çиле май
Хуркайăксем – карталанса.
Чечеклĕ эпĕ те паян
Хусанкайпа пĕрле.
Хуркайăксем тупе таран,
Эпир вара, çĕрте, пĕрле...
Ларах эс, Хусанкай, кунтах!

***

Утă вăхчи... Хĕвел çинче
Çиçсе ларать мăн Хусанкай.
Яланхи пек çын умĕнче
Хăй сăввине вулать пĕрмай.

Çак пурнăçра, тет, пĕр чĕре.
Тĕнче те пĕр чĕре кăна.
Пулсассăн Хусанкай пекрех
Кĕрсе юлать сăвви юна!

Пăхса ларать... Утă вăхчи.
Çава тытса çуласчĕ хăть!
Анчах та сăвăçăн пахчи
Пĕр вĕçĕмсĕр сăмах тĕнчи...

Ак çу иртет... Чĕкеç те кайрĕ.
Хĕвел те майĕпен хухать.

Савви пётмерё Хусанкайан.
Мён-ма тесен вал ут çулать!

***

Тахçантанпах çырманччё эпё
Чунри телейёмсем çинчен.
Паян вара пурнăç тивлечё
Çума пуçларё майёпен.

Таса çурхи шыв евёр юхрё
Чунран тапса тухан телей.
Çав вăхăтра вёт кун та хухрё –
Вăл пётрё урăх килмесле...

Çÿлтен кётсе эп пăхкаларăм,
Ўкмест-и терём пёр тумлам?
Пёлёт тени те тухкаларё –
Телей тени çумарё çав!

Пёрех кётме эп пăрахмарăм –
Чунри çитменлёхсем çук мар!
Çÿлтен тивлет çума пуçлас-тăк,
Мана никам та кирлё мар!

***

Элли Юрьева асăнса.

Элли итлерё Вольфганг кёввине.
Вăл кайнă шăплăхра пёр кёвё çех!
Çак кёвё пурнăçа кăшт ас илтерчё,
Çавна илтсе ўнерçё кăшт киленчё.
Чăвашăн умёнче çак кёвё çукчё,
Халь мён тума килет хăлха çине?
Ăна илтсен чăваш та алă çупрё,
Вăл хăй те халь çупатчё, тен?
Анчах ўнерçё пит-куçне хёстерчё,
Ун мрамор туписем кăшт кулчёç, тен?
Вăл пёчёк Моцарт пек сиксе те илчё,
Мён илтнё кёвё пек кăлтăртатса кулса...
Елле хавасла пулнă пуль вăл çырнă чух та
Елле киленнё пулё хăйён кёввипе?..
Халь тин, Элли, эс итлесе тăрантăн,
Итлерёç пулё сан ўкерчёксем – пёрле?

Санпа пӗрле хӗн курнисем ларассӗ,
Чӗрисене чарса сана ҫеҫ пуҫ таяссӗ...
А, Моцартӑн кӗвви юхать ҫырма пекех,
Ӑна чарма никам та хал тупаймӗ...
Эс Моцарт пек, Элли, ҫуралтӑн ҫӗр ҫине,
Хӑвна валли тупса эс чӗрӗ кӗвӗ –
Чӑваш кӗвви янрарӗ пирӗнте!..
Европа кӗввине итленӗҫем вӑйланчӗ,
Чӑваш чунне каллех чӗртсе вӑратрӗ...
Тавах сана, тавах, Элли, пӗрле пулнишӗн,
Ман чӗрене савма тепре килнишӗн.

* * *

Ҫӗр ҫинче музӑсем нумай.
Маншӑн эсӗр чӑн муза пултӑр.
Атӑлта пӑр тапраннӑ май
Ман чӗре те хускалчӗ пулӗ?
Турӑ пек эсӗр тӑтӑр умра –
Алӑрта сирӗн халӑхӑн мулӗ.
Кӗнекеллӗ пулсассӑн вара,
Ҫак тӗнче те хӑватлӑ пулӗ?
Кӗнекеллӗ пулсан ҫутӑрах,
Кӗнеке вӑл ача пек ҫутӑ!
Апла, чӗрӗр ачан култӑрах!
Кӗнеке «улпут» пек килнӗ чух
Пурӑнма та халь пултӑр тутлӑ!

* * *

Епле аван чун еккипе утма.
Ӑста ҫитес тени хӑйех ҫитет...
Пӗр касӑ эс пуҫлан ҫырма,
Тепӗр касран кулас килет...
Епле эс кулӑшла поэт иккен,
Ҫырма пӗлмесӗрех ҫырма пӗлен.
Ху ҫырнине ху ҫеҫ вулан пӗччен...
Тен, патриарх ҫырма вӗрентнӗ чух
Ҫапла кулса та илнӗ тепӗр чух.

* * *

Темле туятӑп эп хамра хаваслӑх.
Эп пур, ҫук мар сана пула, аттем!
Халь пӗр манра пуль палӑрать тӑванлӑх,

Тытса пырсан ҫак тӗнчене пӗчӗкен.
Пӗчӗкен те мар пуль. Авалтан пуҫланнӑ
Ҫак йӗр аталанма паян кунччен.
Ача ҫуралмасран ҫын хавасланнӑ,
Йӑх тӑсӑлать-ха тенӗ ӗмӗрччен.
Ак иртрӗҫ ӗмӗрсем... Мӗскер-ха юлнӑ?
Пӗр йӗрсӗр пӗтрӗ аттесен тӗнчи!
Пӗр йӗрсӗр-ши вара? Вӗсем вӗт хывнӑ
Пирӗн ҫула ҫак вӑхӑта ҫити.
Апла, вӗсем, ҫук ҫухалман, пӗтмен-тӗр.
Эпир пӑхаттӑр аттесем пекех.
Вӗсен чӑн пурлӑхӗ ачасенче-тӗр,
Вӗсем савӑнтараҫҫӗ халь пире.

* * *

Турӑсем ҫӗр ҫинче нумай.
Пуҫ ҫапаҫҫӗ ҫамка шӑтиччен...
Чӑвашли вара пӗртте пулман
Пӗр ача, тӑлӑхскер, киличчен.
Мӗн ҫӗкленӗ ӑна уҫлӑха?
Ҫӗр-анне пулинех... Майӗпен
Вӗренсе вӑл тухать чӑн ҫына.
Пӑрахмасть ҫавӑнтах халӑхне!
Ас илет ӑна халӑх каллех,
Ӗлӗкхи пек каллех ҫӗкленет.
Халӗ тин халӑхсен хушшинче
Чӑваш ячӗ те янӑ! илтӗнет.
Хӑй вара, ҫав ача, халь ӑҫта?
Ватӑлса вӑл вилсе тахҫанах...
Каяс умӗн вара каласа:
«Чӑвашпа ҫак тӗнче ҫӑлӑнать!»
Ун халалӗ халь пирӗн асра,
Унӑн юнӗ чупать халӑхра.
Пӗр ҫын евӗр тухаттӑр утса,
Ӗлӗкхи вӑхӑтран ҫӑлӑнса...
Турӑсем ҫӗр ҫинче нумай.
Пӗри-ҫех-ҫке ҫӑлайрӗ пире!
Ун пекки уҫлӑхра тек пулман –
Ун пекки урӑх ҫук чӗрере!

* * *

Эс халӑхӑм ман, чӑмӑрккаҫӑм,

Салантăним халь ним мартан?
Пиншер çул хушши чăмăртантăн,
Халь тин сапалантăн пулать?
Тин çеç-и-ха эсĕ хăватлăн
Çÿреттĕн тĕнче кастарса.
Эс пулнă çĕрте халь те аслăн
Пурнаççĕ сынсем савăнса.
Апла, эс хăварнă чăн вăрлăх,
Касса та çÿренĕ çĕрте.
Чăнах та, таçта та пур хăтлăх.
Кунта çеç çук хăтлăх пĕртте!
Тĕнче каснă чух тем сухатнă,
Темскер тухса ÿкнĕ санран.
Паян та, ак, питĕ асаплăн
Сывлатăн аран-аран...
Тăванăм, эс халь кустăрмасăн
Тепре кăлтăртат-ха татах.
Вара, тен, тепре çаврăнмалăх
Тухать пиртен вăй çавăнтах.
Çапла çурасуллăн атя-ха,
Тепре сывланси пек тăвар.
Эп халь те пĕр пĕчĕк ача-ха.
Санпа пулнă чух – шĕл-кăвар!
Тен, çавăнпа, чăмăрккасăм,
Санпа эп тăрап юнашар...

***

Çĕр кăмăллă чăваш чĕлхийĕ
Епле шыв пек шăнкăртатать.
Шыв юххи пек илсе çитерчĕ
Пирĕн йăха тĕнче таран...
Халь ĕнтĕ унăн шăнкăравĕ
Тĕнче тăрăшши пуль илтĕнет.
Тепĕр чухне сасси çĕтсен те
Авăр пекех тарăнланать...
Вара куратăн, вăл çăтать
Мĕн пур йăх-яхлă çÿн-çапа.
Çапла вăл тасатать. Шăнкравлăн
Юхса каять тата мала.
Тепĕр чухне эпир юлхавлăн
Калаттăр, мĕн тума тесе.
Вырăс чĕлхи вĕт питĕ сиплĕ
Пулать ăс-тăншăн ку чухне!

Çапах, çапах, çапла пулсан та
Чĕлхен таппи вĕт чĕрере!
Çăлкуçĕ ун тасти аваллăх.
Юхать вăл халĕ ман юнра.
Çав юн пĕтсен, тен, калĕ халăх:
Эпир пĕлмен ку чĕлхене.
Эх, пĕлнĕ пулсанах тепре хут
Çĕкленнĕ пулĕччĕ тĕнче.
Анчах та çуннă çав кăварлăх
Тек пĕçертес те çук пире.
Ют чĕлхене те киленмелĕх
Çиеттĕр çăкăр – юттине.
Эх, тур, пĕлместпĕр, çăкăр та
Чĕлхе çуратакан анне.
Эс çирĕн юттине пулсан
Чĕлхи те килчĕ юттипе.
Чăнах та, пăх-ха, тырă пулчĕ
Ху акнă-тунă анара.
Вара ăна вырса эс хутăн
Ху купаланă амбара.
Ăна эс авăртса пĕçертĕн,
Ларса та çирĕн пĕр йышпа.
Апла тусан еппе-ха манăн
Тăван чĕлхе сипетлĕхне?
Чĕлхе вăл çĕр, чĕлхе вăл çăкăр.
Çĕр чĕлхипе сын сăмахлать.
Вăл çав чĕлхе, чăваш чĕлхийĕ
Шыв саслăн майĕпен юхать.
Ăна илтсен, ют сын та калĕ,
Чăваш çĕр майлă калаçать.
Эппин шыв саслă çĕр хăвачĕ
Татах, татах тапса тăрать.
Чăваш юр-варĕ – чун апачĕ
Мĕн çинĕçем татах анать.
Сăмах каларăн та ĕçлерĕн,
Аттесенчен пилсем ыйтса.
Пиллерĕç пуль, мĕн чуль ĕçлерĕм,
Пĕлмерĕм пĕртте ывăнма.
Эп аврăм çĕр. Эп лартрăм çимĕç.
Халь тин кĕтеп тур параса.
Турри парсан та пулĕ тулăх
Тырри-пулли те йăтăнса.
Тур памасан вара мĕн тăван?

Выртса вилетĕн çавăнтах.
Турри вăл çĕр. Пуçа çапса та
Чĕркуççине чĕркуçлентер...
Мĕн чухлĕ эс çĕрпе ĕçлетĕн,
Мĕн чухлĕ калаçан унпа,
Çавăн чухлех сана çитерĕ
Хай çăкăрне вăл улĕмрен.
Калаç, апла, калаç чăваш пек
Пурнăç паран тăпрапала.
Тăпра тесен, выртса эс пăх-ха
Хăвна туятăн чăвашла!
Эс ху та вĕт тăпра хăвачĕ,
Эс ху та пултăн тăпра пек...
Тен, çавăнпа, тăпра çисессĕн,
Эс чăваша та тухрăн вĕт!

***

Пĕлместĕп, мĕн ман çырмалла...
Поэт пекех, тен, çырмалла?
Çырма тĕпне кайса ÿксен те,
Çÿле пĕр кайăк пек вĕçсен те
Пĕр сăвă манăн çырмалла.
Çак çĕр çинчен, тăван çинчен,
Епле вăл аннĕ ту çинчен...
Çакă тĕнчен чăн пурнăçне
Хам сассăмпа палăртмалла...
Тен, çавăнпа эп ÿркенместĕп,
Тен, çавăнпа эп ÿкĕнместĕп...
Айăп ан тăвăр, тăвансем,
Пирĕн пĕр чун пур, уй-хирсем,
Çырма-çатра та вăрмансем!
Çавсем пĕр туйăмлă пулса
Пире ÿсратрĕç пулмалла. Апла,
Вĕсем çыраççĕ пулмалла!

***

Утă вăхчи каллех ак çитрĕ.
Курăк каласшăн: эпĕ сан!
Мĕн чухлĕ халĕ вăхăт иртрĕ,
Халь çулмасан кая юлан!
Эс, Хусанкай, мĕн-ма курмастăн
Курăк ахальлĕн пĕтнине?
Апла çава тытса çулмастăн,

Пăхса ларан ĕлĕкхилле.
Пĕлтĕрсенче эс, ас тăватни,
Йĕпе тăрсаччĕ çакă кун.
Каçалсенче хăвна куратни,
Хĕвелленет пуль санăн чун.
Куçу сан, паллă, тимĕрленнĕ,
Чĕре те чуллă пулмалла.
Тахçан авал вĕсем кĕрленĕ,
Каланă: сăвă çырмалла!
Халь тин ларан эс, чуллă палăк.
Пуçу йĕс тимĕртен пулас.
Паянхи кун пĕр çут çанталăк
Санран ыйтать: утă çулас!
Çук, тухаймарăн ут çулма эс,
Пăхса çех лартăн палăкла.
Çапах сан чĕререн сасартăк
Сăвă янрарĕ пулмалла!

***

Çырах, çырах, çырса эс çырлахтар
Çил пек çĕкленнĕ кăмăлна.
Ун чух вара эс çавăрттар кăна
Çак тĕнчене хăвăн тавра.
Тĕнче те тăтăр сан пекрех. Тăхта,
Тăхта эс хурланса тăма!
Телей тени вăл пĕр самант кăна,
Хурланăвĕ килет тепĕртакран...
Халь савăн-ха çырса çак тĕнчене.
Сăвву пĕтсен мĕн тăвăн-ха?
Выртса йĕретĕнни çак çĕр çине,
Е тепĕр хут çырса пăхан тата?

***

Хусанкай умĕнче эп тăратăп.
Эпĕ унăн ачи, ун турачĕ...
Ун патне çитсенех чĕрĕлетĕп,
Вăй парать пуль мана тавралăх?
Хусанкай умĕнче пуç таятăп,
Çĕр туртать пуль тесе эп малтан.
Çĕр те мар, унăн чапĕ хăватлăн
Пĕктерет ман пуçа майĕпен.
Эх, Петрович, эс Петĕр атте

Ху çумна пĕтĕмпех ил пире!
Кам пырса пуç таять сан ума,
Çавă тĕрĕс утать утăмпа.

* * *

Каллех эп килтĕм сан ума.
Тем пулчĕ чунăма. Кашни кунах
Пырса ларатăп сан пата çума.
Шуглатăп: пурнăçу сан сарлака...
Эс ĕмрипех: вилсен те пурăнатăн.
Килсе пăхать ача-пăча кунта
Тепĕр чухне. Шухăш килет пулсан,
Ку кам-ха, теççĕ. Пăх-ха, пăх!
Кăшт çаврăнаççĕ сан тавра ушкăнланса.
Пырса вулаççĕ: çуралнă... вилнĕ ку!
Çавна пула, тен, савăнаççĕ те...
Е çук вара, вилмен, шуглатăп сан пирки.
Эс, Хусанкай, пурнатăн халь пирте!
Çак çĕр çинче чăваш пулсан вара
Сăвву янрайĕ ир çинче тата!

* * *

Мăнкăмăллă ман Хусанкай!
Тĕнче салхуллăнчĕ самай.
Çапрĕ сăнна пĕр мĕлке.
Пĕлмен Хусанкай ун тĕсне!
Хĕвел тухасса кĕтем-ха,
Тен, уçăлĕ ку тĕнче?
Пĕччен эп поэт умĕнче...

* * *

Ăт, пурнăç тени, пĕлместĕн.
Килет те çапать ăнсăртран.
Ĕнер çеç пĕрле пек çӳреттĕн
Ална та парса кăмăлран.
Ĕнер çеç вĕт куçпа çеç кулаттăн
Тусем сан умра тăнă чух.
Ун чух эсĕ Туррăн курнаттăн,
Халь тин вара эсĕ – çук.
Пĕрех тепĕр чух çул утуçăн
Курнатăн пек манăн куçа.
Ку пурнăç пĕрех питĕ уççăн
Кăтартрĕ халь тин чăн сăнна.

Эс пулнă, эс пур, эсĕ пулăн
Çумри юлташсен асĕнче.
Тепре чăнласах эсĕ утăн
Çĕрпе пĕлĕтсем хушшинче!

***

Хай ăсĕне виçме пултарнă
Чăваш çĕрне Китай таран.
Хай несĕлне çырса хăварнă:
«Эпир, тет, тухнă Китайран».
Çĕршер çулсем те пулĕ иртрĕç,
Эпир Китай пек пулнине
Халĕ тĕнче те ĕнтĕ пĕлчĕ –
Эпир Китай пуль чăннипе!
Пирĕн ăс-тăн хăй майлă пулчĕ,
Чĕре те тапрĕ хăйне май.
Хăш-пĕр сăмах Китайăн пулĕ –
Кăшт тăнласан тупан чылай.
Кĕвви-çемми, вара, итле-ха,
Тĕнче хăйех юрланă пек.
Эпир çав юрăпа килсе вĕт
Китай енчен Атăл çине.
Çакна туйма пире ăс пачĕ
Иакинф хăй, пирĕн атте.
Хăйĕн йĕрне çапса хăварчĕ
Тарăн çырмаллă Типнерте!

***

Пĕр хăрнă йывăç айĕнче
Хам халлĕн эп тăратăп.
Йĕри-тавра кĕрхи тĕнче –
Çавна эпĕ сăнатăп.

Çак сутă чаплă тĕнчере
Мана никам та кирлĕ мар!
Тĕнче тени ман чĕрере –
Ăна халь тивер мар...

Йĕри-тавра пĕр йывăç çеç.
Пĕр хăрăк йывăç пур.
Ăна тытса пăхсассăн кĕç
Хăрса каятăн пуль?

Çак çутă чаплă тĕнчере
Мана никам та кирлĕ мар!
Тĕнче ман хамăн чĕрере –
Ăна халь тивер мар!

Хăратăп эп çак тĕнчерен.
Пĕрех пĕтме памастăп.
Çак хăрăк йывăç çумĕнче
Урăх тĕнче куратăп.

Çак çутă чаплă тĕнчере
Мана никам та кирлĕ мар!
Тĕнче ман хамăн чĕрере –
Ăна халь тивер мар!

* * *

Пит тарăнран пĕр куç пăхать.
Таçтан, пит аякран...
Эсĕ, чăваш, халь миçĕре?
Пиншер çулсем умра...

Пиншер çулсем иртсе пыраççĕ,
Ял-хуласем йăлт улшăнаççĕ.
Çынсем те, халăх та халь урăх.
Епле эс иртрĕн ку çул тăрăх?

Тĕлĕнмелле те – ним те мар.
Чăваш пĕрре те урăх мар.
Тĕнче пит хытă улшăнсан та
Чăваш хăйне, çук, пăрахман-ха!

Ĕлĕкренпех çаплаччĕ вăл.
Хăйне пĕр май... Хăй пĕр патша!
Ютсем килсе çапсассăн та
Хăйне упраччĕ ним те мар!

Епле, апла? Нумай çын пĕтнĕ
Çак çапăçуллă хирсенче...
Чир-чĕр те пĕртте шеллемен...
Чăваш вилли, тет, тĕнчипе!

Çапла пулсан та çав çынсем
Вилмен пекех... Вĕсем чунра

Халь тин пурнаççě пулăшса.
Çав курăнать ман куçăма...

Çапла хуравлă пулчě ватă,
Хăй тарăн куçлă, хуп-хура...
Пăхать таçтан пит аякран,
Пире парать вăй-хал ялан!

***

Чăн чăваш умěнче пире намăс.
Вăл шутлать вěт пире, кěтет.
Мěн-ха эсěр тума пултартăр...
Эп кěтни, тен, чăнах та килет?
Эп шутланăччě... Пулě пит чаплă
Çут малашлăхě чăн чăвашсен.
Ах, анчах халь пурне те паллă,
Чăваш юлчě пулас пěччен...
Тен, пěчченлěх аван та тěнчешěн –
Эс ху тěллěн пěччен пурăнан...
Пурпěрех вěт çумри тăвансемшěн
Чуну сан ыратать кунсерен...
Ун пекки эсě пурччě тахçан!
Халě кам-ши чуне кăтартать?
Ху чунна кăтартсан ку тěнче чунланать!
Çак тěнче те вара чаплатать!
Чăн чăваш умěнче питě намăс.
Чăвашра эп пěр ěç те туман.
Тěнче тăрăх çак чăнлăх янратăр –
Ěç тусан тěнче пулě чăваш!

***

Хěвел те çук, чечек те çук
Сан умăнта паян.
Кěрхи кунсем вăй илнě чух
Çуралнă эс аран.
Ачарантах эс, чирлěскер,
Курман та пулě кун.
Çак тěнчере тата мěскер
Шыранăн... вилнě чух?
Çалма тесе шутларăн пуль
Христос пекех пулса...
Анчах та халăхě çěр хут

Сана, тен, ылханса?
Ылханнӑ пулӗ ҫӗн куна
Хӑйне хыт чӗннӗрен.
Мӗн-ма вара вырӑсланма
Тивет халӗ тӗпрен?
Чӑваш тени те кирлӗ мар...
Чӑваш пулма пит хӗн!
Тӗнче пекрех авӑрланар,
Вара телей те ҫитӗ...
Анчах та ҫын хӑйне пӗлет,
Пурне те урттерет.
Пӗлӗт ҫинчен вӗҫсе килет,
Пурне те пӗлтерет:
«Эс пулнӑ сӑвӑҫ ҫын кӑна.
Чӑваш пекех пуласшӑнччӗ.
Анчах та вӑхӑтсем сана
Ҫынран йӑлтах кӑларнӑччӗ.
Тен, ҫавӑншӑн пӗтерчӗҫ те...
Чӑваш пек пулаймарӑн.
Вырӑс туса ҫитерчӗҫ те
Хӑвна тек тупаймарӑн.
Эсир, тен, тупӑр хӑвӑра.
Чӑваш пулсах, тен, вилӗр?
Тискер айванлӑ тапхӑрта
Пӗрле пулма та килӗр!».

***

Ҫулталӑк иртрӗ.
Мӗн тӑвас тен?
Касар, тӑванӑм,
Ман чӗре
Санпителе пӗрле сикетчӗ
Чӑваш шӑпишӗн шиклене.
Халь ӗнтӗ вӑхӑт
Хӑвӑрт иртрӗ.
Сана манса кайман эпир...
Сапа пӗрле тӗнче юрлатчӗ,
Чӑвашӑн арӗ пур тесе...
Юрру, чӑнах та, халь те пур-ха...
Анчах ху ҫук,
Килместӗн тек.
Ҫак тӗнчене тепре килтернӗн
Сӑвӑ ҫырса парасчӗ хӑть!

Эс ас тăватни,
Эс юрларăн
Пĕрремĕш юр çинчен тахçан.
Çав шурă юр паян пуçларĕ
Çав юрă пек янăрама...
Эх, чăмăрккаçăм, шурă юрăм,
Эс чĕренех тивертрĕн-çке!
Шап-шурă юр çуса хăварчĕ
Эс кайнă шурă кун çине...

* * *

Тĕлĕнмелле пĕр пулăм пулчĕ...
Эп пултăм Чĕмпĕр хулинче!
Авалхи пек атьсем те пурччĕ,
Калаçрăм эпĕ вĕсемпе.
Атьсем пекех эп тĕлĕнетĕп:
Тарать чăвашăн шкулĕ шеп.
Ун стенисем те ишĕлмен-мĕн...
Шалти çап-çутă пÿлĕмсем те
Ĕлĕкхи пек хитре халь тин!
Чăвашсемпе курса калаçрăм,
Пуплерĕм çак тĕнче çинчен.
Каçса кайсах мана итлерĕç
Чăваш шкулне манманнисем!
Вĕсемпеле пĕрле те пурччĕ,
Сисетĕп, чăн вĕрентекен!
Мăн сухалне шăлса илет те
«Дак, эдак!» тет пек, килĕшсен.
Эп патриарх пекех шутларăм,
Каларăм хамăн пурнăçа.
Çак шкул пĕтсен чăваш пĕтес пек
Туйса тăрап çавăнтанпа!

* * *

Чĕмпĕре килсен эп чĕмпĕрлентĕм.
Чăнкăртатрĕç тенкĕсем таçта...
Хĕрсене те куртăм Нарспи евĕр –
Каччисем те пулчĕç Сетнер пек!
Хам та эпĕ Кĕçтентин пек мар-ши?
Йÿле ятăм хамăн пиншака!
Савăнса пăхса утса пыратăп –
Икосĕлмен-ха Чĕмпĕр чăвашпа!
Чăваш хĕрĕ тĕнчере хăй пулăм,

Ĕлĕкхи пек чунлăскер, таса...
Эс унта пулсан, чăнах та, урăх
Шутласа кăларăн пурнăçа...
Чĕмпĕре килсессĕн чĕмпĕрлентĕм.
Чăнкăр-чăнкăр терĕç тенкĕсем...
Çав саспа тĕнче халь чĕмпĕрленчĕ,
Сас памаççĕ «çуккă!» тенисем.

* * *

Çыр-ха, çыр! Эс çырма пултарăн
Çак тĕнче çинчен мĕн те пулин.
Тĕнчене те кăштах кустарăн
Çырса пынă чухне хăвăн пек...
Сан аллу пуль йĕрлет кайăк майлă
Тин çеç çунă шур юр çийĕпе...
Йĕр туса каласа эсĕ кайрăн,
Кам каять пуль халь тин çав йĕрпе?
Халĕ тин никамах та каяймĕ,
Мĕн çыран – çухалать ир çинче.
Пурпĕрех пĕр çав кайăк хăварĕ
Хăй йĕрне хут пекех чун çине.

* * *

Хăй вырăнне шыранă халăх
Пырса тухсан çырма пуçне
Пуçа çапсах кĕлĕ каланă:
«Çĕр кăвапи вăл - çак тĕлте!».
Мĕн-ма тесе ыйтсан, пĕлетĕр,
Тахçан-тахçан, пин çул ытла
Эпир, тет, пурăннă пĕр вĕçсĕр
Месопотами патĕнче...
Унта эпир шывсем юхтарнă,
Тек пурăннă тырă акса...
Кайран вара пирс тустарнă,
Эпир килсе çак вырăна...
Ĕлĕкхи пек вара хăватлăн
Каллех юхтарнă çав шыва.
Икĕ çырма пуçне тухсассăн,
Каллех пуçланă пурăнма.

* * *

Туятăп, пур пек пурнăç сĕмĕ
Ĕмсе илейнĕ сывлăшра.

Çав сывлăшпах тепре килтерĕп
Çухалнă çулăмлă чуна!
Ура тапсан та пурнăç пур пек.
Тен, такăнса ÿксен кăштах?
Çак утăм сĕмлĕхне туян та
Пуянланан пек çавăнтах!
Е, ак, тата! Пĕр шухăш кĕчĕ,
Чăн юрату пек кисретсе.
Çак пĕлĕтĕн шап-шурă сĕчĕ
Халь тăкăнать шур юр пулса.
Çак сĕтлĕ уçлăхра тăрасчĕ
Сана валли телей суса.
Сана та пĕлĕт пек курасчĕ.
Тен, эсĕ шурă хĕл пулса?
Шăвать юр кунĕ пĕр хавассăр
Шур юр çусан кăна хăш чух.
Хăвна туйса илетĕн сассăр,
Юр çунă пек ÿкен татах.
Апла, пĕр сассăр пурăнасчĕ,
Пĕр сассăр юр пек лап! ÿкес.
Çĕре ÿксен те курăнасчĕ
Шур юр пекрех, шур юр пекрех...

***

Нарспишĕн эпир хурланатпăр пулать-и,
Шеллетпĕр ăна, мĕскĕне, пур чунтан.
Мĕн-ма тесен, ку паллă, эпир те
Нарспи пек вилетпĕр пулас паянтан.
Çапах та Нарспи пек пулсассăн, ара,
Вилессĕм килмест вĕт никамăн та халь...
Тен, çавăнпа та сăнарĕ тавра
Каллех пуçланать тавлашу халăхра.
Тăхта Нарспине мухтама е вăрçма...
Пире юрамасть – Нарспи вăл шапа!
Унтан эс ирттеймĕн пит ăслă пулсан та,
Нарспи пек пулаймăн тек нихăçан та!
Çапах та эсир çав хĕрне тĕл пулсассăн,
Кăшпах та пулин пулатăр чăваш...
Хăвна эс куратăн унпа юнашаррăн.
Апла, эсĕ ху та пĕтетĕн часах!
Эх, Турă, ку пулчĕ чăнах та çăтмах,
Нарспи пекех пĕтрĕ сар хĕр савăнсах.

***

Тěнче пěтмен-ха, эп шутлатăп,
Çак йывăç пек ÿсес тесе...
Темле пěтсен те пурăнатăп
Тепре килеслěн çак тěле...
Çак йывăç пек пур кунě те,
Кăштах аса илсен хěле
Эп çулçă пек чěлхе каларăп
Çак вилěме те витлесе!
Пěтен, тесе, эс, хěл шутланă
Шăнтса пăрахнă чух пěрре.
Мěн систерсе йывăç шавларě –
Вăл усрě пулě çăварне?
Сивě хěле вěт евитлерě
Кăшт пěтнě хăйěн пěвěпе...
Çу ситсенех, вăл шухăшларě,
Суран сипленě-ха, тесе.
Çук, йăлт пěтмен-ха
Шăннă пěвěм...
Ăшă килсен, каллех татах,
Каллех ěмěтленме пуçларăм,
Пурнатăп-ха, апла, тепре!

***

Пěччен çур уйăх тÿпере.
Тепěр çурри ăçта-ши унăн?
Кив уйăха мěн... каçсерен...
Çисе яман-ши, тетěп, вупăр?

Эп пит хăратăп, юр илсе
Çÿле сапса пăхатăп вăрттăн.
Ывăтнăçем ман алсише
Хывса илетчě вупăр. Хăвăрт

Каларăм эп пěр-ик сăмах.
Тулли çут уйăх пултăр, терěм.
Мěнле каларăм, çавăнтах
Çурма çут уйăх хитреленчě.

Куçне хěссе пăхса пěрре,
Хěр пек тепре хупса та илчě.
Халь ěнтě, чăн та, пит хитрен
Çут тÿпене çут уйăх килчě.

***

Эп тӗлӗнетӗп тӗнчерен...
Мӗн панине йӑлтах илет вӑл.
Мӗн чухлӗ пурӑнтӑм, ҫавна
Часах туртса илет пӗр сассӑр...
Нивушлӗ пӗтӗп эп, шутлатӑп,
Юлашкинчен сывлана чух.
Ҫак тӗнчене курса калатӑп:
Эп тек пӗтместӗп пурпӗрех!
Пӗтет-и, тейӗр, тин ҫуралнӑ
Ача сасси ҫак тӗнчере?
Мӗн чухлӗ пуль эпир ҫӳренӗ
Ҫак тӗнчене касса тата!
Тен, ҫавӑнпа ҫак чаплӑ пурнӑҫ
Тем пек пӗтсен те пӗтес ҫук.
Ҫук, мӗн пани юлать пӗр вӗҫсӗр
Эпир ӑна уянӑ чух!

***

Инҫет патне ҫитме шутларӑм,
Утса тухатӑп-ши тесе,
Ача пекех эп таплаттартӑм,
Пӗлмерӗм ҫав инҫет мӗнне.
Халь ӗнтӗ пурӑнӑҫ та иртрӗ.
Пӗрех утатӑп инҫете!
Инҫет ӑҫта эс, мӗншӗн пӗтрӗ,
Ҫул утнӑҫем, хӑват пирте?
Вилес чухне, чӑнах та, ҫитрӗ
Мӗн ачаран ӗмӗтленни.
Ман кусӑма чарпавӑм витрӗ,
Кӑвак инҫет тахҫан пулни.

***

Хулари ҫӑлтӑрсем шупка.
Тен, нумайӑшӗ сӳннӗ те пулӗ?
Ҫавӑн пек пулӗ пирӗн шӑпа?
Сӳннӗ пӗр шурлӑха ӳкрӗ...

Халӗ суккӑ пулать пуҫ ҫинче пирӗн ҫӑлтӑр.
Кам сӳнтерчӗ ӑна, Турӑ сулнӑ сутта?
Пиншер ҫул пулӗ утнӑ ман халӑхӑн ҫулӗ

Халĕ тин тĕтре евĕр каҫран ҫухалать...

Тӳпери ҫăлтăрсем выртăнне ман умра
Ҫын хăй тунă хунар ҫуткалать.
Ку хунар ман ҫула ҫутатать ҫăлтăрла.
Ах, анчах ҫавăнтах путарать.

Ах, ҫĕклесчĕ пуҫа ҫăлтăра ҫитиччен.
Хура каҫ тепĕр хут ҫăлтăрлантăр!
Ҫут хула тăршшипе ҫул утса тухиччен
Тӳпери манăн ҫăлтăр ан антăр!

***

Ҫĕнĕ ҫул ҫывхарса киличчен
Эп шутлатăп хам пурнăҫ ҫинчен.
Мĕн эп тунă вара ҫак куна ҫитиччен,
Мĕн ҫухатнă пулать ҫул ҫинче?
Чылай ĕҫ тунă пек туйăнать тепĕр чух.
Пӳрт тăвап майĕпен кашни ҫул...
Кĕнеке те кăлартăм пулас вăй хурса...
Ҫухăрса та ярас пек тăрап тарăхса...
Аптрамастпăр, аппа, ахальтен пурăнман.
Мĕн тăвас тенине эпир тунă!
Пĕр хĕрарăм тесен, вăл тăрать ҫутатса.
Ман патне вăл пыма кăмăл турĕ.
Ҫĕнĕ ҫул умĕнче ҫавăнпа халĕ ҫутă.
Тем те куртăм пулать иртнĕ ҫул хушшинче.
Пуҫран ҫапнă пулсан тепĕр хут та ҫĕкленĕ,
Тепĕр ҫул мĕн пулать-ха, шутлатăп тата...

***

Мĕн куртăм пулать тĕнче витĕр...
Тĕнче халĕ кантăк пекех.
Тĕнчен леш енчен чупса килпĕр
Тепре манăн вилĕмсĕр чун...
Эп вилнĕ пулсан та куратăп –
Кил-йыш ман чипер пурăнать.
Сире тепĕр чух хыпарлатăп,
Ярап тĕнче витĕр чуна...
Эсир, тен, ăна пĕр пĕлмесĕр,
Тапса та яратăр кутран.
Пĕрех эп ҫавна сисмесĕр
Чĕнетĕп сире чунран.

Эсир пĕр сăмах та ан калăр,
Персе тăрăр чăн илтмĕше.
Чуна упраса та хăварнăн
Пуплетпĕр вара илтешле.
Эй, турă, чăнах та пур пулĕ...
Куратăп хама леш енчен.
Çырап пек эп сăвă. Пĕтеп пуль,
Вĕт сăвăçăн чунĕ черчен...
Чунне те пĕлмерĕç пулас.
Унтан туй туса та таптарĕç.
Эп пултăм пулас пĕр турпас.
Кайран, тен, пытарĕç, пĕлместĕп...
Ку пурнăç пуçра урăх çук.
Пĕрех никама та вăрçмастăп
Тĕнче витĕр пăхнă чух.

***

Шăрçаланать халь пурнăç текстчĕ,
Çапать машинка саспалли.
Кашни сăмах халь пурнăç терчĕ,
Кашни страница сан валли.

Эс пурнăç нушине курманччĕ
Мĕнле тертпе вăл килнине.
Ак çитрĕ те çав терт саманчĕ
Çырма пуçларăм çын чунне.

Çук, тăмран мар вăл çыннăн чунĕ,
Çук, кирпĕч мар пуль саспалли.
Анчах мĕн чухлĕ автор юнĕ.
Юхса пуль кĕнеке тулли.

Тухать халь саспалли, сăмахĕ...
Пуçтарăнать пĕр ăс пуххи.
Мĕнле асам тĕнчен юмахĕ
Ку кĕнеке пек калĕ-ши?

***

Сăмах калама васкамалла мар.
Сăмах вăл хăрушă япала.
Эсĕ чăтаймарăн, тарăхнă-ха та, каларăн.
Çав сăмах халĕ те янăрать хăлхара.
Эпĕ ăна халь пĕр сассăр,

Чун тепĕр хут ан амантăр тесе,
Аса илетĕп.
Ас илнĕçемĕн татах сивĕнетĕп.
Малтан, илтсенех, пĕлесчĕ,
Чĕре пăрлансах ларчĕ.
Халь ĕнтĕ, кăшт ăшăтсан,
Юн чупа пуçласан,
Каллех юратас пек тапнă чух,
Таçтан амакран,
Çав сăмах
Сикет те тухать,
Шăнтать те хурать.
Ах, çав сăмаха каламан пулсан-и,
Чĕре ним пĕлмесĕрех юлатчĕ.
Вăл, тен, халĕ те юрататчĕ...
Тусăм, сăмах калама нихăçан та
Ан васка.
Сăмах вăл хăрушă япала!

***

Сăвă çырас килми пулчĕ.
Мĕне пĕлтерет-ши ку?
Юлташăм Ахрат çырмине сикрĕ.
Тен, пуçхĕрлĕ тăтăн ху?
Ку савăнăç та вара, калĕç, пулчĕ,
Ку та сăвă çырма пăрахрĕ.
Ку та пирĕн пекех пулса тăчĕ.
Пирĕн пекех ним те çырмасть халь.
Малтан сăвă çырап тесе мухтанатчĕ.
Турă пекех умра курăнатчĕ.
Халĕ ĕнтĕ ку та пусарăнчĕ,
Вăл та ахаль çын кăна халь...
Эпĕ вара, чăн та, çырма пăрахрăм.
Выльăх мар пулсан та, çын та мар!
Турă çинчен шутлама вăй тупаймарăм,
Эпĕ халĕ, чăн та, ыттисемпе пĕр тан.
Сăвă çырас килми пулса çитрĕ.
Чун касĕрленни иртрĕ.
Илтрĕм, такамăн таçта хăмпи шăтрĕ.
Кам ухмаххи унта перо тытрĕ?

***

Урамра ҫутă кун, туйҫу.
Ура айĕнчи пăр ҫапҫут!
Анчах ытла савăнса ан пыр.
Утнă ҫĕртех ўкетĕн – кĕрĕс!
Хĕвел те тухать халь тĕп-тĕрĕс.
Анчах ун ҫутине курмасть пĕлĕш.
Паян куҫа чарса пăхсан та ҫук.
Паян пирĕн хушăмăрта Ю. Казанов ҫук!
Иртĕҫ кунсем, юхĕҫ шывсем ним те мар.
Ĕмĕрĕ те, чулĕ те куҫа курăнмасть.
Вилсен пĕр купа ҫĕр пурăнмалăх –
Пĕтĕм тĕнче тăрать чўк тумалăх.

***

И.Я. Яковлева асăнса.

Эс килнĕ чух ҫак тĕнчене
Тĕнче, тен, хăйĕнчен хăрарĕ?
Чăваш килет, чăваш тесе,
Тен, ĕнсине те хыҫкаларĕ?
Чăнах та, мĕншĕн-ха тĕнче
Халь те хăрать, чăваш тесессĕн?
Чăвашăн сассине илтсен,
Хăйне туять пуль вăл пĕтеслĕн.
Чăнах та, ҫапла мар-и-ха
Пулса иртсе тахҫан асаплăн?
Чăваш та ҫын пулма хăйса,
Хăйне тытса ытла хаваслăн...
Ак, халь те Яковлев пекех
Хăй ҫеҫ талай пекрех курнасшăн.
Тĕнче ăна, кăшт чĕтренсе,
Хăйĕн пекрех туса хурасшăн.
Хăйĕн пекех, кăшт шуйттанла,
Чăваш та пĕттĕр, тет, пĕр сассăр.
Анчах чăваш чăн турăлла
Хăйне тăвать пĕр хăрамасăр.

***

Таҫтан юна кĕрсе пырать Бичурин...
Ăҫта вăл пулнă ĕлĕкрех.
Пирĕн юнрах, пиртех вăл пулнă –

Халь тин куратпăр хамăртах!
Килех Бичурин, кил кунта,
Вăрат пирте Китай юнне.
Китай пулса эпир çӳренĕ
Тибет сăрт-тăвĕ патĕнче.
Халь тин тăран çав Китай майлă
Типнер[1] сынни майĕхĕпе...
Эпир те мар-и унăн хыççăн
Тухатпăр çакă уçлăха.
Каллех Китай таран çӳретпĕр
Чăваш юнне сарас тесе...

* * *

Пĕр хĕрача çинчен шутлатăп:
Вăл сăвă, тет, сырать!
Ун чунĕ пит хитре, куратăп,
Сăвă пекех шăрçаланать...
Сăвă çырсан, сăвă пулать çав,
Тĕнче те сăвă пек сывлать.
Ун сăввине илтсен пулан, ак,
Тен, ху та хĕр пекех аван?
Аран кăна эсĕ сывлатăн –
Мĕн-ма-ши хам та сăвă мар?
Сăвă çырсан Тур пек пулатăн –
Тен, çавăнпа та юратан?

* * *

Тăхтие асăнса.

Тăхти пекех тăхтамалла,
Çак тĕнчене те курмалла
Кăштах çӳлтен пĕр кайăк пек.
Кантăкласа та тухмалла...
Пулсан та пултăр вăл – пĕр пурт!
Таçтан тултан пăхсассăн та
Унта куратăн пĕр йĕрке.

---

[1] Типнер – Н.Я.Бичурин çуралнă ял.

Такам тасатнă пулĕ те
Халь курăнать хĕртсурт пекрех.
Тăхти тĕнчийĕ хăй хĕртсурт!
Ăна ун пек тăвайман тек.
Илле пăхни юлать унта.
Илле сассилĕ çав суртра
Такам, тен, çăмарта кустарнă?
Епле тирпейлĕ те аван...
Апла, вăл хăй те çавăнтах,
Пире кĕтет пуль çав суртрах!

* * *

Хĕросем тăраççĕ çил синче...
Калаçăвĕ, хитрен кулни
Пырса тивеççĕ чĕрене.
Хĕросем тăраççĕ çил синче...
Çав çил синче вĕсен чĕрийĕ
Татах та хĕрӳрех пек-çке!
Калаçăвĕ, хитрен кулнийĕ
Хушаççĕ чĕрене хăват.
Эй, çилĕ те, çав сурçĕр çилĕ
Çакă тĕнче силли пекех
Пире çапса хуçма тăрать...
Анчах та çак хĕрсен чĕлхийĕ
Хăй хĕрнĕ хурçă пек çунать.
Вĕсем калаççĕ Патриарх пек:
«Çак çил те халăхшăн вĕрет!»
Тен, çавăнпа хĕрсен чĕрийĕ
Çурхи чечек пек чĕрĕлет.
Кăмăлĕсем тĕнче хушаççĕ,
Тен, вăрттăн шухăшне пĕлсен,
Татах та пурăнас килет...
Çакна курать вĕт Патриарх та:
«Дак, эдак, – мĕн, – разбойники», – тет.
Кашни сулах чăваш эшкерĕ
Уяв тума кунта килет.
Тем пек вĕрсен те сурçĕр çилĕ
Пире пĕрех пĕтереймест.
Мĕншĕн тесен хĕрсен чĕрийĕ
Хăй хĕрнĕ хурçă пек хĕрет.
Çӳрет тавра темле вут-хĕмĕн
Чăваш каланă чăн сăмах.
Юррисене кам тет итленĕ,

Нихҫан, вилсен те манаймасть!
Тен, ҫавӑнпа паян уяв-тӑр.
Тен, ҫавӑнпа чӗре ҫунать.
Тен, ҫавӑнпа хӑш-пӗр хӑравҫӑ
Кунта пырса та курӑнмасть.
Кунта та пынисем тӑраҫҫӗ
Вӑрман пекех карталанса.
Ҫавсем вӗт ҫилсене чараҫҫӗ,
Чӗрисемпе хӑпартланса.
Ак, пӗчӗк ҫеҫ пӗр хӗр пӗрчийӗ
Юрлать асламӑш юррине.
Хӑҫан та кам ӑна итлемӗ –
Юрри вӗҫет сив ҫил ҫине.
Тен, ҫавӑнпа та ҫил тенийӗ
Пире тивеймӗ пурпӗрех.
Мӗншӗн тесен хӗрсем тӑраҫҫӗ,
Хӗрсем тӑраҫҫӗ ҫил синче!
Кӑмӑлӗсем хӗвел пек ҫиҫрӗҫ –
Ҫак ушкӑнра халь чӑн ҫӑтмах!
Каланӑ пӗр сӑмахӗсем
Хӗвелле ҫил пек пулчӗҫ те
Пил пачӗ ватӑ Патриарх!

***

Паян эп чупса пек килтӗм
Тур хушнӑ ӗҫе тума.
Хампа пӗрле вӑрттӑн илтӗм
Вилми Ҫеҫпӗле вулама.
Ак ӗнтӗ пӑхса ларатӑп:
Ун сӑнӗ, ун амӑшӗ, савни...
Халь эп те ҫапла юрататӑп,
Ҫыратӑп, вулатӑп... Сӑвви
Чуна вырнаҫса кӗрсе ларчӗ,
Янрарӗ пуҫра ир те каҫ.
Мӗн-ма Ҫеҫпӗл пек пулмарӑм?
Ман пурнӑҫ шуглатӑп, ҫавах!
Вӗт эп те ҫунса ҫеҫ тӑраттӑм,
Ҫыраттӑм темле пӗр юмах...
Анчах эп вилме хӑраттӑм,
Тараттӑм сынран май килсен...
А, зоӗ вара пуҫхӗрлӗн
Сикрӗн ҫӳлтен куҫ хупса.
Унтан халь никам та хӑй тӗллӗн

Тухман, тет, калле çавранса...
Тен, эп çаванта пĕтмерĕм.
Шутларăм, эп Çеçпĕл мар.
Хам майлă кăштах шÿтлерĕм,
Пуçларăм чечек пек пулма...
Вĕт ман та çав Çеçпĕл майлă,
Е ун вырăнне те, тен,
Çак тĕнчене тумалăх
Тупасчĕ-ха, тетĕп, хал...
Туса пĕтермен ĕçсем те
Ун юлнă пулас тĕнчере.
Халь, акă, темскер тусан та
Туса пĕтерме май çук.
Эс çаванта та, Çеçпĕл,
Эп виличчен ан хăра.
Эс те малтан пĕччен çеçчĕ,
Халĕ вара – халăхра.

***

Хулпуççие пусмасть кун-çул çĕклемĕ.
Вăхăтлăха эп тухрăм çул вĕçне.
Куçа çиет кивелнĕ шкул хĕлхемĕ.
Манман иккен эп ăс лаççи тĕлне!

Ача сасси юхать шăнкравлă хумлăн.
Ун сассине çитмест кунçул угти.
Ку çĕршывра сукмак пекки те пулнă.
Çав сукмакра юлнах пуль çул хыпти?

Юлса чунра ачалăхри айванлăх.
Çук, ватăлма пĕлмест çын нихăçан.
Ÿсет чечек пĕрре кăна татмалăх.
Кама паран, савнийĕм çук пулсан?

Хулпуççийе пусмасть кун-çул çĕклемĕ.
Вăхăтлăха çеç тухрăм шкул тĕлне.
Таçта çити вĕçет чĕре хĕлхемĕ.
Çитсе пулать-ши манăн хам патне?

***

Зоя Кириллова юраçа.

Ах, Зоя, Зоя, шур чĕкеçĕм,

Эс вĕçрĕн пулĕ каç енне.
Ик куçунтан куççуль ӳкейрĕ
Шап-шур тусанлă çĕр çине...
Ах, Зоя, Зоя, шур чĕкеçĕм,
Амантрĕç пуль сан çунатна?
Çак хут çинчи çирĕм йĕрке те
Тăмаççĕ санăн сăмахна...
Каларăн эс куççулĕ витĕр:
«Тек юрлас çук эп нихăçан!
Юрлассисем ман ĕнтĕ иртрĕç,
Вĕçессисем те паллă мар...»
Ах, Зоя, Зоя, шур чĕкеçĕм,
Хĕвел анать пуль, ан хăра,
Вĕçетĕн эс çĕре ӳкеслĕн
Пĕччен çак çутă уçлăхра...
Юрру та санăн, çук, çухалмĕ
Куççулĕ витĕр тухнă чух.
Чăваш чĕри каллех хускалĕ
Эс ӳкнĕ чух, эс ӳкнĕ чух...

***

Хĕвел çине пăхса юрлаттăн юрруна.
Эх, кăтартаттăн эс хăвна та халăхна та!
Мĕн-ма тесен саççу сан çĕр сассиччĕ,
Мĕн-ма тесен чĕлху сан çĕр чĕлхиччĕ.
Итлерĕм пĕринче кĕтмен çĕртен пĕр сăввуна.
Вуларăн эс ăна сурхи шыв пек асса кайса.
Кĕрлерĕ сăввунта аслати пек аваллăх,
Эс тытнă шухăшра хама курса пĕр харăс.
Эх, Хусанкай, сан пеккисем тек çуккă çав!
Вăхăт юххи юхтарчĕ пуль сана та шав!
Çапах та эс пĕтмерĕн-ха, шавларăн,
Пирĕн пата килюе тепре сас патăн...
Тавах сана, поэтăмăр, хастарлă сан чуну.
Çĕклет пирĕн чуна та тепĕр хут.
Вула, апла, вула! Сăввусенче тупатпăр
Татах та пурăнмалăх çĕн вăрманлăх.

***

А. Кокеле асăнса.

Турхан ялĕ умра...
Çул выртать сăрталла...
Сывă пул, тăван ял,

Ман çула тухмалла!

Пĕр ача çаруран
Тухса кайрĕ ялтан.
Таван амăшĕ, ял-йыш
Пăхса юлчĕç хыçран.

Юр çăвать ял çине...
Вăл хуплать тĕнчене.
Ача утнă çĕрте
Йĕр юлать ĕмĕре.

Йĕрĕ юлчĕ хирте
Йăмрасем çумĕпе.
Халĕ хăй Питĕрте
Хĕллехи керменте.

Ӳкерет вăл яла,
Ӳкерет чăваша.
Репин хăй юнашар
Каласать чăвашла.

Иртрĕ вăхăт чылай.
Кокель, ак, Харьковра.
«Академи уçас», –
Шухăшлать çавăнта.

«Тен уçас Чăвашра?».
Çавăнта таван ял!
Анчах ку шухăша
Йышăнмаççĕ унта.

«Уншăн, акă, часах
Арестлеççĕ сана.
Тухса тар хăвăртрах
Йĕр çеç юлтăр хыçран!»

Май килмест Чăвашра.
Анчах чун çавăнтах.
Çуралаççĕ пуçра
Пин ӳкерчĕк татах...

Кокель килчĕ яла.

Тăван халăх умра...
Кив çуни çырмара.
Хăй вара – çарурун.

Кив çуни çырмара.
Тăван ялĕ умра.
Хăй вара çаруран...
Йĕрĕ юлчĕ хыçран.

* * *

Эс ху пĕччен пĕр уçлăха тăраттăн,
Эс ху пуçтартăн пĕтĕм халăха.
Эс космосран пире Тур пек сăнаттăн,
Ансан, ыйтса пăхаттăнччĕ куçран:
Мĕнле эс пурăнан, чăвашăм?
Ăçта сан халь чуну, ăçта?
Эс пултăн маншăн чăн хавасăм.
Халь ма вара çĕтсе çÿрен таçта.
Эс вăйлăччĕ тахçан, хăватлăччĕ,
Мана çĕклерĕн уçлăха таран.
Эп вĕçнĕçем вара хăлатăн
Сывларăн эс ялта аран-аран...
Каçар мана, чун панă ялăм.
Каçар, чул Шуршăл, эс асра...
Сана курма эп тупрăм тепĕр халăм –
Халь тин тек ĕнтĕ тытаймас куçра...
Каçарăр, тăвансем, эп кайрăм.
Куççуль тăкса ан пăсăр куçăра.
Кирек мĕнле пулсан та ман сăнарăм
Тăрса юлать пуль сирĕн асăрта?

* * *

Митта çинчен эп шухăшлатăп.
Вăл халь кунтах, манпа пĕрлех!
Ун çумĕнче таçтан тупатăп
Çухалнă чунăма каллех.
Ман чун тахçантанпах çухалнă.
Çÿренĕ аташса таçта...
Миттанăн чунĕпе паллашнă –
Тĕл пулнă тет-и пĕр ялта?
Вăл Миттана пĕртте пĕлмен вĕт.
Митта та ман чуна курман.

Анчах пĕрре те тăхтаман тет
Пĕрле пĕр ĕç тытса тума...
Таçта çити телей тупмалăх
Çÿренĕ тет вăл Миттапа.
Унпа пĕрле, тен, асапланнă –
Поэт пек пулнă вăхăтпа.
Тен, çавăнпа чуна эп тупрăм –
Ман чун ялан ун çумĕнче!
Тавах, Митта, мана упрарăн.
Ман чун халь хăй те пĕр тĕнче!
Миттапала вăл пĕр тĕнчеллĕ,
Ун пек асаплă пĕр чечек.
Анчах мĕнле вăл халь çĕкленчĕ –
Мĕнле çунать вăл Митта пек!

## ТУПМАЛЛИ

АЧАЛĂХ СУКМАКĔСЕМ.......4
ÇУТĂ ÇАНТАЛĂК.......60
ЧĂВАШ ПУРНĂÇĔ.......116
ЮРАТУ ТĂХРИСЕМ.......198
ЭПĔ – КАМ?.......271
ПИЛ ПАНИСЕМ.......342

ЖЕЛТОВ Михаил Павлович

**МУЗЫКАЛЬНЫЙ КЛЮЧ**